С(ЧУВ)
А-23
6547-ЧУВ

Леонид Агаков

Хăлă кĕрĕ

Национальная библиотека ЧР
4-006547

Кар
С
А

ЛЕОНИД АГАКОВ

Хаклă кĕрӳ

САТИРĂПА ЮМОР

ЧĂВАШ АССР КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1962

ПРОВЕРЕНО
20 10 03 НОЯ 2017

6547 руб.



ХАКЛА КЕРӲ

Ӗлӗк-авалтан пыракан йӑли çапла ӗнтӗ: паллана çынсем хуть те ӑçта тӗл пулсан та, чӑн малтан пӗрне-пӗри ырлӑх-сывлӑх сунса ал параççӗ, унтан вӗсем хушшинче ак çакӑн евӗрлӗрех кӗске кӑна калаçу пулса иртет:

— Мӗнле пурӑнкалатӑр, Пет-Петрович? Курманни нумай пулать...

— Чиперех-ха. Хӑвӑр мӗнле?

— Эпир те аванах пурӑнатпӑр-ха. Ӗçлетпӗр, çӑкӑр чӑмлатпӑр. Арӑм йӗкӗреш туса парса савӑнтарчӗ.

— Пит аван, пит аван! Сывлӑхӑр мӗнлерех тата?

— Вăл енчен те аптрамастăп-ха. Турра шĕкĕр, халлĕхе склероз та, гипертони те сисĕнмест. Иртнĕ эрнере кăвапа тĕлне ӳпне çăпан тухса ларнипе асапланнăччĕ те, халь вăл та шăтса юхрĕ ĕнтĕ. Санăн хăвăн сывлăху епле?

— Мана... пыр ярăнни çеç аптраткалать, урăх ним пирки те ӳпкелешместĕп.

— Ну, ку чире ăна часах пĕтерме пулать, ун валли эмелне рецептсăрах параççĕ!

— Вăл çапла-ха, вăл — тĕрĕс... Ну, сыв пул-ха, эппин, васкатăп. Иртсе çӳренĕ чух кĕрсе тухăр!

— Хăвăр та ан манăр пире...

Çакăн хыççăн туссем уйрăлаççĕ те тепĕр минутран хăйсем мĕн çинчен калаçнине те манса каяççĕ, мĕншĕн тесен кун каçиччен мăн хулара ун пек тĕл пулусем темĕн чухлех пулма пултараççĕ. Астуса юл-ха эсĕ камăн-камăн арăмĕ йĕкĕреш çуратнине, кам-кам холодильник е телевизор туяннине, Сочине е Кувшинкăна кайса каннине! Вĕсене пурне те астума сахалтан та така хуранĕ пысăкăш пуç кирлĕ вĕт!..

Нумаях пулмасть Конон Иванч Петрушкина Атăл хĕрринче ăнсăртран тĕл пулсан, пирĕн хушăра та çавăн пекрех стандартлă калаçу пуçланчĕ — мĕнле те епле, анчах та часах сăмах-юмах шаларах кĕрсе кайрĕ те, ăна вара эпĕ питĕ лаиăх астуса юлтăм.

Конон Иванча эпĕ нумайранпа пĕлетĕп. Вăрçăра та пĕр хушă пĕрле пулнăччĕ. Хурламалла çын мар вăл. Сăпайлă, лăпкă, ĕçчен. Пĕрмаях суту-илӳре ĕçлет пулин те, следователь е прокурор умĕнче пĕрре те тарласа тăман-ха. Анчах арăмĕ вара... Мĕнле каласа парас-ши сире унăн арăмĕ çинчен? Эсир Николай Васильевич Гоголĕн «Ревизорне» вуланах ĕнтĕ, сценă çинче те пĕрре кăна мар курнă-и, тен. Çавăнти городничий, леш Сквозник-Дмухановский арăмне астăватăр-и? Епле вăл унта, хăйĕн хĕрĕпе тупăша-тупăшах, Хлестакова хăйне юраттарасшăн тăрăшать, э? Конон Иванчăн арăмĕ, чип-чипер чăваш Тарйинчен француза Дора пулса тăнăскер, шăп çавăн йышши чĕрчун. Шутсăр ватăласшăн мар, эсрелĕ! Кашни виçĕ çултах паспортне улăштарса тăрать — юриех çухатнă пек тăвать те, тивĕçлĕ штраф тӳлесе, çĕннине илет. Мĕн пирки ун пек хăтланать, тетĕр-и? Ара, кашнинчех хăй хăш çулта çуралнине улăштарса çыртарать иккен. Çулĕсене чакарттарса пырать!.. Çут тĕнчере пĕрремĕш тĕнче вăрçи пуçланнă çул пурăнма тытăннăскер, юлашки паспорт тăрăх çав Тарье-Дора халь 1925 çулта çуралнă пек курăнать...

Пĕр сăмахпа каласан — пултарать! Упăшкине вăл килте иккĕшĕ кăна пулнă чух та, сынсем умĕнче те питех çăвар уçтармасть.

— Ан палка эсĕ, шĕпĕн! Такам хăлхана чикет пуль сан сăмаххуна!— тесе урипе пĕррех тапать те, кушакăнни пек симĕс куçĕсемпе вĕтсе илет çеç.

Тĕрĕссипе, упăшкине «шĕпĕн» тесе ят пама сăлтавĕ те пур ĕнтĕ унăн, мĕншĕн тесен Тарье-Дора Конон Иванчран сахалтан та пĕр икĕ шит çӳллĕ, анлăшĕпе виçĕ хут сарлакарах пуль. Центнера яхăн туртакан хĕрарăм мĕн калăпăш пулассине эсир хăвăрах чухламалла.

Анчах эпĕ кăштах аяккалла пăрăнса кайрăм пулас. Манăн сире Конон Иванч çинчен каласа кăтартмалла вĕт-ха...

Çаила, эпĕ унпа нумаях пулмасть Атăл хĕрринче тĕл пултăм. Тин çеç тутлă апат çисе тухнă пĕр-пĕр вăй питти пенсионер пекех, вăл кăкрипе çыран хĕрринчи эрешлĕ чул хӳме — балюстрада — çумне тайăннă та, Атăл леш еннелле ним тĕлсĕр пăхса, пирус мăкăрлантарса тăратчĕ.

— Сывă-и? Мĕнле пурнан, тусăм?

— Тавтапуç, сывах-ха, чиперех пурăнкалатăп...

Анчах эпĕ унăн кив шăналăк тĕслĕ пулса кайнă сăнпитне, шалалла чышса кĕртнĕ пекех путса ларнă куçĕсене, тулалла хирĕнсе тухнă янах шăммисене куртăм та, тӳрех унăн пурнăçĕ юлашки вăхăтра ытлашши тутлах пулманнине тавçăрса илтĕм.

— Чирлемен пулĕ те эс, Конон Иванч?

— Çук...

— Мĕн, эппин, тата... кăшт улшăннă пек? Хуйхă-суйхă пулчĕ-им?

Конон Иванч, ывăннă лаша пек хашш! сывласа, çунса пĕтнĕ пирусне сурса пăрахрĕ те, çавăнтах çĕннине хыпса тивертрĕ.

— Чим-ха, Конон Иванч, эсĕ туртмастăнччĕ вĕт-ха? Иксĕмĕр вăрçăран таврăнсан тепĕр куннех пăрахнăччĕ!

— Ку пурнăçпа табак туртма мар, ĕçме те тытăнăн...— каллех хашлатса илчĕ вăл.

— Мĕн пулчĕ вара ун пекех?

— Пулчĕ çав мĕн пулмалли. Ĕмĕр асăнмалăх пулчĕ! Юрать, саккунĕсем лайăх халь пирĕн. Атту пулсан, татах тем курмаллаччĕ-ха...

Эпир çыран хĕррипе тăварах кайса сак çине лартăмăр. Вара, эпĕ ытлашши çине тăрсах ыйтман пулин те, вăл

хăйĕн килĕнче мĕн пулса иртнине, мĕншĕн сăнран çакăн пек ӳкнине каласа пачĕ. Чунĕ кӳтсе çитнипе, хăйĕн те пĕрпĕр çывăх çынна пĕтĕмпех каласа парасси килнĕ пулмалла çав

Хурлăхлă пулчĕ унăн калавĕ, анчах та те Конон Иванч пурнăçра пур чух та хаваслă, шӳт тума юратакаң çын пулнă пирки, те халь ĕнтĕ хуйхи-суйхи кăштах иртсе кайнипе, ăна итленĕ май кулмасăр та тӳсеймерĕм әпĕ...

— Ман çемьене пĕлетĕн вĕт-ха әсĕ,— тесе пуçларĕ Конон,— виççĕн кăна пурăнатпăр эпир; кĕлетке пăсăлать, тесе, ман арăм пĕр ача çуратнă хыççăн урăх тăвасшăн пулмарĕ. Ну... çамрăк чухне кăштах артисткă та, унтан парикмахерскинче ĕççĕр аптранă майрасен чĕрнисене хăйраса сăрлаканни, леш маникюршă тени те, пĕр хушă ресторанра «метрдотель»— официанткăсен пуçлăхĕ те пулса курнăскер, хăйне яланах шутсăр культурăллă çын вырăнне шутласа пурăнчĕ...

— А ма, Дора Петровна чăнах та культурăллă хĕрарăм пек туйăнать мана...— пӳлме тăтăм эпĕ Конона.

— Э-эх, туйăнать кăна çав!— аллипе сулчĕ вăл.— Çи-елтен пăхсан, питĕ лайăх: тумланма пĕлет, сăрланма ăçта, унтан яланах чи çĕнĕ йышши духи шăрши кĕрет, çынсем ăслă сăмахсем каласнă чух та çăварне шыв сыпнă пек тăмасть, палкать, анчах та хăй вăл букварь хыççăн виçĕ кĕнеке те вуласа тухман вĕт!— Конон Иванч мана темшĕн айăпласа вăрçнă пекех каласма пуçларĕ.— Мĕн чухлĕ тертлентĕм пуль эп унпа, мĕн чухлĕ вĕрентме тăрăшрăм пуль, тĕрлĕ курссене те вырнаçтарса пăхрăм, кружоксене çӳреме те хистерĕм — ним усси те пулмарĕ, веçех харама кайрĕ. Ача пулман пулсан, эп унтан тахçанах уйрăлнă пулăттăм, анчах ачана телейсĕр тăлăх тăвас килмерĕ. Питĕ шутсăр юрататтăм эп ăна! Çавăнпа тӳссе пурăнтăм. Анчах ачине те çынсем пек йĕркеллĕ ăс-тăн парса ӳстересси пулмарĕ... Тарье ăна мĕн пĕчĕкреннех хăй аллине çавăрса илчĕ те, мана çывăха та ямарĕ. Эп — мужик, ачана ним лайăххине те вĕрентме те пултараймастăп имĕш, çитменнине манран яланах е краççын, е çĕрĕк пулă шăрши кĕрет (тавар базин заведующийĕ пулса ĕçлетĕп-çке-ха!). Пуçлăхсем хушнипе, манăн тата пĕр виçĕ çул хушши района кайса ĕçлемелле пулчĕ,— ун чух, ачана ялта усрама пултараймастăп тесе, Тарье вырăнтан хускалмарĕ, вĕсем ачапа иккĕшех хулара пурăнчĕç.

«Ленăна эпĕ сансăрах пит лайăх воспитани парса çын тăватăп, эс мана укçа ытларах илсе килсе пар кăна!»— тетчĕ вăл кашнинчех.

Воспитани панă вара вăл хĕрачана, çын тунă,— хай каларĕш, çырлахтăр турă! Ача мар, фарфортан тунă пукане ӳстернĕ. Ансăртран такăнса ӳксенех чăл-пар ванса кайма пултарать! Ятне те улăштарнă вĕт эп килте çук чух: Ленăран, Еленăран темле Элла туса хунă. Чăваш мар топпер, француз! Хăйне те Тарье вырăнне Дора тетерет те-ха вăл...

Паллах ĕнтĕ, хĕрачана нимĕнле ĕçе те хăнăхтарман. Музыкă шкулне çӳрет-çке, рояль калама вĕренет, епле-хи ĕçлеме юратăр ăна? Çинçе пӳрнисем хытса ларма пултараççĕ мар-и!.. Шкулта та вара... мĕн каласси пур! Тройкăсемпе, час-часах двойкăсемпе, макра-макра, чирлени çинчен паллană тухтăрсенчен справкăсем илкелесе, класран класа аран-аран куçкаласа пынă. Эп районран каялла тавраńса пынă çул унăн вуннăмĕш класа куçмаллаччĕ, анчах ăна тăххăрмĕшĕнчех хăварчĕç. Пĕр класра икĕ çул ларнинчен те уссиех пулмарĕ, мĕншĕн тесен кашни каç, пĕр кун сиктермесĕр, танцине чупатчĕ. «Кĕçĕр пирĕн кружок пулать», «паян эпир репетици тăватпăр», тесе тухса каять те, çур çĕр иртмесĕр те ан кĕт вара ăна!.. Эпĕ кун пирки арăма калакалама тăтăм, кун пекех çӳресен темрен тем ан пултăр, ташши ниçта та тармĕ-ха вăл, малтан чипер йĕркеллĕ вĕренсе пĕтерес пулать, тесшĕн пултăм, анчах мана вăл çăвар та уçтармарĕ.

Ну, аран-аран, унтан-кунтан сыпăнтаркаласа, пирĕн хĕр вунă клас пĕтерчĕ. Çав ятпа амăшĕ ун валли пĕр купа парне хатĕрлерĕ: виç-тăват платье, кача пӳрне пек кĕлеллĕ туфлисем — хури, сарри, ӳт тĕсли, «молнисемпе» каркаласа пĕтернĕ çап-çутă сумкă тата тем те пĕр. Укçи шăпах пурччĕ пирĕн ун чухне, ялта юлашки çулсенче пĕр-пĕччен пурăннă атте вилсе кайрĕ те, эпĕ унăн кил-çуртне сутса килтĕм, кив укçапа хĕрĕх пин пачĕç. Тарье вăл укçана тӳрех хăйĕн перекет кĕнеки çине хучĕ те мана тĕсне те кăтартмарĕ, веçех хăй пĕлнĕ пек салатрĕ, хам валли эпĕ пĕр мăшăр носки те туянаймарăм...

Илсе пычĕ пирĕн хĕр аттестат. Мана кăтартасшăн та мар, амăшĕпе иккĕшĕ ăна тӳрех комода питĕрсе хума тытăнчĕç. Çапах та эп ăна вăйпа тенĕ пекех тытса илтĕм те — ман çамка çине нимĕç пăрçи пек шултра тар тапса тухрĕ.

— Ай-ууй, çара тройкăсем кăна-çке санăн, хĕрĕм?..

— А мĕн, япăх-им вăл?— пĕкĕ пек куç харшисене çĕклесе, чалăшшăн пăхса илчĕ ман çине Элла.

— Мухтанмаллах мар...

— Пĕлместĕн эсĕ нимĕн те! Ку чухне тройкă — чи лайăх отметкă шутланать. Ăна «международнăй» теççĕ!..

— Çапах та, ăçта та пулин вĕренме кĕрес пулсан, кăтартма та намăс вĕт-ха...

Эп çапла каланине илтсенех, Тарье бомбă пек çурăлса кайрĕ.

— Мĕн намăсĕ? Мĕнле намăс?! Шкултан кăларса яман вĕт ăна, вĕренсе тухнă вăл! Йытă хŭри кирлĕ-им тата сана? Сурнă эпĕ отметкăсем çине — виççĕ-и унта, пиллĕк-и, саккăр-и, маншăн пурĕ пĕр! Аттестачĕ пултăр! Тăп-тăр ухмахах çав эсĕ... Ачашăн савăнас вырăнне, ăна кŭрентерсе тăратăн! Парăп акă пĕрре туту урлă...— аллинчи йĕпе ал шăллипе хăмсарса илчĕ вăл.

Тек чĕнмерĕм вара, ытла чĕрре кĕрсе кайиччен хăвăртрах тухса шăвăнтăм. Аттестат пирки урăх çăвар та уçмарăм...

Шкула çŭреме пăрахнă хыççăн ик-виç кунтанах Элла хăйĕн ал туни хулăнăш, тикĕт пек йăм хура ик çивĕтне кастарнă та, юлашки çŭçне сап-сарă сăрлаттарса, ĕнси çинелле юпах тиха хŭри пек мăкăртса хунă. Чĕре çурăлсах каятчĕ çакна курсан, анчах... шарламарăм. Касса ывăтнă çŭçе пур пĕрех сыпаймастăн вĕт халь тин!

Хăй вара çу каçипех пĕрре те килте лармарĕ. Кăнтăрла Атăл леш енче, пляжра, вĕри хăйăр çинче ŭппĕн-питтĕн йăваланса хĕртĕнет, каçхине кинора та ташăра. Пĕр нимĕн те тумарĕ вĕт çу каçа, урай та шăлса тухмарĕ, хăйĕн кĕпийĕмне те пĕрре тытса çумарĕ. Хăш чухне Тарьене хăйне хĕрхеннĕ пек пулсах калакалаттăм:

— Ма, ара, çав Эллăна пĕр ĕç те хушмастăн, йывăр вĕт-ха сана...

Анчах ун пек каланăшăн хамах лекетчĕ.

— Сан ĕç çук унта, ват ухмах! Ачи ахаль те вун пĕр çул лăш курмасăр вĕренчĕ, унăн нервисем те веç пăсăлса пĕтнĕ. Халь кантăр ĕнтĕ, вăй илтĕр, килте мĕн тумаллине эпĕ пĕтĕмпех хам тăватăп, ĕçрен хăракан çын мар! Эс ан хутшăн кирлĕ мар çĕре!..

Мĕн калăн ĕнтĕ çавăн хыççăн? Анчах сиссеттĕм эпĕ: кĕпи-йĕмне те, урайне те Тарье эп килте çук чухне темле хĕрарăмсене тара тытса çутаратчĕ, эп таврăнсан вара: ах,

ывăнтăм, ах, пĕтĕм çан-çурăм ыратать, тесе выртатчĕ. Атте кил-çуртне сутса тунă укçа пулнă-çке-ха пирĕн...

Кĕр енне Эллăпа пĕрле вĕренсе тухнă çамрăксем унталла-кунталла хускалма пуçларĕç. Пĕрисем вĕренме каясшăн тăрăшаççĕ, теприсем ĕçе вырнаçасшăн. Пирĕн килте — шăпăрт. Эп те, тарăхни-мĕнĕпе, чĕнместĕп, мĕн тăваççĕ-ха кусем, тетĕп. Çитменнине, пирĕн хĕр аслă шкул çывăхне те пыма пултарас çуккине пĕлсе тăраттăм та пăшăрхансах каймастăм пит. Анчах амăшĕпе хĕрĕ хăнк та тумаççĕ, ĕмĕр-ĕмĕрех çапла пурăнасшăн пулас.

Юлашкинчен çапах та тӳсеймерĕм — пĕрре, Элли килте çук чухне, хваттер алăкне питĕрсех, Тарьепе сăмах пуçларăм.

— Ну, хаклă Дора Петровна, мĕн тăвăпăр ĕнтĕ малашне?

— Мĕн пирки калаçатăн çак эс?— ыйтрĕ вăл.

— Хамăрăн хĕр çинчен калатăп...

— Мĕн калаçмалли пур ун çинчен?— тĕлĕннĕ пек пулчĕ Тарье.— Чиперех пурăнать-иç? Тав турра, ни чирлемест, ни ячĕ пăсăлман... Тата мĕн кирлĕ сана?

— Ара, унран çын тăвас пулать вĕт-ха!

— Вăл халь те тискер кайăк мар пуль? Пичĕ-куçĕпе те, станĕпе те хитре, хуть малтан, хуть кайран пăх — ытармалла мар, пĕр тумлам шывпах çăтса ямалла, теççĕ çынсем. Кашнинех тур патăрччĕ ун пек пулма, ахальтен мар тантăшĕсем пурте ăмсанса кĕвĕçеççĕ ăна...

— Çын хитре пулнипех унăн хырăмĕ тăранмасть-çке! Ĕçлеме вырнаçтарасчĕ ăна ăçта та пулин. Хăвах пĕлетĕн, унпа пĕрле вĕреннисенчен хăшĕсем тĕрлĕ шкулсене кĕчĕç, кĕрейменнисем ĕçе вырнаçрĕç, теприсем Печорăпа Братск таранах кайса пĕтрĕç...

Эп çапла каласан, Тарье сасартăк хăйĕн пырне пысăк пулă шăмми тирĕнсе ларнă пекех чыхăнса илчĕ.

— А-ав мĕн çинчен çĕр çывăрмасăр шухăшласа пурăнатăн иккен эсĕ!— терĕ вăл унтан шăл витĕр.— Сана пĕртен пĕр ачу йăлăхтарса çитерчĕ, эппин? Эс ăна, куçран çухалтăр тесе, килтен хăваласа ярасшăн, çапла-и?

Симĕс куçĕсене çутăлтарса, вăл ман паталла утма пуçларĕ. Кунтан ырри нимех те пулас çуккине пĕлсе, вăл ман çинелле пынă май эпĕ каялла чакма тытăнтăм...

— Уншăн мар, эс чипер калаç-ха, хăйĕн тăван ачи çинĕ çăкăра кам шутлать, ăна кам килтен хăваласа яма тăрăшать?

— Мĕн тата апла пулсан, мĕн ҫитмест сана?!— ҫухăрса ячĕ Тарье.

— Калатăп-ҫке ара, манăн ăна пĕр-пĕр ĕҫе хăнăхтарса хăй тĕллĕн пурăнма пултаракан, усăллă ҫын тăвас килет...

— Ахаль те пулнă ĕнтĕ, эс вĕрентмесĕрех! Ҫитет ăна кун чухлĕ ҫын пулнипе! Ан хăра, выҫсах вилмĕ, сан ҫăкруна та нумаях ҫисе пурăнмĕ. Унашкал сăн-питпе ăна пĕр-пĕр счетовод мар, генерал та, инженер та, даже писатель те антăхса кайсах качча илме пултарать, пĕлетĕн-и эс ҫавна, тăм писмен!..

Акă мĕнлерех план-программă пулнă иккен манăн ытарайми мăшăрăн. Вăл хамăрăн хĕре пысăкрах укҫа илекен ҫын ĕнси ҫине лартса ярасси ҫинчен кăна ĕмĕтленнĕ.

— Элла хăй те ҫавăн пек шутлать-и вара?— тарăхса ыйтрăм эпĕ.

— Хĕрĕ амăшне ăнланатех ĕнтĕ!— татса хучĕ Тарье.— Мĕнле хĕрĕн ватта юлас килтĕр?

— Ну, хăвăрăнне хăвăр пĕлĕр, эппин, анчах кайранмалтан мана ӳпкелешнĕ ан пултăр,— ал султăм эпĕ.

Ну... пурăнатпăр хайхискер. Нимĕнле улшăнусем те ҫук пирĕн. Эп хам яланах ĕҫре, амăшĕпе хĕрĕ — килте. Тем тăваҫҫĕ вĕсем, пĕлместĕп. Анчах Элла кашни эрнере тенĕ пекех ҫĕнĕ модăллă платьесем тăхăнса тухса кайни куҫа курăнать. Приданăй хатĕрлеҫҫĕ пулмалла.

Хĕле кĕрсен, пирĕн пата час-часах Володькă ятлă йĕкĕт ҫӳреме пуҫларĕ. Шкултан вăл пирĕн Эллăран пĕр ҫул малтан вĕренсе тухнăччĕ. Ашшĕ ҫук унăн, вăрҫăра вилнĕ, амăшĕ — шкулти техничкă кăна. Анчах ҫавăн пек чухăн ҫемьесенчи ачасем луччă лайăх вĕренеҫҫĕ. Ҫак Володькă та шкултан ылтăн медальпех вĕренсе тухнă, анчах та ҫемьене пулăшакан ҫук тесе, малалла вĕренме кайман, завода кĕнĕ те виҫ-тăват уйăхранах пит ăста слесарь-монтажник пулса тăнă. Ҫав вăхăтрах хăй политехнически института заочнă вĕренме вырнаҫнă. Аван ача ĕнтĕ, каламалли те ҫук.

Ҫӳрет те ҫӳрет ҫакă. Сисетĕп ĕнтĕ — Эллăна юратса пăрахнă, ун ҫине яланах кушак ҫу ҫине пăхнă пек пăхать, тем парĕччĕ уншăн. Анчах та ман примадоннăсем — амăшĕпе хĕрĕ те — ҫав качча арҫын вырăнне те хумастчĕҫ пулмалла. Элли ялан епле те пулин тăрăхлама тăрăшатчĕ унтан, амăшĕ пĕрмай ĕҫ хушатчĕ.

— Эй, слесарь, пирĕн ҫавăнта кран пăсăлма пуҫланă, юса-ха! Володькă, леш пӳлĕмре выключатель ĕҫлемест, тӳрлет-ха! Уборнăйра шыв каймасть, тĕрĕсле-ха, мĕн унта?

Тепри пулсан, куншăн çиленме те пăхнă пулĕччĕ,— хĕр патне килнĕ вĕт-ха вăл, уборнăй ĕçленипе ĕçлеменнине тĕрĕслеме мар,— анчах Володя Тарье хушнисене хаваласан-сах, туххăм тенĕ пек туса хуратчĕ. Пулас хуняма карчăкне юрас килнĕ пуль çав!

Эллăпа иккĕшĕ хĕлĕпех пĕрле çӳрерĕç ĕнтĕ — кинона, театра, концертсене. Шатах каччин укçипе. Володя ман хĕре пырса илсе тухса каять, кайран килех кĕртсе хăварать, питĕ шутсăр йĕркеллĕ. Эп ĕнтĕ кусен чăнах та ĕçсем ăнса пыраççĕ, тен, часах туй та тумалла пулать-и, тесе шутлама пуçласаттăм...

Çук, пулаймарĕ! Мĕншĕн, тетĕн-и?

Пĕтĕмпех çав эсремет фокстрочĕсемпе тангисем пăсса хучĕç.

Çуркунне, йывăçсем пирвайхи ешĕл çулçăсем кăларсанах, хулари паркра нимрен малтан танцплощадкă кĕрлеме тытăнать вĕт-ха, хула Совечĕ хăйĕн хĕл каçа хавшанă бюджетне тĕреклетме тăрăшать. Кашни каç, пĕр улт-çич сехетсенчен пуçласа çур çĕрченех, унта ĕçсĕр аптранă яшсемпе хĕрсем хăйсен пушмак тĕпĕсемпе урай хăмисене хыраççĕ,— чăшăл-чăшăл, йăкăш-йăкăш... Вĕсенчен нумайăшне эсĕ çăкăр ан çитер те — ташлама пар!

Манăн пĕртен пĕр хĕрĕм Элла та пуринчен ытла пуçпа мар, урисемпе ĕçлеме юратакан чĕрчунсен ăраттинченех пулнă çав. Ташă площадки уçсанах вăл унта чупма тытăннă... Малтанах вăл хăйĕнпе пĕрле Володьăна та илсе кайнă-мĕн, анчах лешин унта çурăмĕпе карлăка тĕкĕлесе кăна тăмалла пулнă — вăл ташлама пĕлмен. Элла вара ытти каччăсемпе ташланă — пĕринпе, тепринпе, пилĕккĕмĕшĕпе, вуннăмĕшĕпе,— Володя çав-çавах йĕтем юпи пек тăнă. Хăвах чухламалла: енчен те эс юратнă хĕре хăвăн умăнтах урăххисем ыталаса илсе çавăраççĕ, ташланă чух тата ăна хăлхаран пăшăлтатса тем калаççĕ-тĕк, санăн кăмăлу мĕнлерех пулса кайĕ? Чĕрӳ мĕнле тӳсĕ?

Лешсем, ташă площадкинчи архарсем (архар тесе тискер такасене калаççĕ, илтнĕ пуль...), ташласа пĕтерсен те Эллăран хăпасшăнах пулман курăнать. Унпа юнашар пырса тăнă, ăна киле ăсатса ярасшăн çулăхнă... Паллах, Володя чĕрине ку питĕ хытă пырса тивнĕ ĕнтĕ. Вара вăл площадкăна çӳреме пач пăрахнă.

Анчах Элла куншăн ним чухлĕ те хуйхăрман. Володя пек мар «чаплă» каччăсем явăнма тытăннă ун тавра — леш-хайхисем, тăрна ураллисем, асар-писер тĕрĕллĕ кĕпел-

лисем, упăтеллĕ галстуклисем, çӳçĕсене араслан çилхи пек ӳстерсе янисем, янахĕсем тавра басмачсенни пек сухал çитĕнтернисем. Ну, стилягăсем эппин, пижонсем, тĕрлĕ-мĕрлĕ жоржик-моржиксем, хăйсем ниçта ĕçлемесĕр ашшĕ-амăшĕсен енчĕкне ĕмсе пурăнакансем, хальхи йышши сăвăссем!

Володя пирĕн пата киле пыма та пăрахрĕ.

— Ма курăнмасть çав ача, таçта урăх хулана куçса кайман-и вăл?— юриех ыйтрăм та пĕррехинче Эллăран, вăл тутисене мăкăртса, мăртлатса çеç илчĕ:

— Эпĕ мĕн, унăн хураçи мар пуль?

— Ара, эсир унпа туслăччĕ те-ха...

— Тем тума кирлĕ пуль мана ун пек моммо!— тутисене тата ытларах мăкăртрĕ Элла.

— Мĕнле ăнланмалла куна? Чăвашла куçарса кала-ха.

— Ну, çулламан пăру, эппин.

— Мĕншĕн ун пекех хаярăн тиркетĕн вара чип-чипер çынна?

— Çирĕм çула çитнĕ хăй, анчах пĕр ташă та чĕлмест — çын-и вăл?

— Эппин, эсир халĕ çынна вăл урисене упăтелле аплакапла кукăртма пултарнине шута илсе кăна хаклатăр?!— çиленсе кайрăм эпĕ.

— Культурă вăл, атте!— куçĕсемпе мана пĕтерсе хураслах çунтарса илчĕ те Элла, çĕлен пек авкаланса, хул пуççийĕсене вылятса тухса кайрĕ.

«Культурă... культурă...» янраса тăчĕ ман хăлхара.

Аçтан шуйттанĕнчен, хăш çĕршыври хупахсенчен килсе кĕчĕ-ши пирĕн пата ку упăте «культури»!— тарăхса вăрçрăм эп хам ăшăмра. Чĕре ыратсах кайрĕ манăн, анчах тепĕр виç-тăват кунтан вăл çурăлса каяс патнех çитрĕ. Инфарктран ăнсăртран çеç хăтăлса юлтăм пулмалла...

Шăлпа аптраса ӳкнипе эпĕ ĕç вăхăтĕнчех поликлиникăна кайсаттăм. Хайхи, шăл кăларттарса тухрăм та, кинотеатр енчен пĕр мотороллер лăкăртатса хăпарнине курах кайрăм. Руле темле сап-сарă та сип-сиĕмс, куçа йăмăхтармалла ула-чăла кĕске кĕпе тăхăннă стиляжкă тытса пырать, ун хыçĕнче, ăна пилĕкĕнчен çатăрах ыталаса... ман хĕр, ман Элла ларать! Тӳрех пĕтĕм çан-çурăм çӳçенсе илчĕ...

— Элла! Эллочка-а!— мĕн вăй çитнĕ таран кăшкăртăм эпĕ. Манăн ăна çав самантрах антарса хăварас килчĕ. Анчах вăл мана курсанах пĕр самантлăха каччине ыталама

пăрахса аллине çĕклерĕ те, пӳрнисене вĕл-вĕл-вĕл хускатса илчĕ. Сывă пул, чипер юл, тени пулчĕ ĕнтĕ ку...

Киле йĕп-йĕпе тарласа чупса çитрĕм.

— Хĕрӳ ăçта санăн, пĕлетĕн-и?— тӳрех кăшкăртăм Тарьене.

— Пĕлместĕп,— тет.— Нумай пулмасть сывăрса тăрса чей ĕçкелерĕ те, тумланса тухса кайрĕ...

— Пĕлместĕн эппин! Анчах та эп пĕлетĕп! Кашкăр тытса кайнă ăна!

— Мĕнле кашкăр? Ан лăпăртат, ухмах пуçупа эс тем те калăн... Ай ăçта та пулин черкке тĕлне пултăн-и? Килха, сывла-ха ман çине...

Ку вара мана тата ытларах тарăхтарса ячĕ.

— Сан хĕре пĕр упăте Етĕрне çулĕ тăрăх леш качака таки пек машинăпа вăрмана илсе кайрĕ, пĕлетĕн-и çавна, тухатмăш?

— Илсе кайрĕ пулсан, мĕнех вара уншăн?— хăнк та тумарĕ Тарье.— Чечек пухма кайрĕç пуль, çамрăксем чечек юратаççĕ...

— Чечек, чечек!— сĕтел çине çапсах кăшкăртăм эпĕ.— Пĕлетĕп эпĕ вăл чечексене!.. Пĕлтĕр авă Малинкинсен хĕрне те пĕр прохвост çăвĕпех ашшĕн «Москвичĕпе» катаччи чуптарчĕ-чуптарчĕ те, кайран хĕрĕ еплерех чечек илсе пычĕ амăшĕ патне? Виçĕ кило çурă туртнă терĕç унăн чечек çыхмаллине! Паян кун та юрла-юрлах çĕклесе çӳрет авă: ачине-е, паппине... Шутсăр лайăх!

Эп çапла каланă хушăра Тарье куçĕсем чарăлнăçемĕн чарăлса пычĕç, тути хĕррисем кăвакарса чĕтреме пуçларĕç...

— Эс мĕн, хăвăн хĕрне шанмастăн-и, ăна пăсăк ăслă тесе шутлатăн-и?— чашкăрса илчĕ вăл.— Ăçта санăн намăс?!

— Эпĕ Эллăна мар, леш упăтине, ăна лартса каяканне шанмастăп!— терĕм ăна хирĕç.

— Ан лăпăртат! Вилли пур енчен те питĕ йĕркеллĕ ача, хĕре нихçан та кӳрентерес çук вăл!— парăнмарĕ Тарье.

— Мĕн вилли? Кам вилли?— юриех ăнланмăш пултăм эпĕ.

— Тем вилли мар, унăн ячĕ çавăн пек — Вилли!

— А эс ăçтан пĕлетĕн ăна?

— Хамăн хĕр хыççăн çӳрекен каччăна епле пĕлместĕпха вара? Эпĕ — амăшĕ пуль?

— Вăл мĕн, нимĕç-и? Ун пек ятлă çынсене эпĕ вăрçă вăхăтĕнче тыткăна лекнĕ фашистсем хушшинче çеç курнă.

— Мĕншĕн нимĕç пултăр?— тĕлĕнчĕ Тарье.— Пирĕн пек чăвашах!

— Ма-ха вăл, эппин, Вилли ятлă? Вилли... йытă вилли, сысна вилли... Тьху!

— Услап!— тесе хучĕ Тарье.— Нимĕн те пĕлместĕн çав эсĕ. Ку ята каланă чух ударенине малти «и» çине лартас пулать. Ви-лли! Инделегентлă çамрăксем хушшинче халĕ моди çапла: Ивансем хăйсене Жан е Джон тетереççĕ, Петĕрсем — Пьер е Педэр, Василисем — Вилли...

— Тарьесем — Дора, Еленăсем — Элла,— мăшкăлласа илтĕм эпĕ.

— А мĕн, япăх-им? Çынсем Европăран юласшăн мар...

— Кам вара вăл Васька-кот, ашшĕ-амăшĕ кам унăн? Äçта ĕçлеççĕ?

— Ашшĕ çук, Вилли виç çулта чухнех тухса кайнă. Ухмах пулнă вăл, пĕррехинче командировкăран тавăнсан арăмĕн кравачĕ айĕнче такам пăрахса хăварнă ик-виç пирус тĕпĕ курнăшăнах уйрăлнă.

— Тĕрĕс тунă,— терĕм эпĕ.

— Амăшĕ кинотеатрти буфетра ĕçлет...

— Сăра сутать, кăпăкран укçа тăвать-и?

— Анрамасть пулмалла, пит лайăх тумланать.

— Ачи хăй äçта ĕçлет?

— Ачи-и? Ачи спортсмен. Иртнĕ эрнере чушкăлла выляса хулара пĕрремĕш вырăн йышăннă. Кунсăр пуçне тата — музыкант. Похоронăй бюро çумĕнчи духовой оркестрта ĕçлет.

— Мĕнле инструментпа калать?

— Чи пысăк параппанне çапать.

— Вăйлă специальноç! Ха-ха!— кулса ятăм эпĕ.— Кун пек специальноçпа юрла-юрлах пурăнмалла: пат, пат, параппан, çак параппан мĕн калать...

— Сана шăл йĕрсе пултăр!— çиленсе кайрĕ Тарье.— Эсĕ мĕн, ку чухне сан валли кĕрӳсем урамра йăванса выртаççĕ, тетĕн-и? Шырас пулать вĕсене!

— Урамра йăванма памаççĕ çав халь, тӳрех вытрезвителе илсе каяççĕ,— терĕм эпĕ куна хирĕç.

— Ку ун йышши мар, ку инделегенцă!— кăшкăрчĕ Тарье.— Эллочка валли кун пек упăшка çаклатсан — турра шĕкĕрччĕ!..

Çакăн хыççăн вăхăт нумай та иртмерĕ, хайхи Васька-Вилли пирĕн пата киле çӳреме пуçларĕ. Ирех, эпĕ ĕçе кайнă-кайман пырса ларать те, Эллăпа иккĕшĕ кунĕпех патефон аврине çавăраççĕ, йăлăхсан çак брандохлыст таçтан сĕтĕрсе пынă ют çĕршыв журналĕсенчи картинкăсене пăхса лараççĕ, унтан Тарье вĕсене апат çитерет те, иккĕшĕ мотороллер çине утланса хирелле, вăрманалла вĕçтереççĕ... Хăш чух, ытла каça юлса таврăнсан, каччи пирĕн патрах сывăратчĕ. Кӳршĕсем пирĕнтен: «Эсир кĕрӳ кĕртнĕ мар-и çав?»— тесех ыйтма пуçларĕç. Аван та мар ĕнтĕ, хĕр пирки лайăх мар ят тухма пултарать, анчах ман Тарье ăнакăна пăхса тăмарĕ, çав услапа ытларах та ытларах хамăр еннелле çавăрма тăрăшни сисĕнчĕ.

Эпĕ хам вара, тĕрĕссипех калатăп, ăна тӳсме пултаймастăм. Сăнĕ-пуçĕ те, тумланни те, йăли-манерĕсем те темле йĕрĕнмеллеччĕ унăн, йĕркеллĕ этемсен пек марччĕ...

Пĕррехинче эпĕ çак упăте телефонпа калаçнине илтрĕм. Ĕçрен таврăнсан пĕчĕк пӳлĕмри диван çине кĕрсе выртсаттăм та, вĕсем эпĕ килнине пĕлмен. Тарье те таçта тухса кайнă-мĕн. Васька-Вилли трубкăна тытрĕ те малтан хăйне кирлĕ телефон номерне каларĕ, унтан вара тем шуйттанла чĕлхепе калаçма тытăнчĕ:

— Хэлло, монсиньор! Звоню от чувихи. Предки в расходе. Хиляй до нашей хаты! Захвати свою кобру. Пошвырнемся по тракту, а там кирнем. Законно!

Нимĕн те ăнланмарăм! Вĕсен, çав ĕçсĕр аптранă стилягăсен, хăйсен упăтелле «чĕлхи» пур иккен, ăна эпĕ кайран. çак эсрелĕ пирĕн пата пурăнмаллипех куçсан тин кăштах чухлакан пултăм. Çынна вĕсем «чувак», «чувиха» теççĕ, «хиляй»— кил, «прошвырнемся»— каяр, вĕçтерер, тени пулать, ашшĕ-амăшĕсене «предки» теççĕ, тата ытти те, темĕн те пĕр. Хăсăк тухать вĕсем хăйсем хушшинче мĕнлерех калаçнине итлесен!..

Çĕр хут та каларăм пуль Тарьене: пăрахтар Эллăна çак гориллăпа çӳреме, ним ырри те пулмасть акă кунтан, пурнăç тумалли çын мар вăл, халех чарас пулать, кая юлсан каю шăтма пултарать... Эсĕ — амăшĕ, хĕрсем амăшĕсене ытларах итлеççĕ, калаç-ха эс унпа лайăхрах, ăнлантар, тетĕп. Çук, усси пулмарĕ вĕт. хăлхана та чикмерĕ ман сăмахсене, эсремет пуçĕ!

Кайран вара...

Кайран чăнах та каю шăтрĕ.

Кĕр енне пирĕн хĕр темскер чирленĕ пек пулнăччĕ,

виç-тăват кун килтен тухмарĕ. Пĕр каçхине, эпир çывăрма выртнăччĕ ĕнтĕ, сасартăк чӳречерен шан-шан-шан! тутарчĕç. Тарье çенĕке тухса уçрĕ те — пӳлĕме пĕр кĕтӳ стилягă кĕрсе тăчĕ. Пурте ӳсĕр. Малта — пирĕн «кил тусĕ» Васька. Куçĕ-пуçĕ арканса кайнă ĕнтĕ. Эпир паян менелникре ыр куртăмăр, Элла унта пырайман пирки халĕ ăна киле килсе хăналама шутларăмăр, тет. Унччен те пулмасть, пиртен ыйтмасăр-тумасăрах, çаксем малалла иртрĕç, сĕтел çине бутылкăсем кăларса лартрĕç, тӳрех такам пăлхатнă хур аçисем пек шавлама пуçларĕç, иккĕн-виççĕн Элла пӳлĕмне кĕрсе кайрĕç, пĕри гитарă тытса юрлама тапратрĕ.

Пуçланчĕ вара акăш-макăш ахăр самана! Ĕçеççĕ, юрлаççĕ, ташлама хăтланаççĕ... Пĕр вун пилĕк минут хушшинче хваттертен чăн-чăн хупах пулса тăчĕ.

Анчах ку тата нимĕн те марччĕ-ха, тӳссе ирттерсе яма та пулатчĕ-и, тен. Темшĕн-çке, пĕлместĕп, сасартăк çапăçу пуçланса кайрĕ вĕсем хушшинче. Тытăнчĕç пĕр-пĕрин çине сикме, пĕр-пĕрине тӳнккеме, капăр кĕписене çурма, вăрăм çӳçĕсене тăпăлтарма — ним майĕ çук вĕт!.. Чарас — чарса çитерес çук, патне пыма та хăрамалла тата — хăвнах шаккаса хурĕç: чышкисем ыратакан пулсан, стакансем, бутылкăсем хута кайрĕç, унтан вазăсем, чечек куршакĕсем... Тур çырлах! Тахăшĕ вăркăнтарнă коньяк бутылки трюмона шăп варринчен пырса лексе чăнкăр-р! тутарчĕ, унтан харăсах икĕ чӳрече ванчĕ. Ним тума та çук, часрах милицие шăнкăравларăм — килĕр, çăлăр!

Пурне те пырса тиесе кайрĕç вара. Урăлсан та киле яман, пурне те вун пилĕкшер талăк панă.

Ирхине Тарье ик витре тăп-тулли кантăк ванчăкĕ кăларса пăрахрĕ — трюмо юлашки, вазăсем, тарелкăсем... Хăй нимĕн те чĕнмест.

— Суда паратăп,— терĕм эпĕ.

— Кама?— шăтарас пек пăхрĕ ман çине Тарье.

— Кама пултăр? Сирĕн ытарайми упăтене! Вăл ертсе килчĕ вĕт хăйĕн зондер-командине. Сахалтан та пĕр икĕ пин шыраса илетĕп!

— Памастăн!— аллинчи щеткипе урайне так! чышрĕ вăл.

— Мĕншĕн памастăп пулать? Халех, паянах заявлени çыратăп.

— Çырмастăн! Çырма мар, никама та пĕр сăмах та каламастăн, мĕншĕн тесен...— Тарье васкасах Элла пӳлĕмĕн алăкне кайса хупрĕ те ман çывăхах пырса тăчĕ.— Мĕн-

шĕн тесен Вилли халь... санăн мăнукăн ашшĕ! Анланатăн-и?

— Мĕ-ĕн? Мĕнле мăнук?! Мĕн лăпăртататăн эс, вилме маннăскер?— пăшăлтатса илтĕм эпĕ. Хамăн куçсем çав самантрах хуралса килчĕç, чĕре çĕçĕпе яшлаттарнă пек ыратса кайрĕ.

— Çапла çав,— терĕ Тарье ним хумханмасăр,— халь тин ĕнтĕ каюра пек каялла тапмалли çук! Пирĕн Элла йывăр çын пулнă. Виççĕмĕш уйăх...

Эп пукан çине лак! лартăм. Умри пĕр Тарье виç-тăват Тарье пек курăнса кайрĕ. Ал-урара пĕр вăй та юлмарĕ, пуç çаврăнма пуçларĕ.

— Вĕри çĕлен эсĕ, ача пуçне çисе ятăн-ятăнах пулать! Ылханатăп сана, нихçан та каçармастăп куншăн!— теме çеç пултартăм.

...Анчах ылхан — ан ылхан, пулни пулнах ĕнтĕ. Леш шуйттанĕ вун пилĕк талăк ларса тухсанах, Тарье ăна хамăр пата сĕтĕрсе пычĕ.

— Спаççипă кала — çыннин кăмăлĕ лайăх, килме килĕшрĕ, атту вĕт кун пек чух теприсем хŭри вĕçне çеç кăтартса хăвараççĕ. Телейлĕ пултăмăр эпир!— çине тăрсах ăнлантарма тăрăшрĕ Тарье.

— Мĕн каласси пур, этем шутсăр телей мар-и!— терĕм эпĕ.

Ну, туй та турăмăр вара. Хăнасем пычĕç, юрларĕç, ташларĕç. Анчах манăн макăрас килчĕ. Савăнмалли нимĕн те пулас çуккине пĕтĕм чĕрепех туйрăм çав. Йăнăшман эпĕ...

Кун иртет те çĕр иртет, вăхăт шăвать — эрне, уйăх.

Аякран пăхсан, чиперех пурăнатпăр пек. Ир тăратпăр — апат çиетпĕр, эпĕ ĕçе тухса каятăп, таврăнсан — каллех сĕтел хушшинче ларатпăр, каçхине ман хĕрпе ытарайми кĕрŭ уçăлса çŭреççĕ, кинона каяççĕ, хăш чух хăнара пулаççĕ... Васькн кăнтăрла тек çапкаланса çŭрет — ăçта футболла выляççĕ, ăçта боксерсем пĕр-пĕрине тŭпелеççĕ, мотоциклистсем ăмăртаççĕ... Е тата хăйĕн хăлтăр-халтăр мотороллерне сŭтсе пăрахать те кунĕ-кунĕпе унпа чакаланать. Çимелĕх укçа ĕçлесе тупасси çинчен шухăш та çук. Анчах çиессе хăй лаша пек çиет — яшкине яланах икшер тарелкă, катлет-мĕн шаритленĕ пулсан — пиллĕкрен кая мар хыпать. Эпĕ çак тарана çитсе те çавăн пек нумай çиекен çын курманччĕ! Тиркеме пăхать тата — сĕтел хушшинчен тăраннипе какăра-какăра тухать те: «Паян апат ытла

вашнăх пулайман, ашне ытларах ямалла мĕн»,— тесе хурать тепĕр чух.

Ку çеç те мар-ха. Малтан вăл хăйне майлă капăр çӳренĕ пек курăнатчĕ, анчах хăйĕн йĕмĕ те пĕрре кăна иккен, пушмакĕ те пĕр мăшăр çеç, кĕпи те иккĕ анчах, сивĕрех çанталăкра тăхăнма путлĕ тумтирĕ те çук! Ман Тарьен ирĕксĕрех тумлантарма тиврĕ çакна — ăна та илсе парать, кăна та. Çакăншăн кăмăлсăрланса Тарьене пĕр-иккĕ каларăм та, вăл каллех сиксе ӳкрĕ ман çине:

— Епле тумлантарас мар-ха ăна, хамăр çын вĕт! Çĕтĕк-çатăк çӳретсен хамăрах намăс пулать! Кам кĕрӳшĕ? Çавсен! теççĕ-иç?

— Çынсенчен намăс пуласран, унăн хăйĕн ĕçлемелле пуль? Йĕмлĕх укçа ĕçлесе тупайман арçын — арçын-и вăл?— хирĕçлерĕм эпĕ.

— Ĕçлĕ-ха, ан васка! Шырать вĕт-ха ĕçне. Ĕнер те цирка кайса килчĕ — унта ташлакан упасене тăрантараканни кирлĕ, тет...

Анчах пирĕн геройăн циркри упасем патне кĕресси те пулмарĕ,— шутламан та вăл ĕçе кĕме!— ун вырăнне вăл пире урăхла «цирксем» кăтартма тытăнчĕ. Элла ĕнтĕ йывăрлансанах пычĕ те питех тухса çӳреймерĕ, лешĕ вара кун каçа таçта çапкаланса çӳренĕ хыççăн кашнинчех хĕрĕнкĕ таврăнма пуçларĕ. Килет, кавлет-кавлет те çывăрма выртать — чӳрече кантăкĕсем чĕтренмелле харлаттарать... Унтан, пĕррехинче, вуçех те киле таврăнмарĕ. Ирхине вытрезвительрен шăнкăравларĕç — сирĕн кĕрӳ кунта, штраф тӳлеме укçа илсе килĕр, унсăрăн кăларса ямастпăр! теççĕ. Эпĕ вырăнтан та хускалмарăм, анчах Тарье çав самантрах ăна «çăлма» тухса вăркăнчĕ...

Тепĕр эрнерен лешĕ татах çакăн пек «номер» туса кăтартрĕ. Тарье каллех чупрĕ ăна хăтарма. Ак хайхи! Куллен кун хакланса пырать пирĕн кĕрӳ тени! Тăрантар ăна, тумлантар, çийĕнчен тата уншăн вытрезвителе кая-кая тӳле!..

Хальхинче тӳсеймерĕм, çакăн амăшĕ патне кайрăм. Чăвуна, ятла пĕрре, тетĕп. Анчах амăшĕ сăрланă тутисене мăкăртрĕ, самăр хул пуççийĕсене вылятса илчĕ те:

— Тĕлĕнетĕп, ма пăшăрханатăр эсир кун пекех! Мĕнех тунă вара ман ывăл? Çын вĕлермен, магазин çаратман... Çамрăк çын пĕр-ик хут вытрезвителе кайса çĕр выртни ниме те пĕлтермест пуль вăл, унта сахал çын пулать-и?— тесе хучĕ.

Ак сана амăшĕ! Ывăлĕ шпанана тухса кайнăшăн пĕртте кулянас шут çук унăн, ăнах тӳрре кăларасшăн!..

— Эс ун пек шутлатăн пулсан, тепринче вытрезвителе ху кайса укçа тӳлесе ил ывăлна, тек эпĕ пĕр пус та памастăп уншăн!— тарăхса каласа тăкрăм эпĕ.

—Ну, ку вара айванла калаçу,— кулса илчĕ вăл мана хирĕç.— Халь тин вăл ман ывăл мар ĕнтĕ, сирĕн! Эсир ăна манран хăвăр илсе кайрăр, сире кĕрӳ кирлĕ пулнă вĕт... Çавăнпа та ыр курăр ĕнтĕ унпа пурăнса!

Тек ку тăрри шăтăк хĕрарăмпа калаçса та тăмарăм, ал султăм та тухса кайрăм. Çавăнтан вара ун патне ура та ярса пусман. Анчах та хăй эпĕ унпа мĕн çинчен калаçнине ывăлне каласа панă иккен. Лешĕ мана кун çинчен часах, тепре ĕçсе таврăнсанах аса илтерчĕ:

— Жалобăсем парса çӳретĕн, эппин, ват сăс? Эс тата милицине çырса пар ман çинчен, анчах та асту — малтанах асăрхаттаратăп — пĕр шăл та хăвармастăп вара!— терĕ те, хăйĕн çур пăт пуканĕ пек чышкине ман пит патнех илсе пырса çавăркаласа кăтартрĕ...

Ак хайхи епле пурнăç пуçланчĕ манăн! Хам килтех, эп тăрантарса пурăнакан этемех хăратма тытăнчĕ!..

Çакăн хыççăн эпĕ унпа вуçех калаçма пăрахрăм. Тарье те тек-текех ассăн сывласа ахлататчĕ, хăй ухмаххипе киле епле эсреле илсе килнине тинех ăнланма пуçларĕ курăнать. Эллăн та куçĕсем час-часах хĕп-хĕрлĕ пулатчĕç — вăрттăн макăратчĕ пулмалла.

Анчах кĕрӳ тени çав-çавах ним хуйхи-суйхисĕр пурăнчĕ. Хуть те хăçан та хаваслă, темле этем ăнланмалла мар юрăсем юрлать... Унтан пĕррехинче тĕлĕнтерсех пăрахрĕ: эп ĕçрен таврăнсаттăм кăна, вăл таçтан çаврăнса çитрĕ те, пысăк сумкăран икĕ кĕленче шампански эрех, çимеллисем, канфет коробкисем кăларса сĕтел çине купаларĕ.

— Атьăр-ха, пĕчĕк праçник тăватпăр...— терĕ хăй, пырне шаклатса илсе.

— Мĕн ятпа-ши тата ку?— хăюсăртараххăн ыйтрĕ Тарье.

— Эп лайăх ĕçе вырнаçнă ятпа!— пĕççине çапса илчĕ кĕрӳ.— Ырантан пуçласа эпĕ музыкă магазинĕн агенчĕ, халăх хушшинче культурăллă таварсем сарса çӳрекенни пулатăп. Малтанлăха аванс пачĕç...

— Таса ĕç ĕнтĕ ку... Шалу мĕн чухлĕ хураççĕ вара?

— Çирĕп оклад çук. Комиссионнăй илетĕп, процент. Хам тăрăшса ĕçлесен, укçа айнех пулма пулать!

— Тем пекехчĕ, тем пекехчĕ, атту укçа пĕтрĕ ĕнтĕ пирĕн. Часах çемйи те пысăкланать...

Эп калаçăва хутшăнмарăм, анчах сĕтел хушшине ларма хирĕç пулмарăм — пĕрре ыррине курас хуть хаклă кĕрӳрен!— терĕм.

Çакăн хыççăн Васька-Вилли чăнах та час-часах киле укçа илсе пыма пуçларĕ. Элла валли япаласем те туянкалать. Тарье ĕнтĕ çунатлансах кайрĕ — унăн кĕрӳшĕ ĕçлет вĕт-ха! Эп те питех пăшăрханмарăм халь. Пĕр-икĕ уйăх ытла иртрĕ çапла. Пурнăç йĕркене кĕнĕ пекех туйăнчĕ...

Анчах та эпĕ, ват ухмах, тӳсме çук хытă йăнăшнă иккен! Ăнланман, тавçăрса илмен Элла упăшки укçа епле майпа тупнине. Кайран тин... Ну, йĕркипе калас-тăк, çапла пулчĕ: Эллăн çуратмалли вăхăчĕ çитнипе ăна больницăна ăсатсан, тепĕр каçхинех пирĕн ытарайми кĕрӳ темле пысăк чăматан йăтса, вил ӳсĕр таврăнчĕ.

— Мĕнле чăматан ку? Аçтан илсе килтĕн?— хăрарах ыйтрĕ ăна алăк уçса кĕртнĕ Тарье. Унтан çав чăматана çĕклесе пăхрĕ те хăрасах кайрĕ пулмалла.— Эсĕ мĕн, чул тултарнă-и кунта? Ытла та йывăр-çке? Кай, ырă япала мар пуль ку...— терĕ.

— Хуп шăршлă çăварна, санăн ĕç çук унта!— пĕррех хăмсарчĕ ăна Васька.— Асту, катлет тăватăп!..— Унтан кравать патне аран-аран сулкаланса çитсе, хывăнмасăрах ун урлă выртрĕ те тӳрех харлаттарса çывăрса кайрĕ.

Ирхине, тул çутăлнă-çутăлман, тата хăрушăрах япала пулчĕ: пирĕн пата кĕтмен çĕртен уголовнăй розыскри çынсем пырса хăйсен документчĕсене кăтартрĕç те малтан çав кĕрӳ тенĕ шуйттана силле-силле вăратрĕç, унтан пĕтĕм хваттерĕпех ухтарса тухрĕç. Васька çĕрле çĕклесе пынă чăматана уçсан, ун ăшĕнче çĕр ытла килте тунă патефон пластинкисем тупрĕç...

— Çакна шыранă та эпир,— терĕ пирĕн пата пынисенчен пĕри.— Пăхăр-ха, мĕн чухлĕ кунта... пирĕн çамрăксен шухăш-кăмăлне пăсмалли япала: рок-н-ролĕ, буги-вуги... океан леш енчи лапра!

— Чимĕр-ха, вăл пирĕн музыкă магазинĕнче ĕçлет вĕт-ха, ăна яланах унтан сутма параççĕ...— хута кĕме тăчĕ сиксе чĕтрекен Тарье.

— Тĕрĕс мар ку, сирĕн кĕрӳ ниçта та ĕçлемен вăл, сире ахаль улталаса пурăннă,— терĕ розыск çынни.— Тĕрĕссипе вăл — хулари спекулянтсен шайкин утаманĕ пул-

нă, паразит! Эпир ăна чылайранпа сăнаса пурăннă ĕнтĕ. Халь акă тинех лекрĕ пирĕн алла...

Эпир çăварсене карсах пăрахрăмăр...

Ну, паллах ĕнтĕ, çав «музыкă чăматанĕпе» пĕрле ăна хăйне те илсе тухса кайрĕç. Тарье ӳлесех макăрчĕ, анчах эп савăнтăм. Тепĕр ик-виç эрнерен суд пулчĕ. Пĕр вуннăн ларнă, тет, вĕсем айăпланакансен хытă тенкелĕ çинче. Пурте пирĕн хаклă кĕрӳ пекех ниçта ĕçлемен çапкаланчăксем, хайхи «пурнăçа çунтарса пурăнакансем» пулнă, тет. Хăйĕн кĕрӳшне çăлма Тарье адвокат та тытнă иккен те — усси пулман, турра шĕкĕр, çĕнĕ Указ тăрăх пилĕк çуллăха шаплаттарса хунă! Вара çийĕнчех кунтан ытла çывăхах мар вырăнсене илсе кайнă, тет.

...Конон Иванч çăмăллăн сывласа илчĕ.

— Паçăрах каларăм-çке сана: юрать, саккунĕсем лайăх пирĕн,— терĕ вăл юлашкинчен.— Атту пулсан тата тем курмаллаччĕ-ха, тата тем хака кайса ларатчĕ вăл кĕрӳ. Халь ĕнтĕ лăпкăнах пурăнатăп. Питĕ лайăх!

ТАРĂХМАСĂР АРА!

ХЁВЕЛ ХЁРЕЛСЕ тухайман-ха...

Çапла çырнăччĕ пĕр поэт, хăйĕн сăввине нимрен пуçлама аптраса. Эпĕ те хамăн калавăма çав сăмахсемпе пуçлас, терĕм. Виçĕ сăмах илнĕшĕнех поэт чухăнланса юлмĕ, хама та литературă вăрри, плагиатор ятнех памĕç-ха, тен. Тепĕр чух ман пек ахаль çынсем мар, хăш-пĕр наукă кандидачĕсем те урăх авторсем çырнисене ют çын ани çинчен пăрça вăрланă пек çĕклемĕ-çĕклемĕпе тăпăлтараççĕ те, çапах нимĕн те пулмасть — пур пĕрех наукă ялавне çӳлтен çӳле çĕклесе пыракансен шутĕнче тăраççĕ! Эпĕ те аптрамăп-ха, тетĕп.

Çапла, хĕвел хĕрелсе тухайман-ха, анчах автобус станциинче халăх туп-тулли. Пурте таçта кайма хатĕрленнĕ,— кашнин хăйĕн ĕçĕ ĕнтĕ, хăйĕн нуши,— билет сутма пуçласса кĕтеççĕ. Паллах, кашни хăйне май кĕтет: хăшĕ кассă павильонне хул пуççипе тĕкĕленĕ, хăшĕ кăшт аяккарах тăрса ирхи ырă сывлăша йӳçĕ чĕлĕм тĕтĕмĕпе варалать, хăшĕ-пĕри мăн çăраççипе питĕрнĕ буфет алăкĕ патне кайса кăмăлсăрлланса килет, теприсем тата унта-кунта чĕрĕп пек хутланнă та çав тери тутлăн сывăраççĕ.

Акă, симĕс решетке çумĕнчи хыçлă сак çине виçĕ инке — ытлашши çамрăках та мар, тиркемеллех ватă та мар хăйсем — питĕ меллĕ вырнаçнă та, килти тӳшек çинче выртнă пекех «хуп туртаççĕ». Тĕлĕк те кураççĕ пулмалла мăнтарăнсем: пĕри, пуçĕнчи сар тутăрне майралла çавăрса çыхнăскер, вăхăтран вăхăта йăл та йăл кулкаласа илет — ахăртнех, килте юлнă ытарайми ачисене курать пулмалла; тепри, шурă тутăрли, мăкăр-мăкăр тăвать те чышкипе юнаса илет... Ку ĕнтĕ, тем тесен те, упăшкине курать. Хăй килтен тухса кайнă-кайман упăшки ĕçсе лартнă пек туйăнать пуль-ха ăна. Виççĕмĕшĕн ним хуйхи те çук пулмалла, вăл пуçне сак хыçнелле янă та çăварне карсах пăрахнă — ăнсăртран вĕçсе иртекен сала кайăк мар, хура курак та кĕрсе каймалла!

Билет сутакан кассă уçăличчен вăхăт чылай-ха, çавăнпа та халлĕхе кунта нимĕнле шăв-шав та, тĕрткелешӳ те çук, пĕтĕмпех мирлĕ те лăпкă. Çавăнпа та çак виçĕ инке те вăранмаççĕ. Çывăрччăрах ара, кама мĕн ĕç? Тен, вĕсем инçетрен танккаса килнĕ, ывăннă пулĕ. Канччăр-иç, хăйсен кăмăлĕ туличченех харлаттарччăр!

Анчах та нумаях ыр курмалла пулмарĕ çав виçĕ инкен. Таçтан хăяматĕнчен-çке, вĕсен умне пĕр хĕрĕхелле çитнĕ арçын пырса тăчĕ. Тумланасса начарах тумланман хăй, хальхи укçапа шутласан, пĕр вăтăр тенкĕ тăракан костюм тăхăннă, пушмакпа, картуспа. Чăн та ĕнтĕ, костюм тенийĕ питĕ шутсăр лутăрканса, вараланса пĕтнĕ, пушмакĕсем иккĕшĕ те «çăварне карнă», ури пӳрнисем шăкăриех курăнаççĕ, картусĕ мĕн тĕслĕ пулнине пысăклатса кăтартакан кантăк витĕр пăхсан та уйăрса илес çук. Шатра пичĕ хĕп-хĕрлĕ шăртпа хупланнă, кăвак куçĕсем пăтранчăк шыв кулленчĕкĕсем пек курăнаççĕ. Пĕр сăмахпа каласан, питĕ илемлĕ арçын, хуть те халех музее кайса пар е милицие ăсат!

Çак этем ĕренки сак çинче тутлăн сывăрса ларакан инкесем тĕлне çитсе чарăнчĕ те, малтан такамран хăранă пек

енчен енне пăхкаласа илчĕ, унтан, инкесем патнерех пырса, икĕ хутчен самаях хыттăн:

— Кăххăм! кăххăм!— терĕ.

Инкесем илтмерĕç пулмалла, малтанхи пекех тĕлĕксем курса ларчĕç. Этем тата хытăрах ӳсĕрчĕ:

— Кыххым!..

Çакă вара хĕрарăмсемшĕн «подъĕм!» тесе кăшкăрнă пекех пулчĕ, вĕсем виççĕшĕ те пĕр харăсах шарт! вăранса кайрĕç те, хăйсем умĕнче ытлашши шанмаллах мар тĕслĕ кĕлетке тăнине курса, йăпăр-япăр кĕсйисене, хĕвĕсене хыпашлама, укçи-тенкине тĕрĕслеме тытăнчĕç. Хăйсем çав вăхăтрах палламан çынна куçĕсемпе пăраларĕç.

— Ан хăрăр, ырă аппасем,— терĕ лутăрканчăк çын макăрса ярас пек, хĕрарăмсем мĕн пирки ăшталаннине курса,— эп ун йышши çын мар... Эп хам хурлăха лекнĕ çын, мана хама çаратрĕç... Ним тума аптраса çӳретĕп халь çавăн пирки! Хуть те çакăнса вил!

— Мĕн пулчĕ ара ун пекех?— пуринчен малтарахран ыйтрĕ сар тутăрли, хĕвĕнчи укçине шаларах чиксе.

— Кĕçĕр çĕрĕпе çывăраймарăм...— тата хурлăхлăрах калама тытăнчĕ хайхи кĕлетке, таçта аяккалла пăхса.— Эпĕ больницăра пит нумай выртрăм, язвă шелуткă пирки виçĕ хут операци турĕç... Чут вилсе каяттăм, сăпаççип тухтăрсене — çăлчĕç, ачасене тăлăха хăвармарĕç! Ачисем манăн çиччĕ, пĕринчен тепри пĕчĕкрех, сĕтел хушшине ларсан диаграм пек курăнаççĕ... Енер, хайхискер, комисси пăхрĕ мана — виçĕ профессор, ултă тухтăр, фершăлсен шучĕ те çук. Ну, сывалнă эсĕ, Иванов юлташ, халь ĕнтĕ киле кайма та пултаратăн, терĕç. Çул çине кайма çавăнтах вунă тенкĕ тыттарчĕç, кив укçапа шутласан çĕр тенкĕ вĕт вăл! Питĕ хĕпĕртерĕм, часрах автобус çине лартăм та вокзала вĕçтертĕм, анчах кассă умне пырса тăрсан алла кĕсъене чиксе пăхрăм та — кайсах ӳкеттĕм...

— Укçине вăрламан пулĕ те?!— хыпăнса ӳкрĕ инкесенчен пĕри, шур тутăрли.

— Вăрланă çав! Пĕр пус та хăварман!— тăрук кăкрине чышса, куççулĕпех макăрса ячĕ шăрт сухал.

— Ай тур-тур, алли хăртăрах вăл шуйттанăн! Чирлĕ çынна та хĕрхенсе тăман!— куçĕсене хăвăрт-хăвăрт мăчлаттарса илчĕ виççĕмĕш инке.— Укçине санăн тĕплĕрех пуçтарса чикмелле мĕн! Эсир, арçынсем, вăл енчен питĕ тирпейсĕр-çке çав!

— Ахаль те питĕ лайăх пуçтарса чикрĕм,— тӳрре тух-

ма тăрăшрĕ арçын,— виç тенкĕлĕхне ватса пĕр пачкă пирус илтĕм те, юлашкине сăмса тутрипе чĕркесе ак çакăнта хутăм...

Ĕненмеллерех пултăр тесе пулас, арçын васкасах пиншак тӳмисене вĕçертсе, шалти кĕсйине кăтартма пикенчĕ, анчах унтан пушă çур литр пуçĕ курăнса тăнине асăрхаса, пиншак аркисене йăпăр-япăр хупласа хучĕ.

— Кайран вара?— ыйтрĕ шур тутăрли.— Милицине чупрăн-и?

— Мĕн усси пултăр ĕнтĕ вĕсем патне кайнипе! Пĕлетĕп вĕт-ха, автобусра тăпăлтарса илнĕ ман укçана. Вăрлаканни такăш тĕлте сиксе юлнă — ăна виçĕ пуçлă йытă та пĕлес çук!— аллипе сулчĕ арçын.

— Эккей, мĕн тери хурлăха лекнĕ эсĕ! Халь мĕн тăвас пулать-ха ĕнтĕ санăн, киле епле çиткелĕн? Ху инçетрисем-и?— арçына чуптанах хĕрхенсе каласа тытăнчĕ виççĕмĕш инке.— Кунта санăн тăван-хурăнташусем те, паллана çынсем те çук пулĕ-ха?

— Çуккă çав, пĕр чун та çук,— ассăн сывласа илчĕ арçын.— Каясса чăнах та инçе каймалла, Пушкăрта çитиччченех. Эп малтан кунта ĕçе вырнаçас тесе килсеттĕм, анчах хам чирлесе кайрăм...

— Эппин, мĕн тăвас тетĕн-ха халь?

— Ырă çынсем пулăшасса çеç шанатăп ĕнтĕ, урăх нимĕнле май та çук...— Шăрт сухал инкесен куçĕсенчен выçă йытă пек пăхма пуçларĕ.— Тен, эсир те пулăшăр пăртак... Пĕр аллăшар пус та пулин. Ĕмĕр ырăпа асăнса пурăнăттăм сире...— Вăл çавăнтах сылтăм ывçине çăпала пек туса, ăна инкесем еннелле тăсрĕ. Алли хăйĕн сиксе чĕтрет.— Тархасшăн, ырă çынсем... мĕн чухлĕ те пулин парсамăр... Тем валли мар, билетлăх пухатăп, ачамсем патне часрах çитес килет... Çур çул курман!

Ку çав тери кĕтмен çĕртен пулнипе, инкесем пĕрпĕрин çине тăй-тай пăхкаласа илчĕç. Ак япала, хăйсем çак çынна ытла хĕрхеннĕшĕн хăйсенех тăкак курма тивет-иç! Кун çинчен пĕртте шутламанччĕ-ха вĕсем!..

— Тархасшăн ĕнтĕ, ан пăрахăр инкеке лекнĕ çынна,— сăмса витĕр нăрлатрĕ арçынĕ, инкесем патне тата çывăхарах пырса,— кам пĕлет, тен, пурнăçра эпĕ те сире кирлĕ пулăп!

Шур тутăрлă инке — унăн кăмăлĕ ыттисенчен çемçерех пулнă пуль çав — пĕррех хĕвне кĕрсе кайса укçа енчĕкĕ туртса кăларчĕ, ăна кура тепри те чăлха кунчине хыпаш-

лама тытăнчĕ,— унăн манечĕсем çавăнта пулнă пулмалла. Шăрт сухалăн халĕ аллисем кăна мар, пуçĕ те чĕтреме тытăнчĕ, çав вăхăтрах хăй, çу курнă выçă кушак аçи пек, чĕлхине кăларса тутисене çулла-çулла илчĕ.

— Халех... ак халех укçаллă пулатăп, пурнăç каять вара манăн!— терĕ ĕнтĕ хăй.

Анчах... тутлă ĕмĕчĕ тулаймарĕ унăн, укçаллă пулаймарĕ вăл. Ун вырăнне акă мĕн пулса тухрĕ: инкесенчен иккĕшĕ енчĕкĕсене кăларса вак укçа шутлама тытăнсанах, виççĕмĕшĕ, сар тутăрли, ку таранччен çак хурлăхлă калаçăва ним хутшăнмасăр сăнаса ларнăскер, сасартăк сикрĕ тăчĕ те, лешсене иккĕшне те ал тунисенчен кап! ярса тытрĕ.

— Чимĕр-ха, ухмахланма ан васкăр!— терĕ вăл.— Укçăрсене халех пуçтарса чикĕр!

— Ма, ма? Мĕншĕн?

— Нушана лекнĕ çынна ма пулăшас мар?— чунтан тĕлĕнсе пăхрĕç лешсем.— Эс те паратăн пуль-ха пĕртак, хĕрхенес пулать...

— Шĕвĕртни те памастăп эп ăна!— куçĕсене çутăлтарса илчĕ сар тутăрли.— Чикĕр тетĕп укçăрсене! Пĕлместĕр-ха эсир нимĕн те, çавăнпа ухмахланатăр!

— Ара хăех каласа пачĕ вĕт-ха...

— Вăл тем те юрласа кăтартĕ, итлĕр кăна эсир!— Сар тутăрлă инке çав самантрах шăрт сухал еннелле варт! çаврăнчĕ те, пĕрре сывлăш çавăрса иличчĕнех акăшмакăш пăсăрлантарма тытăнчĕ ăна.— Намăссăр çын эсĕ! Мĕн питпе çакнашкал артистланса çӳретĕн? Кунта сан валли тиятр мар пуль? Эккей, тупăннă чирлĕ çын!.. Ним чирĕ те çук санăн, пьянчук кăна эсĕ! Сĕтĕрĕнчĕк!..

Хăйне çакнашкал витĕмлĕ характеристикă пама пуçласан, леш хайхи йăрстах тăсăлса тăчĕ, унăн сăнĕ те тăруках паттăрланса кайрĕ.

— Эс мĕн пит çухăратăн? Мĕн правапа кӳрентеретĕн?— чышкисене чăмăртаса сар тутăрли патнелле пĕр утăм ярса пусрĕ вăл.— Ан йăсланă пултăр, атту акă халех милицине тыттарса яратăп та — лекетĕн вун пилĕк талăка!

— Ай, хăратса пăрахрăн-çке, хăраман вырăн та юлмарĕ, ăçта кайса кĕрес!— ăна хирĕç витлесе илчĕ сар тутăрли, пуçне пăркаласа. Унтан тăрук сăнне хаярлатрĕ:— Эсĕ кунта ухмах хĕрарăмсем тĕлне пултăм тесе шутларăн пуль-ха, кусене тихаласа кайма ним те мар, терĕн пуль!

Хальхинче питĕ йăнăшнă эсĕ, хĕрлĕ сухал! Эс мана нихçан та хуптараяс çук, анчах та эпĕ вăт сана пĕр наччасра тыттарса яма пултаратăп! Сана вара вун пилĕк талăк мар, пилĕк çул таранах пама пултараççĕ çакнашкал ĕçсĕр супса, çынсене улталама хăтланса çӳренĕшĕн! Саккунсене халь пит лайăх пĕлетпĕр эпир!..

— Эп никама та улталаман, тĕрĕссине çеç каланă, ан палкаса тăр!— кăшкăрчĕ арçын, пĕртте хăрама шутламасăр.

— Улталаман пулмасăр! Асту, тĕрĕссине калĕç сан пеккисем!— парăнмарĕ сар тутăр.— Ара, каçхине кăна площадьри магазинра куртăм вĕт эп сана, пит лайăх палласа юлтăм! Хăвăн пекех ӳсĕр тусусемпе пырса кĕтĕн те, черетри çынсене чавсапа унталла-кунталла ывăтса, ик çур литр илсе тухса кайрăн! Пĕтĕм халăх ылханса юлчĕ сире! Паян акă нимпе мухмăр уçма çук та — ы ткаласа çӳретĕн, кĕççе пит! Ăçта санăн намăс? Вăкăр пек тĕреклĕ кӳлепӳпе христаради ыйтатăн... тьху! Чирле-ерĕм, опера-аци турĕç, килте çичĕ ача-а кĕтет ăна! Йытă хӳри мыр-и тата! Никам та çук санăн, арăму та, ачу-пăчу та, пулнă пулсан та эсĕ вĕсене тахçанах пăрахса тухса кайнă. Тьху! Сан вырăнта пулсан, эпĕ ак çакăнтах çĕр айне анса каймалла!

Çакăн пек атакăна пула хайхи арçын ним калайми пулса тăчĕ. Кăвакарсах кайнă тутисем кăна тăрт-тăрт-тăрт чĕтрерĕç унăн. Чылайран тин сăмах хушма пултарчĕ вăл:

— Сана упăшку хĕнеменни нумай пулать пулмалла, çавăнпа ытла янратăн эсĕ...

— Мана хĕнеме сăлтавĕ çук!— кăшкăрчĕ ăна хирĕç сар тутăр.— Эп килте те, колхозра та лăш курмасăр ĕçлетĕп, ачам-пăчамшăн та, халăхшăн та тăрăшатăп. Акă, кур!— Вăл çийĕнчи пиншакне вăшт кăна вĕçертсе ячĕ те, унăн кăкри çинче ирхи хĕвел çутинче вĕр-çĕнĕ орден ылтăн тĕспе йăлтăртатса илчĕ.— Енер кăна çакса ячĕç. Кăмака çинче выртнăшăнах памаççĕ кун пек япаласене... Анчах эпĕ санăн арăму е аннӳ вырăнче пулсан, тупата-туршăн сана тахçанах наркăмăш парса вĕлермелле. Ан пул эс луччă çĕр çинче, ан вараласа çӳре таса сывлăша!.. Çынсем ку чухне çĕрне-кунне пĕлмесĕр ĕçлеççĕ, эсĕ пур — мухмăр уçмаллăх çынсенчен темиçешер пус тархасласа çӳретĕн. Тьху, намăссăр!..

...Сар тутăрлă инке çак шăрт сухаллă пьянчука хăртма тытăнсанах, вĕсем патне унтан та кунтан çынсем пухăнма пуçларĕç. Пуринчен ытларах — хĕрарăмсем. Шăв-шав мĕн

пирки тапраннине тавçăрса илсен (паллах ĕнтĕ, ăна тавçăрса илме йывăрах пулман...), вĕсем пурте хăйсем витĕр электричествă токĕ янă пек тăчĕç — халь тесен халь çав мухмăрпа аптранă шăрт сухал çине сиксе ӳкме хатĕр пулчĕç çав! Енчен те ку этем сар тутăрлă инкене ытлашширех кӳрентермелле сăмах калас пулсан е — унтан та ытларах — ăнсăртран ун çине ал хурас пулсан, хĕрарăмсем ăна çавăнтах туртса антарса тип мунча кĕртетчĕç ĕнтĕ. Кĕтсех тăмаллаччĕ çавна! Анчах ĕç ун патнех çитеймерĕ. Пухăнса тăнă халăх хушшинче темле хĕрарăм пит хыттăн калаçнине илтсе, кĕçех унта станции яланах сыхă дежурнăй милиционер пырса çитрĕ.

— Мĕн пулнă, мĕн пирки ку митинг?— ыйтрĕ вăл, карталанса тăнă çынсем хушшинелле кĕрсе.— Пĕлме ирĕк парсамăрччĕ тархасшăн,— терĕ те унтан, сăмала пек хура уссийĕсене пĕтĕркелесе илчĕ.

— Ак çак услапа тăн кĕртетпĕр-ха, милици юлташ!— васкаса пĕлтерчĕ ăна сар тутăрлă инке, шĕвĕр пӳрнипе шăрт сухал çине тĕллесе.— Çынсене улталаса, укçа пуçтарса çӳрет, намăса çухатнăскер!

— А-а, палланă çын-çке!— савăннă пекех пулчĕ милиционер.— Эс каллех килсе тухрăн-ха, эппин, кунта! Пĕр эрне маларах эпир сана пит хытă асăрхаттарнăччĕ, хуларан çирĕм тăватă сехет хушшинче тухса кайма хушнăччĕ, анчах эсĕ ун çинчен маннă иккен... Так, так... Халь ĕнтĕ санпа урăхларах калаçмалла пулать!

Милиционер шăрт сухал патнелле çывхарчĕ, лешĕ, тăрук хăраса ӳксе, каялла чакма тытăнчĕ, çак самантрах халăх хушшинчен тухса тапасшăн пулчĕ, анчах пухăннă çынсем стена пек кар-р тăрса, ун çулне тӳрех пӳлсе лартрĕç.

— Эп айăплă мар, начальник юлташ...— мăкăртатса илчĕ хайхи,—эп каçхине çеç килтĕм, ĕçе кĕрес, тетĕп...

— Суять, милици юлташ, эп ăна ĕнерех хулара ӳсĕр çӳренине куртăм!— кăшкăрчĕ сар тутăрлă инке.— Çĕнĕ указ тăрăх ăçта та пулин аяккарах ăсатмалли çын çеç вăл!..

— Чухлатпăр, инке, хамăр та пит лайăх ăнланатпăр,— терĕ ăна хирĕç милиционер. Унтан леш çынна честь парам пекки турĕ:— Ну-ка, хисеплĕ гражданин, атя-ха манпа, халăха чăрмантарар мар кунта... Çӳл парăр-ха пире, ырă çынсем!

Чĕрĕ хӳме çав самантрах сӳтĕлчĕ те, милиционер хайхи

этеме станци еннелле илсе кайрĕ. Куракансем куншăн питĕ кăмăллă пулса юлчĕç, анчах пĕртте лăпланмарĕç-ха, хăйсен куçĕ умĕнче халь çеç пулса иртнине пĕр-пĕр отчетлă пухури пекех шавлăн сӳтсе явма тытăнса кайрĕç.

— Ай, тĕнче-е! Шутласан, тĕлĕнсе хытса каймалла вĕт! Чип-чипер ĕçлеме пултармалли çын çакнашкал плахая персе ыйткаласа çӳрет!..

— Чикĕсĕр суять тата хăй!

— Ара, этем сăн-сăпатне çухатнă та-ха вăл...

— Чăн та, сыснах ĕнтĕ!

— Тĕрĕс мар сан сăмаху! Сысна — усăллă чĕрчун, анчах ак ку мĕскер? Усал кĕсен-çăпан...

Часах кассă уçăлчĕ, çынсем билет туянса автобуссене вырнаçрĕç, унччен те пулмарĕ, автобуссем пĕрин хыççăн тепри хăйсен маршручĕсем тăрăх кĕрлеттерчĕç, анчах станцире тапранса кайнă шавлă калаçу пĕтсе лармарĕ, вĕçĕ-хĕррисĕр тăсăлчĕ. Пур çĕрте те çавăн пек жуликсене, харам пырсене, ним ĕçлемесĕрех пыл та çу пурăнма тăрăшакансене аса иле-иле чи хаяр сăмахсемпе ăшаларĕç...

Акă, Етĕрне çулĕпе ыткăнса пыракан автобус çинче пĕр çамрăкрах хĕрарăм каласа парать:

— Пĕр-ик уйăх каялла, кăштах сывмарланнă пирки, манăн килте лармалла пулчĕ. Пĕррехинче, сасартăк, алăкран такам тăк-тăк-тăк шаккарĕ. Пырса уçрăм... Пăхатăп — вуçех палламан арçын тăрать. Пулсан пулĕ пĕр 25—27 çулсенче. Куçĕсем чакăр, çамки çинче çĕвĕк пур. Чиперех тумланнă хăй. Мĕн кирлĕ сана?— тесе ыйтатăп çакăнтан. Чĕнмест. Татах ыйтатăп, каллех шарламасть. Хăрамах пуçларăм — пĕр-пĕр бандит мар-и ку? Эп килте пĕчченех, çапса ӳкерĕ те — яп-яка тасатса тухса кайĕ! Алăка хупса лартас тесеттĕм ĕнтĕ, анчах хайхискер кĕсйинчен вараланса пĕтнĕ картон татки кăларса тыттарчĕ мана. Ун çине пысăк саспаллисемпе темскер çырни курăнса кайрĕ... Васкасах вулама тытăнтăм. «Эпĕ çуралнăранпах чĕлхесĕр-хăлхасăр çын, çавăнпа та ĕçлейместĕп. Тăвансем никам та çук. Тархасшăн, хăвăр пултарнă таран пулăшăр мана», тесе çырнă иккен унта. Ну... мĕнле калас, хĕрхенсе пăрахрăм çакна. Хăй те ман çине çав тери хурлăхлăн пăхать те, епле шеллеместĕн-ха ун пек çынна? Çавăнтах пĕр тенкĕ кăларса патăм вара. Вăл пуçĕпе суласула, куçĕсене мăчлаттарса, тав тăвам пекки турĕ... Çакăнпа ĕçĕ те пĕтмелле пек ĕнтĕ, кун çинчен манса та кайсаттăм эпĕ, анчах тепĕр эрнерен-и, иккĕрен-и, кинона билет

илме кайрăм та... чут ухмаха ереттĕм! Касса умне, яланхи пекех, халăх лăкаx тулнăччĕ. Унтан та кунтан та тĕртеççĕ, нумайăшĕ черетсĕр илесшĕн тапаланаççĕ. Аран-аран маллалла шуса пырса касса патне çиткелерĕм хайхи. Ентĕ, укçана шалалла тăсса памаллаччĕ кăна манăн, анчах çав вăхăтра пĕр арçын мана пĕррех хул пуççирен тытса каялла туртса пăрса ячĕ те, ман вырăна хăй кĕрсе тăчĕ. Ку çитмест-ха, ура çине пусса лартрĕ, ыратнипе кĕçех куççулĕ тухса каятчĕ. «Гражданин, мĕн хăтланатăр эсир? Ниушлĕ йĕркеллĕрех пулмалла мар?»— тӳсеймесĕр кăшкăрса ятăм эпĕ. Çавăнтах хăйне хулĕнчен тытса каялла туртма тытăнтăм... Анчах та вăл ман еннелле çаврăнчĕ те, тарăхса кайнă вăкăр пек пăхса: «Ан кĕрлесе тăр, асту акă туту урлă паратăп!» — тесе хучĕ. Хăйĕн çаварĕнчен тӳсме çук эрех шăрши перет... Кам пулчĕ тетĕр-ха çав çын? Лешĕ, чĕлхесĕр-хăлхасăрри, мана картон çине çырнă сырупа улталаса тухса кайни! Эп ăна тӳрех палласа илтĕм. Чĕлхесĕр те, хăлхасăр та мар иккен, укçа кирлĕ пулнă та ăна — çӳренĕ вăл килтен киле, улталаса. Пулать вĕт çĕр çинче шуйттан!..

— Чăн та вун ик мăйракаллиех ĕнтĕ!

— Çапса пăрахмаллискер! — калавçăпа пĕрле чунтанах тарăхса илчĕç ăна итлесе пыраканнисем.

— Пит лайăх вĕрентсе хăварчĕ мана, айвана, ĕмĕрне те манассăм çук,— терĕ хĕрарăм юлашкинчен.— Çавăнтан вара такам ыйтсан та пĕр пус памастăп, хуть те çитмĕл çичĕ тĕслĕ суйччăр! Çынран çавăн пек укçа ыйткалакансем — пурте харам пырсем вĕсем, жуликсем, аçа хуртсем, урăх никам та мар!

— Тĕрĕс калатăн, тĕрĕс, — пĕр кăмăллах килĕшрĕç ыттисем...

....Çав вăхăтрах, кунтан çĕр километрта, Канаш еннелле вĕçтерекен автобус çинче ларса пыракан пассажирсем те пĕр аллăсене çитнĕ хĕрарăм калавне итлерĕç.

— Ун пек ыйткалакансемпе эпĕ те шар куртăм пĕрре...— сăмахĕсене тăсса, юрланă пекрех каласа пачĕ вăл.— Кăçал ваттисен праçникĕ вăхăтĕнче мана кӳршĕ арăмĕ вăйпа тенĕ пекех чиркĕве илсе кайрĕ. Нумайранпа кайманччĕ те — пĕрре каяс, ваттисене асăнса килес, терĕм. Чиркĕвĕ инçе пирĕн халь — пĕр вун пилĕк çухрăм та пулĕ, çавăнпа та çĕр выртмаллах кайрăмăр. Каçхи кĕлле те ĕлкĕрес, ирхинче те пулас, тесе шут турăмăр ĕнтĕ. Ара, тепре тахçан çитсе курмалла-ха, çуллахи вăхăтра чиркӳ

шучĕ мар вĕт, ĕçлес пулать. Ну, çитрĕмĕр ĕнтĕ... Чиркӳ хапхи умĕнче икĕ чăлах тăраççĕ — пĕри йывăç ураллăскер, тепри суккăр пулмалла, йăм хура куçлăх тăхăннă. Пĕри алăкăн пĕр енче, тепри — тепĕр енче, иккĕшĕ те аллисене тăснă, вĕсене тĕртĕнмесĕр иртсе кайма та çук.

— Христара-ади, тăвансем... Хĕрхенĕр, ан пăрахăр вăрçăра юн юхтарса чăлаха юлнă çынсене,— теççĕ. Кашни иртекен çыннах пуç таяççĕ, молитвă каланă пекех мăкăртатса илеççĕ.

Хăвăрах чухламалла ĕнтĕ, пурте параççĕ вĕсене — кам виçĕ пус, кам пилĕк, тепри ытларах пама та хĕрхенсе тăмасть. Чăнкăрт, чăнкăрт! тăваççĕ çĕн укçасем çаксен ывçисене. Эпĕ те патăм. Ара, турă çуртне кĕнĕ чух епле пулăшмастăн-ха чăлахсене? Турă умĕнче намăс пулать вĕт!..

Эпир кĕлĕрен каялла тухнă чух та çавăн пекех тăратчĕç вĕсем, иккĕшин ывçисене те çав-çавах вак манетсем тăкăнатчĕç. Ун чухнех шухăшларăм: ай-ай, лайăх укçа пухаççĕ кусем паян! терĕм. Анчах çынсем умĕнче аван мар пуласран хам та уксаккин ывçине тепĕр хут виçĕ пус пăрахса хăвартăм...

Унтан каç пулчĕ те, эпир ял тăрăх хваттер шырама кайрăмăр. Тĕлĕнмелле, никам та çĕр выртма ярасшăн мар! Ăçтан килнĕ, мĕн ĕçпе, тесе ыйтаççĕ те, хамăр чиркĕве килни çинчен каласанах ал сулаççĕ: «Э-э, эсир ĕççĕр аптраса çӳрекеннисем иккен! Ăçта килнĕ — çавăнтах кайса выртăр, турă пӳрчĕ аслă!»— теççĕ кăна. Шалт аптрарăмăр! Чиркĕвĕ хăйсен-ха, анчах кĕл тума килнисемпе калаçасшăн та мар. Хуть те урам варринче выртса çывăр! Юрать-ха, юлашкинчен, пĕр карчăк ял вĕçĕнчи пĕччен уйрăм ларакан пӳрте тĕллеттерсе ячĕ: «Ханша Хĕветли патне кайăр, укçалла вăл пурне те кĕртет, кирлĕ пулсан тем те тупса парать»,— терĕ. Чăнах та, лешĕ пĕр сăмахсăрах йышăнчĕ, кутник çине улăм тӳшек те пăрахса пачĕ. Кун каçа ывăнса çитнĕскер, эпĕ тӳрех çывăрса кайнă, анчах çур çĕр тĕлĕнче сасартăк такамсем алăка çав тери хытă хăнтăртаттарма тытăнчĕç.

— Уç, Хвекла! Уç, теççĕ!

— Камсем унта? Вăрă-хурахсем мар-и?— хăраса сиксе тăтăм эпĕ.— Пире çапса пăрахма килмен-и вĕсем?

— Çук-çук, хамăр çынсем,— терĕ те кил хуçи, çутă çутса ячĕ.

Унччен те пулмарĕ, пӳрте хайхи чиркӳ умĕнче турă ячĕпе ыйткаласа тăнă чăлахсем — уксакпа суккăр кĕчĕç.

— Ну, Хвекла тусăм,— терĕ йывăç уралли, тӳрех малалла иртсе,— паян пирĕн питĕ тухăçлă кун пулчĕ, çавăнпа та атте-турра тав туса пырсене чӳхеме те çылăх мар!— Вăл çавăнтах сĕтел çине шап та шап икĕ çур литр кăларса лартрĕ.

— Аминь!

Унтан хăй сак çине ларчĕ те йывăç урине салтса пĕррех çӳп шăтăкнелле вăркăнтарчĕ. Суккăрри те куçлăхне хывса чӳрече анине пăрахрĕ, унтан иккĕшĕ те, чăланта пит çуса тухса, сĕтел хушшине вырнаçрĕç.

— Ну, Хвекла, мĕн те пулин çыртмалли пар та, ху та килсе лар пирĕнпе пĕрле турра пуç çапма!— терĕ урасăр пулни.

— Малтанхи спектакль лайăх иртсен, артистсем ăна яланах çăваççĕ!— терĕ суккăр пулни.— Шаккар!

Эпĕ вĕсем çине пăхса ни чĕрĕ, ни вилĕ выртрăм. Хăранипе тесе ан шутлăр эсир. Çук-çук! Эпĕ тарăхнипе ниçта кайса кĕреймесĕр выртрăм. Манăн çавăнтах сиксе тăрса, çав шульăксене тем те пĕр каласа намăслантарса пĕтерес килчĕ. Анчах шиклентĕм — икĕ вăй питти арçын темрен тем туса хурĕç! Çитменнине, вĕсем хĕрнĕçемĕн хĕрсе пычĕç ĕнтĕ, суккăр пулни кĕçех темле хупах юрри юрласа ячĕ...

Унтан... унтан çаксем иртĕнме те пуçларĕç. Пирĕн пата, кутник çине пырса ларса, пире кăтăклама, унтан та кунтан турткалама тытăнчĕç, хăйсемпе пĕрле ĕçме чĕнчĕç. Вара эпир кăптăр-каптăр сиксе тăтăмăр та тумланнă-тумланман тухса тартăмăр çак пӳртрен. Лешсем пирĕн хыççăн ăйăрсем кĕçеннĕ пекех ахăрса юлчĕç... Тӳсме çук тарăхнипе, хамăн юлташа вăрçса тăкрăм:

— Пĕтĕмпех сан пирки пулчĕ çак, эс сĕтĕрсе килтĕн мана чиркĕве, тек ĕмĕрне те тухмастăп санпа!— тетĕп.

Чиркӳ çумĕнчи пĕренесем çинче çĕр каçсан, ирхине çапах та кĕлле кĕтĕмĕр. Килнĕ-килнех ĕнтĕ, йăлине туса каяс пулать. Кĕлĕрен тухнă чух вара каллех лешсене куртăмăр: пĕри ĕнерхи пекех уксах пулса тăнă, йывăç уралла, тепри — суккăр, хура куçлăхпа. Каллех аллисене тăснă та:

— Христара-ади, тăвансем... Ан пăра-ахăр чăлахсене...— теççĕ.

Ман пек ухмахсем вĕсене каллех укçа параççĕ, вак манетсем вĕсен ирсĕр ывçисем ăшне чăнкăрт, чăнкăрт тăваççĕ. Эпĕ вара, тарăхнипе чĕтремех ерсе, вĕсем тĕлне çитсен,

ним тума аптранипе, иккĕшне те чышкă кăтартса хăвартăм...

— Санăн вĕсĕм çинчен милицие систермелле пулнă,— пĕççине çапса илчĕ пассажирсенчен пĕри.— Кăтартатчĕç вара вĕсене «христаради»!

— Чиркӳ таврашĕнче мĕн милицийĕ пултăр?— хирĕçлерĕ хĕрарăм.

— Ну, пупне хăйне кĕрсе каламаллаччĕ, эппин...

— Э-эй, шухăшласа тупрăн та çав!— кулса ячĕ тепĕр пассажирĕ.— Пупĕ хăй мĕнрен уйрăм тата вĕсенчен? Вăл та халăха улталаса укçа пухать-иç? Меслечĕ кăна урăхларах!

— Тĕрĕс те пуль çав,— килĕшрĕ хĕрарăм.— Ун çинчен кайран эп хам та шухăшларăм. Турри пирки те çилĕ килсе кайрĕ: мĕнле турă вăл, шульăксене хăй ячĕпе çынсене улталама чармасть пулсан, кама кирлĕ ун пек турă?.. Çавăнтанпа чиркĕве çӳреме те пăрахрăм вара... Пĕр ырă çын та çук вăл чиркӳ таврашĕнче, халь эп ăна пит лайăх пĕлекен пулса çитрĕм!..

Ăна хирĕç никам та нимĕн те каламарĕ...

...Вăрмар çулĕ çинчи автобусра калаçу урăхларах пулчĕ.

— Çакнашкал пĕр суя мĕскĕн мана та пит лайăх мыскара кăтартрĕ,— терĕ майралла тумланнă инке.— Çаппа-çарамасах тăрса юлаттăм!.. Иртнĕ кĕркунне, Горькинчен Шупашкара тавраннă чух, пăрахут çинче пĕр хĕр пеккипе паллашрăм. Эпĕ çисе лараттăм та, вăл манран пĕр татăк çăкăр ыйтрĕ. Эпĕ ăна хампа пĕрле лартсах çитертĕм. Унтан вăл хăй çинчен çав тери хурланмалла каласа пачĕ — ĕненмесĕр тăма та май çукчĕ ĕнтĕ: хăй таçтан Винницă облаçĕнчен килет иккен, ял Совечĕ панă справкă та пур, унта чирлĕ амăшне пăхса пурăннă, анчах халь амăшĕ вилнĕ те, Шупашкарта тахăш заводра ĕçлекен пиччĕшĕ патне килет. Адресне пĕлмест — пиччĕшĕ нумайранпа çырман. Хăйне çул çинче çаратнă имĕш, укçи те çук, выçă... Калатăп-çке, йăлт ĕненмелле! Хĕрхенсе пăрахрăм вара, сивĕ пулнăран хамăн жакета тăхăнтартрăм, çывăрма хам патăма илсе кайрăм, диван çине таса простынь сарса патăм. Çул çинче асапланса пĕтнĕскер, лайăхрах кантăр, тетĕп. Анчах ирхине тăрса пăхатăп та — ман диван çап-çара, никам та çук ун çинче! Тухса шăвăннă ман хăна... Тумтирсем çакса усракан шкап та пуш-пушах, пĕр кивĕ кĕрĕк çеç тăрса юлнă! Туса хутăм хам валли ырлăх, хĕрхентĕм

çынна! Халь ӗнтӗ хама кам хӗрхенӗ-ши?! Тух та чуп часрах милицине... Çапла та капла, тетӗп, çаратса кайнӑ мана пӗр сучка йытӑ! Айӑпне пӗтӗмпех хам çине илетӗп, хама хам ылханатӑп...

— Ан пӑлханӑр ытлашши,— терӗ дежурнӑй, эпӗ макӑра-макӑра каласа панине итлесе пӗтерсен,— сирӗн япаласем пурте пирӗн патра...

Чун кӗрсех кайрӗ вара. Ир енне постри милиционер темле хӗрарӑм пысӑк çыхӑ çӗклесе пынине асӑрхаса хупӑрласа илнӗ иккен лешне. Тавтапуçах ӑна! Чип-чиперех çири пӗр кӗпе-йӗмпе тӑрса юлаттӑм çав!

— Кам пулнӑ-ха вара санӑн «хӑну»?— ыйтрӗç хӗрарӑмран.

— Кам пулни паллах ӗнтӗ — çапкаланчӑк! Ниçта ӗçлемен, унта-кунта вӑрласа тӑранса пурӑннӑскер. Анчах эпӗ, айван, ӑна йӗркеллӗ хӗрех тесе шутланӑ...

— Çапла çав, тепӗр чух çынсене тӑрук ытлашши шанса ӗненни пире питӗ пысӑк сиен кӳрет, ун пекки манӑн хамӑн та пулкаланӑ,— терӗ ватӑ пассажир, палӑрмаллах тарӑхса.

Тарӑхмасӑр ара! Пирӗн пӗтӗм халӑх хӑй пурнăçне тата лайӑхрах, илемлӗрех тӑвас тесе ырми-канми ӗçлет, анчах çав вӑхӑтрах хӑшӗ-пӗрисем темӗн тӗрлӗ меслет шухӑшласа кӑларса, урӑххисен шучӗпе, сӑвӑсла пурӑнма хӑтланаççӗ.

Мӗншӗн тӳсмелле-ха пирӗн вӗсене? Мӗншӗн тӑрантармалла?

ПУЛА ШĂММИ ПЫРА ЛАРАТЬ...

ПĔРРЕХИНЧЕ ир ирех — эпĕ пит те çуманччĕ-хаман патăма Йăкăнат Митрафанч Куçуков ятлă çын пырса кĕчĕ. Чылайранпа паллатăп эп ăна, Шупашкартан пĕр çирĕм километр тăварахра, Атăл хĕрринчи ялта пурăнать вăл. Елĕкрех кооперацире ĕçлетчĕ, унтан вăрман хуралçи те пулчĕ, кайран тата пилĕк-ултă çĕре çитрĕ пулмалла, анчах ниçта та нумаях тытăнса тăраймарĕ курăнать. Çынсем каланă тăрăх, алли кукăртарах имĕш унăн — хуть те ăçта вырнаçсан та патшалăх пурлăхне е хăй килнелле сĕтĕрме тытăнать, е «сулахаялла» ярать. Ну, хăвăрах пĕлетĕр, пирĕн халăх ун пеккисене юратсах каймасть, этемĕн чунĕ таса маррине сиссен наччас хăлхаран ярса тытать те хĕвел çутине туртса кăларать.

— Вăрлатăн эппин, эсрелĕ?! Тар юхтармасăрах кулач çиесшĕн? Тухса вăркăн кунтан!..

Вара лармалли вырăнтан самаях ыратмалла тапса сиктерет те — ĕçĕ те пĕтрĕ. Айăпĕ куçа курăнсах тăрать пулсан, суд умне тăратса «срок»— виçĕ çул-и унта, пилĕк-и, е унтан та ытларах, хăçан мĕнле!— пама пултарать. Ан тив, ан тĕкĕн халăхăнне!

Йăкăнат Митрафанч ун пекех лекеймен курăнать, çапах та ăна алăран ярса тыткаланисем пулнă. Ку тĕрĕсех.

Юлашки хут эпĕ ăна çуркунне хула пасарĕнче курсаттăм. Унта вăл ал лаппи хулăнăш çуллă сысна ашĕ сутса тăратчĕ. Мĕнле пурăнатăн, тесе ыйтсан, вăл мана:— Мухтанмаллиех çук-ха, майлă ĕç тупаймастăп хам валли,— терĕ.— Укçаран катăкрах, çавăнпа ачасем çиес аша та пасара илсе тухмалла пулчĕ...

Хăй кăштах хĕрĕнкĕрехчĕ, куçĕсем чеен кулатчĕç. Суять-ха ку, терĕм эпĕ хам ăшăмра ун чухне, анчах хăйне нимех те каламарăм.

Халĕ вăл ман хваттере пачах та кĕтмен-туман çĕртен пырса кĕчĕ. Тĕлĕнсех кайрăм: мĕн кирлĕ пулнă ăна?

Ну, пынă çынна хăваласа кăларса ямастăн ĕнтĕ, калаçатăн унпа, юнашар ларса чĕлĕм туртатăн, апат тĕлне пулсассăн, сĕтел хушшине те чĕнетĕн. Эпĕ те çакна хампа пĕрле чей ĕçме чĕнтĕм.

— Чейĕ темех мар-ха вăл, шыв кăна, шыв нумай пулсан пĕвене те татса кайма пултарать,— терĕ Йăкăнат мана хирĕç,— эпир луччă çакна пуçласа пăхар-ха санпа...

Çапла каларĕ те пĕрре куç хупса илнĕ хушăрах сĕтел çине хĕрлĕ эрех кăларса лартрĕ.

— Витĕр курăнаканнине тупаймарăм, çак причаш шывĕпех çырлахмалла пулать...

— Çук,— терĕм эпĕ,— манран ĕçесси пулмасть, манăн ĕçе каймалла. Чиксе хур каялла. Калаçмалли пур пулсан, унсăр та пит лайăх калаçма пултаратпăр, пĕрне-пĕри палламан сынсем мар.

— Юрĕ эппин,— хирĕçсе тăмарĕ Йăкăнат Митрафанч,— эс каланă пек пултăр. Сăмахĕ чăнах та пур çав манăн, çавăнпа килтĕм...

Вăл ассăн сывласа илчĕ.

— Хурлăха лекрĕм-ха эпĕ, Иван Васильч. Çавăнпа килтĕм. Тем тесен те, эсĕ манран ытларах чухлакан çын, хулари йĕркесене те лайăхрах пĕлетĕн. Таçта каймалла манăн, тем тумалла... Ара, тĕттĕм çынсем мар-и эпир, академисенче вĕренмен вĕт! Пулăш-ха, ăс пар-ха мана...

— Кала, ара, кала, çынна пулăшма май пулсан, ма пулăшас мар?— терĕм эпĕ.

Ман кĕтмен хăна татах тимĕрç лаççинчи вĕркĕч пек хашлатса илчĕ те унăн-кунăн пăхкаланă хыççăн хуллен кăна калама тытăнчĕ.

— Эс пĕлетĕн вĕт-ха, эпĕ ĕнтĕ чылайранпа ниçта та службăра тăмастăп...

— Çапла, çапла, çуркунне пасарта тĕл пулсан та каланăччĕ эс мана...— пуçпа сулса илтĕм эпĕ.

— Пĕр енчен шутласан, служби мана ытла кирлех те мар-ха вăл. Капла та пурăнма пулать. Кил-çурт тиркемеллех мар манăн, пӳрчĕ икĕ хутлă — аялти чул, çӳлти — йывăç, сад пур — вăтăра яхăн улмуççи, вишнисем, сливăсем, çĕр çырли; сад варринче — çулла пурăнмалли тепĕр пӳрт ларать, кашни çуллах хуларан дачниксем пыраççĕ, халĕ те пĕр писательпе художник çемйисемпех пурăнаççĕ-ха... Уйăхне çирĕмшер тенкĕ илетĕп вĕсенчен, ĕлĕкхи пек шутласан икшер çĕр пулать ĕнтĕ вăл... Ĕне усратăп, карчăк сĕт сутать, чăхсем çăмарта тăваççĕ, вун сакăр хур, çирĕм икĕ кăвакал çитĕнеççĕ. Икĕ сысна — çĕр шăниччен сахалтан та пилĕк-ултшар пăт пулаççех вĕсем. Ну, тата моторлă кимĕ те хамăннах манăн. Икĕ çул тытатăп ĕнтĕ. Вутти-шанкине укçа парса илместĕп, çуркунне-кĕркунне Атăл тăрăх пĕрене сахал мар юхать, çурт тума юрăхлисем те лекеççĕ. Тур панă япала ĕнтĕ вăл, тытмасăр ăçтан чăтатăн? Пирĕн кил таврашĕнче пĕр пуленкке те сая каймасть. Садри пӳртне эпĕ çав йывăçранах турăм... Кунсăр пуçне, пирĕн анлă Атăлта пулă та пур-ха вĕт, ху пĕлен! Стерлячĕ те лекет, çăрттанĕ те, çупахĕ те, уланкă е кăртăш кăна лексен те сĕрекерен каялла кăларса ямастпăр... Тĕттĕм пулсан тухса каятăн та, ирччен тепĕр чух ик-виçĕ пăтах тытатăн. Вăл та турă панă япала, çăраççи çĕмĕрсе çаратни мар!

Малтан, çак Йăкăнат каласа пама тытăниччен, эпĕ унăн килĕнче чăнах та пысăк хурлăх пулнă пуль тесе, ăна хĕрхенме те пăхрăм. Анчах халĕ, унăн сăмахне итленĕçемĕн, хам сисмесĕрех унран йĕрĕнме, ун çине сиввĕн, çилĕпе пăхма тытăнтăм, ăна тăруках курайми пула пуçларăм. Ара, ман умра чăн-чăн кулак чунлă çын, пĕр хăйшĕн çеç тăрăшакан, пуясси çинчен кăна шухăшлакан, ăçта мĕн май килнĕ — çавна вăрлама, ют çынсенне кăна мар, тăван ашшĕн тирне те сĕвме пултаракан, нихçан тăранас çук çăткăн этем ларать вĕт! Тăшман!..

Анчах та вăл çакна сисмерĕ, хăйĕн пурлăхĕпе мухтанма тытăннипе хĕрсе кайнăскер, малалла каларĕ.

— Пĕр сăмахпа, аптрамастпăр,— трахом ермен, йĕмсĕр çӳремен! Атăл хĕрринче кил-çурт çавăрнă хыççăн нушине те, хурлăхне те курманччĕ-ха. Ывăла авлантартăм, кин кĕртрĕм — вĕсене те хам пек пурăнма вĕрентетĕп. Пурнăçа

пĕлсе пурăнсассăн, килтех ик-виç сарплатта ытла тума пулать вĕт. Çитменнине тата, эсĕ хăвăншăн ху хуçа, никама та пăхăнмастăн, пуç çапмастăн... Анчах юлашкинчен вăт, леш эрнере, тастан шуйттанĕнчен инкек йăтăнса анчĕ-ха ман пуç сине! Никама та айăпламастăп уншăн, хамах ухмах пултăм çав, хамах айăплă!

— Мĕнле инкек сиксе тухрĕ-ха вара? Тӳшек ăшне çĕлесе хунă укçуна çаратса каймарĕç пулĕ-çке? — ытларах та ытларах тарăхса, çилĕпе пăхса ыйтрăм эпĕ.

— Çук-çук,— аллипе сулчĕ Йăкăнат,— мĕн укçи пултăр пирĕн? Пулнă пулсан та, ăна ăçта тытмаллине пĕлĕттĕмĕр-ха эпир, вун икĕ вăрă пĕр харăс пырса тапăнсан та тупаймĕччĕç!

— Мĕн-ха, эппин, тата?

— Улталарĕç мана!— чышкипе сĕтел сине çапсах илчĕ вăл.— Шутсăр хытă улталантăм! Сăмса шăлайман айван ача пек! Пĕрре чуп туса курман вун ултă çулхи хĕр пек! Çавăн пирки ниçта кайса кĕрейместĕп те халь, çавăншăн пĕтĕм ăш-чик вутпа çунать...'

— Темскер сутнă чух йӳнĕпе патăн-и?

— Çук, ун пек мар. Йӳнĕпе панă пулсан татах юратчĕха, пур чухне те хаклă хакпа сутма çук, атту вĕт — пĕр пуссăр парса ятăм, çитменнине тата, çиелтен хамах штраф тӳлеттерчĕç! Çавă кӳрентерет!..

Халь çеç питĕ хаваслăн калаçнă Йăкăнат Митрафанч куçĕсене мăч-мăч хупса илчĕ, кĕç-вĕç макăрса ярас пек. Сасси те темле хурлăхлăн илтĕнме пуçларĕ.

— Чим-ха,— терĕм ăна,— ăнлансах çитейместĕп эпĕ... Камсем, мĕнпе улталарĕç вара сана? Тата ниушлĕ сан пек пултарулла этеме улталама ăс çитерекен çын та пур? Ман шутпа, эсĕ ху кирек те кама та çитмĕл çичĕ хут чике тăршшĕ лартма пултаратăн! Çапла мар-им?

Йăкăнат мана кӳçран тăй-й пăхса темиçе самант хушши нимĕн те чĕнмерĕ. Унтан каллех кавлесе ывăннă ĕне пек хашлатса илчĕ те малалла каласа пама тытăнчĕ.

— Сан сăмахху тĕрĕс те пулĕ, ку тараннчен эпĕ хама чăнах та улталаттарсах кайманччĕ, анчах хальхинче...

— Мĕн хальхинче?

— Икĕ сар туталлă йĕкĕтпе милĕк çӳçлĕ хĕрача манран пин хут чеерех пулчĕç! Пĕр наччасра муталаса хучĕç мана!..

— Эс йĕркипе каласа пар! Анланмалларах пултăр.

— Йĕркипе... Йĕркипе каласан — ак мĕнле пулчĕ. Иртнĕ эрнере, хĕртсе хĕвел пăхнă кун, туран, канмалли çурт енчен, пирĕн ял патнелле пĕр пысăках мар катер анчĕ. Ун çинче виççĕн, çав икĕ каччăпа пĕр хĕр ларатчĕç. Эпĕ шăпах Атăл хĕррине тухнăччĕ. Малтан катер анаталлах анса кайрĕ, унтан тăрук каялла вăр-р çаврăнчĕ те пирĕн çыран патне пырса тăчĕ. «Канмалли çуртрисем ярăнса çӳрĕççĕ»,— шухăшларăм эпĕ. Унччен те пулмарĕ, çаксем пĕрин хыççăн тепри çырана сиксе тухрĕç. Хĕрĕ — малтан, каччисем — ун хыççăн. Тӳрех ман паталла çул тытрĕç. «Кусем тем çинчен ыйтса пĕлесшĕн-ши?»— тетĕп. Çав самантрах пĕри мана: «Салам пултăр, мучи!»— терĕ. Эпĕ те саламларăм... Унтан, виççĕшĕ те ман ума пырса тăрсан, пирĕн хушăра çакăн пек калаçу пуçланса кайрĕ:

— Итле-ха, мучи, сирĕн ялта ăнсăртран чĕрĕ пулă тупса илме пулмасть-ши?

— Пĕлместĕп çав... Илтмен.

— Çакнашкал Атăл хĕрринчи ялта пулă тытакансем пурах пуль ĕнтĕ!

— Тен, пур та пулĕ... Анчах сире пулă мĕн тума кирлĕ? Сире канмаллн çуртра ахаль те ситереççĕ вĕт? Е хăвăрăн ăçта та пулин вăрманта пĕçерсе çиес килет-и?

— Эпир канмалли çуртран мар çав, мучи, эпир Шупашкартан хăпартăмăр. Киле валли илсе каяс шут пур...

— Нумай кирлĕ-и вара сире?

— Мĕн тери ытларах, çав тери лайăхрах пулать. Хамăр çисе яраймасан, юлташсене паратпăр.

Ĕненсех лартрăм çаксене. Ĕненмесĕр тăма майĕ те çукчĕ çав... Виçĕ çамрăк çын катерпа хăпарнă, çула май чĕрĕ пулă туянасшăн. Тĕлĕнмелле япалах мар! Пирĕн еннелле ун пеккисем час-часах пыраççĕ, хакĕ пирки те кутăнлансах тăмаççĕ,— мĕн чухлĕ ыйтнă, çавăн чухлĕ параççĕ... Шăпах манăн çĕрккаç тытнă пулă пурччĕ. Нумаях та мар, пĕр пăта яхăн. Ывăлпа иксĕмĕр ир енне таврăнтăмăр та карçинккипех нӳхрепе, юр çине кĕртсе лартрăмăр. Тавай, сутса ярас çаксене! Пĕтĕмпех илетпĕр, теççĕ вĕт-ха! Сутма тăçта урăх çĕре кайса чăрманса çӳриччен — питĕ ансат пулать-иç?

— Пуллине тупма пулать те пуль,— терĕм хайхискер,— анчах хакне мĕнлерех пама шутлатăр?

— Хакне эсĕ ху калатăн ĕнтĕ, эпир пĕлместпĕр, таварĕ сирĕн, укçи пирĕн,— терĕ пĕри, кăшт аслăрах пек курăнаканни.

— Килограмĕ пĕр тенкĕрен кая пулмасть,— терĕм эпĕ.— Пăрахут çинчи повăрсем те пĕр сăмахсăрах çавăн чухлĕ параççĕ...

Çамрăксем пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç.

— Мĕнле, юлташсем, пĕрер тенкĕпе хаклă пулмасть-ши?— ыйтрĕ аслăраххи.

— Çук, çук, хаклă мар! Атя, часрах илес те, килелле вĕçтерес, хăвăртрах çитсе ăшаласа çиес! Манăн хырăм выçса кайрĕ!— терĕ вĕсен хĕрĕ.

— Пулли камăн пур вара? Санăн хăвăннах-и е кӳршĕсен?— ыйтрĕ аслăраххи.

— Хамăннах тупăнать пĕртак,— терĕм.

— Инçе пурăнатăн-и эс?

— Çук, çывăхрах, а-ав çав симĕс тăрăллă çурт...— хамăн кил çине тĕллесе кăтартрăм çаксене.— Хăшĕ те пулин атьăр манпа. Тараса пур, виçетпĕр те çĕклесе килетпĕр...

Ес йĕркеллех пулса пычĕ пирĕн. Хĕрĕ катер патĕнче юлчĕ, каччисем иккĕшĕ те манпа утрĕç. Çул çинче калаçса кайрăмăр — вĕсем манран эп кунта хăçантанпа пурăннине, мĕн ĕçленине, ман ятпа хушамата ыйтса пĕлчĕç, хăйсене «эпир Мускавра вĕренекен студентсем, туристла походра çӳретпĕр, халь пĕр ик кунлăха Шупашкарта чарăнса тăтăмăр», теççĕ... Ну, çитрĕмĕр ман пата, эп нӳхрепе антăм, пулă тултарнă карçинккана çӳлелле çĕклесе патăм, унтан ăна тараса çине лартса турттарса пăхрăмăр — шăп вун тăватă кило пулчĕ.

— А-ах, пуллисем хитре-е!— тулли кăмăлпа мухтарĕç студентсем, хĕр пĕççи пек çăрттансене тытса пăха-пăха.

Каялла, катер тăнă çĕре, карçинккана хăйсемех çĕклесе кайрĕç, мана, ват çынна, йăттарса та чăрмантармарĕç. Питĕ ыр кăмăллă, культурăллă каччăсем мар-и, ара! Пулла катер тĕпне пушатрĕç те карçинккине хам ума пырса лартрĕç. Манăн ĕнтĕ вĕсенчен укçа илсе лавккана пĕр чĕрĕк ĕçме каясси кăна юлчĕ...

Анчах та темшĕн-çке укçине пама васкамарĕç çаксем. Виççĕшĕ те катер çине тăчĕç те пĕр-пĕринпе тем çинчен мăр-мăр-мăр калаçма тытăнчĕç. Шикленмех пуçларăм: катерне тăрук тапратса ярса, мана укçа памасăр-тумасăрах тарасшăн мар-и кусем? Ахальтен мар пуллине пушатнă хыççăн катерне çыранран пĕр виçĕ метр аяккарах илсе кайса тăратрĕç пуль! Пĕр хускалсан, вĕсене шуйттан та хуса

çитес çук вĕт, шăхăрса юл вара çыран хĕрринче, çил арманĕ пек хăлаçланса!..

Вăхăт шăвать, пĕр вунă минут та иртрĕ пулмалла, анчах вĕсем çаплах калаçаççĕ-ха. Те укçи çитмест... Студент тенисен вăл та пулма пултарать, çара çерçисем вĕт вĕсем!

Тăрсан-тăрсан, тӳсеймерĕм:

— Граждăнсем, манăн васкамалли ĕç пур, эсир манпа хăвăртрах рашчот тăвăр-ха,— терĕм.

— Ан пăшăрхан-ха, мучи, халех рашчот пулать санпа!— терĕ çаксен хĕрĕ, ман еннелле аллипе вĕл-вĕл-вĕл сулса.— Юлташсем умĕнче отчет тума санран расписка илес терĕмĕр-ха.

Каллех ĕнентĕм...

Тепĕр икĕ минутран çаксем чăнах та çырана тухрĕç. Аслăраххи тӳрех мана хут тыттарчĕ.

— Акă, вуласа тух та — алă пус! Икĕ экземпляр кирлĕ. Пĕри — пире, тепри — сана...

— Мана мĕн тума?— тĕлĕнтĕм эпĕ.— Эпĕ никам умĕнче те отчет тумастăп вĕт, пулли хамăн, хам алăпа тытнăскер!

— Эс вула, вула малтан...

Хайхискер, хута вулама пуçларăм та... манăн куçсем чутах çамка çине сиксе тухатчĕç! Сасартăк, пĕр самантрах тарласа кайрăм...

«Акт... çав числара, çав çул, эпĕ, рыбнадзорăн обществăлла инспекторĕ... çав-çав свидетельсем умĕнче... çав ялти çав çынăнне саккунсăр тытнă вун тăватă кило пулă конфискаци турăм... Çав постановленин çав пункчĕ тăрăх, çав çынна... (мана ĕнтĕ!) аллă тенкĕ штраф тăватăп... Укçине госбанк кантурне çав числаран кая мар кайса хывма хушатăп...»

Тур çырлахтăр! Вуланă çĕртех пуç çаврăнса кайрĕ манăн, ал-урасем те чĕтреме тытăнчĕç... Ак сана студентсем! Ак сана Атăл илемĕпе киленсе çӳрекен туристсем! Пĕтерчĕç, çĕçĕсĕрех пусса хучĕç! Чи ухмах пулă пекех сĕрекене пырса çаклантăм вĕт! Хам ирĕкпех, хам килĕшнипех! Тăм писмен мар-и ĕнтĕ эпĕ çавăн хыççăн?

Пĕр хушă, çамкипе юман каскана пырса çапăннă така пек анра-сухра пулса, эпĕ ним ăнланмасăр, çăвар та уçаймасăр тăтăм. Саççим тăн çухатрăм!

— Ну, ну, алă пусса пар часрах,— терĕ хайхи малтан студент пулнă инспектор,— санăн та, пирĕн те васкамалла вĕт!

— Эсир мĕн... мĕн... шӳт тума пăрахăр-ха, ачамсем,— терĕм вара эпĕ, тинех кăшт тăна кĕнĕ пек пулса.— Эп сире ыр тăватăп, хам çиес пулла парса яратăп пулать те, эсир пур, тав туса укçа тӳлес вырăнне мана темле хут татки парса мăшкăллатăр... Чипер хăтланăр-ха, эсир ăнланакан яшсем, комсомолецсем пулĕ-ха...

— Ыр тумастăн çав эс пире,— терĕ инспектор, куçĕсене ялкăштарса илсе,— сиен кăна тăватăн!

— Пулă çини сиен пулать-и вара? Мĕн эсир?

— Пулă çини сиенлĕ мар, анчах та пулă вăрлани — питĕ сиенлĕ! Эсĕ вĕт халăх пуянлăхне çаратса пуйса пурăнатăн!

— Ним те вăрламан эпĕ! Атăл хĕррине уçăлмалăх тухса пулă тытни — вăрлани-и вара вăл? Ан калаçăр-ха!— плахая пеме тытăнтăм эпĕ.

— Ан лăпăртат!— терĕ тепри, ман патарах пырса тăрса.— Çакăн чухлĕ пулла эсĕ вăлтапа тытрăн-и мĕн? Эс ăна вăрă-хурах пек сĕм çĕрле çӳресе, усă курма чарнă хатĕрсем-пе тытнă вĕт! Чи усал браконьер, пулăçă-спекулянт эсĕ!..

— Сан пеккисене штраф тумалла çеç мар, судпа айăпласа тĕрмене хупмалла!— хушса хучĕ милкĕ пуçлă хĕрĕ те.

— Алă пус, теççĕ! Штрафне те ыранах кайса тӳле, атту-тăк ĕçе чăнах та суда яратпăр, куратăн вара ун чухне мĕн курмаллине!— кăшкăрчĕ инспектор, мана вăйпах авторучкă тыттарса.

Чун кӳтсе çитнипе, çурăлса каймалла тарăхнипе манăн вĕсемпе тавлашас, кăшкăрашас, актне çурса çилпе вĕçтерсе ярса çапăçма тытăнас килсе кайрĕ, анчах вĕсем мана виççĕн виç енчен хупăрласа илсе, темĕн тĕрлĕ намăслантарма тытăнчĕç те, эпĕ вĕри шыва чиксе кăларнă чĕпĕ пекех пулса кайрăм курăнать, хевте пĕтсе ларчĕ манăн. Ним те калаймарăм, хама тыттарнă икĕ хучĕ çине те чăр-чар алă пусса патăм...

— Асту, тепре лексен тата хытăрах хĕсетпĕр! Хăвăн пырнах ларать акă вăрланă пуллу!— çилĕпе асăрхаттарчĕ инспектор юлашкинчен.

Вĕсем хăйсен катерĕ çине ларчĕç те анаталла вĕçтерчĕç, хĕрĕ — юри мăшкăлласа пулĕ çав — мана аллипе пăçăрхи пек вĕл-вĕл-вĕл сулчĕ, эпĕ вĕсем хыççăн пĕччен тунката пек тăрса пăхса юлтăм. Тен, хам пурнăçра эпĕ пĕрремĕш хут çавăн чухнехи пек мĕскĕн пултăм пулĕ...

Анчах каçхине, хуйхи-суйхипе, тарăхни-çиленнипе ĕçсе лартрăм та урсах кайрăм вара! Мана улталаса пĕтĕм пул-

ла тытса илнĕ, çиелтен штраф хунă леш икĕ каччăпа хĕр çав самантра ал айне лекес пулсан, эп вĕсене пуртăпах вакласа тăкнă пулăттăм-и, тен! Ы-ых!.. Çилле ниçта чикейменнипе хамăн ним айăпсăр карчăка тӳпелесе илтĕм, ун хутне кĕме тăнă кине те çутăлтарса ятăм, куç тĕлне пулнă кушака та тытса çавăрса çапрăм, унтан хамăрăн сад хуралĕнче выртакан ывăла чĕнтертĕм те тӳрех командă патăм:

— Пуçтарăн, ыйхă муклашки! Халех пулла тухса каятпăр!— терĕм.— Вĕсем пирĕнне пĕр пăт пулă илсе кайрĕç, эпир уншăн кĕçĕр вунă пăт тытатпăр! Штраф хакне те кăларатпăр, тата унтан икĕ хут пысăкрах тупăш илетпĕр! Атя хăвăртрах!..

Карчăкпа кин мана чарма пикенчĕç, каллех темрен тем пулса тухĕ, кĕçĕрех ан кайăр, терĕç, анчах эпĕ вĕсене теперер хăмсартăм та — çаварĕсене хупрĕç. Эпĕ хам пурнăçра хĕрарăм сăмаххисене нихçан та хăлхана чикмен, анчах хальхинче итлемеллех-мĕн...

Çур сехетрен эпир Атăл варринче пултăмăр. Пулă аван кĕчĕ. Сăптăратпăр кăна. Эп паян шар курнăшăн мана хĕрхеннĕ пекех, пуллисем пирĕн сĕрекене пĕр-пĕринпе ăмăртсах пырса кĕреççĕ пулмалла. Пĕр икĕ сехет хушшинче çур кимĕ тултартăмăр.

— Атте, çитет пуль кун чухлĕ тытнипе, тул çутăлса килет, лекме пултаратпăр,— терĕ ман ывăл çавăн пек тытсан-тытсан.

— Ан палка! Нимĕнле хăрушлăх та çук çĕртех йĕм тĕпне ан тултар!— кăшкăрса пăрахрăм ачана.— Çитместха, пире тата кирлĕ! Леш надзорсене лайăхрах тавăрас пулать пирĕн, ăнланатăн-и çавна? Вăрт-вартрах çаврăнкала!

Ывăл мана хирĕç ним те калаймасть. Татах тытатпăр, татах. Пулли кĕнĕçемĕн ытларах тытас килет вĕт ăна, мура!

Чăнах та, тул çутăла пуçларĕ. Атăл çийĕнчи çăмăл тĕтре майĕпе сирĕлсех пырать.

— Каяр пуль, атте!— сас пачĕ ывăл каллех.

— Тăхта, тепре туртса кăларар-ха,— терĕм эпĕ.

Анчах çапла каларăм çеç — пирĕнтен ытла инçе те мар хăвăрт çӳрекен катер моторĕ кĕрлесе кайрĕ.

— Ак хайхи, килеççĕ!— ахлатса илчĕ ывăл.— Хăтăлаймастпăр халь! Тытаççĕ! Итлемерĕн мана...

— Ан çухăр, мотора часрах хута яр! Леш еннелле кайса затонри хăмăшсем хушшине пытанатпăр!

Ывăл мотор патне ыткăнса тăрмашма тапратрĕ. Пĕрре туртать кантраран, тепре туртать, анчах мотор ӳсĕр çын хăснă пек лăкăрт-лăкăрт! тăвать те каллех чарăнать.

— Часрах, шуйттан çури!

— Каймасть ара, мĕн тăвас-ха манăн...

Аптрамалли çитрĕ вĕт! Вара эп хам часрах сиксе тăтăм та, ывăла айккинелле тĕртсе ярсах мотор патне пытăм. Апла та туса пăхатăп, капла та — çук, хускалма мар — сасси те тухмасть. Анчах леш катер кĕрлени çывăхрах илтĕнет ĕнтĕ.

— Пуллине шывалла вăркăнтар!— кăшкăртăм та эпĕ ывăла, моторпа тăрмашма пăрахсах тĕттĕмре те çап çутă курăнакан пулăсене Атăла каялла чăмтарма тытăнтăм. Анчах çавăн чухлĕ пулла ăçтан тăруках ывăтса пĕтеретĕн? Унччен те пулмарĕ, леш катер ыткăнса çитсе пирĕнпе юнашар тăчĕ те, çав самантрах ун çинчи çынсенчен пĕри пирĕн кимĕ çине сикрĕ.

— А-а, палланă çынсем-çке! Ирхи салам сире, тур пулăштăр!— терĕ вăл, аллине çĕклесе.

Пăхатăп — ку лешĕ, кăнтăрла ман çине штраф хураканни, студент-инспектор! Мĕн калăн ĕнтĕ ăна? Вăл ман çинчен ахаль те пĕтĕмпех пĕлет: ятпа хушамата та, эп ăçти çын пулнине те.

Ну, малалла мĕн пулни ахалех паллă ĕнтĕ. Каллех акт. Пĕр талăк хушшинче иккĕмĕш хут! Анчах хальхинче ахаль штрафпа çырлахмалла мар, судпа айăпламалла, терĕç. Пулă тытмалли хатĕр-хĕтĕрсене шăкăр-шакăр пуçтарса илчĕç, спаççипă та каламарĕç. Ку çеç те мар: çав катер çинчех çиелтен ахаль тум тăхăннă милици çынни пулнă. Çырана тухсан, вăл пирĕн кимĕ пирки тĕпчеме тапратрĕ. Моторне хăçан туяннă, ăçта, хăçан регистраци тунă? Анчах эпир ун пек тăвасси çинчен шухăшламан та! Моторлă кимме çӳретмелли правă пур-и? Çук!.. Апла пулсан, çак самантран пуçласа эсир ку кимĕ çине ларма та пултараймастăр, ку тараннчен çӳренĕшĕн — штраф, тет... Ак хайхи! Пур енчен те пĕр харăсах пĕтерсе хучĕç, ик çуната та çапса хуçрĕç. Малашне мĕн-мĕн пулассине те пĕлместĕп-ха. Штрафсем тӳлеттерсех кил-çурта суттараççĕ пуль ĕнтĕ. Е тĕрмене кайса лартĕç-и... Çапла, Иван Васильч!

Йăкăнат Митрафанч паçăрхинчен те хурлăхлăрах сывласа илчĕ.

— Кала-ха эс, тĕрĕс-и вĕсем мана çакăн пек хĕсĕрлени, манăн хаклă хатĕрсене туртса илсе, çиелтен хама айăплани? Эс ăслă çын, каласамччĕ ĕнтĕ! Ăçта кайса хӳтлĕх шырас манăн? Кам ман хута кĕме пултарать, э?

— Пĕтĕмпех тĕрĕс,— терĕм эпĕ.— Пулă шăмми тепĕр чух пыра ларать çав вăл! Сана, прохвоста, тахçанах тытса питĕ хытă айăпламалла пулнă. Шел, халь тин тытнă!

Йăкăнат Митрафанчăн куçĕсем чарăлса чăх çăмарти пысăкăш пулса кайрĕç...

АПТРАШКИН АПТРАНИ

ИРТНĔ ÇУРКУННЕ, пĕтĕм çутçанталăк качча каякан хĕр пек капăр тум тăхăннă вăхăтра, пирĕн хулари халăх судĕнче çав тери тĕлĕнмелле, пĕтĕм вар-хырăм хытса лариччен кулмалла «процес» пулса иртрĕ. Виçĕ кун хушши тăсăлчĕ вăл; суд залне халăх савăлпа çапнă пекех тулчĕ, шала кĕрейменнисем чӳречесем патне чыхăнса, пĕр кантăк та хăвармарĕç, пĕтĕмпех çĕмĕрсе пĕтерчĕç.

Кун пек историсем пит сайра пулаççĕ, çавăнпа та манăн сире ун çинчен каласа парасах пуль. Итлеме кăмăлăр пур-и? Пур. Апла пулсан, хăлхăрсене тăратăр та, итлĕр, эппин, йĕркипе.

Акă мĕнле япала...

Вăтăр çулхи вăй питти арçын сакăр вунă çулхи карчăкпа сутлашрĕ. Çав карчăк унăн урине хуçса янă иккен. Рычакпа та çапман вăл ăна, ятарласа такăнтарса та ӳкермен, кĕпер çинчен те чикелентерсе яман, пĕртен пĕрре çăвар уçса виç сăмах каланă та — этемĕн сылтăм ури ша-

тăрт! хуçăлса кайнă. Çавăншăн айăпласа, арçын çак карчăкран мĕн виличченех алимент илсе тăмалла приговор йышăнма ыйтнă.

— Эпĕ халь ĕмĕрлĕх инвалид ĕнтĕ, полноценнăй çын мар,— тенĕччĕ унăн заявленинче,— ку таранччен мана урасем тăрантаратчĕç, эп вĕсемпе усă курса таçта та çитеттĕм, тем те кураттăм, тем те ӳкереттĕм, анчах халь эпĕ уксах, высшей марки чăлах пулса тăтăм, чупма мар — утасса та туя çине тайăлса аран утатăп, çавăнпа та малашне мана хама та, ман çемьене те çав эсремет карчăкĕ тăрантартăр, рас вăл ман урана хуçса ячĕ пулсассăн...

Питĕ хурлăхлă та витĕмлĕ çырнăччĕ çав!

Анчах, ĕçĕ çинчен каласа париччен малтан, манăн сире çак заявление çыраканнипе, юристсен чĕлхипе каласан — истецпа, карчăкран алимент шыраканнипе, паллаштарас пулать пуль. Ытла та хăйне майлă, интереслĕ те оригиналлă çын вăл...

Унăн анкетăри сведенисем çакăн пек: хушамачĕ — Аптрашкин, ячĕ — Аполлон; арлă-арăмлă, профсоюзра тăмасть (члĕн укçи тӳлеменшĕн тухса ӳкнĕ); Отечественнăй вăрçăра пулнă, тесе шутланать, анчах хăй тăватă çул хушши тахăш госпитальре мунча хутса çеç пурăннă; национальноç енĕпе вара тăруках уйăрса илме çук. Ана вăл хăй те пĕлсех çитереймест иккен — судра та каларĕ: хамăн атте кам пулни çинчен аннерен эпĕ çĕр хут та ыйтнă, такки каламарĕ вĕт, шельмă, тĕрĕссине пĕлтермесĕрех леш тĕнчене ăсанчĕ, тăпри çăмăл пултăрах, терĕ.

Çавăнпа та Аполлон Аптрашкина хăшĕсем чăваш, хăшĕсем тутар, теççĕ, палласах кайманнисенчен туркка текенĕсем те, японец тесе шутлакансем те пур. Вăл камне сăнран пĕлме питĕ йывăр — сăнĕ-пичĕ пĕрмай улшăнать унăн: ирхине — апла, каçхине — капла, укçа илнĕ кун — пĕр тĕслĕ, укçа çук чух — тепĕр майлă, пыр та ăнлан эс ăна!

Профессийĕ — фотограф. Чылайранпа çак ĕçпе пурăнать ĕнтĕ. Анчах та ателькере-мĕнре штатра тăраканскер мар, хăй тĕллĕн çапса çӳрекенскер вăл. Укçа çапаканскер. Ун пеккисене халăх хушшинче «пушкарь», теççĕ, анчах Аптрашкин хăйне хăй «ирĕклĕ художник», «творчествăлла единицă» тесе хисеплет.

— Манăн ятăм — Аполлон, анчах Аполлон кам пулнине пĕлетĕр-и эсир?— тет вăл кăштах хĕрсессĕн.— Пĕлместĕр çав пĕри те, мĕншĕн тесен эсир искусствăран çĕр

çухрăм аякра тăратăр! Аполлон тени, ман тĕзка, вăл авалхи Грецире хĕвелпе çутă турри, искусствăсене хŭтĕлекен турă пулнă! Мана тĕне кĕртекен пачăшкă эп искусствă çынни пуласса сиснĕ пекех панă çак ята. Во!

— Ăçтан пĕлетĕн-ха эсĕ кун çинчен, кам каларĕ сана?— тесе ыйтсан, Аптрашкин ним тытăнса тăмасăрах ответ парать:

— Виçĕм çул татмалли календарьте вуларăм! Календарьте суйăççĕ унта, ахаль кĕнекесенчи пек мар!

Вуласса вăл, чăн та, çав татмалли календарьсăр пуçне урăх нимĕн те вуламасть иккен. Вуламан та, вулама та шутламасть.

Хулара Аптрашкин питĕ паллă çын. Ăна пурте — урамра пушмак тасатса ларакансенчен пуçласа милици начальникĕ таранах пĕлеççĕ. Пурне те вăл хăйĕн тусĕсем тесе шутлать, тĕл пулмалла пулсан аякранах аллине тăсса пырать:

— А-а, Васька, здоровă, здоровă! Лайăх пурăнатăн-и? Эп те аптрамастăп-ха. Часах «Москвич» илетĕп ĕнтĕ, йăлăхрăм çуран çŭресе. Çитмелли вырăнĕсем нумай, анчах урисем манăн иккĕ кăна. Тата асфальт çинче пушмак питĕ çĕтĕлет... Итле-ха, тăванăм, эп паян васкани-мĕнĕпе укçа чиксе тухма маннă, санăн çумра ытлашши пĕр тенкĕ çук-и? Ну, аллă пус пулсан та çитет, эппин. Уншăн эпĕ пĕрре-пĕрре, иртсе çŭренĕ чух, санăн ачусене ŭкерсе тухăп... Ну, сыв пул-ха, эппин, ман васкас пулать!

Хăйне панă аллă пуса тĕплĕн шутласа кĕсйине шаларах чикет те, хул пуççи урлă çакнă аппаратне тŭрлетсе илсе, аяккалла пăрăнса каять вара...

Ситмелли вырăнсем унăн чăнах та нумай.

Таçта та пулать вăл — Атăл леш енче хăйăр çинче хĕртĕнсе выртакансене те ŭкерет (паллах, пуринчен ытла хĕрарăмсене), паркра мороженăй ĕмсе ларакансене те чаклаттарать, хĕрпе качча арлă-арăмлă пулса ĕмĕр-ĕмĕр пĕрле пурăнассине саккунпа çирĕплетнĕ çĕрте — ЗАГСра та пулать, масар çине, çын пытарнă çĕре те çитсе темиçе ŭкерчĕк тăвать кун каçа. Ним те тиркесе тăмасть — «объект» кăна пултăр уншăн. Халь çеç пĕр-пĕринпе ăмăртса чупакан комсомолкăсене финиш патĕнче «шултра планпа» ŭкерсе илет те, чиркĕве чупать — унта паянхи кĕлле çĕнĕ пуп иртторет иккен, ăна ŭкересси çинчен вăл ĕнерех чиркŭ старăстипе калаçса татăлнă...

Çавăнпа та ĕнтĕ ăна паллакансем ун çинчен:

— Аптрашкин аптрамасть-ха вăл, ай-ай пултарать!— теççĕ.

Укçине малтан ыйтмасть Аптрашкин, ӳкерет те — санăн адресна çырса илет кăна, анчах тепĕр ик-виç кунтан ӳкерчĕкĕсене туса киле пырсан вара — унран хăпаймастăн, укçу çук пулсан çири кĕпӳне хывса пама та хатĕр пулатăн. Ыйтăпа вăскăртсан та кăларса яраймастăн эс ăна укçасăр!

— Эп çĕр çывăрмасăр ĕçленĕ, материал илсе расхут тунă, укçа çуккипе паян ачасем валли сĕт те илеймерĕм, эсир пур — мăшкăллатăр манран, мĕскĕнрен... Çылăх сире куншăн! Нихçан каçас çук çылăх!

Укçа тупса памасан, вăл алăк патĕнчи сак е пукан çине ларать те, талăкĕпех ним хускалмасăр, ĕçмесĕр-çимесĕр ларма пултарать.

— Эп васкамастăп, эп кĕтетĕп... Укçасăр мана арăм çав-çавах киле кĕртмест,— тет вăл ним çиленмен пекех.

Ну, хуçи вара (Аптрашкина темиçе кун каялла сăн ӳкерттерни ĕнтĕ) çак «ирĕклĕ художник» пусмăрĕнчен епле те пулин ирĕке тухас тесе, кӳршĕсенчен те пулин укçа тупса парса ярать. Тухса кайтăр часрах, куç-пуç ан куртăр çак çыпçанкăна!

Анчах пуринчен те ытларах Аполлон Аптрашкин туйсенче, юбилейсенче, менельниксенче, ача ят хунă çĕрте пулма юратать. Кун пирки унăн хăйне майлă «философи» пур.

— Телейлĕ çын яланах ыр кăмăллă пулать, укçа-тенкĕ те, ним те хĕрхенсе тăмасть,— тет вăл.— Туйра, юбилейра е ача ят хунă çĕрте хуть те çĕр йышши ӳкерчĕк тусан та сая каймасть, вĕсене пур пĕрех илеççĕ, мĕншĕн тесен вăл — событи вĕт-ха! Çын хăй пурнăçĕнче çирĕм, вăтăр е аллă çул пĕрререн пĕрре тултарать. Ачана та икĕ хут ят хумаççĕ. Саккун тăрăх, авланасса та пĕрре кăна авланмалла. Çавăнпа та кун пек çĕрте яланах «точнăй прицел» пулать манăн: пĕр ывçă ӳкерчĕк — пĕр ывçă укçа. Баш на баш тухать, темелле. Куна эпĕ хамăн нумай çулсем хушши пухăнса пынă опыта шута илсе калатăп!— мухтанса илет вăл юлашкинчен, йĕке хӳренни пек малалла тухса тăракан шăлĕсене йĕрсе.

Ун пек çĕре хăçан çитмеллине те лайăх пĕлет вăл. Ытла малтанах, хăнасем пухăннă вăхăтрах, кĕрсе каймасть, вĕсем сĕтел хушшине вырнаçса телейлĕ çамрăк мăшăршăн, юбиляршăн е тин çеç ятлă-хушаматлă пулса тăнă

çара пакка гражданинпа ăна çут тĕнчене туса кăларма пĕлнĕ ашшĕ-амăшĕшĕн икшер-виçшер черкке ĕçсе, пăлханса кайнă хурсем пек какăлтатма тытăнсан тин пырса кĕрет. Никам та сисмест вăл пынине, никам та илтмест— çенĕкрен йăкăш кĕрсе тăрать те хăнасем шавланă çĕрелле мар, кухньă еннелле çул тытать. Кухньăра кун пек чух яланах ик-виç карчăк кăштăртатаççĕ вĕт-ха — ăна-кăна ăшалаççĕ, сăра-эрех кĕленчисене уçаççĕ, пушшисем вырăнне туллисене йăтса каяççĕ.

— Мана чĕннĕччĕ те, каярах юлма тӳр килчĕ-ха, ерçеймерĕм,— тыттарать Аптрашкин айван карчăксене, çимелли-ĕçмеллисем çине вăрра вĕреннĕ ват кушак аçи услам çу çине пăхнă пек пăхса.— Каçарччăрах уш... Эп хамăн ĕçе тума çавах ĕлкĕретĕп-ха...

— Юрать, ара, юрать, халь килни те лайăх!— теççĕ те карчăксем, ăна çавăнтах хăналама тытăнаççĕ.— Çакна ĕçсе пар-ха, тăванăм. Çакна çыртса пăх-ха... Ак тата, ман кукăле тутанса кур...

— Эп выççи выçă мар та-ха, ани çинче чух кăштах тутанса пăхас, эппин, ват çынсен кăмăлне хуçас мар,— тет те кăна хирĕç Аптрашкин, черкке хыççăн черкке ӳпĕнтерет, умлăн-хыçлăн çич-сакăр касăк кукăль хыпса ярать. Вăл паян ятарласах нимĕн те çименни пит те паллă пулать, анчах карчăксем шарламаççĕ — çакăн пек савăнăçлă кун çынна вăл ытлашши нумай чăмланăшăн епле тиркетĕн-ха?

Унтан, кухньăра çакнашкал «заправкă» тусан (вăл хăй çапла калать), Аптрашкин хăнасем ларакан пӳлĕм алăкĕнчен шăппăн кĕрсе пукан çине хăпарса тăрать те, ӳкернĕ чух çутăлтаракан лампине ялт! ялт! тутарать. Паллах, кашни çутăлмассерен ӳкерчĕк пулать унăн...

Ана çав самантрах асăрхаççĕ, пынăшăн тав тăваççĕ, малалла иртме чĕнеççĕ, пĕри черкке тыттарать, тепри сăра тултарса парать, виççĕмĕшĕ авăтан тукмакки сĕнет...

Кайрĕ вара пурнăç Аптрашкинăн! Чи хисеплĕ хăнасем хушшине кĕрсе ларсах ĕçет вăл, çиет, пуринпе те пĕр тан пулса, аллисемпе хăлаçлансах калаçма тытăнать. Тем те курнă иккен вăл, таçта та пулнă, тем те пĕлет. Çынсем хуть те мĕн çинчен сăмах пуçлаччăр — Атăла хăш тĕлте пĕвелесен лайăхрах пуласси çинчен-и унта, хальхи тухтăрсем чĕрене те операци тума пултарни çинчен-и, ача пăрахни хĕрарăм сывлăхĕшĕн сиенлĕ пулни çинчен-и, хĕлле пулла мĕнле çӳресси е çĕнĕ спектакльсемпе кинофильмсем

çинчен — пурĕ пĕр, Аптрашкин пур чухне те хутшăнать, хăйĕн хĕсĕк çамкаллă пуçне мĕн пырса кĕнĕ — çавна лăпăртатать, тавлашма та пăхать, хăй калама тытăнсан вара Лапшу Çтаппанне шухăшласа кăларнă писательтен те кая мар суять.

Хăнасем килĕсене саланнă вăхăтра Аптрашкин е ăçта та пулин кăмака хыçĕнче, е кухньăри сак айĕнче, çулла пулсан çенĕкри урайĕнче çĕтĕк мотоцикл пек лакăртатса сывăрнине курма пулать. Пĕррехинче, чăн та, кил хуçи арăмĕн çемçе выраннĕ çине те кĕрсе выртнă, тет, вăл, анчах çакна упăшки ăнсăртран асăрханă хыççăн унăн хапха умĕнчи кĕсел пек пылчăк çине куçса выртма тӳр килнĕ, тет. Çавăнтан вара вăл ют çын мамăк тӳшекĕсене ытла юратсах каймасть, теççĕ...

Тен, Аптрашкин çинчен çакăн пек тĕпĕ-йĕрĕпе каласа панăшăн хăшĕсем мана тиркеме те пăхĕç, анчах ним тума та çук, юлташсем. Автор шучĕпе, Аптрашкин мĕнле çын иккенне пĕлни вăл сакăр вунă çулхи карчăка суда мĕншĕн сĕтĕрнине лайăхрах ăнланса хак пама пулăшать. Çавăнпа та ытлашши васкар мар-ха, эппин, сăмах-юмах хăй çеммипе пулса пытăр.

Çапла, иртнĕ çуркунне те пирĕн Аполлон Аптрашкин, «ирĕклĕ художник», тĕрĕсрех каласан — хулари кашни йытă паллакан «пушкарь», фотограф-халтурщик, пĕр çĕрте ача ят хунă ятпа хăнасем пухăнассине пĕлнĕ те, каç пулсассăнах çавăнта йăпшăнса пырса кĕнĕ.

— Кунта калым вăйлă пулать-ха,— тенĕ вăл, хăйĕн виçĕ аппаратне те авăрласа.— Ачин ашшĕ — хулари паллă инженер-конструктор, амăшĕ тава тивĕçлĕ артисткă. Укçасăр çынсем мар. Вĕсен хăнисем те шăтăк кĕсъеллĕ çынсемех пулмаççĕ ĕнтĕ, сăнĕсене пленкă çине меллĕрех лектерсен, ӳкерчĕкне кашни илме тивĕç... Укçа ç-çапатăп кунта паян, йоккăр-маккăр!

Çапла шухăшланă май шереметĕн сĕлеки те юхса аннă...

Аптрашкин йăнăшман. Инженерпа артисткă нумай çулсем хушши тунсăхласа кĕтсе пурăннă ывăлшăн (унччен вĕсен умăн-хыçăн пилĕк хĕр пулнă) ним те хĕрхенмен. Икĕ пысăк пӳлĕме лартса тухнă сĕтелсем çинче ĕçмелли-çимеллисенчен кайăк сĕчĕпе слон ашĕ çеç пулман, ыттисем пурте пулнă. Хăнисем тăхăр вуннăн пухăннă. Паллă çынсен тус-юлташсем, ыр сунакансем нумай çав! Вĕсем тин çеç çуралнă гражданин валли илсе пынă парнесене кăлар-

са пама тытăнсан, тĕнчере чылай куркаланă Аптрашкин та куç-пуçне чарса пăрахнă. Мĕн кăна илсе пыман пуль çемçе минтер çинче ним пĕлмесĕр-туймасăр сывăракан Витя валли! Мĕн кăна шухăшласа кăларман пулĕ ахаль те телейлĕ ашшĕпе амăшне тата ытларах савăнтарса хваслантарас тесе, тур çырлахтăрах!..

Сюжетран пăртакках пăрăнатăп пулсан та, манăн кунта кăшт кăна чарăнса тăма тиветех.

Çав хăнасем илсе пынă парнесем хушшинче ĕмкĕчсем (соскăсем эппин)— 52, «упаленмелли» теекен костюмсем — 17, пĕчĕк çитарсем — 7, утиялсемпе çемçе простыньсем — 12, чăпăл кĕртмелли вăлашкасем — 6, пĕчĕк ача ларса какка тумалли пукансем — 9, кустăрмаллă лашасем — 18, велосипедсем — 11, конькисемпе йĕлтĕрсем— 17 мăшăр, тутапа каламалли купăссем — 19, хут купăс — 7, балалайкă — 3, шăхличсем — 33, параппан — 5, шăкăрчаксем — 81 тата темĕн те пĕр пулнă, пурне каласа та пĕтерес çук. Пĕри тата, тăван литературăна аталантарассишĕн çунаканскер, Иван Малкайпа Стихван Шавли кĕнекисене кив урхалăхпа çыхсах йăтса пынă,— ӳссессĕн Витя çав чи лайăх поэтсенчен сăвă çырма вĕрентĕр, тенĕ пуль ĕнтĕ.

Пысăк пӳлĕм лăках тулнă çав парнесемпе, хăнасене хăйсене ларма вырăн та юлман. Ирĕксĕрех хайхи «дежурнăй карчăксен» вĕсене ваннă пӳлĕмне çĕклесе кайса купалама тивнĕ.

— Ара, кусем ача-пăча универмагĕнче ним те хăварман пуль?— тутисене çулласа илнĕ тĕлĕнсе шак хытнă Аптрашкин.— Вăйлă-ă! Кашни ача пуçне кун чухлĕ парне парасса пĕлес пулсан, эпĕ хам арăма хĕне-хĕнех çулсерен йĕкĕреш çураттармалла! Парнисене сутсах çулталăк пурăнма пулать-иç? Киле таврăнсан Ехруççие юриех каласа парас-ха кун çинчен. Хирĕç мĕн калĕ-ши?

Ак ĕнтĕ, хăнасем хăйсене тивĕçлĕ вырăнсене йышăнса ларнă. Аптрашкин та, паллах, вырăнсăр юлман, вăл хаклăрах хăнасем ларнă мăн пӳлĕмри пĕр сĕтел пуçне, темле икĕ карчăк хушшине хĕсĕннĕ. Сĕтелĕн тепĕр пуçĕнче, ача ашшĕпе амăшĕ ларнă çĕрте, темле шакла пуçлă, сăмси çине аякран велосипед пек курăнакан куçлăх утлантарнă çын аллине черкке тытса тăнă та ыттисене те черккесем çĕклеме хушнă. Халĕ вара шăп Аптрашкинăн ĕçе тытăнмалли самант çитнĕ...

— Стоп! Айн момент! Тăхтăр-ха, тӳрех ĕçсе яма ан

васкăр!— тесе кăшкăрнă та вăл никам кĕтмен çĕртĕн, тĕпĕр-тепĕр пукан çине сиксе тăрса ӳкерме тытăннă. Ялт!— чак! Ялт!— чак! Малтан ача ашшĕпе амăшне, унтан хăнасене — пĕр енчисене, тепĕр енчисене...

— Çитĕ, Аптрашкин, çитĕ халлĕхе!

— Çынсене малтанхи черккене ĕçме пар ĕнтĕ!..

— Кайран ӳкерме хăвар...— кăмăлсăртарах сасăсем илтĕннĕ унтан та кунтан.

— Тархасшăн, халь слоботнă!— тенĕ ку вĕсене хирĕç, пĕр вунă ӳкерчĕк тунă хыççăн.

Хăнасем ĕçнĕ те çиме тытăннă. Аптрашкин та халăхран юлман: хăй умĕнчи тарелкă çинчи шаритленĕ кăвакала касса чăрманмасăрах, пĕтĕмĕшпех, ик аллипе ярса тытнă та — тапратнă пĕтĕрме! Çинĕ-çинĕ те — хăех ярса ĕçнĕ, унтан каллех тĕшĕрнĕ. Никам çине те пăхман; хăйĕн пĕтĕм тути-çăварĕ, лапчăк сăмси, шĕвĕр янахĕ тăрăх çу кăна юхса тăнă...

Юнашар ларакан карчăксем ун çине калама çук тĕлĕнсе пăхнă. Мĕнле çын вара ку, пĕр эрне çăкăр çисе курман пек хыпаканскер? Тăраннине те пĕлмест пуль?

Ларсан-ларсан пĕр карчăкĕ, шап-шур çӳçлĕ, тĕреклĕ, сарлака хул пуççиллĕ, арçын сăнлăрахскер, Аптрашкина тĕртсе илмесĕр тӳсеймен.

— Пăхатăп та, ывăлăм, санăн аппетит тени ытла начарах мар пулас,— тенĕ вăл.

— Аппетит енчен аптрамастпăр,— чăмлама чарăнмасăрах кулса илнĕ Аптрашкин.

— Шăлусем те çирĕп курăнать-ха...

— Вĕсем те аптрамаççĕ. На спор кайсан, кантăк та чăмлама пултаратăп.

— Маттур, маттур... Ĕçес енчен те пултаратăн пулас?

— Ун пирки те аптрамастăп. Лайăх саккускăпа пĕр литр ним мар вырнаçать.

— Хырăму шăтасран хăрамастăн-и?

— Çук. Пыршăсем манăн чĕнрен тунă пекех çирĕп. Вопше эпĕ çĕр çинче нимрен те хăрамастăп!

— Турăран та, шуйттанран та, аçа çапасран та хăрамастăн, эппин?— ыйтнă тепĕр карчăкĕ, чикан майри майлăрахскер.

— Нимрен те!— тенĕ Аптрашкин паттăрăн, кăвакал шăммисене ик аллипе шăлса пĕр çĕрелле купаланă май.— Хуть те ман ума вун икĕ пуçлă вĕри çĕлен пырса тухтăр — çавах хăрамастăп. Мĕншĕн тесен эпĕ туррине те,

шуйттанне те, киреметне те, арçурине те ĕненместĕп. Çук вĕсем пĕри те! Вĕсене пурне те ухмахсем шухăшласа кăларнă...

— Ăçтан пĕлетĕн-ха эс вĕсем çуккине? Тен, пур?

— Ç-çук! Ун çинчен эпĕ татмалли календарьте темиçе хут та вуланă... Чăн та, умлă-хыçлă ик-виçĕ кун хăнара пулнă хыççăн шуйттансем куçа курăнкалаççĕ, анчах вĕсене хăвăн умăнтан хăваласа яма пĕр чĕрĕк анчах ĕçмелле. Куна эпĕ хамăн опыта шута илсе калатăп сире! И вопше эпĕ нумай пĕлекен çын...

Ик карчăкпа Аптрашкин хушшинчи тавлашу çакăнпа татăлнă, мĕншĕн тесен Аптрашкина тепĕр пăлĕме ăкерчĕксем тума чĕннĕ. Вуншар çынсене вуншар тĕслĕн ăкернĕ вăл унта — ушкăнпа та, уйрăммăн та.

— Аптрашкин, кунта кил!

— Пире те ăкер, Аптралкин!..

— Аполлошка, пире, Натюшпа иксĕмĕре...

Хăнасем ташлама пуçласан та ăкерме чарăнман вăл. Урисем çирĕпрех чухне пукансем çине, диван çине, пĕр икĕ хутчен сĕтел çине те хăпарса кайса чаклаттарнă, унтан, урисем тытайми пулсан, выртса ăкерме тапратнă. Юлашкинчен вара çавăн пек ăкерсе выртнă çĕртех сывăрса кайнă...

Киле тухса кайнă чух леш карчăксем, паçăр Аптрашкинран тăрăхласа ларнисем, ун тĕлĕнче чарăнса тăрсах калаçса илнĕ:

— Ак хайхи, леш нимрен хăраман паттăр пиççе çитнĕ, ыр курса выртать...— тенĕ чикан майри пекки.

— Пĕрре-пĕрре вăл еплерех паттăр пулнине тĕрĕслесе пăхас пулать-ха,— тенĕ шур çăçли.— Питĕ лайăх камит тума пулать...

— Мĕнле камит?

— Ун çинчен эп сана кайран калăп...

* * *

Емĕрне пулман япала — çак инженерпа артисткă ача ячĕ хунă çĕрте хăналаннă хыççăн Аптрашкин виçĕ талăк вар-хырăмпа асапланса пурăннă. Шалт аптранă вĕт, килтен те тухайман, пĕр ăкерчĕк те тăвайман, пĕр пус калым та илеймен. Арăмĕ, Ехруççи, ăна тем те ĕçтерсе пăхнă — тăварланă-пăрăçланă эрех те, йăçĕтнĕ хăяр шывĕ те, армути шывĕ те; çиме те сухари кăна çитернĕ, анчах упăшкин

вар-хырăмĕ çав-çавах тăрленмен. Веç кăвакарса, утайми пулса çитнĕ мăнтарăн...

— Сана унта пĕр-пĕр çиме юраман усал апат çитерчĕç пуль, Аполлошка, юри мăшкăлларĕç пуль санран?— хыпăнса ыйтнă арăмĕ.— Пĕлетĕп вĕт, кăшт ĕçсен эсĕ хăвăн умна шуйттан пуçĕ хурса парсан та çисе яма пултаратăн! Тен, хуçисем сисиччен таçта кухньăна кайса чĕрĕрех аш çисе тултартăн?

— Ан лăпăртат кирлĕ мара,— теннĕ Аптрашкин, çара хырăмĕ çине хунă вĕри грелкăна унталла-кунталла шутаркаласа.— Нименле чĕрĕ аш та çимен эпĕ. Шаритленĕ кăвакал çеç çинĕ. Питĕ тутлăччĕ, çăвĕ юхсах тăратчĕ...

— Нумай çирĕн-и вара эс ăна?

— Çиес килнĕ таран çирĕм çав.

— Кăвакалĕ пысăкчĕ-и?

— Ытла пысăках та мар. Пулсан пулĕ пĕр икĕ кило çурă...

— Вара çавна пĕтĕмпех хыпса ятăн пулать?

— Кам валли хăварас-ха тата ман ăна? Паллах, çисе ятăм.

— Эй, тĕнче-е!— пĕççисене шарт! çапса илнĕ арăмĕ.— Ун чухлĕ хыпсан кам чирлемĕ! Слон хырăмĕ мар-ха вĕт санăн, пĕр пĕчĕк чăваш хырăмĕ кăна! Ăçта кĕнĕ ун чухлĕ аш?! Тьху!.. Пĕрре-пĕрре çавăн пек виçесĕр çисе тултарсах вилсе каятăн пуль те-ха...

— Нипоччом та вилместĕп, санран ытларах пурăнатăп, эс вилсен, тепре авланатăп-ха,— арăмне хирĕç витлесе илнĕ Аптрашкин. Лешĕ вара тьху, тьху, чĕлхуй çине ӳпне çăпан тухтăрах! тесе алăка шалтлаттарса хупса хăварнă...

Тăваттăмĕш кунĕнче тин кăштах хаманланнă çак «ирĕклĕ художник». Ирхине тăрса çăра вĕри чей ĕçнĕ те, аппарачĕсене урлă-пирлĕ çакса тултарса, хулана «объектсем» шырама кайма хатĕрленнĕ. (Хăй вăл хула Советĕнчи пуçлăхсем сисиччен ӳссе ларнă хăлтăр-халтăр урамра пурăннă).

— Асту, каллех пĕр-пĕр çуллă хур-кăвакал е кăркка тĕлне пырса ан тăрăн! Вилетĕн тепре ун пек çисен!— çилĕпе асăрхаттарнă арăмĕ.

— Çук, çук, Ехруççи, халь эпĕ ăслă ĕнтĕ! Малашне пĕр килоран ытла çиместĕп... Нормă!— куçне хĕссе илнĕ Аптрашкин.

Шăп çав вăхăтра алăк уçăлнă та, пӳрте чикан майри пекрех пĕчĕк хура карчăк кĕрсе тăнă.

— Ырă кун пултăр сире,— теннĕ те вăл, кĕтесселле пăхса сăх-сăхançи тунă.— Йăнăшмарăм пуль тетĕп те-ха... Мана Аптраман фотограф, сăн ӳкерекен кирлĕччĕ...

— Эпĕ вăл,— теннĕ Аптрашкин, пуçне мăн кăмăллăн çĕклесе.

— Э, чăнах та эсĕ-çке! Урăхла тумланнă та, тăруках палласа илеймерĕм. Каçарăр ĕнтĕ ват çынна, куçсем хĕр чухнехи пек мар, арçынсене витĕрех кураймаççĕ... Иртнĕ шăматкун эпир хăнара та пĕрлех пулсаттăмăр, астăватăн-и? Юнашарах лартăмăр. Эс ун чух кăвакал ашне питĕ юратса çирĕн...

Кăвакал çинчен асăнсан, Аптрашкинăн хырăмĕнче темскер тиркелесе илнĕ, анчах ăна вăл палăртман, пĕччен ех тӳссе ирттерсе янă.

— Астăватăп, ара, епле астăвас мар ăна. пит лайăх хăналантăмăр! Санпа пĕрле тата тепĕр карчăк пурччĕ, шап-шур çӳçлĕскер...

— Э-эх, ывăлăм, пурччĕ çав, пурччĕ!— теннĕ те хура карчăк, куçĕсене тутри вĕçĕпе шăла-шăла илнĕ.

— Мĕн пулчĕ тата? Çав териех васкаса вилсе каймарĕ пулĕ те? Чип-чиперехчĕ-çке ун чух?

— Вилсе кайрĕ çав, мăнтарăн! Ара, ватăлса çитнĕ çынна нумай кирлĕ-им? Шăматкун, ав, эс калашле, чип-чиперччĕ, ытларикун пĕр наччасра пуçтарăнса выртрĕ... Шутсăр шалккă! Çынни ытла та ытармалла марччĕ, ылтăн çыннччĕ!

— Вăт, ку чăнах та тĕлĕнмелле хыпар вара!— пуçне сулкаланă та Аптрашкин, тӳрех çак карчăк хăй патне мĕншĕн килнине тавçăрса илнĕ:— Эсир халь асăнмалăх унăн сăнне ӳкерсе юласшăн пулĕ-ха?

— Çапла çав ара, çапла, çавăн пирки килтĕм,— куçĕсене татах шăлкаланă карчăк.— Артеле каяс темерĕм, унтисем япăх ӳкереççĕ те час туса памаççĕ, тет, анчах эсĕ, паллана çын пулса, лайăхрах та, хăвăртрах та туса парăн, терĕм. Чăрмавĕшĕн тӳлĕпĕр эпир, манитне хĕрхенсех тăмăпăр. Ĕçĕ пултăр... Килĕшетĕн-ши пыма?

Аптрашкин арăмĕ çине хул пуççи урлă пăхса илнĕ: кур, епле паллă çын эпĕ, мана артельрисенчен те мала хураççĕ, таçта çити шыраса килнĕ!

— Темиçе çĕре те чĕннĕччĕ те ĕнтĕ мана паян,— хăйĕн хакне хăпартма суйнă Аптрашкин,— ним тума та çук,

малтан сирĕн патах кайăпăр эппин. Хăнара та юнашар ларнă çынна хисеп тăвас юлашки хут...

— Ах, тавтапуçах сана, ырă çыннăм! Атя-ха, эппин, часрах, çынсем пырса туличчен ӳкерсе илер. Мускавран ывăлĕ вĕçсе килессе кĕтетпĕр те, никама та кĕртместпĕр-ха ун патне, пĕлченех выртать, ӳкерме кансĕрлекен çук...

Кĕçех вĕсем урама тухса утнă. Аппаратсем çакса тултарнă Аптрашкин хулăн тĕплĕ măн пушмакĕсемпе лаплаттарса малта пынă, карчăк ун хыççăн йăкăртатнă. Аптрашкинăн кăмăлĕ тулнă: вилнĕ çынсенчен те усси пур иккен, пăх-ха, ир-ирех калым килет!..

Çырма урлă каçса тикĕс çул çине тухсан, каламма юратакан карчăк каллех сăмах пуçласа янă:

— Итле-ха, ывăлăм, эсĕ пырасса пыратăн та-ха, анчах вилнĕ çынсене ӳкерме хăрамастăн-и?— ыйтнă вăл.

— А мĕн хăрамалли пур вĕсенчен?— тĕлĕнсе каялла çаврăнса пăхнă Аптрашкин.

— Ара, пачăшкăсем каланă тăрăх, вилнисен чунĕ çынна çĕре чикиччен ун таврашĕнчех вĕçсе çӳрет иккен те... Сасартăк, эс ӳкернĕ вăхăтра çав чун çын ăшне каялла кĕрсе ăна чĕртсе тăратрĕ-тĕк?

— Юрунда. Çыннăн нимĕнле чун та çук. Так, этемĕн чĕри тапма чарăнать те, вăл каска пек пулса выртать вара. Ни шухăшламасть вăл, ни хырăмĕ выçмасть унăн.

— Ма-ха, эппин, хăш-хăш чух вилнĕ çынсем хăйсене масар çине илсе çитерсен те чĕрĕлеççĕ? Ун пеккисем çинчен илтнĕ-и эсĕ?

— Илтнĕ çеç мар, татмалли календарьте вуласа та курнă. Летаргически ыйхă, теççĕ ăна. Ун пекки çĕр пин виле хушшинче пĕрре пулать... Акку карчăкĕ сирĕн чăнласах вилнĕ пуль вĕт?

— Ку çапла-ха, ку ĕмĕрлĕхех вилнĕ, тин тăрас çук, алурисем ĕнерех шăнса хытрĕç...

Вĕсем малаллах утнă. Хула урамĕсемпе пынă чух Аптрашкина паллană çынсем нумай тĕл пулса ырлăх-сывлăх суннă.

— Ăçталла çул тытрăн, Аполлон Корнилч?— тесе ыйтсан, Аптрашкин ик пӳрнине шлепке хĕррипе тан çĕкленĕ те, ним шухăшласа тăмасăрах хуравланă:

— Васкавлă заказ пур-ха. Пĕр карчăка леш тĕнчере паспăрт илме патрет туса памалла...

— Калым?

— Так точнă. А мĕн кирлĕ тата пире?

Унтан, «линкка-линкка» кĕввине шăхăркаласа, малалла утнă.

...Юлашкинчен çав пĕчĕк хура карчăкпа Аптрашкин пир-авăр комбиначĕ енчи тарăн çырма урлă каçса пĕр пысăках мар пӳрт умне пырса тăнă. Аптрашкина урама тăратса хăварса, карчăк кил хушшине пĕрченех кĕрсе кайнă.

— Тĕлĕнмелле-çке ку?— шухăшланă Аптрашкин, унăн кунăн пăхкаласа.— Çын вилнĕ, теççĕ, анчах ним палли те çук. Хапха умне хĕреç мар, тупăк хупăлчине те пулин кăларса тăратман хуть! Çынсем те курăнмаççĕ... Неушлĕ эп вилсен те çакăн пекех никам та пымĕ? Питĕ кӳренмелле пулать вара ку!..

Пĕр виçĕ минутран хайхи карчăк калинккене уçса кăчăк туртнă:

— Атя, кĕр! Пĕрченех выртать, сана ĕçлеме кансĕрлекен никам та пулмасть...

Аптрашкин карчăк хыççăн çенĕкрен кухньăна кĕнĕ, унтан малти пӳлĕмелле иртнĕ.

Чăнах иккен. Хыççăр пукансем çине вăрăм тупăк лартнă. Тупăкра çын выртни çиелтен витсе хунă шурă простынь витĕрех палăрать. Лампадкă, çурта тавралăç çук, пуç вĕçне çеç куршакра ӳсекен килти темиçе чечек лартнă.

— А ма вара никам та çук?— тата ытларах тĕлĕнсе ыйтнă Аптрашкин, аппарат чĕнĕсене мăйĕнчен вĕçертсе.— Тăванĕсем пур-и унăн?

— Ара, каларăм-çке, ывăлĕ килессе кĕтетпĕр, çавăнпа никама та чĕнмен, систермен...— пăшăлтатса илнĕ карчăк.

— Миçе ӳкерчĕк тăвас?— çавăн пекех шăппăн ыйтнă ирĕклĕ художник.

— Пĕр пилĕк-ултă тĕслĕ ӳкеретĕн пуль ĕнтĕ. Унпа пĕрле хамăн та çапăнас пĕр икĕ хут. Эпир иксĕмĕр питĕ туслă пулнă вĕт, театрта вăтăр çул пĕрле ĕçленĕ...

— Эсир мĕн, артисткăсем пулмă-и? Эппин, ман пекех искусствă çыннисем?— хавасланнă Аптрашкин.

— Ара, çапла пулса тухать çав! Эпир артистсем выляннине курма хăшĕсем билетсăр кĕрсе каяçран алăкра тĕрĕслесе тăнă. Пĕррехинче сана та тытнă пек астăватăп. Кĕме чартăм та, эс мана чутах çак аппаратпа пуçран çапаттăн. Юрать, çывăхра милици пулчĕ...

— Пулнă та пуль, пулма та пултарнă,— хирĕçлесе тăман Аптрашкин, пĕр аппаратне виçĕ ура çине вырнаçтарса.— Тавай ĕнтĕ, питне уç...

Хура карчăк тупăкри çын сăнне хуплană простынь хĕррине сирнĕ. Чăнах та, хайхи палланă шур çӳçлĕ карчăк выртать иккен. Нимĕн те улшăнман хăй, тин çеç çывăрса кайнă пек. Темшĕн тата янахĕ çумне помидор хуппи çыпăçтарнă, халь кăна апат çинĕ, тейĕн. Аптрашкин ăна илсе пăрахма хушнă:

— Атту ăна пытаричченех нăрăсем кăшлама тытăннă пек курăнма пултарать...

Тытăннă вара ӳкерме. Пĕрре, иккĕ, виççĕ... Унтан та, кунтан та... Çав вăхăтрах, хăйĕн юратнă юррин сăмахĕсене улăштарса, хуллен кăна юрлама тытăннă: «Вилсе выртсан тупăк тума юман хăма кирлĕ...»

Темшĕн-çке, хура карчăк куншăн çиленмен тата, ăна илтмĕш пулнă. Хăй вара тупăк умне тăрса темиçе те ӳкерĕннĕ.

— Ну, çитет пуль?— ыйтнă Аптрашкин ултă-çичĕ хут чаклаттарса илнĕ хыççăн.

— Çитĕ, эппин,— килĕшнĕ хура карчăк.

— Ыран пурте хатĕр пулаççĕ. Укçине хатĕрлесе хур, темиçе хут çӳреме манăн вăхăт çук,— аппаратне пуçтарнă май приказ панă пекех каласа хунă Аптрашкин.

— Ара, вăл паллах ĕнтĕ, паллах. Ĕçлĕ çыншăн вăхăт укçаран та хаклă, теççĕ,— ун майлă шăлнă карчăк.— Халь ĕнтĕ, ырă çыннăм, ĕçне тунă хыççăн тата вилнĕ çынна ырăпа асăнса, тен, пĕрер черкке ĕçсе пама кăмăл тăвăн? Хатĕрлесе лартни пур манăн пĕртак, çырла шывĕпе хутăш...

— Ун пеккине хирĕç пулма эпĕ çав териех ухмах мар конешнă,— тенĕ те ăна хирĕç Аптрашкин, унăн пырĕ ярăнни карчăка та илтĕннĕ.

— Халех илсе кĕретĕп, вăл манăн нӳхрепре, сивĕ çĕрте... Эс тăхта-ха, эппин, пăртакках!

Пӳлĕмре пĕччен юлсан, Аптрашкин стена çинче шăкăрах çакăнса тăракан ӳкерчĕксене пăхкалама тытăннă, çав хушăрах хăй сăмси витĕр паçăрхи юррах юрланă:

— ...«тупăк тума юман хăма кирлĕ, халь те юман, тата юман...»

Унтан сасартăк...

— Аптрашкин, ара, эсĕ ӳкерчĕкĕсене миçешер тумаллине ыйтмарăн-çке!— тени илтĕннĕ унăн çурăмĕ хыçĕнче.

Аптрашкин хăйне сисмен çĕртен çурăм урлă чĕн пушăпа турtса çапнă пек картах сикнĕ те, унăн кĕпи айне çĕлен кĕрсе кайнăн туйăннă. Хăвăрт кăна каялла çаврăнса пăхсан вара, унăн урисем лĕнчĕрех аванса аннă, чĕлхи çă-

вар маччи çумне çыпăçса ларнă, куçĕсем сиксе тухма тапратнă...

Тупăкра выртакан хайхи карчăк чип-чиперех тăрса ларнă иккен! Çӳçĕ те шап-шурă унăн, кĕпи те, чĕркуççи таран сирсе пăрахнă простынĕ те шап-шурах. Шăлсăр çăварĕ пĕрмай уçăлса хупăннă, вăл татах тем каласа пулмалла, анчах Аптрашкин халĕ нимĕн те илтмен ĕнтĕ. Ана хăй умĕнче çав палланă карчăк мар, чăн-чăн вилĕм, хай леш художниксем аллине çава тыттарса ӳкерсе кăтартакан вилĕм ларнă пек туйăннă. Ак, халех, халех вăл тупăкран тухать те, пăр пек сивĕ, тимĕр пек хытă аллисемпе Аптрашкина пăвма тытăнать...

Кăшт çеç тăна кĕнĕ пек пулсан, Аптрашкин чăн малтан сăх-сăхма тытăннă: пат-пат-пат, пат-пат-пат! тутарнă аллисемпе хĕреслĕ-пирлĕ. «Сирĕл, шуйттан! Çухал ман куç умĕнчен!»

Унтан çухăрса янă:

—А-а-а! Çăлă-ăр!.. Çăлă-ăр!..

Хăлхана çурса ямалла, ик-виç урам урлă та илтĕнмелле кăшкăрнă вăл, вара пӳлĕмрен питĕ вăйлăн персе янă чул пек тухса вăркăннă. Çенĕкелле тухмалли алăка вăл çамкипе така пек çапса уçнă, картлашка çинче пӳртелле кĕрекен хура карчăка ӳкерсе ун урлă сиксе каçнă та, калинккерен вăркăнса тухсанах, картлă кĕвентепе тулли витресем çĕклесе пыракан хĕрарăма çапăнса, çĕре персе антарнă, хăй çине-çине, пĕр чарăнмасăр: «А-а-а! Çăлă-ăр!» тесе кăшкăрнă, унтан урампа çил-тăвăл пек вĕçтерсе пынă чух каскаран такăнса ӳкнĕ те урăх тăрайман вара.

Вăл пусма тытăннă чăваш сысни пек çухăрса выртнине курсан ун патне çынсем пухăнма тытăннă. Çынсем пырса тулсан та чарăнман, тет, çаплах: «Çăлă-ăр, мана вилĕм хăвалать»,— тесе кăшкăрнă, тет. Палланăрах çынсем Аптрашкин ӳсĕрпе аташать пуль, тенĕ, теприсене вăл ухмаха ерсе кайнă пек туйăннă.

...Чылай выртнă вăл больницăра. Унтан, туя çине тайăнса утса тухсан, чăн малтан киле мар, палланă юристсем патне кайнă. Çавсем вĕрентнĕ тăрăх вара вăл шап-шур çӳçлĕ сакăр вун çулхи карчăка суда панă.

Ну, каласа памалла та мар хаваслă суд пулчĕ вăл! Тĕрĕсрех каласан — суд мар, тĕнпе тĕшмĕшлĕх пирки прттернĕ наукăллă диспут пулчĕ. Леш карчăк, нумай вĕренменскер пулин те, шалт аптратрĕ вĕт Аптрашкина! Эс, çамрăк çын, совет саманинче çуралса ӳснĕ, совет шкулĕнче

вĕреннĕ, мĕнле-ха çавăн пекех айван, çук турра ĕненетĕн? Эс епле каçса кайсах сăх-сăхнине пĕтĕмпех курса выртрăм еĕт эпĕ! Унтан мана темле усал, сатана вырăнне хурса хăвалама тытăнтăн — ку ĕнтĕ эс халĕ те тĕшмĕш лачакинчен тухайманнине пĕлтерет... Намăс сана, çĕр хут намăс!..

Аптрашкин хăйĕн хутне кĕме ваккат та тытнă мĕн, анчах та карчăк пĕр-пĕчченех çиеле тухрĕ. Судья унран:

— Çапах та, мĕншĕн эсĕ çавăн пек тупăка кĕрсе выртса ӳкерĕнтĕн-ха, мĕне кирлĕ пулчĕ ку сана?— тесе ыйтсан, карчăк кула-кулах ответ пачĕ:

— Манăн хам вилсен эпĕ тупăкра мĕнлерех выртассине курас килчĕ, çавăнпа ӳкерĕнме шут тытрăм,— терĕ. Кăшт тăрсан, çапла каларĕ тата:

— Театрта ĕçленĕ чух эпĕ кăштах сценă çинче те вылякаланă. Халь те пĕчĕк спектакль лартса илес килчĕ... Мĕнех вара уншăн?

...Шур çӳçлĕ карчăка суд нимĕн те тумарĕ. Аптрашкин çавăнтан вара ирĕклĕ художник пулма пăрахнă, «Хĕрлĕ фотограф» артеле кайса ĕçлеме кĕнĕ, терĕç.

САВĂС

(*Пĕр йĕксĕк çинчен çырнă хурлăхлăрах повеç*)

ПРОКОПИЙ ПРОХОРЫЧ Яснов, пĕр районти прокурор помощникĕ, хăй умĕнче выртакан тем хулăнăш «делон» юлашки страницине вуласа пĕтерчĕ те, куçлăхне çамки çине хăпартса, пĕтĕм кăкрипе хаш-ш!.. сывласа ячĕ, унтан, кăшт тăрсан, пырне тем ларнă пек туйăннипе, хыттăн ӳсĕрсе илчĕ.

Фанер стена хыçĕнче ларакан ватă хĕрарăм-секретарь, çакна илтсен, тӳрех ăнланчĕ: Прокопий Прохорыч паян пĕр-пĕр шутсăр кăткăс ĕçĕн вĕçне тупнă... Йăли çавăн пек пулнă унăн: пысăк ĕç тунă хыççăн яланах хаш! сывланă та, ӳсĕрсе пырне тасатнă. Сахал мар лапра-пылчăк çăтма тивет-çке-ха тепĕр «делосене» вуланă чух! Акă халь те...

...Питĕ йывăр килнĕ çав Прокопий Прохорыча. Иртнĕ эрнере, командировкăна тухса каяс умĕн, начальствă ăна çак ĕçе васкасах, çине тăрсах пăхса тухма хушса хăварнă:

— Часрах татăлас пулать ку йăлăхтармăшпа, ахаль те темиçе уйăха пырать ĕнтĕ. Çитет аппаланма!

Виçĕ кун та виçĕ каç ларчĕ вара Прокопий Прохорыч ĕçпе паллашса, кабинетран та тухмарĕ...

Шуткă-им! «Делора» 333 страницă пулнă — шурă, кăвак, хăмăр, сарă тата ытти темĕн те пĕр тĕслĕ страницăсем. Чернилпа та, хăрăм шывĕпе те, кăранташпа та, авторучкăпа та çырнă вĕсене, машинкăпа та пичетленĕ. Пĕччен мар, иккĕн мар, вуншар çын каласа панисем пулнă унта. Пыр-ха эс, ăнлан вĕсене пурне те, туп — хăшĕ тĕрĕс калать, хăшĕ суять? Ун пек чух суяканĕсем ытларах пулаççĕ...

Прокопий Прохорыч саккунсене питĕ лайăх пĕлекен, пур ĕçсене çав тери тĕплĕ тăвакан, çирĕм пилĕк çул хушшинче çĕршер чи пăтравлă ĕçсен вĕçĕ-хĕррисене тупнă, нумай сăтăрçăсене, вăрăсене, намăсĕсене çухатнă суя этемсене тăрă шыв çине кăларнă опытлă çын пулнă пулсан та, халь та-арăн шухăша кайрĕ...

Кайăн!.. Пулаççĕ вĕт тепĕр чух çавăн пек этемсем,— шуйттан та ăнланса çитес çук вĕсен чунне!

Шухăшланă май, Прокопий Прохорыч, хăй сисмесĕрех, умĕнче выртакан «дело» хуплашкине тепĕр хут уçрĕ те, ун умне саспаллисене унăн-кунăн кукăрткаласа çырнă заявлени тухса выртрĕ.

«...Кăçал, июлĕн 26-мĕшĕнче, вырсарникун,— тепĕр хут вулама пуçларĕ Прокопий Прохорыч,— вырăнти вăхăтпа 14 сехет те 15 минутра, Мучикасси çынни Савали Чаплашкин, эпĕ унпа чи ырă кăмăлпа калаçса тăнă чух, хăйĕн крыльци çинчен сасартăк Уссури тигрĕ пек сиксе анса, мана икĕ чышкипе (чышкисем хăйĕн — чукмарсем пек!) кăкăртан питĕ хытă чышрĕ те, эпĕ шĕвĕ кĕсел евĕрлĕ пылчăк çине персе антăм. (Вăл кун çак ялта вăйлă çумăр çунă та, урамсем епресех кайнăччĕ). Эпĕ часрах тăрса тарма пикентĕм, анчах Чаплашкин мана каллех çапса антарчĕ те ӳппĕн-питтĕн йăвалантарма тытăнчĕ. Çав сăлтавпа манăн çутă-кăвак (люкс йышши) костюм çара лапра пулчĕ, и даже аялти кĕпе-йĕм те хытах вараланчĕ. Кайран, Шупашкара таврăнсан, эпĕ костюма химически чисткăна парса тасаттартăм, унăн 48 тенкĕ те 50 пус илчĕç, аялти кĕпе-йĕмшĕн прачкăна 5 тенкĕ тӳлерĕм. Кунсăр пуçне, гражданин Чаплашкин çавăн пек бандитла хăтланнине пула, манăн куçлăх ӳксе çĕмĕрĕлчĕ — 25 тенкĕ те 12 пус тăрать (алăра аптекă панă товарнăй чек пур), çĕнĕ фетровăй шлепке хур чĕпписене ярса панă вăлашкана лексе юрăхсăра тухрĕ — 88 тенкĕ тăрать.

Тата акă мĕн. Мучикассине эпĕ хамшăн питĕ кирлĕ ĕçпе

кайнăччĕ, анчах хăвна çакăн пек пылчăк ăшне пăрахса таптанă хыççăн мĕнле ĕç тăватăн-ха, çынсем умне мĕнле курăнатăн?! Кайса килни ахалех пулчĕ, билетшăн (калле-малле) 37 тенкĕ те 40 пус тӳлени харама кайрĕ, вăл манăн калама та çук усăсăр расхут пулчĕ. Ун пек расхутсем тăвассине эпĕ хамăн личнăй бюджетра пачах та палăртман.

Çакна та шута илмелле: манăн кĕсъере пĕр бутылкă коньяк (чи хакли, пилĕк çăлтăрли) пурччĕ, вăл та ванса юхса тухрĕ. 45 тенкĕ тăрать, ун пирки Шупашкарти «Гастрономра» пĕлме пултаратăр.

Паллах, питĕ шел, анчах та Чаплашкин гражданин манран çавăн пек издеваться тунине куракансем пулмарĕç, эпĕ темле кăшкăрсан та никам та пымарĕ (Чаплашкин хăйсене хĕнесе тăкасран хăрарĕç пулмалла), унăн кавча каяймасăр пурăнакан путсĕр хĕрĕ çеç — ашшĕ пекех тискер чунлăскер — мана пылчăк çинче йăвалантарнине чӳречерен пăхса, хăйне такам хырăмĕнчен кăтăклана пек ачăлтатса, ахăрса кăна тăчĕ. Ăна эпĕ свидетель тумастăп, мĕншĕн тесен вăл мана хирĕç кăна çаптарма пултарать. Çапах та манăн кун пирки документ пур,— урса кайнă Чаплашкинтан тарса хăтăлсанах, эпĕ ял Советне кайса, Чаплашкин мана хĕнесе, вараласа пĕтерни çинчен справкă çыртартăм. Председательпе секретарь туя кайнă пирки справкă çине техничкăн ал пусмалла пулчĕ, анчах та ку, ман шутпа, пурĕ пĕр, мĕншĕн тесен техничкă та влаç органĕнче ĕçлекен çынах, вăл та шалу илет!

Çак заявленипе эпĕ иртĕнсе кайнă Чаплашкина саккун тăрăх питĕ хытă айăплама ыйтатăп. Ун пек хулигансен вырăнĕ тĕрмере кăна пулмалла. Пуринчен ытла, çакна шута илĕр: вăл вĕт простой çынтан та мар, Отечественнăй война инвалидĕнчен издеваться турĕ! Не позволю! (Хам инвалид тата пенсионер пулни çинчен манăн каллех документ пур.)

Анчах та маншăн Чаплашкина тĕрмене хупни çителĕксĕр. Рас вăл мана материальнăй сиен турĕ, пĕтĕмпех тӳлетĕр! Çавăнпа та мана унран 256 тенкĕ те 12 пус укçа (шлепке, куçлăх, коньяк хакĕ, костюм тасаттарни, калле-малле билет хакĕ) шыраса илсе пама ыйтатăп.

Çакна та шута илĕр, гражданин прокурор. Эпĕ питĕ чирлĕ çын, ача чухнех нумай хĕн-хур курнă, пĕррехинче аслăк çинчен ӳксе хырăма ыраттарнă, тухтăрсем ун чухнех мана урăх ӳкме хушман, ӳксен — вилетĕн, тенĕ, анчах çав Чаплашкин чышса ӳкерчĕ. Эпĕ вилме пултарнă вĕт! Вилме!

...Ним айăпсăр хĕн курнă Филимон Шуськов».

...Çак пит те ăста çырнă сочинение тепĕр хут вуласа тухнă хыççăн Прокопий Прохорыч тата чылай хушă ним чĕнмесĕр ларчĕ. Вăл ĕнтĕ заявлени çинчен кăна мар, «делори» ытти 333 листа çинче çырнисем пирки те шухăшларĕ пулмалла. Унтан каллех хашш! сывласа ячĕ те хăй тĕллĕн мăкăртатса илчĕ:

— М-да... Филимон-Соломон-н... Филька... Эп астăвасса «Филька шпандырь» ятлă кино пурччĕ — шпана сăмахран... Хушамачĕ те темле... шуçлак!

Вăл татах заявлени çине пăхса илчĕ.

— Чăн-чăн «филькина грамота» ĕнтĕ, урăх ним калама та çук. Филимонĕ хăй — сайра тĕл пулакан прохвост!

Заявленипе унăн авторне çакăн пек хаклама Прокопий Прохорычăн сăлтавсем çителĕклĕ пулнă çав. Филимон Шуськовăн пурнăçĕпе ĕçĕсене вăл халь тĕкĕр çинчи пек курса тăнă. Енчен те çав Шуськов историре паллă вырăн йышăнмалли çын пулнă пулсан, Прокопий Прохорыч ун çинчен питĕ тĕплĕ монографи çырма та пултарнă пулĕччĕ!

...Вун çичĕ çула çитиччен Хĕлимун пурнăçĕнче нимех те пулман, темелле. Ача чухнехи пурнăçĕнчен вăл амăшĕ хăйне нӳхрепрен хăйма вăрласа çинĕшĕн нумай хутчен çаптарнине тата пĕррехинче, тырă вырнă вăхăтра, кӳршĕсен аслăкĕ çинчи чăх йăвинчен çăмартасене хĕве тултарса ларнă чух кил хуçи арăмĕ тăрук пырса тытса, ăна йĕмне антарсах вĕлтренпе пĕçертнине, çавăн хыççăн хăй пĕр эрне хушши сак çине ларайманнине çеç лайăх астунă.

Пĕçерккĕсем час та часах леккеленĕ пулсан та, Хĕлимун питĕ ачаш ӳснĕ. Ĕçлеме вăл мĕн пĕчĕкренпех юратман, темле ĕç хушсан та, пăрăнса юлма тăрăшнă. Ку енчен чеелĕх çитнĕ унăн. Пулчĕ-пулмарĕ пуçĕ ыратма тытăннă, сасартăках варсăр пулса ларнă вăл. Чи малтанхи хут уя тырă вырма илсе тухсанах кача пӳрнине каснă та, вара урăх ĕмĕрне те çурла тытса курман...

Ашшĕне Хĕлимун астуман; çынсем каланă тăрăх, унăн ашшĕ улшуç пулнă та, пĕррехинче çĕнĕ лашапа таврăннă чух кĕпер айне кайса вилнĕ. Анчах, ашшĕ çук пулсан та, аптраман вĕсем: амăшĕ, чухăн çемьере çуралса ӳснĕскер, питĕ ĕçчен çын пулнă. Колхозра та, килте те ырми-канми пĕлмесĕр ĕçленĕ вăл. Кахал пулнăшăн ывăлне текех ятланă, анчах та Хĕлимун, амăшĕ хытăрах калама пуçласан, тӳрех асламăшĕ патне тухса тапнă. Лешĕ вара ăна ялан пуçĕнчен

лăпкаса ачашланă, çăкăр сине пӳрне хулăнăш пыл сĕрсе çитернĕ.

— Пĕртен пĕр мăнук вĕт эсĕ пирĕн, епле хĕрхенес марха сана? Ĕçĕ тармĕ-ха вăл, шăмма-шакка çамрăклах хуçкалас мар...

Мăнукĕ шав ашкăннă, урамра пĕчĕк ачасене макăртнă, анчах тепĕр чух хăйне шаккаса ярсан, асламăшĕ каллех ун хутне кĕнĕ...

Ачашшăн ӳснипе, Хĕлимун çамрăклах хăйне мăнна хума, тантăшĕсем сине çиелтен, йĕрĕнчĕклĕн пăхма хăнăхса пынă, аслисемпе те хăр-хар калаçма вĕреннĕ. Вун улттă тултарнă тĕле вăл пĕвĕпе тăсăлса мăн çын пекех пулса кайнă. Вун çиччĕ сине пуссан вара, çăварни эрнинче, кăмака умĕнче икерчĕ пĕçерекен амăшĕ патне пырса тăнă та хăйне кура мар хулăн сасăпа:

— Авлантар мана!— тенĕ.

Амăшĕ тĕлĕнсех кайнă, аллинчи çатмаруççи те шăнкăртах тухса ӳкнĕ унăн.

— Эсĕ шӳт тăватăн-и, е... чăнах?

— Пĕртте шӳт тумастăп!

— Ир-ха сана авланма, ара, ача вĕт-ха эсĕ!— хăрасарах каланă амăшĕ.

— Нимĕн те ир мар!— татса хунă Хĕлимун.— Авлантар тавай, и вçо! Çитет мана хусах пурнăçпа пурăнса! Асанне хирĕç мар, унпа калаçрăм уш эпĕ. Хĕрне те хăех тупса паратăп, тет.

Асламăшĕ, пурнăçа самаях çăмăллăн пурăнса ирттернĕ çын, мăнукне авлантарасси çинчен чăнах та шухăшлакаланă-мĕн, никама систермесĕрех унта та кунта килĕшӳллĕрех хĕрсене пăхкаланă вăл: кам ĕçлеме вашават, камăн тупри ытларах — çи-пуçĕ-мĕнĕ, тырри пулли, выльăхĕ-чĕрлĕхĕ, тенĕ пек... Хĕлимунĕ çамрăкрах пулнипе çеç кун пирки кинĕпе калаçман вăл. Халь вара, ку сăмаха Хĕлимун хăй пуçласа ярсан, пĕтĕмпех ун майлă пулса тăнă:

— Ачин хăйĕн ун пек шалани пур пулсан, ма чарас? Авлантăр-иç! Ашшĕне те вун çиччĕрех авлантарнăччĕ эпир!

Хĕлимун амăшĕ ним тума аптраса ӳкнĕ. Ывăлне халех авлантарасшăн пулман вăл. Анчах Хĕлимунпа асламăшĕ ăна хупăрласах илнĕ, çăвар уçма та паман. Ирĕксĕрех килĕшме тивнĕ... Вара типпе тухичченех вĕсем кӳршĕ ялĕнчен Униç ятлă питĕ лăпкă та сăпайлă, кăшт çеç чĕкеç шатриллĕ, çапах та илемлĕ хĕре лартса килнĕ...

Асламăшĕ, палкама юратаканскер, çынсем умĕнче хăйсен кинĕпе ниçта кайса кĕрейми мухтаннă:

— И-и! Мĕн каламалли! Тупри виçĕ лав пулчĕ вĕт, кĕпи-тумтирне вунă çулта та тăхăнса пĕтерес çук, унсăр пуçне тата хĕрĕх пăт тырă, хĕл каçнă пăру, икĕ сысна çури, виçĕ кăркка илсе килтĕмĕр... Ĕçре те никамран та юлас çук, шутсăр ӳрĕк! Āçтан кăна телей пулчĕ пирĕн тĕле!..

Кĕçех тата тепĕр телей сиксе тухнă вĕсемшĕн: ял Совет секретарĕ чирлесе кайнă пирки Хĕлимуна ун вырăнне ĕçлеме илнĕ, мĕншĕн тесен, шкулта пуринчен начар вĕреннĕ пулсан та, вăл саспаллисене апла та капла кукăрткаласа, чăн-чăн «писсăрла» çырма пĕлнĕ. Председателĕ хăйсен пĕлĕшĕ пулни те пулăшнă кунта.

— Пурĕ пĕр килте нимĕн те тумастăн. Хлимкка, пырса лар, пысăках мар пулсан та — шалу илетĕн,— тенĕ вăл.

Часах ăна яланхи пек Хлимкка тесе мар, Хĕлимун Аристарччă, тесе чĕнме пуçланă. Епле пулсан та, начальствă-çке! Хăй вара çавăнтанпа кил таврашĕнче алла турпас та тытса курман. Ирхине, лайăх кăна çывăрса тăраннă хыççăн, хырăмĕ параппан пек пуличчен çисе лартнă та — кăнтăрла çитиччен кайса ларнă, унтан киле пырса каллех тепре пехленĕ те — каçчен таврăнман. Пур ĕçсене те амăшĕпе арамĕ туса пынă...

Вăхăт шунă... Хĕлимун тантăшĕсем чылайăшĕ вĕренме кайнă, килте юлнисем пикенсех колхозра ĕçленĕ, хуçалăха вăйлатма тăрăшнă, «ят тухсан» Çара кайнă, анчах Хĕлимун çав-çавах секретарьте ларнă, ăна Çара та илмен. мĕншĕн тесен унăн ура лапписем лаптак пулнă иккен... Çулла çынсем хĕрсех утă çулнă е уйра тырă вырнă вăхăтра ял Советне эрни-эрнипе те никам пырса кĕмен чух та вăл ниçта та кайман, пĕр-пĕччен, урамра ыйхăллăн утса çӳрекен качакасем çине чӳрече витĕр пăхса, шăл витĕр чăрт та чăрт! суркаласа е мăн хăяр вăрри шĕкĕлчесе ларнă. Уйран йăпăртлăха киле килнĕ пĕр-пĕр инке ун тĕлĕпе иртсе пынă чух, ăна:

— Хĕлимун Аристарччă, ма хуть пĕрре те пулин хире тухса курмастăн? Тырри ытармалла мар вĕт! тесен, вăл тутлăн карăнса илнĕ те:

— Нашшă делă — канцеляри...— тесе хунă.

Анчах праçниксем пуçлансан, ăçта та пулин туй таврашĕ тапрансан, ăна тупма питĕ хĕн пулнă. Виç-тăватшар кун, тепĕр чух эрнипе те пырса курман вăл канцелярине, пĕр-пĕр кирлĕ хут çыртарма пынă çынсем ăна килтен

киле шыраса чупсах хăшкăлнă. Сыпас енчен пултарнă вăл... Пĕччен пĕр витре сăра ĕҫсен те хăнк та туман, мур илесшĕ, куҫĕсем кăна çиленнĕ вăкăрăнни пек пулса кайнă. Киле таврăнсанах арăмĕ çине сиксе ӳкнĕ:

— У-у, хĕсĕр ĕне! Шатра шуйттан! Кай тухса ман килтен!..

Арăмĕн вара час-часах кӳршĕсем патĕнче çĕр каçмалла пулнă. Хăш чух тата ăна упăшкинчен çеç мар, вĕсем патне пĕрмай пырса çӳрекен асламăшĕнчен те лекнĕ: ку ăна çимеллипех çинĕ:

— Пĕтĕм ял халăхĕ умĕнче намăс кăтартатăн пире. Хĕлимун ятне яратăн! Виҫĕ çулта пĕр ача тăваймарăн, пуш хырăм! Тьху, тьху, киремет!..

Киремечĕ — киноĕ мар, хăй пулнă та-ха, çапах та вăхăт çитиччен тӳснĕ лешĕ... Киноĕ нихăш енчен те айăплă марринне пĕлсе, Хĕлимун амăшĕ ун хутне кĕме тытăннă. Çамрăк чухне ăна хăйне те хунямăшĕ сахал мар хĕсĕрленине пит лайăх астунă-çке вăл. Çавăнпа та кинĕпе питĕ килĕштерсе пурăннă.

— Пĕтĕмпех аслашшĕне хывнă, эсрелĕ!— вăрçнă амăшĕ тепĕр чух, ывăлĕ çине çиленсе çитсен.— Чисти аслашшĕ! Лешне ахальтен мар Шуйттан Куçми тенĕ вĕт... Пĕреххут, тухса кайтăрччĕ ăçта та пулин, атту пурăнать пирĕн çумра усал сăвăс пек!

Пĕррехинче, çуллахи ăшă кун, каçалапа, Хĕлимун ял Советĕнче пĕр-пĕчченех анаслакаласа ларнă чух, унта вырăсла тумланнă пĕр хĕрарăм пырса кĕнĕ. Питĕ капăр тумланнăскер пулнă вăл — куça йăмăхтармалла сап-сар беретпа, хĕп-хĕрлĕ кофтăпа, сип-симĕс юбкăпа, çинçешке урисем çинче — çӳллĕ кĕлеллĕ сенкер туфли, çӳçĕсене вĕттĕн-вĕттĕн кăтралатнă, çӳхе тутисене кăшт кăна сăрланă, куç харшисене пĕкĕ пек кукăртса хуратса лартнă.

— Страстĕ,— теноĕ çав хĕрарăм, кăмăллăн кулнă май малти тимĕр шăлĕсене кăтартса.

— Килĕрех,— пуçĕпе сулса илнĕ Хĕлимун, анчах çавăнтах, ку хĕрарăм хуларан килнине тавçăрса илсе, вырăсла хушса хунă:— Топро божаловать... Иртĕр малалла, ларăр...

Кĕтмен хăна хыççăр пукан çине ларнă та, аллинчи сăмса тутри ăшĕнчен хĕвел çаврăнăш илсе хыпса шĕкĕлчеме тытăннă.

— Эсир мана паллаймастăр пулас...— куçĕсене выляттса, каллех кулса илнĕ вăл.

— Темле, курнă пек те...— нимĕнле мар пулса кайнă Хĕлимун.— Ăçтисем пулатăр вара эсир?

— Çак ялсемех-çке-е...— куçĕсене тата ытларах выляттса илнĕ лешĕ.— Çемĕчкĕ çиетĕр-и? Пожалстă, кушăйти!— Вăл Хĕлимун умне пĕр ывăç хĕвел çаврăнăш пырса хунă.— Лайăхрах пăхăр-ха, тен, узнавать тăватăр? Неушлĕ эп çав териех улшăннă?

— Эсир... Чакак Мирунĕн Маттĕрни мар пулĕ те?

— А-а, палларăр-и? Çавă конешнă!

Ку çынна Хĕлимун ачаранпах пĕлнĕ. Катăк йĕмпе çӳренĕ чухне вĕсем урамра та пĕрле чупнă, шыва та пĕрле кĕнĕ, пĕр-пĕрине çӳçрен те тăпăлтарнă... Унтан Маттĕрнене хулана нянькă пулма илсе кайнă, терĕç. Анчах халĕ, ав, епле пулса кайнă вăл — картинкă! Ытармалла мар!..

Сăмах хыççăн сăмах. Вĕсем кĕçех пĕр-пĕрине «эсир» мар, «эсĕ» теме пуçланă. Хĕлимун Маттĕрнерен вăл хулара ăçта ĕçлени çинчен ыйтсан, лешĕ ăна самаях мăн кăмăллăн:

— Пĕр наргоматра ĕçлетĕп,— тенĕ те, тĕкĕр кăларса çӳçĕсене тӳрлеткелесе илнĕ.— Лайăх пурăнатăп так-тă. Квартир каçоннăй, оттельнăй комăт... Халь вотпуска килтĕм-ха темиçе кунлăх, аннене курманни нумай пулатчĕ... А сирĕн пата эпĕ пĕр пĕчик ĕçпе кĕтĕм. Иртнĕ эрнере манне пашпăрт вăрларĕç. Çĕннине илме ялтан справкă кирлĕ, терĕç. Пĕр палланă милици пур та, çав каларĕ. Çырса паратăн пуль? Эп... чăрмавшăн ахаль тумăп, сами понимаете... Ĕçрен пушансан, кĕçĕрех хăнана пыма пултаратăн...

Вăрахчен калаçса ларнă вĕсем. Маттĕрне хăйĕн хулари пурнăçĕпе, цирксемпе зверинецсем курнипе, хăйне каччăсем питĕ кăмăлланипе мухтаннă, анчах хăй рассыльнăй кăна пулса ĕçлени тата ку хушăра виçĕ хут кавча кайса килни çинчен каламан...

Хĕлимун ăс-пуçĕ пăтрашсах кайнă: вăт, хĕр-тĕк хĕр! Эх, çакăн пек арăм пулсанччĕ! Çĕр çинче урăх ним те кирлĕ марччĕ ĕнтĕ! Анчах лекес çук çав ун пек телей...

Каçхине вăл тӳрех вĕсем патне кайнă. Хăйне ик-виç черкке лексен, Маттĕрне ăна тата илемлĕрех, пушшех те ытармалла мар пек курăнма пуçланă. Киле самаях ӳсĕр таврăнсан, вăл пĕр сăмах каламасăрах арăмне хĕнесе кăвакартса пĕтернĕ.

Тепĕр каçхине Хĕлимун Маттĕрне патне ĕçмеллисенĕ хăй чиксе кайнă. Тата ытларах çунма тытăннă унăн чĕри. Пилĕк кун пурăннă ялта Маттĕрне, пилĕк каç хăпана çӳренĕ ун патне Хĕлимун, юлашки каçĕнче вара киле те тавăнман.

Прокурор помощникĕ П. П. Яснов тĕпчесе тухнă «делора» Хĕлимунпа Чакак Мирунĕн Маттĕрни хăйсем пĕрлешесси çинчен мĕнлерех калаçса татăлнипе уçăмлăн кăтартса паракан хутсем пулман. Анчах та эпир çав ĕç çапларах пулнă пулĕ, тесе шутлатпăр.

...Юлашки каç. Ыран ĕнтĕ Маттĕрне каллех хулана тухса каять. Хĕлимунăн кĕçĕр епле пулсан та татăклă ответ илмелле: Маттĕрне унăн арăмĕ пулма килĕшет-и, çук-и? Вăл сĕтел çинчи çур литра тытса черккесене тултарать те ĕçме сĕнет:

— Юлашкине те санăн ырă сывлăхушăн...

— Спаççипă. Хăвăншăн та пултăр!

Хĕлимун черккере мĕн пуррине янках çавăрса хурать, анчах Маттĕрне кăшт çеç сыпса лартать. Вăл тăраннă ĕнтĕ, унăн пуçĕ паçăрах Кушлавăш вăрманĕ пек кашлать.

— Ну, Маттĕрне...

— Мĕн?

— Юлашки хут ыйтатăп, кала: килĕшетĕн-и?

— Мĕн пирки ыйтатăн çав эс?

— Каларăм вĕт-ха: манпа пĕрлешме! Ман арăм пулма!

— Миçе арăм кирлĕ вара сана? Пĕр арăму пур-иç, ăна ăçта чикетĕн?

— Арăм мар вăл манăн!— тăрук ӳлесе ярать Хĕлимун, кăкăрне чышса. Куçĕсем вăкăрăнни пек пулса каяççĕ.— Вĕлерсен те пурăнмастăп эп унпа, хăваласа яратăп, ак, паянах, кĕçĕрех!..

— Вара мĕн?— Маттĕрне пирус чĕртсе ярать те, пĕр урине теприн çине хурса сулкалама тытăнать.— Мана хăвăнпа пĕрле ялта усрас тетĕн-и? Колхозра сыснасем пăхса пурăнмалла пулать-и манăн? Ха-ха-ха!— ахăрса ярать вăл. Унтан, тĕтĕмпе чыхăнса, пӳрнипе юнаса илет:— Çук, ачамккă, халь тин эс мана яла илсе килейместĕн, такой дело ĕç тухмасть! Эп хуларан пăрахса килес пулсан, юлташсем те питрен сурса пĕтерĕç мана... Пирĕн унта шутсăр лайăх кампани вĕт, пĕр хĕрĕнчен тепри чаплăрах. Каççерен пурте пĕрешкел тумланса тухатпăр та çав, пĕтĕм урам

тĕлĕнсе пăхать пирĕн çине. Кай, ĕмĕрне те пăрахас çук эпĕ вăл опчествăна!

— Хам та хулана пырасшăн эпĕ!— йынăшсах илет Хĕлимун.— Эсĕ мана качча пыма килĕшес пулсан — тем те тума хатĕр эпĕ! Кунти кил-çурта сутатăп та хулара пӳрт лартатăп...

— Аннӳне те илсе пыратăн-и? А эпĕ терпеть не могу карчăксене, ялан вĕсем лăрканине итлесе пурăн...

— Анне... Вăл мунчара та пурăнма пултарать, мунчине сутмастăп. Ну? Çапла килĕшетĕн-и? Кала ĕнтĕ, ан çунтар ман ăш-чике! Эхх!..

Маттĕрне ун çине куçĕсене хĕссе пăхса ларать-ларать те, сасартăк сиксе тăрса, ăна мăйĕнчен ыталаса илет.

Ирхине Маттĕрне тухса кайнă...

Паллах, кун хыççăн Хĕлимун пĕр ун çинчен кăна шухăшласа пурăннă. Канцеляринче нимĕн те туман, ĕçпе пыракансем çине çаврăнса та пăхман, чĕнсен, кăшкăрса тăкнă, хăй тек савнийĕ патне çырусем çырнă, теççĕ. Çынсем пăхнă-пăхнă та, пĕррех кирлĕ çĕре жалобă çырса панă ун çинчен:

— Кирлĕ мар пире кун пек секретарь! Лайăххине, тивĕçлине тупатпăр!..

Унтан, виçĕ кун та иртмен — Хĕлимуна ял Советĕнчен кăптăр-каптăр хӳтерсе кăларса янă. Анчах... Хĕлимун куншăн пĕртте кӳренмен, çук! Тĕп-тĕрĕс сведенисем тăрăх, вăл тепĕр темиçе кунтанах килти пĕр улт-çичĕ пăт туртакан сыснана пустарса, шăматкун пасара кайса сутнă та — киле таврăнман, тӳрех Шупашкара вĕçтернĕ...

Маттĕрне патне вăл каç пуласпа пырса çитнĕ. Унăн пӳлĕмĕнче, сĕтел тавра, темле çынсем хăна пулса ларнă. Темшĕн, вĕсем Хĕлимун çине питĕ сиввĕн пăхнă...

«Мĕнле этем эсĕ, кам шуйттанĕ сĕтĕрсе килчĕ сана кунта?» тенĕ пекех пулнă вăл.

— Шăллăм ку манăн, тăван шăллăм, паллашăр!— тенĕ Маттĕрне, пĕçернĕ рак пек хĕрелсе кайса. Çакăн хыççăн вара Хĕлимун çине пурте кăмăллăнах пăхма тытăннă. Ăна сĕтел хушшине лартса «штрафной» ярса панă... Хĕрме пуçласан, Хĕлимун хăй те — ялтан килнĕ çын пулсан та — ытти хăнасенчен кая маррине кăтартас шутпа кĕсйинчен çĕр тенкĕлĕх хут кăларса сĕтел çине хунă:

— Илсе килĕр ман ятпа! Халь эпĕ хăна тăватăп!..

Паллах ĕнтĕ, кун пек туни лешсем умĕнче унăн авторитетне калама çук ӳстерсе янă... Унтан хавасланса кайнă хăнасем Хĕлимуна çав тери мухтама тытăннă, ыталанă, çурăмĕнчен лăпканă, тахăшĕ чуп тунă...

— Маттур качча иккен эсĕ!

— Сан пеккисене эпир питĕ хисеплетпĕр!

— Юл хулара! Çын тăватпăр эпир санран! Любой ĕç, любой вырăн тупса паратпăр — суйла! Эпир вĕт... Пирĕн вĕт...

Каярахпа мĕн пулнине Хĕлимун астуман. Ирхине вăл кровать айĕнче вăраннă. Пуçĕ такам тукмакпа çапса тăнă пек ыратнă, хăй ăçта пулнине те тăруках тавçăрса илеймен. Кăштах тăна кĕрсен, тӳрех кăкăрĕ çинчи кĕсйине çавăрса тытнă та:

— Укçа!..— тесе йынăшса янă.

Кĕсйинче пĕр пус та пулман. Вăл тăрук ухмаха ернĕ пек сиксе тăрса, кровать çинче саркаланса çывăракан Маттĕрнене хул пуççинчен силлесе вăратнă:

— Укçа! Укçа çухалнă манăн! Икĕ пин ытла! Пĕтрĕм эпĕ! Халех çакăнатăп...

Маттĕрне куçĕсене кахаллăн уçса тутлăн карăнса илнĕ:

— Çакăнма тăхта, санăн укçу ниçта та çухалман, пĕтĕмпех ман çумра,— тенĕ.— Енер пурне те валеçсе пама тытăнтăн та, туртса илмелле пулчĕ. И вопше укçа яланах ман алăра пулмалла — хулара йăли çапла...

Хĕлимун лăпланнă. Маттĕрне питлĕх хыçĕнчен ĕнерхи эрех юлашкине кăларса пуçне тӳрлеттерсен, кăмăлĕ пĕтĕмпех юсанса çитнĕ унăн. Унтан Маттĕрне тумланнă, сăрланнă та, Хĕлимуна мăйĕнчен ыталаса илсе, унăн куçĕнчен йытăлла пăхса:

— Атя-ха, магазинсем тăрăх çӳрер, иксĕмĕр пĕрлешнĕ ятпа илсе пар мана пĕр-пĕр потаркă — хулара йăли çапла, юратакан çынсем хĕрарăмсене яланах парнесем параççĕ,— тенĕ.

Хĕлимун хирĕçмен...

Икĕ пин тенкĕ — сахал укçах мар ĕнтĕ, анчах вăл та пĕтме пултарать çав. Шыв пек япала вĕт вăл, укçа тени, юхать. Хĕлимунăн та пĕр уйăх-уйăх çурă хушшинче сысна укçи пĕтĕмпех юхса тухнă. Вара çине тăрсах ĕç шырамалла пулнă. Çиес-ĕçес пулать-çке-ха, Маттĕрнен 150 тенкипе иккĕн ăçтан пурăнатăн?

Ĕçне тупма хайхи Маттĕрне хăнисем пулăшнă: хула тăрăх краççын сутса çӳрекен туса хунă ăна. Ĕçĕ йывăрах пулман ку: Хĕлимун ирхине потребсоюз лашине кӳлсе тухнă та, базăна кайса, тимĕр пичкене пăкă шăтăкĕпе тан тултарнă, унтан вара урамсем тăрăх кăшкăрса тухнă:

— Краççы-ын! Кама краççын? Первăй со-орт!..

Анчах та ку ĕç ăна часах йăлăхтарса çитернĕ. Тупăшĕ сахал пулнă — хулари майрасене краççын сутнă чух 10—15 пусшар каялла тавăрса паманнипе нумаях пуяймăн! Çитменнине, теприсем уншăн та ятлаçнă, жалобă çырса парассипе хăратнă. Маттĕрни час-часах кăмăлсăр пулса тутисене мăкăртса хунă:

— Фу, шăрш перет санран... Юнашар выртма та восмошнăç çук!

— Мĕн тăвас-ха манăн, таварĕ çавăн йышши те...— гӳрре тухма тăрăшнă Хĕлимун.

— Мана мĕн ĕç? Туп тасарах ĕç!

— Таçта-ха вăл...

— Нимĕн те пултараймастăн çав эсĕ! Мужик тăкмужик!— куçĕсене çилĕпе çутăлтарса илнĕ Маттĕрне.— Каллех хамăн тăрăшас пулать ĕнтĕ саншăн!

Тепрер уйăхран Хĕлимун пасарта ăна-кăна сутма пынă колхозниксенчен вырăн укçи пухса çӳрекенни пулса тăнă. Ку ĕнтĕ малтанхинчен нумай лайăхрах пулнă: нимĕн те сутмастăн, вараланмастăн, квитанци татса паратăн та — укçа шăйăрса илетĕн... Япăх-им?

Çапах та Маттĕрне кăмăлĕ тулман...

— Этем мар иккен эсĕ — юман юпа! Çулламан пăру! Пĕлтĕрсем сан выränта манăн пĕр снакоми ĕçлетчĕ те, кулленех хăйне пĕр утмăл-çитмĕл тенкĕ хăваратчĕ. Мĕнле майпа, тетĕн-и? Ирхине татса панă квитанцисене каçалапа каялла пухса илетчĕ те, тепĕр кунне каллех çавсене тыттаратчĕ. Ялтан килнĕ çын мĕн чухлать вăл? Уншăн — тӳлени пултăр! Сана кам чарать çавăн пек тума?

Хĕлимун вăл вĕрентнĕ пек тума тытăннă. Анчах выçă куçлă Маттĕрне çаплах ăна хăйрама чарăнман-ха. Халĕ вăл Хĕлимуна ялти кил-çурчĕ пирки час та часах аса илтерме тытăннă:

— Калаçса татăлнине мантăн-им? Кунта пӳрт лартатăп, терĕн-иç? Ма кайса сутмастăн тата кил-çуртна? Е каллех çав усал арăму патне таврăнас шуту пур-и? Апла пулсан, паянах тасал ман патăмран! Хама валли эп урăххине те наччасах тупатăп!

Куна хирĕç Хĕлимун мăшлатнă кăна:

— Тăхта-ха кăштах... Ăçтан пурне те тăруках?..

— Çурт лартсан, улпутсем пек пулатпăр вĕт!— хистенĕ Маттĕрне.— Хваттирантсем ярсах пурăнма пулать ку чухне! Ĕçлеме те кирлĕ мар вара!

Унпа килĕшсе, Хĕлимун вăкăр пек мĕкĕрнĕ кăна.

— Юрать, ара, юрать, кайса сутатăп!

Анчах вĕсен ĕмĕчĕ сасартăк татăлнă...

Пĕр ирхине, хăйсем выран çинчен тăричченех, вĕсем патне Хĕлимунсен ялĕнчи Çарăк Илли тенĕ çын пырса кĕнĕ.

— Аннӳ çыру парса ячĕ сан валли,— тенĕ çав çын, шăлавар кĕсйинчен лутăрканса пĕтнĕ хут татки кăларса.— Питĕ тунсăхласа çитнĕ пулмалла саншăн: виç кун шыра та — пурĕ пĕр тупса пар, тесе ячĕ...

Хăйсен ял çыннине курсан, çитменнине тата вăл тӳрех амăшĕ çинчен асăнсан, Хĕлимун кăвак тăпра тĕслĕ пулса кайнă, сив чир тытнă пек, пĕтĕм кĕлеткипе чĕтреме тытăннă. Ара, сиснĕ ĕнтĕ вăл ырă пулас çуккине! Çапах та, хăй пăлханнине палăртасшăн мар пулса, вăл:

— Ну... мĕнле пурăнаççĕ вĕсем унта?— тесе ыйтнă.— Выçса вилмерĕç-и-ха мансăр?

— Э-эй, мĕн вилмелли! Питĕ лайăх пурăнаççĕ!— тенĕ колхозник хавассăн.— Хальхи вăхăтра сан аннӳ пек тăрăшакан çын выçă ларать-и вара? Ĕçлет вĕт кунĕн-çĕрĕн, тепĕр çамрăкран та ирттерет! Арăму та унран юлмасть, иртнĕ правленире ăна чăх-чĕп фермине шанса пачĕç-ха, хĕле кĕрсен çав ĕçе вĕренме курса ярас, терĕç...

Хĕлимун пикенсех тумланма тытăннă, анчах ниепле те ĕç тухман унăн: малтан шăлаварне каялла тăхăннă, унтан сылтăм урине сулахай атти ăшне чиксе лартнă. Çав хушăра, утиял айĕнчен тухмасăрах, амăшĕн çырăвне Маттĕрне тытса вулама пуçланă. Питĕ хаяр пулнă вăл çыру...

«Хлимкка! Ку çырăва эпĕ сана пĕтĕм чун-чĕререн ылханнине пĕлтерес шутпа çеç çыратăп. Йытă эсĕ, шулĕк, мăн çул çинчи хурах, ман ывăл мар! Кам пур сан пек тăван амăшне çаратаканни? Ĕмĕрне те каçармастăп сана куншăн! Сысна вăрласа кайнипе пуятăп терĕн-и? Çук, ачам, ун укçине эп санран судпах шыраса илетĕп, мĕншĕн тесен вăл сыснана эс пăхса ӳстермен, эс ăна пĕр паранкă та пăрахса паман!

Тата эсĕ ялти кил-çурта сутасси çинчен лĕпĕртететĕн, тенĕ сас пур. Ан та шухăшла! Эсĕ ку кил-çурта пĕр

турпас та илсе кӗмен, вӑл пӗтӗмпех манӑн. Акӑ арӑму часах ача çуратса парать те, пӗтӗмпех ун çине çыртаратӑп, сана пӗр тутӑхнӑ пӑта та лекмест, пӗлсех тӑр!

Ку çеç те мар. Ачу çуралсан тепӗр куннех санран алимент шыратпӑр. Çакна та кӗтсех тӑр!

Пире ан асӑн, кил çинчен ан шухӑшла, мӗнле пӗлетӗн — çапла пурӑн. Эпир нихçан та аптрас çук хуть, пур лайӑх çынсем те пирӗн майлӑ. Хӑçан та пулин хӑвах килсе пуç çапӑн та-ха пире, анчах эпир ун чух сан çине апчху! тӑватпӑр çеç,

Санпа манӑн урӑх пӗр сӑмах та çук, пулма та пултараймасть!»

...Маттӗрне çырӑва çӑтӑр-çатӑр лутӑркана та, Хӗлимуна питӗнчен персе панӑ:

— Ме, çи! Пит лайӑх пуйтарать сана анӳ!

Ну ӗнтӗ, çакӑн хыççӑн Хӗлимун пурнӑçӗ мӗнлерех пулса кайнине хӑвӑрӑнах чухласа илмелле сирӗн. Çивӗч шӑллӑ Маттӗрне пӗр çутӑ кун та кӑтартман вара ӑна. Юлашкинчен Хӗлимун ун патӗнчен тухса тарасси патнех çитнӗ, анчах çав вӑхӑтра вӑрçӑ пуçланнӑ...

Çарта нихçан та пулса курманскере, Хӗлимуна унта питӗ йывӑр килнӗ. Чӑннипех калас пулать: запаснӑй полкра ун пек сӳтӗк салтак та пулман çав. Пичӗ-куçӗ тӑр лаппа, шинелӗн хлястикӗ çук, обмоткӑсем ялан саланса каяççӗ, пӑшал пеме кайсан — пӗр пули те мишене лекмест, походсенче стройран татӑлса юлать... Командирсем шалт аптраса çитнӗ унпа. Чипер калаçса та пӑхнӑ, ятласа та илнӗ, черетсӗр нарядсем те панӑ — Хӗлимун пурӗ пӗр çавӑн пекех пулнӑ. Тӳррипе каласан, плахая пенӗ вӑл...

Унтан сасартӑк, унӑн пуçӗ çине кӗтмен телей йӑтӑнса аннӑ: пӗррехинче батальон командирӗ çак Хлимкка Маттӗрне патне çыру çырса ларнине курнӑ та, унӑн почеркӗ самаях аваннине асӑрхаса, ӑна писарь туса лартнӑ.

Чун кӗрсех кайнӑ вара Хӗлимуна! Çав тери пысӑк савӑнăç пулнӑ ку уншӑн. Халь тин ӗнтӗ походсене те каймалла мар, пӑшал пеме те çӳрес çук, нарядсем те пулмаççӗ. Епле пулсан та, ку телее шӑлпах çыртса лартас пулать, ан вӗçерӗнтӗр вӑл!

Чӑн та, хытӑ тӑрӑшнӑ вара Хӗлимун... Унччен велеселе, урисене те аран-аран сӗтӗркелесе çӳренӗ салтак пулнăскер, халӗ вӑл тӑруках çивӗчленсе кайнӑ, вӑрт та варт!

çаврăнкаланă, хушнă ĕçсене çийĕнчех, тĕп-тĕрĕс туса пынă, начальствăна юрасшăн шыва сикме те хатĕр пулнă. Ротăсем пĕрин хыççăн тепри фронта ăсаннă, вĕсем вырăнне çĕннисем пухăннă, вĕреннĕ те каллех вăрçа кайнă, Хĕлимун çав-çавах писарьте ларнă. Шав çырнă вăл, шав çырнă...

Виçĕ уйăх, çур çул, çулталăк...

Фронт хĕвеланăçнелле куçса пынă май запаснăй полк та ун хыççăн шунă, анчах Хĕлимун пурнăçĕ улшăнман. Улшăнма мар — лайăхланса пынă, темелле: темлерен ăна интенданствăна куçарнă та, вăл ятарласа чĕртме хупнă сысна пекех самăрăлса кайнă...

...Вăрçă пĕтесси те инçе юлман, çапăçусем тăшман çĕрĕ çинче пынă. Анчах Хĕлимун çав сехете кĕтсе илеймен çав, аманнă вăл, мĕскĕн! Ак çапла аманнă: чĕрĕ пулă çиес килнипе пĕр юхан шыв хĕррине пырса, ĕмĕрĕнче пĕрремĕш хут гранатă пеме тăнă вăл, анчах ĕретлĕ ывăтайман та, пĕр осколки хăйнех пырса тивнĕ. Сылтăм аллинчи виç пӳрнине çĕçĕпе касса татнă пекех татса кайнă, мур илесшĕ. Ай, çухăрнă вара, ай, ӳленĕ Хĕлимун!..

— Виле-еп! Вилтĕ-ĕм! Çăлă-ăр!..

Суранĕ ытла хытă ыратнипе те мар, çав тери хăраса ӳкнипе çухăрнă вăл. Шуткă-им? Виçĕ пӳрне татăлнă вĕт, тата юн та тухнă!

...Госпитальре пĕр уйăх пек выртсан, вăл киле таврăннă. Самаях пуян пулнă, тет, хăй.

Малашнехи пурнăç пирки Хĕлимун госпитальрех тĕплĕн шухăшласа план тунă.

— Паллах, ĕçе кĕме васкамастăп. Ухмахах мар-ха. Ĕçлеччĕр, камăн питех ĕçлес килет. Манăн пенси пулать. Ку пĕрре. Вăрçă инваличĕ пулнипе, мана пур енчен те çăмăллăх, пулăшу пама тивĕç. Ку иккĕ... Маттĕрне хăйне валли урăххине тупнă пулĕ-ха, ахальтен мар чылайранпа çырмарĕ, çавăнпа та çĕннине шырамалла пулать... Тухăçлăраххине... Пĕр-пĕр столовăй заведующине е буфетчицăна... Хĕрарăм тупасси — пысăк ыйтăвах мар-ха хальхи вăхăтра. Мана халь вĕсенчен любойĕ мăйран уртăнать! Ялти кил-çурта сутма анне виличчен тăхтамаллах пулать витнă, эсрелĕ, ним тума та çук. Ытла нумаях пурăнмасть пулĕ те-ха...

Çитет хайхискер тăван хулана. Виçĕ чемоданне багаж упракан камерăна парать, тăваттăмĕшне, çăмăлтараххине,

хăйпе пĕрле илет те, Маттĕрне хваттерĕн алăкĕнчен пырса шаккать. Анчах та ăна хирĕç... хăйĕн савнă Маттĕрнийĕ мар, пĕр пĕчĕкçеç хура карчăк тухса тăрать.

— Кам кирлĕ?

— Матрёна Миронна...

— Çук вăл. Тахçанах тĕрмере ларать.

— Тĕрмере? Мĕншĕн?— тĕлĕнсех каять Хĕлимун.

— Спекуляци тунăшăн.

Тĕмиçе кун вăл хăйне хăй ниçта чикме пĕлмесĕр çӳренĕ. Урамсем тăрăх ним тĕлсĕр утнă, пасара кайса пăхнă, буфетсене кĕркелесе курнă. Юрать-ха, укçи пулнă та...

Чылай хушă ахалех çапкаланса çӳренĕ çапла. Унтан çапах та службă çинчен шухăшлама пуçланă. Тупăшлăрах вырăн шыраса пĕр çĕре, тепĕр çĕре çитнĕ, пуçлăхсем патне кĕрсен тӳрех:

— Эпĕ — вăрçă инваличĕ, парăр мана лайăх ĕç!— тенĕ.

Вырăнĕсем нумай пулнă, анчах Хĕлимун кăмăлне каймаллисем тупăнман. Хăш çĕрте управделами пулма сĕннĕ, хăш çĕрте — пĕр-пĕр коммунальнăй çурт комендантчĕ пул, тенĕ, тем те... Пĕр пуçлăхĕ тата харăсах икĕ ĕç сĕннĕ: е возчик, е каçхи хуралçă... Ну, Хĕлимун питĕ тарăхса кайнă вара куншăн, апайтурух!..

— Как смеешь мăшкăллама?!— кăшкăрса пăрахнă вăл çав пуçлăха.— Эпĕ фронтра юн тăкнă çын!.. (Тĕрĕссипе, унăн: «эпĕ фронтра пулă тытнă çын», темелле пулнă та ĕнтĕ...) За родину çапăçнă, а эс мана сторож тăвасшăн! Не позволю!..

— Ара, санăн нименле специальноç та çук-çке!— тенĕ лешĕ.

— Çук пулин! Мĕне кирлĕ мана специальноç? Эпĕ вĕт...

— А мĕн эсĕ?

Хĕлимун ответ парайман.

Такки тупайман вара вăл тупăшлă вырăн. Юлашкинчен сурнă та — аллине сулнă:

— А-а, çăва патне! Ĕçлеместĕп луччă! Хваттер илетĕп те — ахалех пурăнатăп!

Анчах хваттерĕ те ытла тăруках лекмен. Жилуправлението пĕр вунă хут та кайса кисретнĕ вăл:

— Эп инвалид! Мана хваттер живо-два памалла сирĕн! За что кров проливали?!

— Черет,— тенĕ ăна.— Инвалидсен те хăйсен черечĕ пур: кĕтĕр.

Хĕлимун пурнăçĕ кансĕрленсех çитме пуçланă. Гостиницăра куллен укçа тӳлемелле, апат-çимĕçне хатĕрлесе паракан çук, çăкрине те, пурне те карточкăсем тăрăх, черет тăрса илмелле...

— Яла каймалла мар-ши пĕреххут,— шухăшлакалама пуçланă çак.— Инвалидсене колхозсем те пулăшаççĕ вĕтха... Пыратăп та — çăнăх, аш-какай, çу сăптăрса илетĕп... Утар та пурччĕ пулас-ха вĕсен, тен, пыл та илме пулать... Пурăнатăп вара пĕр хушă!

Пит илĕртӳллĕ шухăш пулнă та çав ку, анчах ăна часах пăрахма тӳр килнĕ. Пĕрре, кĕр енне, пасарта пахча çимĕçĕсен речĕпе пынă чух вăл кĕтмен çĕртенех хăйне такам ятпа чĕннине илтет. Çавăнтах унталла, кунталла пăхать те, хăйсен ялĕсене, хайхи вăрçă умĕн Маттĕрне хваттерне амăшĕн çыруне пырса панă Çарăк Иллине курах каять. Ал параççĕ вĕсем, калаçма тытăнаççĕ...

— Ма пĕрре те киле пырса курмастăн?— ыйтать Çарăк.

— Пырасшăн-ха çак кунсенче,— тет Хĕлимун.— Мĕнлерех пурăнатăр эсир унта?

— Начарах мар, спаççипă! Акă, колхоз кишĕрне сутма килтĕмĕр-ха... Ме, çисе кур! Хăвăн аннӳ çитĕнтернĕскер... Пахча бригадирĕ вăл пирĕн. Шутсăр нумай пулчĕ кăçал пахча çимĕç! Çисе те, сутса та пĕтерес çук! Пăхасса та аван пăхрĕç те ĕнтĕ...— пĕр чарăнмасăр калама тытăнать Илле.— Арăму — тен илтнĕ пуль?— иккĕмĕш çул ĕнтĕ председательте çӳрет; чиперех ĕçлет-ха, çынсем те мухтаççĕ... Ывăлу та пысăкланса кайрĕ ĕнтĕ — пиллĕке пусрĕ пулмалла. Шутсăр маттур, каснă-лартнă эсĕ! Пырса курасах пулать ăна пĕрре, Хĕлимун Аристарччă... Атту... хе-хе... ашшĕ те пур, анчах тăлăх пек ӳсет... Темле, килĕшмест вĕт ун пек, э?

Хĕлимунăн кишĕр çыртăкĕ сасартăк пырне ланкса ларнă. Вăл чыхăнса кайнă, ӳсĕрсе илнĕ, унтан мăк-мак! тукаланă та аяккалла пăрăнса утнă.

— Униç председатель... Анне — бригадир...— мăкăртатнă вăл, урам тăрăх ним тĕлсĕр утса.— Çук, çук... Вĕсем мана пулăшас çук... Кунтах майлашас пулать! Шыракан тупать, теççĕ.

Мĕн тетĕр-ха эсир? Майлашнă вĕт Хĕлимун! Пĕррехинче кинона кайнă та, пĕр хĕрарăмпа паллашнă. Выраннĕсем юнашар пулнă вĕсен. Сеанс пуçланиччченех сăмах хушса илнĕ те унтан киле кайма та пĕрле тухнă. Сăмах çине

сăмах... Сисмен те, хĕрарăм пурăнакан çурт умне çитсе те тăнă. Пĕр «хупă столовăй» пуçлăхĕ пулнă лешĕ. Пĕччен çын. Упăшки вăрçăнченех вилнĕ. Питĕ кăмăллă, йĕркеллĕ калаçать... Çамрăках мар та ĕнтĕ, çапах илемне çухатманха, аптрамасть.

Хĕлимунĕ хăй те лешне ытла пит нĕрсĕр пекех туйăнман курăнать.

— Тепĕр чух кĕрсе тухăр чей ĕçме...— тенĕ хĕрарăм, чылай калаçса тăнă хыççăн.— Эп, ав, çавăнта, иккĕмĕш хутра пурăнатăп...

Çав каç вара Хĕлимун çĕрĕпех çывăрман. Нихçанхи пек те мар хытă шухăшланă вăл, темиçе хутчен тăрса ларса чĕлĕм туртнă, калле-малле уткаласа çӳренĕ, çамкине сăтăркаланă. Вăл хăйĕн чăн-чăн телейĕ тупăннине туйнă... Пĕччен çын, хваттерлĕ, ун аллинче темĕн чухлĕ апат-çимĕç... Çук, куна вĕçертме юрамастех, куна вĕçертсен сĕмухмах пулатăп эпĕ!— тенĕ Хĕлимун.

Вăхăта вăраха ямасăрах, тепĕр каçхинех çав хĕрарăм патне пырса кĕнĕ:

— Каçарăр, пĕччен питĕ кичем те, килсе ларас. терĕм...

Тата çывăхрах паллашнă вĕсем. Ненила Петровна та, унăн хваттерĕ те, унăн тутлă шур куклисем те çав тери кăмăла кайнă ăна. Вара Хĕлимун чĕри темиçе çул каялла Маттĕрне пирки çуннă пекех çунма тытăннă.

— Сансăр пĕр кун та пурăнма пултараймастăп! Хĕрхен тăлăх çынна! Атту кĕçĕрех Атăла кайса сикетĕп, манăн характерĕ çавăн пек!— тенĕ вăл тепĕр ик кунтан, Ненила Петровна умне чĕркуçленсе.

Лешин ăна Атăла сиктересси килмен пулмалла...

Э-эй, пурнăç пуçланнă вара Хĕлимунăн! Хваттерĕ ăшă та çутă, минтерĕсем — мамăк, пашт! анчах кĕрсе выртатăн, куллен — çич-сакăр тĕслĕ апат, пĕринчен тепри тутлăрах, тата веçех ахаль, пĕр пуссăр... Ненила упăшкинчен темиçе костюм — бостон та коверкот!— юлнă, пурте ятарласах Хĕлимун валли сĕленĕ пек... Рай!

Ытахальтен, Ненила Петровна ăна столовăй штатне кĕртнĕ, кладовщик тунă. Анчах ĕç-им вăл? Шӳт кăна пулнă! Повăра кунне пĕрре продуктăсем пар та, кайран хуть те кун каçипех маччана сурса вырт!

Икĕ çул ытла ыр курнă Хĕлимун. Çынсем тертленнĕ, ĕç хыççăн черетсенче тăнă, анчах ку тек самăрланнă... Çумра ялан укçа пулнипе час-часах буфетсене çӳренĕ, пу-

ринчен ытларах — пуклак сăмсаллă пĕр Малашкă сут тунă çĕре. Лешин кулли ытла та пит килĕшнĕ ăна.

— Кăлтăр-кăлтăр-кăлтăр... И-ии-ха-ха-ха! — каççах кайнă вăл, хăйне айăкĕнчен пӳрнепе тĕртсе илсен.

...Çĕршыври пурнăç юсанса лайăхлансах пынă. Вăрçă хыççăн карточкăсем те пĕтнĕ, лавккасенче те, пасарта та апат-çимĕç çителĕклех пулма пуçланă. «Хупă столовăйсене» хупма пуçланă. Ненила Петровнăн столовăйне те пĕтерсе лартнă...

Хĕлимун пуçĕнче вара çĕнĕ плансем çуралнă. Вăл каçкаç киле час таврăнми пулнă, Ненилăна ним выраннине те хуми пулса пынă...

— Сăрă хурт эсĕ, наян!— кăшкăрнă Ненила.— Эп сана икĕ çул кӳптерсе усрарăм, а эсĕ çакăн пек хăтланатăн-и халь?

Хĕлимун ку сăмахсене хăлхана та чикмен. Ненила ытлах вăрçма пуçласан, унăн куçĕсене те кăвакарткаланă. Тарăхса çитнĕ Ненила пĕррехинче вара милиции чĕнсе пынă та чыша-чышах хăваласа янă ăна.

Анчах Хĕлимун çакна кĕтсех пурăннă, тес пулать: «Эп кайман, хăй пурăнасшăн пулмарĕ!» Çав каçах вăл Малашкă патне кайса вырнаçнă. Кайран, Ненилине «тавăрас» шутпа, ăна судсем тăрăх сĕтĕрсе тăнне янă. Тем те шыранă вăл унран: тахçан юрăхсăра тухнипе кăларса пенĕ салтак аттине те, çĕтĕлсе пĕтнĕ аялти кĕпи-йĕмне те, шăл тасатмалли щеткăсене те...

— Çаратса юлчĕ мана!— тенĕ вăл.— Не позволю инвалидран мăшкăллама!..

Тăватă хут пулнă çав суд, Хĕлимун килĕшменнипе ĕç пĕр участокран тепĕр участока куçнă, юлашкинчен ăна вăл аслă суда та çитернĕ. Паллах, Хĕлимуна нимĕн те шыраса паман, судьи — чăнах та вăрçă инваличĕ пулнăскер — ăна хăйнех хăтăрса, намăслантарса пĕтернĕ, анчах та намăслантарни — мĕн вăл? Намăс — тĕтĕм мар, куçа çимест, теççĕ вырăссем... Хĕлимун хăнк та туман!

Каллех питĕ лайăх пурăннă вăл. Ĕçе ниçта та кĕмен, Малашкăна пулăшнă çеç — сăрана кăпăклăрах туса сутма, ӳсĕрсене «сдачи» панă чух улталама, виçерен иртме пуçланисене урамалла тĕртсе (тепĕр чух сĕтĕрсе те) кăларса ывăтма...

Анчах сасартăк инкек пулнă: вар-хырăмĕ ыратнипе аптраса ӳкнĕ вăл.

— Язвă санăн, операци тумалла,— тенĕ тухтăрсем.

Вилес пекех хăраса ӳкнĕ Хĕлимун, анчах ним тума та май килмен, кастармаллах пулнă... Самаях выртнă вара больницăра. Малтанхи вăхăтра ун патне Малашкă пырапыра кайнă, анчах унтан, темшĕн, сасартăк пачах çӳреме пăрахнă. Санитаркăсем урлă çырусем те ярса пăхнă ун патне Хĕлимун — ответ пулман.

— Мĕн шуйттанĕ пулчĕ куна?— тĕлĕннĕ вăл.— Юратнă пекехчĕ-çке, чиперех пурăнаттăмăр! Мĕнле-ха вара тӳрех манчĕ пулать? Ну, тăхта, тыткалатăп-ха эп сана куншăн, пуклак сăмса, сывалса тухам кăна!

Хулара, унăн тусĕсем хушшинче, çав вăхăтра питĕ кулăшла хыпар сарăлнă-мĕн:

— Фăлимон Аристарччă арăмĕн упăшки тавраннă. Вăт-тăк номер! Ха-ха-ха!..

Хĕлимунĕ хăй кун çинчен сывалса тухсан тин пĕлнĕ. Больницăран вăл тӳрех Малашкă хваттерне кайнă, унта хуçа пекех пырса кĕнĕ, анчах кĕрсессĕнех диван çинче хăйĕнчен пĕр-икĕ хут тĕреклĕрех, пĕтĕм кăкрине, хулĕсене темиçе пуçлă çĕленсемпе, чĕрене чиксе шăтарнă кинжалсемпе эрешлесе пĕтернĕ çын пирус пашлаттарса выртнине курнă. Çан-çурăмĕ сăр-сăр-р... туса кайнă Хĕлимунăн.

— Мĕн кирлĕ сана?— çĕтсе ларнă сасăпа ыйтнă çав çын сиввĕн.— Кам патне килтĕн?

— М-малашкă...— тенĕ Хĕлимун, хăйĕн ал-урисем чĕтреме пуçланине туйса.

— Кам вара эс? — Çын тăрса ларнă.

— М-м... ун упăшки эпĕ... Вăл — ман арăм...

— Ак çакна куратăн-и? Мĕнлерех пек?— Çын хăйĕн темĕн пысăкăш чышкине чăмăртаса Хĕлимун сăмси патнелле илсе пынă.— Çак самантрах катлет пулса выртас килмест пулсан, тухса сирпĕн тавай. Шӳт тума юратмастăп эпĕ. И малашне кунта килсе кĕме мар — çак çурт тĕлĕпе те иртсе ан çӳре! Понял?

Хĕлимун чĕлхесĕр пулса ларнă... Мĕнле тухса кайнă вăл унтан — никам та пĕлмест, хăй те астумасть ăна. Теппер эрнерен тин, нервăсем лăпланнă пек пулсан, паллана çынсенчен пĕлнĕ вăл: çав хаяр арçын Малашкăн малтанхи упăшки пулнă иккен, такама хĕненĕшĕн таçта икĕ çул хушши «юсанса» пурăннă...

— Юрать-ха, вăхăтра тухса шăвăннă эпĕ,— тесе савăннă Хĕлимун,— атту пулсан ик-виç айăк шăммисĕр юлаттăмччĕ пуль...

...Çакăн хыççăн Шуськов пурнăçĕнче çĕнĕ тапхăр пуçланнă. Йывăр тапхăр, тес пулать. Аран-аран хваттер тупкаланă вăл. Укçа-тенкĕ енчен хĕсĕкрех пулнă. Çитменнине, сывлăхĕ начарланнă. Кунтан ыратать те унтан ыратать. Тек поликлиникăна утас пулать!

— Э-эх, пĕр-пĕр тухтăра качча илесчĕ!— хытă минтер çинче выртнă чух ĕмĕтленнĕ Хĕлимун.— Вăт, пурнăç пулĕччĕ... Килтех сывататчĕ вăл мана!

Анчах та ку ĕмĕте пурнăçа кĕртме май килмен. Тухтăрĕсем питех калаçман унпа. Приема пырсан çарамаслантарса итленĕ, унтан-кунтан шаккаса, пускаласа пăхнă, рецепт çырса панă та — сыв пул!

Çапах та Хĕлимун аптраман. Вăрçă инваличĕ пулнипе, ик-виçĕ хутчен те пĕр пус тӳлемесĕрех курортсене кайса килнĕ — Сочи, Ялтă, Симеиз! Каллех вăкăр пек пулса кайнă вара, пичĕ-куçĕсем ялан услам çупа сĕрсе янă пек çутăлса тăнă.

Анчах укçа... ах, çав укçа тениех хупланă-çке Хĕлимун пурнăçне! Вăл укçа пирки хĕн курма пуçланă, мĕншĕн тесен ăна кĕтмен-туман çĕртенех пенсисĕр тăратса хăварнă. Юлашки хут комиссие чĕнтерсен, ырă пулас çуккине сиссе, Хĕлимун тем пекех чееленнĕ, комисси ларакан пӳлĕме ахлаткаласа, туя çине тайăнса, чĕрине тытса кĕнĕ, тухтăр трубкипе итлеме тăрсан сулăнса кайса ӳкмех тапратнă, анчах опытлă çынсене епле улталатăн?

— Çитĕ сана симуляци туса пурăнма,— тенĕ ăна комисси председателĕ,— ĕçлес пулать, юлташ! Кун пек сывлăхпа грузчик пулма та юрать!..

Халь çеç ура çинче аран-аран тăнă Хĕлимун çак сăмахсем хыççăн тăрук урса кайнă:

— Как так апла?! Точнă чирлĕ эпĕ, ĕçлеме никак та пултараймастăп! Хам сывлăха сирĕнтен лайăхрах пĕлетĕп ĕнтĕ! Жалобă паратăп сирĕн çинчен, Мускава çитетĕп!

Ал айне лекнĕ пукана çавăнтах шарт! çавăрса çапнă вăл... анчах пурĕ пĕрех пенсисĕр тăрса юлнă.

Тинех вара унăн пурнăç пирки çине тăосах шухăшлама тивнĕ. Выçса вилмелле мар вĕт-ха! Малтанласа вăл каллех тупăшлă арăм пирки шухăшлакаланă та — усси пулман. Ухмахсем çукрах-çке ку чухне! Хулара вăл камне те лайăхах пĕлсе çитнĕ тата...

Ирĕксĕрех хайхискерĕн службăна кĕмелле пулнă. Темле питĕ кăткăс, вун виçĕ сăмаха пĕрлештерсе тунă ятпа тăракан кантура вырнаçнă вăл. Кантурĕ мĕн тунине те лайăх-

хăн пĕлмен: темскер хатĕрлет, темскер сутать пулмалла...

— Ответлă исполнитель пулатăн,— тенĕ ăна темшĕн яланах тарлакан сăмсаллă директор.

— Мĕнле ĕç пулать вара манăн?— ыйтнă Хĕлимун, «ответ» сăмахран кăштах шикленсе.

— Мĕн хушатăп — çавна тăватăн,— ăнлантарнă пуçлăх.— Анчах асту, малтанах каласа хуратăп: сехет механизмĕ пек ĕçлес пулать. Тата ытлашши калаçма кирлĕ мар. Анлантăн-и? Тоттă çав. Лайăх ĕçлесен — хăвнах лайăх пулĕ.

Тытăннă Хĕлимун ĕçлеме.

— Хĕлле валли вутă турттармалла,— тенĕ çав кунах директор.— Анчах малтан кантура мар, ман хваттере пилĕк машин леç. Суйлама пĕл тата, çăка-ăвăс мар, юманпа хыр пултăр.

— Есть!— салтакри пек ответ панă Хĕлимун.

Ирхине директор ăна тав тунă:

— Маттур. Спаççипă. Пултаратăн.

— Паян кантур валли турттарас-и ĕнтĕ?— ыйтнă çĕнĕ ответисполнитель.

— Çук-ха, паян ман çемьене дачăна леçсе килес пулать, ăна-кăна йăткалама пулăш эс унта.

— Есть!

Тепĕр кунне кĕтмен çĕртен çумăр çума тытăннă. Ирхине ирех пуçланнă та, кастарнă та кастарнă...

— Паян вутă турттарасси пулмасть, Шуськов юлташ,— тенĕ директор,— анчах сан валли çапах та пĕр ĕç пур: ĕнер манăн арăм, васкани-мĕнĕпе, хăйĕн зонтикне манса хăварнă... Çанталăкĕ, ав, епле... Пĕтет вăл унта зонтиксĕр... Леçсе кил çавна. Çула май пĕр-икĕ карçинкка сăра кайса лартас пулать унта.

Хĕлимун каллех дачăна вĕçтернĕ... Кантур машинĕпе калле-малле сакăр вун çухрăм тăвасси йывăр-им? Усси те пур: çул çинче пассажирсем лартса ĕнер те шоферпа иккĕшĕ аллăшар тенкĕ илнĕччĕ-ха...

Çынна кăлăхах тиркес мар: Хĕлимун лайăх ĕçленĕ. Нимрен ытла, вăл пуçлăха мĕн кирлĕ пулассине малтанах пĕлни аван пулнă. Сăмахран, çырласем пиçме пуçласан варени валли инçетри колхозран йӳнĕ хакпа темиçе ещĕк çырла илсе килме сĕннĕ вăл, кĕр енне — хăяр-купăста, кăмпа... Хĕл каçа закускă сахал кирлĕ-им? Ăна малтанах хатĕрлесе хурас пулать вĕт!

Директорне хăйне кăна мар, унăн арăмне те кăмăла кайнă Хĕлимун. Пулчĕ-пулмарĕ, лешĕ:

— Филькăна калас, Филькăна хушас, вăл тупса килет!— тенĕ.

Лайăх ĕçленĕшĕн директор арăмĕ ăна малтанхи çур çул хушшинчех виçĕ хутчен преми партарнă. Хĕлимунĕ хăй те уншăн ырăпа тавăрма пĕлнĕ çав. Таçтан хулара çук йышши хура кĕлеллĕ «капрон» чăлха тупса пынă, таçтан апельсин илсе пырса çитернĕ. Директорăн кĕçĕн ачин менельникне тунă каç вара пĕтĕм хăнасене тĕлĕнтернĕ: ача валли сĕрме купăс калакан сысна тата сике-сике вĕрекен анчăк çури илсе пынă вăл...

— Ну, Филя! Ну, маттур та иккен эсĕ!— ниçта кайса кĕрейми мухтанă ăна директор арăмĕ.

Хĕлимун ирĕлсе кăна тăнă... Тата лайăхрах ăнланнă вăл: чипер пурăнас тесен начальнике çеç мар, унăн арăмне те, унăн хуняма карчăкне те, кирлĕ пулсан, çенĕкре шăмă кăшласа выртакан ула йыттине те юрама тăрăшмалла...

...Чылай хушă юраса пурăннă вара вăл çапла, пĕр-ик çула яхăнах пулас. Кантурта директор хыççăн пĕрремĕш ырăн йышăнакан çын пулса тăнă. Унта-кунта çӳренĕ чух, çывăхра пĕлекен çынсем пулмасан, пĕр хĕрелмесĕрех хăйне «директор заместителĕ», тенĕ. Канашлусем ирттернĕ чух яланах пуçлăхпа юнашар ларнă. Калаçасса хăй питех калаçман, çынсем каланине çырса пынă çеç, анчах кам та пулин директора кăшт тиркесенех чăтса тăрайман вара, тӳрех сиксе тухнă:

— Данил Данилыч çинчен кун пек калама — намăса пĕлес пулать! Данил Данилыч вун виçĕ çул ларать ку вырăнта, ун ĕçне халиччен те никам хурламан, хурлама та пултараймасть! Ылтăн руководитель вăл! Анчах хăшпĕрисем...

Тытăннă вара, тытăннă ырлама! Тепĕр чух Данил Данилыча хăйне те аван мар пулса кайнă уншăн, çапах та Хĕлимуна чарман вăл, мĕншĕн тесен унăн хĕрӳллĕ сăмахĕ хыççăн тек калакансем пулман та, канашлу чиперех вĕçленнĕ.

Ытлашши калаçма юратакансене директорпа Хĕлимун кайран пит лайăх тыткалама пĕлнĕ: пĕрине пĕр-пĕр сăлтав тупса выговор шаплаттарнă, теприне кĕçĕнрех вырăна куçарнă, виççĕмĕшне, «ĕçлеме пултараймасть», тесе, ĕçрен кăларса янă. Çавăнпа та кантурти пухусемпе канашлусем питĕ лăпкă иртнĕ...

Анчах çав «ылтăн руководитель» пирки сасартăк хаçатра шутсăр çивĕч фельетон тухнă. Данил Данилыч тĕрлĕ майсемпе хысна укçине хăй çумне нумай чикнĕ иккен, кантур шучĕпе хăй валли хаклă шифоньерсем, дивансем, комодсем тутарса тултарнă, клуб валли тесе илнĕ пианинăна та хăй патне кайса лартнă, кăçал туяннă «Победа» унăн арăмĕн «личнăй» машинĕ пулса тăнă, тем те пĕр! Хĕлимуна та аванах тивертсе илнĕ — подхалим, Данилов лакейĕ, наян, кантурти сăвăс, тесе пĕтернĕ... Фельетонне тата ахаль те мар, сăвăласах çырнă, тӳсмелле мар кулăшла ӳкерчĕксемпе илемлетнĕ!

Данил Данилыч çавăнтах чирлесе ӳкнĕ. Хĕлимун та ĕçре лараймăн,— вăл пырса кĕрсенех иртнĕ хĕлле кантурти комсомолкăсем çине тăрсах хутла вĕрентнĕ ватă техничкă Натали çав фельетона юриех сасăпа вулама тытăннă:

...Çав подхалим Хĕлимун
Нихçан нимĕн ĕçлемен!
Данилова юраса,
Ана ялан ырласа,
Шав пурăннă юрласа...

Пĕр эрне хушши пĕтĕм хула кулнă çав фельетона асăнса.

Унтан Данил Данилыча партирен кăларса суда панă, ун вырăнне çĕнĕ директор — нумай пулмасть çартан таврăннă çамрăк та кăмăллă çын пырса кĕнĕ. Чăн малтан вăл кантурта ĕçлекенсен пухуне ирттернĕ; çав пухура çынсем Хĕлимуна шутсăр хытă çунтарнă... Ирхине вара çĕнĕ директор ăна чĕнсе илнĕ те:

— Ĕçрен тухма заявлени çыр,— тенĕ.

...Каллех пурнăç çинчен шухăшламалла пулнă унăн. Запас укçа пур-ха та ĕнтĕ, пĕр çур çула çитмелле вăл, анчах кайран мĕнле? Хаçатра кун пек «чапа кăларнă» хыççăн нимĕнле начальник те хăй патне йышăнас çук... Пĕтес пулать вĕт!

Хĕлимун кĕсйинчи сехет вĕçĕмсĕр шакканă. Сехетсем, талăксем, эрнесем иртнĕ. Хĕлимун пуçĕ çинче капланса тăракан хура пĕлĕтсем çаплах сирĕлмен, пĕр пекех салху пулнă унăн сăн-пичĕ.

...Анчах та, хăвăрах пĕлетĕр, çанталăк ĕмĕр-ĕмĕр пĕрешкел тăмасть вĕт-ха, улшăнатех хăçан та пулин. Хĕлимун-шăн та улшăнма пуçланă вăл. Ерипен, ерипен, майĕпе... Пĕлĕтсем сирĕлсех пынă, унтан хĕвел те пăхма пуçланă...

Хĕвелĕ —«Çăлтăр» колхозри фермăсен пуçлăхĕ, Мари-

не ятлă çав тери илемлĕ хĕр пулнă. (Унăн илемĕ çинчен эпĕ пĕртте илĕртсе каламастăп, ăна ялта та «Чипер Марине» тесе чĕннĕ.) Çав Марине хулана пĕр уйăхлăх курса вĕренме пынă та, Хĕлимун хваттерĕн хуçисем патĕнче чарăнса тăнă,— унăн ашшĕ ку çынсемпе ĕлĕкреннех туслă пулнă-мĕн. Хĕлимун ăна пирвайхи хут курсанах ун çине куç хывнă... Юратсах пăрахнă, тесен те юрать. Хăй хĕрĕхелле сулăннă пулсан та, чĕри сивĕнмен-çке унăн!

Чăнах, хĕрĕ ытла та юратмалласкер пулнă çав. Сап-сар çӳçлĕ, сенкер куçлă, кăкрисем пысăк пан улмисем пек мăкăрăлса тăнă, ытармалла мар! Сарă хĕрсем час-часах кăшт хăюсăртарах, йăваш кăмăллăрах пулаççĕ, ют çынпа калаçнă чух куçран тӳррĕн пăхма та хăяймаççĕ, анчах та ку — çав тери çивĕч иккен, хуть чăвашла, хуть вырăсла калаçас пулсан та никама та парăнас çук, бритвăпа каснă пекех касса хурать...

— Ой,— тенĕ Хĕлимун,— ой, куна хам майлă çавăрасчĕ!

Марине килте çук чух ун çинчен хваттер хуçи арăмĕнчен ыйтса пĕлме тытăннă:

— Çак сирĕн хăна... хĕр-и, арăм-и?

— Хĕр-çке,— тенĕ лешĕ.

— Миçе çула çитнĕ вара вăл? Ытла çамрăках мар пулĕ ĕнтĕ?

— Çулĕ пур та, хĕр пуççăнах çӳрет-ха.

— А ма качча каймасть? Илекен çук-им? Тен, пĕр-пĕр сиен е йăнăш пулнă унăн?— çине тăрсах тĕпченĕ Хĕлимун.

— Эсĕ ху — йăнăш!— татса хунă ăна хваттер хуçи.— Ун патне аллă çын та хăтана пынă пуль! Хăй васкамасть. Унăн каччине вăрçă чарăнас умĕн виç кун малтан вĕлернĕ те... çавна манăймасăр пурăнчĕ вăл. Тата вăхăчĕ те çук унăн — ялан ĕçре çунать. Вĕсен колхозĕн фермисенче тĕрлĕ выльăх-чĕрлĕх пин пуçран та иртнĕ, тет те, ответ тыт-ха эс вĕсемшĕн! Çынни партейнăй... теприсем пек, ĕçе лăп-лап тăваканскер мар, тисчиплинăна хытă тытать.

Хĕлимун тутисене ват кушак пекех çулласа илнĕ те, Маринесен кил-йышĕ çинчен, вĕсем мĕнлерех пурăнни çинчен ыйтса пĕлнĕ. Пурте кăмăла кайнă ăна: Марине хальхи вăхăтра ашшĕпе амăшĕн пĕртен пĕр хĕрĕ пулин те, вĕсен пятистеннăй пӳрт, лайăх сад, тĕрлĕрен килти выльăх-чĕрлĕх, вĕллесем пурри те, ялта вĕсене пурте хисеплени те... Ашшĕ колхозра ревизи комиссин председателĕ иккен. Хисепсĕр çынна ун пек çĕре суйламаççĕ ĕнтĕ!

— Амăшĕ мĕнле тата, вĕри çĕлен пекки мар-и?— кулам пекки туса ыйтнă Хĕлимун.

— Эс, мĕн, ытла пурне те пĕлесшĕн çак?— тĕлĕннĕ хваттер хуçи.— Марине патне киле кайса кĕме шутламастăн-и?

— Çу-ук,— вăрттăн кулса илнĕ Хĕлимун.— Ман пеккине пăхать-и çавăн пек чаплă хĕр...

— Паллах, пăхмасть,— тенĕ хĕрарăм, темшĕн хаярланма пуçласа.— Пăхма та кирлĕ мар. Ват сăпса вĕт эсĕ! Хам пулсан та качча пырассăм çук сана...

Хĕлимун чĕнмен, анчах унăн пуç мими çав тери хытă ĕçлеме тытăннă. Маринене çавăрас та, унăн ашшĕ-амăшĕпе паллашас та, хама лайăхрах кăтартас та... вара... эх!

Малтан хĕрне хулана чĕннĕ пек тăвас. Паллах, вĕсем пĕртен пĕр хĕрне хăйсенчен уйăрасшăн пулас çук. Çавăнпа та: аплах пулсан, хамăр патра пурăнăр, эппин, теççĕ... Эп кăштах курнăçкалатăп та — килĕшетĕп. Ик çул, виççĕ иртет... Ну, çăва патне, пиллĕкех ирттĕр! Ваттисем вилеççĕ, вара эп сто процент хуçа пулса юлатăп!..

Çав кунах, каçхине, вăл Маринене кинона чĕннĕ. Кино хыççăн Атăл хĕрринче чылай çӳренĕ вĕсем. Тепĕр каçхине театрта пулнă, киле каллех васкамасăр таврăннă. Хĕлимун хăй юррине юрлама тытăннă: эп çавăн пек, эп кун пек... Вăтăр сакăр çулхискер, çирĕм сакăр çулхи çын пулса тăнă. Çарта питĕ пысăк чинра пулнă иккен, темиçе орден та илнĕ вăл, анчах госпитальре выртнă чух курайман çынсем вăрланă вĕсене. Ку таранччен авланма вăхăт пулман, халь авлансан та юрать ĕнтĕ, анчах хуларисемпе çыхланас килмест...

Виççĕмĕш каçхине те час киле таврăнман Хĕлимунпа Марине.

Хваттер хуçи, Киркка инке, хăрасах ӳкнĕ: ку ватă шуйттан хĕр пуçне чăнах çавăрса ан ятăр тата! Ирхине ирех Маринене пахчана чĕнсе тухнă та: «Хĕрĕм, хĕрĕ-ĕм! Эсĕ ху кампа çыхланнине пĕлетĕн-и?»— тенĕ хурлăхлă сасăпа.—«Пĕтерет вĕт вăл сана, пуçна çие-ет!..» Унтан Маринене хурлăхансем хушшинчи сак çине лартнă та Хĕлимун çинчен пĕтĕмпех, тĕпĕ-йĕрĕпех каласа панă...

— Хĕрарăм мурĕ вĕт вăл, сăвăс пек этем! Асту эсĕ. асту-у!

Марине вăл каласа пĕтеричченех ним чĕнмесĕр итлесе ларнă, унтан вара йăл-л... кулса янă.

— Тавтапуç асăрхаттарнăшăн, анчах эс мана кăлăхах

ухмах выранне хуратăн, Киркка инке! Мĕн эп, суккăр-им, хам курмастăп-им? Вун çич çулхиех мар-ха, çынсене кăштах чухлакалатăп,— тенĕ вăл.

— Эппин-тĕк ма çӳретĕн унпа?

— Интересшĕн.

— Мĕн интересĕ пултăр ун çумĕнче?

— Питĕ нумай! Çын мĕн тери икĕ питлĕ пулма пултарнине сăнатăп. Çĕлен пек авкаланать вĕт. Пуçĕнче пĕр шухăш — çăварĕнче урăх сăмах, ăш-чикки — пĕр майлă, сăнĕ — тепĕр тĕслĕ.

— Мĕн тума кирлĕ вăл сана?

— Çынсене лайăхрах чухлама. Манăн çĕр çинче нумай пурăнмалла вĕт!

Хĕлимун çак калаçу çинчен нимĕн те пĕлмен, çавăнпа та наступление вăйлатсах пынă. Марини хăй вара ун çинчен пĕтĕмпех пĕлнине пĕртте палăртман, унăн çуллă та илĕртӳллĕ сăмахĕсене ĕненме пуçланă пекех кăтартнă, çапах та хăйне кавча пыма ӳкĕтлеме тытăнсан:

— Пĕлместĕп-ха, атте-аннепе калаçса пăхас пулать, тем шутлаççĕ вĕсем...— тесе пуçне пăркаланă çеç.

— О-о, ун пирки ан пăшăрхан эсĕ! Хам пырса калаçатăп та, рас анчах çавăратпăр вĕсене!— хăлаçланнă Хĕлимун.— Эсĕ ху килĕш кăна, чунăмçăм...— Унтан вăл лĕх-лĕхлĕх кулса илнĕ:— Эпир малтан çырăнатпăр та, вĕсем вара пĕр сăмах та калаймаççĕ пире! Улталатпăр эпир вĕсене... чике тăршшĕ лартатпăр!

Çунатланса кайнă Хĕлимун хĕре ыталасшăн пулнă, анчах Маринен ăна питĕнчен çутăлтарса ярасси килнĕ...

Çакăн хыççăн пĕр-ик кунтан, курс вĕçленнĕ май, Маринe киле тухса кайнă. Ăна Хĕлимун курмасăрах юлнă. Каçхине хваттере таврăнсан, вăл сĕтел çинче пĕчĕк кăна çыру курса вуланă:

«Сыв пул, сар каччă! Маншăн тунă расхутсемшĕн 50 тенкĕ хăваратăп. Вăл сана ытти хĕрсен пуçĕсене çавăрнă чух кирлĕ пулĕ. М.»

Хĕлимун урсах кайнă... Мăшкăл вĕт ку! Çав тери пысăк мăшкăл! Ну, тăхта эп сана, хамăн арăм тăвам кăна! Курăн ун чухне...

Маринене арăм тăвасси пирки вăл пĕртте иккĕленмен. Ялти хĕр, колхозницă, ăна, тахçантанпа хулара пурăнакан Хĕлимуна, тиркет пулать?!

Хĕлимун çав каçах Марине патне тăхăр страницăллă çыру çырнă. Виç кунтан, хирĕç ответ киличчĕнех, вун пĕр

страницă кĕрлеттернĕ. Унтан вара кашни кун, кашни кун, хăш чух — кунне иккĕ! Маринене ылтăнпа та, кĕмĕлпе те, хĕвелпе те, уйăхпа та, чĕкеçпе те, сар кайăкпа та танлаштарнă, ăна юратнипе хăйĕн чĕринчен Везуви вулканĕ пек хĕм сирпĕнни çинчен каланă (ăна вăл пĕрре кинора курнă-мĕн), хăш чух тата хăй çакăнса вилессипе те хăратса илнĕ.

Ответ пулман...

Вара вăл татăклă та хăюллă утăм тума шут тытнă:

— Килне каятăп! Пур пĕрех вĕсен пурлăхне хамăн куçпа курас пулать, тен, илĕртсе калаççĕ, улталаççĕ мана? Килĕ-çурчĕ чиперех пулсан, ашшĕ-амăшĕпе калаçатăп та... Вĕсен умĕнче кутăнланаймасть вăл!

Маринесен килĕнче çав вăхăтра акă мĕн пулса иртнĕ.

Почтальон кашни кунах тĕрлĕрен-тĕрлĕ — хĕрлĕ, кăвак, сарă, сенкер конвертсем пырса пама тытăнсан, амăшĕ тĕлĕнме пуçланă та пĕррехинче хĕрĕнчен:

— Камсем çыраççĕ сан патна кун чухлех?— тесе ыйтнă.

— Курсра пĕрле вĕреннĕ хĕрсем...— куларах хуравланă Марине.

— Хирĕç ма çырмастăн тата? Çырма мар, вуламастăн та курăнать, ĕнер сĕтел сунтăхĕнче сакăр çыру куртăм, пĕрине те уçман... Аван мар-иç апла?

— Вăхăт çук-ха... Ерçсен кашни кун вуншар çырма пуçлатăп акă,— каллех кулса илнĕ хĕрĕ.

Колхозри почтальонра çӳрекен хура та чеерех куçлă Варвари Марине патне пĕрешкел почеркпа çырнă çырусем йăтса йăлăхма пуçласан, ультиматум лартнă:

— Кала луччă, кам мурĕ кашни кун уттарать мана сан патна? Атту-тăк пĕр çыру та илсе килместĕп урăх!

Ку каçалапа, ерçнĕ вăхăтра, пулнă; Марине кула-кулах Варварие хăйĕн хĕрӳллĕ корреспонденчĕ кам пулни çинчен ним пытармасăр каласа кăтартнă. Хĕрсем пӳртре хăйсем кăна, тесе шутланă та, Хĕлимун çырăвĕсен уйрăм сыпăкĕсене вула-вула каçса кайсах ахăлтатнă. Анчах пӳртре Марине ашшĕ пулнă-мĕн. Кăштах тĕлĕрсе илес тесе вăл тĕттĕм чăлана кĕрсе выртнă иккен, анчах хĕрсем тултан кĕрсе шавлăн калаçма тапратсанах вăраннă та вĕсен калаçăвне пĕтĕмпех илтнĕ...

— Вăт, йытă...— шухăшланă старик, Хĕлимун çинчен ытларах та ытларах пĕлсе выртнă май.— Вăт, прохвостă!— Пуринчен ытла, Хĕлимун ăна хăйне ултăлама шутлани тарăхтарса янă.— Вĕри çĕлен! Тĕл пулсан, кăтартăттăм эп сана пĕрре!..

Çапах та Маринене вăл нимĕн те каламан, хăй ăшĕнче ăна ырланă çеç.

...Темиçе кунтан çак Марине ашшĕн — ячĕпе каласан Савали Чаплашкинăн — тем ĕçпе Шупашкара каймалла пулнă. Каялла автобуспа таврăннă чух вăл хитре кăвак костюм, шлепке, куçлăх тăхăннă, хул хушшине пысăк сар портфель хĕстернĕ çынна питĕ сăнаса пăхнă. Малтанах çав çын кондукторпа шавласа илнĕ: вăл лармалли вырăна лайăх шăлса тасатман иккен, тата пуканĕн пружинĕ тухма пуçланă, брюкине çурма пултарать... Унтан, машинă тапранса кайсанах, вăл хăй умĕнче ларакан икĕ çамрăк хĕрпе кирлĕ-кирлĕ мара пакăлтатма тытăннă: ăçтисем, ăçта каяççĕ, Шупашкарта лайăх каччăсем курнă-и, çивĕтсенчи ку хăюсене ăçта илнĕ... Çавăнтах пĕр хĕрне ĕнсинчен кăтăкласа илме те пăхнă...

— Мĕнле ватă якăлти ку? Мĕнле йăх-ях?— унран тĕлĕнсе йĕрĕннĕ Чаплашкин.— Тăрри шăтăк пулинех... Е ытлашширех сыпнă? Пулать те вĕт йĕксĕк!

22-мĕш километр юпи тĕлĕнче автобус чарăннă.

— Мучикасси çулĕ! Камăн анса юлмалла?— кăшкăрнă кондуктор.

— Манăн!— тенĕ Марине ашшĕ.— Халех...

— Оп! Манăн та анас пулать!— сиксе тăнă хайхи тăршшипех пакăлтатнă этем те. Ну, сыв пулăр та пур пулăр!— хĕрсене шлепкипе сулса илнĕ вăл.— Шел, пит час уйрăлмалла пулчĕ!

— Эс ку енчисем-и, мучей?— ыйтнă вăл автобус çинчен аннă-анманах.— Мучикасси инçе-и кунтан?

— Инçе мар, вăрмантан тухсанах курăнать,— тенĕ Марине ашшĕ. Çав вăхăтрах хăй ăшĕнче: «Вăт тупăнчĕ тата ман телее! Тытăнать пуль-ха каллех... усал чакак пек пакăлтатма»,— тесе шухăшланă.

Вăл йăнăшман. Хĕлимун малтан вăрманти çул лапра пулнă пирки вăрçса пынă, пушмакне хĕрхеннĕ, куклене-куклене ăна курăкпа шăлса тасатнă, Европăри шоссесене мухтанă, унтан хăйне кирли çинчен ыйтма пуçланă...

— Ку енчисем пулсан, Мучикасси мĕнлерех ял иккенне пĕлетĕн пуль, эппин, эсĕ?

— Пĕлкелетĕп,— тенĕ Чаплашкин, анчах хăй шăп çав ялсем пулни çинчен шарламан.

— Ничево-и вăл ял? Пурăнма пулать-и?

— Çынсем пурăнаççĕ,— тенĕ те старик, ун çине тинкеререх пăхнă.— Санăн унта пурăнмалла пулать-им?

— Пулать те пуль çав...— ассăн сывласа илнĕ пек тунă Хĕлимун.

«Ку пирĕн пата янă çĕнĕ учитель е пĕр-пĕр выльăх тухтăрĕ пулмалла... Агрономах пулас çук, тусан-лапраран ытла пит хăрать»...— шухăшланă Савали.

— Тен, эсĕ унти çынсене те паллатăн?— каллех тĕпчеме пуçланă Хĕлимун.

— Кăштах пĕлкелетĕп...

— Сăмахран, Чаплашкин тенĕ çынна паллатăн-и?

Савали чĕри çăтăр-р... пĕçерсе кайнă. Ара... ара ку леш шуйттан, Марине патне куллен çыраканни мар пулĕ те? Тем тесен те çавă вĕт! Ахальтен ма ыйттăр вăл ман çинчен?.. Ну, юрĕ, юрĕ... Шарлар мар-ха, малалла мĕн пулĕ!

— Хăш Чаплашкинĕ кирлĕ сире? Вĕсем виççĕ те унта...

— Савали-и çав, Сантали-и...— кулса илнĕ Хĕлимун.

— А-а, Савали Çитăрччă!.. Пĕлетĕп.

— Мĕнлерех мужик вăл? Пурнăç тытма пĕлекенскерех-и?

— Чиперех пурăнать пек. Ял халăхĕ умĕнче намăсах курмасть...

— Кил-çурчĕ те чиперех-и?

— Тиркемеллех мар.

— Калăпăр, опиçь тăвас пулсан, миçе пин тăма пултарать?

— Пĕр 60—70-сем тăрать пуль...

«Эсремет! Ав, мĕне ĕмĕтленет вăл!— шăлĕсене шатăртаттарса илнĕ Чаплашкин.— Асту, сан валли хатĕрлесе хунă, кĕтсех тăр!»

Хĕлимун ăна-кăна сисмен те, малалла тĕпченĕ.

— Унăн хĕрĕ пур-и-ха çав?

— Пур...

— Чиперех-и? Ун-пек кун-пек сăмах çук-и ун çинчен? Тен, пăрахăçа тухнă япала? Çамрăках мар вĕт-ха вăл? Тен, ачи те пур? Хальхи хĕрсем çавăн пек вĕт: рас! качча тухаççĕ те рас! каялла вĕçтерсе пыраççĕ. Пурнăç çине питĕ çăмăллăн пăхаççĕ!

— Хӗрсем çинчен илтсех кайман, анчах арçынсем хушшинче чăнах та час-часах тӗл пулаççӗ ун пеккисем,— тенӗ Чаплашкин, Хӗлимун çине сиввӗн пăхса.

— Тавлашмастăп, арçынсем хушшинче те подлецăсем пур!— килӗшнӗ Хӗлимун. Унтан татах ыйтнă:

— А унăн... ну, çав Савалин, кăмăлӗ вопше ничево-и тата? Тен, хыт кукар вăл? Тен, пӗр çăмартана икӗ кун çиет? Ох, юратмастăп вара çавăн пеккисене!.. Э? Ун пек мар-и?

— Пӗлместӗп, хăйне курса калаç,— тенӗ Чаплашкин. Çав вăхăтрах хăй малашне мӗн тăвасси çинчен шухăшланă...

Ял патне çитсен, вăл сасартăк сулахаялла пăрăнса унче карти çуммипе утнă.

— Хăш тӗлерех пурăнать вăл Чаплашкин?— кăшкăрса ыйтнă Хӗлимун.

— Шыра, тупатăн!— ун еннелле пăхмасăрах сас панă Марине ашшӗ.

— Вăт нахал! Çынпа калаçма та пӗлмест!— тутине кăмăлсăрăн мăкăртса илнӗ те Хӗлимун, ялалла кӗрсе кайнă.

Чаплашкинсем анат кукăрта пурăнаççӗ-мӗн. Урамри ачасем ешӗл акацисем ăшӗнчи тимӗр витнӗ çӗнӗ пысăк пӳрт çине тӗллесе кăтартсан, Хӗлимун пӗр йăмра хыçне тăрса яланах хăйпе илсе çӳрекен тӗкӗрӗ çине пăхса илнӗ, галстукне, шлепкине тӳрлетнӗ, костюмне кăшт-кашт шăлкаланă та, пуçне капмар ăйăр пек каçăртса, анаталла кайнă.

Икӗ минутран вăл çав илемлӗ пӳрт умне çитсе чарăннă. Крыльца çинче... кам пулӗ тетӗр эсир?— хайхи автобус çулӗ çинчен пӗрле килнӗ старик тăра панă! Аллисемпе пилӗкӗнчен тытса, урисене кăшт сарарах пусса, темшӗн çав тери çиллессӗн пăхса тăнă вăл.

— Эс... эс кунта çитнӗ те-çке?— тенӗ Хӗлимун, ăна курнăшăн савăннă пекрех пулса.— М-м... Чаплашкин килӗ çак-и-ха?

— Çакă. Мӗн тума кирлӗ вăл сана?— сиввӗн ыйтнă Савали.

— Калаçмалли пур, ятарласа ун патне килтӗм вӗт...

— Мӗн çинчен калаçмалла?— сассине хытарнă старик.

— А вăл секрет, пурне те каласа пама пултараймастăп,— куçӗсене мăч-мăч тутарса илнӗ Хӗлимун, старик сăнӗ хаярлансах пынине курса.— Манăн Чаплашкинне хăйне курмалла!

Вăл крыльца çинелле хăпарма тăнă, анчах Савали унăн çулне пӳлнĕ те:

— Эп Чаплашкин!— тенĕ.

— Ну-ну, шӳтлеме кирлĕ мар, мучей!— татах хăпарма пикеннĕ Шуськов.— Килте-и Чаплашкин?

— Каланă сана, Чаплашкин — эпĕ вăл! Анчах сана киле кĕртместĕп, санпа калаçмастăп та!

— М-мĕнле апла?

— Çаплах! Кĕртместĕп, мĕншĕн тесен эс камне тата мĕншĕн килнине вĕтĕрех курса тăратăп!

— Эсс... Эсс... ӳсĕр пулмалла! Не имеешь право ĕçпе килнĕ çынна чăрмантарса тăма!..— хыттăнах кăшкăрнă та вара Хĕлимун, Савалие çаннинчен тытса крыльца çинчен туртса антарма пикеннĕ. Савали унран вăш кăна вĕçерĕнсе урипа шарт! тапнă:

— Кай кунтан, йĕксĕк! Атту акă...

Вăл хăмсарнă çеç, анчах Хĕлимун хăраса каялла сикнĕ те, темрен такăнса, пӳрт умĕнчи шĕвек пылчăк çине нăчлатнă. Шлепки пĕр çĕрелле, портфелĕ тепĕр çĕрелле вăркăннă, куçлăхĕ хăрах хăлхинчен çеç çакăнса юлнă.

— За што-о?— хăйне мăка çĕçĕпе пусма тытăннă пек çухăрса янă та Хĕлимун, Савали çинелле ыткăннă, анчах çав вăхăтра таçтан чупса тухнă пĕчĕк çеç йытă ăна уринчен кап! тутарнă. Ку вара ăна тата ытларах хăратса янă:

— А-аа! Йыттупа çырттаратăн-и? Ну, куншăн эп сана...— Вăл çĕрте выртакан вараланчăк патака илнĕ те, Чаплашкин çине хăмсарса чупнă. Анчах çапайман, мĕншĕн тесен Савали патакне туртса илсе çăтăр-çатăр хуçса ывăтнă.

— Ан çулăх, темрен тем пулĕ!

— Суда паратăп! Не позволю мăшкăллама!.. Мĕн турăн эс ман костюма? Икĕ пин тăрать вăл! Пӳртне сутса тӳлеттеретĕп!

— Ырăпа калатăп: ан çулăх!

Çав вăхăтра чӳречерен Марине сасси илтĕннĕ:

— Мĕн ахăрса çӳретĕн эс кунта, Шуськов? Мĕн кирлĕ сана?

Ку ытла та кĕтмен çĕртен пулнипе Хĕлимун чĕлхине çыртсах лартнă.

— Эп... эп нимĕн те ахăрмастăп,— хашт та хашт сывласа илнĕ вăл,— эп сан патна ыр кăмăлпа килтĕм, анчах çак ват шуйттан...

— Шуйттан мар вăл, ман атте! Ан хăйнă пултăр ун

пек калама!— кăшкăрнă Марине.— Кам чĕннĕ сана кунта? Мĕн шăршласа çӳретĕн?

— Каларăм-çке, сан пата... Юрататăп-çке эп сана!

— Малтанхи арăмусене юрат, кунта санăн юратăву никама та кирлĕ мар, Шуськов юлташ! Ухмахсене тупрăм, тесе те ан шутла. Пĕлетпĕр сан йышшисене!— тарăхса кайнă Марине.

Савали пӳрчĕ умĕнче шăв-шав пуçланнине илтсе, çак вăхăтра унтан та кунтан çынсем пухăнма пуçланă. Анран тухма тытăннă Хĕлимун ăна асăрхаман, вăл халь Маринепе ятлаçма тытăннă:

— Аха-а! Апла эс мана хулара улталаса пурăнтăн пулать! Во-он епле хĕр иккен эсĕ. Эп укçаллине сиссе ман çума çулăхса пурăнтăн-пурăнтăн та, халь кун пек калаçатăн-и? Хор-ро-шо-о!.. Апла пулсан, аçупа иксĕре те тыткалатăп сире. Суд умĕнче ответ тытатăр и... и...

Мăшкăлланă пекех, çав самантра хайхи пĕчĕк çеç хураçка ăна каллех уринчен пырса çыртнă...

— Ай!— тенĕ те Хĕлимун, пылчăк çине лач! ларнă.— Чорт!— Çилли килиипе вăл йытта портфелĕпе пенĕ...

Марине тӳсеймесĕр кулса янă. Курса тăракан çынсем те ахăлтатсах кулнă:

— Ай, Хураська! Пĕчĕк пуçĕпех ют çынна паллать!..

Халь çеç пырса тăнисем Савалирен васкасах ыйтнă:

— Мĕн пулчĕ? Мĕнле çын ку, ма шавлать?

— Пĕлместĕп, темлескер килчĕ те, вăйпах ман пата кĕрсе каясшăн, вăрçать те вăрçать,— тенĕ Савали.— Шалт аптрарăм...

— Документчĕсене тĕрĕслес пулать унăнне,— канаш панă пĕри.

Хĕлимун ăна илтмен. Вăл хăйĕн сапаланса выртакан япалисене пуçтаркаланă та, каллех çухăрма тытăннă:

— Каçармастăп ку мăшкăлшăн! Халь кулатăр та-ха, кайран макăрмалла пулĕ! Эпĕ камне пĕлместĕр-ха эсир! Эпĕ хам главсудра ĕçлетĕп, любойне хуптарма пултаратăп!..

— Суй, ытларах суй!— кăшкăрнă ăна хирĕç Марине.— Ниçта вырнаçаймасăр çапкаланса çӳренине пĕлетпĕр вĕт...

Хĕлимун çынсем патне чупса пынă та пĕр старике хул пуççинчен ярса тытнă:

— Эс мĕн ятлă? Кала! Сана свитетлĕ тăватăп.

— Йăван,— тенĕ старик,— анчах эпĕ эс кăшкăрнисĕр пуçне нимĕн те курмарăм-ха...

Хĕлимун çавăнтах теприне куçĕнчен тăрăннă:

— Эс тата?

— Пăван,— теннĕ ку.

Пурте каллех лах-лах-лах кулса янă...

— Кулатăр, эппин? Пурте мана хирĕç?— ниçта кайса кĕреймесĕр, тата хытăрах кăшкăрса янă Хĕлимун.— Аплатăк, пурне те айăплаттаратăп сире манран мăшкăлланăшăн! Пурин те суда каймалла пулать! Курăр акă! Эп сире... ялĕпех, пурне те! Эп вĕт...

Çав самантра халăх хушшинчен салтакла тумланнă илемлĕ те тĕреклĕ йĕкĕт тухса тăнă.

— Чим-ха, гражданин, ан çухăр! Кăтарт-ха паспортна, кам пулатăн эсĕ...

— Сана мĕн ĕç?— ун çине те кăшкăрса пăрахнă Хĕлимун.— Эс ху кам пулатăн? Мĕнле правă пур мана тĕрĕслеме? Суратăп эп сан çине!

— Эп çак ял çынни, çавăнпа та хамăр ялта ашкăнакансене кирек хăçан та чарма пултаратăп. Кăтарт паспортна!

— Кăтартмастăп!

— Апла пулсан, сана милицие ăсатмалла пулать.

— Тĕрĕс, тĕрĕс!— шавласа кайнă çынсем.— Мĕн каласса тăмалли пур унпа! Сĕтĕрĕнчĕк пулмалла вăл! Кам пĕлет, тен шăпийон?

— Тытмалла та, çапăпа хăваласа ямалла çеç!..

Хĕлимун хăрама пуçланă: халăх вĕт, тем тума та пултарать! Тытĕç те, çыхса пăрахсах илсе кайĕç, хăйнех айăплĕç...

— Эп хамах каятăп, анчах эсир мана асăнатăр-ха... Пуринчен ытла эсĕ, мăк сухал!— аллипе Савали çине тĕлленĕ вăл.— Санăн аскăн хĕрӳ те ырă каччăсене нумаях улталаса пурăнаймĕ!

Çак юлашки сăмахсене вăл ытла та асăрханмасăр персе янă... Хăйсен ялĕнчи чи лайăх та ĕçчен хĕре çакăн пек калани çынсене калама та çук çилентерсе, пăлхатса янă.

— Мĕ-ĕн?! Кам калать ун пек?

— Эсĕ ху çавăн йышши пулмалла!

— Намăссăр!

— Тухса вăркăн часрах пирĕн ялтан! Атту, халех тытса лăскатпăр пĕрре! Хăвăн ятна та манса кайăн!..

— Тавай, чăннипех милицине кайса парас!— ун çинелле пĕр харăс кĕпĕрленсе пыма пуçланă çынсем... Хĕлимун каялла чакса пынă-пынă та, тăрук çаврăнса, уй хапхи

еннелле мулкач пек ыткăннă. Хыçалтан ши! ши! ши! ши! шăхăрни çеç илтĕнсе тăнă...

...Мĕнле шухăшсемпе утнă Хĕлимун уя тухсан, ăна эпир пĕлместпĕр. Анчах та вăл çав каç хулана кайман, тĕттĕм пулсан, хăйĕн тахçан тăван пулнă ялне çитнĕ. Вун виç çул пулман вăл кунта, анчах паян темшĕн пырса кĕнĕ. Вăрă пек, пĕр-пĕччен, унăн-кунăн пăхкаласа утнă урамсем тăрăх... Яла икке уйăракан çырма урлă каçнă, хăйсен тăкăрлăкне пăрăннă та... килне тупайман. Кил вырăнне тупнă-ха вăл, анчах хăй çуралса ӳснĕ икĕ пĕчĕк чӳречеллĕ те улăм витнĕ пӳрт пулман унта. Пăру çулласа кайнă, тейĕн. Ун вырăнĕнче урамалла тăватă чӳречеллĕ, хитре крыльцаллă, çӳллĕ, вырăсла хапхаллă çурт ларнă.

Чылай хушă пăхса тăнă ун çине Хĕлимун. Мĕне пĕлтерет ку? Ăçта кайнă пирĕн пӳрт? Ирĕксĕрех, çав çурт умне хунарлă велосипедпа пырса чарăннă арçын ачаран ыйтмалла пулнă унăн:

— Кам пӳрчĕ ку?

— Пирĕн,— тенĕ ача.

— Ехрем арăмĕ ăçта пурăнать вара халь? (унăн амăшне ялта çапла чĕннĕ).

— Çакăнтах.

— Мĕнле çакăнтах? Эсĕ: ку пирĕн пӳрт, терĕн-çке?— темшĕн чĕтреме пуçласа ыйтнă Хĕлимун.

— Пирĕн çав. Эпĕ унăн мăнукĕ те...

— Мĕнле мăнукĕ?

— Çавăн пеккиех. Ывăлĕн ывăлĕ эппин...

Хĕлимунпа хăйĕн ывăлĕ калаçнă. Çаплах, тĕп-тĕрĕс, хăй нихçан та курман, алăа тытса пăхман, пĕр чĕлĕ çăкăр касса паман ывăлĕ тăнă унăн умĕнче.

— Сана кам кирлĕччĕ?— ыйтнă ача.

— Никам та кирлĕ мар,— тенĕ Хĕлимун.— Иртсе каяттăм та, ахалех ыйтрăм.

Унтан ачи килне кĕрсе кайнă, Хĕлимун юпа пек хытса тăрса юлнă. Кайран таçта çĕр выртнă вăл, ăна каллех пĕлместпĕр, анчах тепĕр кунне, хулана çитсенех, нимрен малтан хăйне Мучикасси çынни Савали Чаплашкин тем те пĕр кăтартса пĕтерни çинчен прокурор патне çырма ларнă.

...Прокурор помощникĕ П. П. Яснов вăрахчен шухăшласа ларнă хыççăн тата тепĕр хут хаш! сывласа илчĕ те, хăйĕн умĕнче выртакан «дело» çине хулăн хĕрлĕ кăранташпа: «Таса çынсем çинчен элекленĕшĕн Ф. Е. Шуськова 161-мĕш статьяпа айăпламалла тăвас», тесе çырса хучĕ.



ХАПХА ÇИНЧИ АВТАН

(Участокри милиционер каласа пани)

ТЕПĔР ЧУХНЕ пурнăçра çав тери кĕтмен япаласем пулса тухаççĕ вĕт-ха, юлташсем...

Пирĕн, милицире ĕçлекенсен, пурнăçĕ те çавăн пекрех ĕнтĕ, çав тери лăпкă мар пурнăç, кашни самантрах пĕр-пĕр «ЧП» — чрезвычайнăй происшестви — урăхла каласан, пурне те труках ура çине сиктерсе тăратакан ĕç пулма пултарать: кама та пулин çаратнă-и унта, камсем те пулин ытлашши ĕçсе лартнипе çапăçса кайнă та кĕпер карлăкĕ урлă çырманалла чăмса çурăм шăммисене хуçса пăрахнă-и...

Тĕрлĕренех пулать. Хăнăхнă эпир ун пеккисене.

Анчах та эсир, юлташсем, пирĕн ĕçре пур чухне те хăрушă япаласем çеç тĕл пулаççĕ тесе ан шухăшлăр. Тĕрĕс пулмасть вăл ун пек шухăшлани. Хăш чухне пирĕн ĕçре те вар-хырăма тытса кулмаллисемех пулаççĕ, ăна эп сире ним суймасăр калатăп.

Акă, сăмахран, пĕлтĕр кĕркунне...

Çапла çав, пĕлтĕр кĕркунне, йывăç çулçисем майĕпе саралса ылтăн тĕслĕ курăнма пуçланă вăхăтра пулчĕ ку. Пĕр

ирхине эпĕ дежурствăран тухрăм та хамăрăн райцентртан пĕр пилĕк километрта, илемлĕ кăна улăхра ларакан яла кайса килме шут турăм. Унта манăн пĕр питĕ лайăх юлташ пурăнать. Унăн ытармалла мар арăмĕ малтанхи хут çуратнă чухнех йĕкĕреш — виçшер кило таякан икĕ ывăл туса панăшăн вăл этем майсăр хĕпĕртенĕччĕ те кашни тĕл пулмассеренех чĕнетчĕ мана:

— Тархасшăн, пырса кур-ха пĕрре, мĕнлерех гвардеецсем ӳсеççĕ манăн? Упа çурисем пек тĕреклĕ вĕт!..

Кайрăм вара çавăнта.

Ку ялта хальхинче манăн урăх нименле ĕç те çукчĕ, çавăнпа та эпĕ ял Советне те, колхоз правленине те кĕрестăвас теменччĕ, ниçта чарăнса тăмасăрах, тӳрех юлташ патне каясшăнччĕ, анчах май килмерĕ. Çанталăк ытарма çук лайăх тăнипе колхозра ĕç вĕресех тăнă пулин те (хирте хĕрсе çур тырри выраççĕ, анкартинче молотилкă кĕрлет, çырма хĕррине вырнаçтарнă пилорамă пĕр чарăнмасăр ӳлет — çĕнĕ фермă çурчĕ тăррине витме хăма çураççĕ курăнать...), çапах та ялпо лавкки умĕнче, кĕрхи йăваш хĕвел ăшшинче, ултă-çичĕ вăй питти çын ларатчĕç.

— Аçталла çул тытрăн, сержант?— ыйтрĕ манран пĕри.

— Ларса кансам пĕртакках, чĕлĕм туртса яр пирĕнпе!— сĕнчĕ тепри.

Аван мар, çамрăклах мăн кăмăлланса кайнă, халăхпа калаçмасть те, вĕçкĕн, теме пултараççĕ... Чарăнтăм, пырса ал тытрăм çаксене, лартăм. Пăхатăп, пĕр-иккĕшĕ «симĕс кайăкпа» тĕл пулма та ĕлкĕрнĕ иккен, самаях хĕрнĕ, теприсем мухмăрла: куçĕсем шыçа-шыçа тухнă, хĕп-хĕрлĕ. Хăшĕсем паян пичĕсене те çуман, çӳç-пуçне те тураман, вырăн çинчен сиксе тăрсанах лавккана чупса килнĕ курăнать. Анчах лавкки хупă-ха темшĕн...

Пирус чĕртсе ятăм та çаксенчен:

— Мĕн çăмăлпа ирех пухăнса ларнă ара эсир кунта? Мĕнле васкавлă канашлу ирттеретĕр? — тесе ыйтрăм, кулянçи пулса.

— Караçăма, лавăшнике кĕтетпĕр-ха,— терĕ пĕри, сарă сухалĕ çумне улăм пĕрчисем çыпăçтарса тултарнăскер.

— Мухмăр кастарать-им?

— Пур çав пăртак,— тунмарĕ тепри.— Эпир строительсем-çке, ĕнер леш енчи Терентее çĕн пӳрт пурине мăк çине туртса патăмăр та...

— Кайран вара сире какăракан пуличченех шăварчĕç пуль?

— Ара, пӳрт мăкласси унсăрах пулмасть ĕнтĕ...

— Аншарлийĕ ситилĕклех пулчĕ-и хуть? Витре-и, иккĕ-и? Э?

Мухмăрпа аптранă «строительсем» шăпах пулчĕç, пĕрпĕрин сине вăрттăн пăхса илчĕç, анчах эпĕ вĕсем пĕрне пĕри «хытарнине» аванах ăнлантăм! «Асту, ухмах пуçупа персе ан яр тата!..»

— Çук, сержант юлташ, ун пек набиткă тытмаççĕ халь пирĕн,— саккунĕ ытла та çирĕп халь ун пирки, хăрамалла,— терĕ сухалне улăм пĕрчисемпе илемлетни, тутлăн карăнса илсе.— Тем каласан та, эпир те культурă патнелле туртăнатпăр вĕт... халь ĕнтĕ очищăнни кăна ĕçетпĕр. Хамăр ăн сывлăха сыхлатпăр мар-и? Эрех — наркăмăш, теççĕçке тухтăрсем. Вопше пĕтерес пулать ăна, эсреле!

— Сăмакунне пĕтерес тесе, ахаль те ураран ӳкичченех кĕрешетпĕр-ха унпа,— хушса хучĕ тепри, куçĕсем чĕрĕ аш пекех хĕрелсе кайнăскер.

Пурте лăх-лăх-лăх кулса илчĕç.

— Ну, чĕлхӳ усал-çке санăн, Канрат!..

Анчах та çак Канрат тени урăх нимĕн те каламарĕ, пĕрене çинчен тăчĕ те васкасах урам тăрăх анаталла утса анса кайрĕ. Эпĕ те хамăн юлташ патне кайма тăтăм, анчах шăп çав вăхăтра лавкка умне кунти колхоз председателĕ Рыбкин юлташ пырса тухрĕ.

— Эсир мĕн кунта ухмаха сутса ларатăр? Мĕнле курорт ку сирĕн?— тӳрех кăшкăрса пăрахрĕ вăл мухмăр уçасшăн хыпăнса ларакансене.— Ферма тăррисене хăçан витсе пĕтеретĕр? Леш енчи арман хăçанччен хăрах çунатпа лармалла? Библиотекăри çӳлĕксене туса пĕтерме миçе хут хушнă сире?.. Строительсем тесе, сире эпир ытти пур ĕçсенчен те хăтарнă, анчах эсир пур, намăса манса, ĕçлес вырăнне, ăçта та пулин хыпмалли тупасшăн çеç ярăнса çӳретĕр. Ĕнер те ĕçлемен-ха, паян та часах кăнтăрла çитет акă...

— Ĕнер эпир Терентей патĕнче...— тӳрре тухма тăчĕ улăмлă сухалли, анчах Рыбкин юлташ ăна çавăнтах пӳлсе хучĕ:

— Ĕнерхи çинчен рапорт памасан та пултаратăн! Терентей патĕнче те, унтан тухсан та мĕн-мĕн пулнине пĕтĕмпех пĕлетĕп! Сысна ферми хыçĕнчи тислĕк купи çинче çы-

вăрса тăнă хыççăн киле те кайман вĕт-ха эсĕ, тӳрех кунта шăршлама килсе ларнă!

— Чим-ха, Митраппан Иванч, эс мана районри влаç умĕнчех оскорблени ан ту-ха...— ура çине тăчĕ лешĕ.— Манăн та карахтер...

— Суратăп эп санăн мухмăрла характеру çине! Кайăр халех ĕçлеме, ан çĕрсе ларăр кунта! Лавкка пурĕ пĕр уçăлмасть, Караçăм райсоюза тавар патне кайрĕ.

«Строительсен» ĕнсисене хыça-хыçах лавкка умĕнчен саланмалла пулчĕ. Иксĕмĕрех тăрса юлсан, Рыбкин юлташ вăрахчен лăпланаймасăр калаçрĕ манпа: колхозра ĕç дисциплинине пăсакансем халĕ те нумай-ха! Айăпĕ пĕтĕмпех çав шуйттан эрехĕнче, ĕçкĕре. Сыпма юратакансемшĕн кашни кун теннĕ пекех мĕн те пулин тупăнать: паян туй, ыран пумилкке, виçмине кам та пулин ача ят хунă, ĕнер, авă, пӳрт мăкланă вĕсем... Арçури чарса çитерет-и вăл пьянчуксене!

— Эрехне нумай юхтараççĕ, эппин,— терĕм эпĕ Рыбкина,— хăвăрах айăплă, япăх кĕрешетĕр...

— Сисĕнсех каймасть-ха юхтарни, ун пирки эпир гайкăсене самаях хытартăмăр,— ĕнентерсех каларĕ вăл мана хирĕç.— Кăнтăр кунĕнчех вăл ĕçпе хăтланаймаççĕ, каçхине ял тăрăх комсомол патрулĕсем çӳреççĕ,— ăçта та пулин тĕтĕм шăрши тухсанах пырса хуплаççĕ. Тытсан вара тӳрех акт çыратпăр та штраф хума района яратпăр, колхозри «Капкăнра» çыратпăр, правление чĕнсе мăкăрлантаратпăр...

— Тĕрĕс тăватăр,— ырларăм эпĕ.— Выраннти влаçсем, халăх хăй çине тăрса кĕрешмесен, вăл сиенлĕ чире часах пĕтерес çук эпир!

Çакăнпа пирĕн калаçу пĕтрĕ те, эпир пĕрне-пĕри ал парса уйрăлтăмăр. Эпĕ урампа анаталла антăм, унтан пĕрре сылтăмалла, тепре сулахаялла пăрăнтăм — ман юлташ, ашшĕ килĕнчен уйрăлса тухнăскер, ялăн чăн вĕçĕнчех, çырма хĕрринчех пуранать.

Çапла, ним шухăшламасăр-тумасăр пĕр пралукпа утса пынă чух, хăлхана сасартăк темле автан умлăн-хыçлăн иквиçĕ хут питĕ хыттăн авăтнă сасă кĕрсе кайрĕ.

— Куккареку-у! Куккареку-у!

Пăхатăп, пĕр вырăсла хапха тăрринче çав тери хитре те тĕреклĕ Петька тăра парать. Хăй чăн-чăн ылтăн тĕслĕ,— сап-сар çутă тĕкĕсем хĕвел çинче куça йăмăхтармалла йăлтăртатаççĕ, киккирикки те, сухалĕ те юн пек — хĕп-хĕрлĕ,

пуçне хур açинчен те кая мар каçăртнă, куçĕсене темшĕн вăльтăр-вальтăр çавăркалать.

Çав автана ытарайманнипе эпĕ чарăнсах тăтăм. Ытла та илемлĕ-çке, хăямат!

Вăл та мана асăрхарĕ пулмалла, кĕçех ман çине çӳлтен аялалла пăхрĕ те «ко-ко-ко!» тесе илчĕ, унтан çунаттисене шап-шап-шап! çапса, каллех авăтса ячĕ:

— Куккареку-у!..

Пĕтĕм кăмăлтан, ӳпкинчи пур вăйне пухса, сценă çине тухас умĕн самаях сыпнă тава тивĕçлĕ артист юрланă пекех авăтрĕ. Кĕçех хапхан тепĕр вĕçнелле чупса пырса тата тепре авăтса илчĕ, кăштах сывлăш çавăрсан татах янратрĕ...

«Мĕн пулнă-ши ку кайăка, мĕн пирки кун пекех савăнса авăтать ку?— тĕлĕнерех шухăшларăм хам ăшăмра.— Хăйне пăхăнса тăракан кăт-кăтик чăхăсем çăмарта тумалли плана ирттерсе тултарнă-ши?..»

— Ко-ко-ко!— терĕ Петька çав вăхăтрах. Каллех ман çине чалăшшăн пăхса илчĕ те тата тепĕр хут авăтрĕ.

Унтан... хам та сисеймерĕм, тахăш самантра хапха тăрринчен вар-р вĕçрĕ те тӳрех ман картус çине пырса ларса пуç тӳпинчен так! так! тутарчĕ кукăр сăмсипе.

— Ко-ко-ко! Так, так, так!..

Сирĕншĕн кулăшла-ха ĕнтĕ ку: ялти рядовой автан милици сержантне пуçран таккать! Çитменнине, сержанчĕ çак участокри уполномоченнăй-ха тата! Ку вĕт влаç представительне кăнтăр кунĕнчех тапăнни пулать, ун пирки Уголовнăй кодексра питĕ хытă айăплакан статьясем пур!..

Пытармасăрах калатăп, малтан эпĕ çухалса кайрăм. Пуçа унталла пăратăп, кунталла, хура ана çинче йăваланса тăнă лаша пек пĕтĕм кĕлеткепе силленетĕп, усси çук, автан çаплах ман пуç тăрринче ташлать... Ташлать кăна та мар-ха, çаплах сăхать, эсрелĕ! Юрать-ха, пралукра эпĕ пĕчченехчĕ, çын-мĕн курас пулсан кулсах вилмелле çав, шалт намăс курса пĕтмелле.

Юлашкинчен çапах та çак ахăрса кайнă автана хăрах уринчен ярса тытрăм та, сывлăшра пĕр-икĕ хут çавăрса илсе, пĕррех хапха урлă кил хушшинелле вăркăнтартăм...

Хыççăнах картуса хывса пăхрăм: киккириклĕ хулиган вараласа хăварман-и тата?

Çук-мĕн, картус тап-тасах, çийĕ çеç кăштах лутăрканнă.

Ĕнтĕ манăн халь хам çулпа малалла кайма та пулатчĕ, анчах кил хушшинчен пĕр харăсах ĕне мĕкĕрни, сурăх-путек макăрни, сысна çухăрни илтĕнсе кайрĕ. Вĕсем хушши-

не сасартăк выçă кашкăр пырса кĕрсе туллама тытăннă, тейĕн!..

Мĕнле мыскара ку? Малтан çак килтен автан вĕçсе тухса тапăнчĕ, халĕ ытти выльăхĕсем тем пирки пăлханса кайнă... Мĕн пулнă? Тавай кĕрсе тĕрĕслес кунта!

Калинккене шăнкăр-шанкăр уçса кĕтĕм те... шанк! хытса тăтăм. Кун пеккине эпĕ унччен малтан та, кайран та курман çав. Кил хушши тулли выльăх, пурте ахăрса кайнă! Ени куçне-пуçне чарса пăрахнă та, хŭрине пăван вăхăтĕнчи пек çŭлелле кукăртса хурса, мĕкĕре-мĕкĕре каллĕ-маллĕ чупкалать, ун хыççăн унăн ула пăрушĕ сиксе пырать; лаç умĕнче икĕ сурăх тĕкĕшеççĕ, пĕр-пĕрине çамкисемпе шач! шач! тутараççĕ; пĕр тăватă пăтлăх сысна ами хăйне мăка çĕçĕпе пусма тытăннă пек çухăрать, хăйĕн сăмси чĕп-чĕр юн, мĕншĕн тесен кил хушшинчи кашни япаланах пырса хирет — карта çумĕнчи каскана та, кĕлет умĕнчи çĕр ăшне путса ларнă лаптак мăн чула та; хитре кукăр мăйракаллă хура така тăватă урипе пĕр харăс тăрст! тăрст! сиксе çŭрет... Манăн паçăрхи тăшман, леш ылтăн тĕслĕ автан та кунтах, ăна хапха урлă ывăтнипе нимĕн те пулман иккен, халь вăл пахча енчи сапур çине хăпарса тăнă та операри солист юрланă пекех янратать... Акă, вăл ĕне ĕнси çине вĕçсе ларса ăна ик мăйраки хушшинчен таккама тытăнчĕ, ĕни ăна ывăтса ярсан, çунаттисене сарса пăрахсах чăхсене хăвалама тапратрĕ — темле усал шухăш кĕрсе кайрĕ пулмалла хулигана.

Кĕрлесе кăна тăрать кил хушши!

— Му-уу!

— Ме-е! Бе-е!

— Нăйй, найй!..

Чылайччен пăхса тăтăм ним ăнланаймасăр. Кулас та килет хамăн: ытла та интереслĕ хăтланаççĕ вĕт-ха, пĕр-пĕр усал ĕçкĕри урса кайнă халăх пекех!

Сасартăк ман пата хайхи юнланнă сăмсаллă сысна ĕрĕхсе пычĕ те, мĕн май çитнĕ таран каçăрăлса: «Нăрх, нăрх!» турĕ хаярăн.

— Тухса кай, ан кансĕрле пире туй тума!— тенĕ пекех пулчĕ ку.

Лайăхрах пăхрăм та ун çине — апайтурух!— çур кĕлетки таран темле сарăрах шĕвекпе вараланнă çакă. Труках тата сăмсана усал шăрш пырса çапрĕ — пăрака шăрши! Сăмакун пăраки! Ытти выльăхĕсем те йăлтах çав шуйттан япалипе лапăртанса пĕтнĕ иккен... Тинех тавçăр-

са илтĕм: ара, кусем пурте ӳсĕр вĕт, эсреметсем! Ĕни те, сурăхĕ-таки те, сысни те, автанĕ те ӳсĕр! Ахалĕн ма çакăн пек ахăртăр-ха килти выльăх-чĕрлĕх? Темле майпа сăмакун пăраки тĕлне пулса хыпса лартнă та ĕнтĕ, картран иртсех кайнă, пĕр-пĕрине паллаймиех пулса тăнă, хуть те çак самантрах çапă йăт та, пурне те вытрезвителе хуса кай! Пулать те вĕт тамаша!..

— Чим-ха, — терĕм вара хама хам, — ку историе ахаль хăварма çук... Шаларах кĕрсе паллашас пулать.

Çавăнтах пӳрте кĕрсе кайрăм. Никам та çук. Ик-виçĕ хут та сас патăм, хирĕç чĕнекен пулмарĕ. Каялла тухнă чух вара çенĕк чӳречи витĕрех пахчаран кил хуçи арăмĕпе паçăр лавкка умĕнче сăмакунпа кĕрешнипе мухтаннă арçын васкаса килнине курах кайрăм.

Вĕсем кил хушшине кĕчĕç, эпĕ крыльца çине тухса тăтăм. Чухлатăр пуль ĕнтĕ хăвăрах — мана курсан вĕсем иккĕшĕ те юман тункатисем пекех хытса тăчĕç.

— Ырă кун пултăр ыр çынсене!

Чĕнмеççĕ, чĕлхисем çăвар маччи çумне çыпăçса ларчĕç пулмалла. Кил хушшинчи выльăх-чĕрлĕх малтанхи пекех акăш-макăш ахăрать.

— Санăн выльăхусене мĕн пулнă капла, инке?— тесе ыйтатăп.

— Н-нимĕн те пулман-çке, чиперех-çке...— аран сас пачĕ хĕрарăм.

— Епле нимĕн те пулман? Пăхсам ара лайăхрах — ĕни ӳлет, таки ташлать, сысни çухăрать... Курмастăн-им? Урса кайнă вĕт санăн вĕсем, инке! Халех выльăх тухтăрне чĕнсе килсе эмеллес, уколсем тăвас пулать, унсăрăн пĕр выльăхсăр тăрса юлатăн акă, е хăйсем вилсе пĕтеççĕ, е персе пăрахма тивет вĕсене!— юри хăратнă пек туса, çумри пистолет кабурне шаккаса илтĕм эпĕ.

— Ай, тур-тур... Тур сыхлатăрах, тур амăшĕ çăлтăрах!— сăхха яра пачĕ хайхискер.

— Кала луччă тĕрĕссипе, мĕн çитертĕн эс паян вĕсене?— сасса тата ытларах хытартăм эпĕ.

— Н-нимĕн те çитермен, паранкă ани çинчен пĕр çĕклем çум çумласа илсе килсе патăм кăна... Çав çум ăшне чĕмере-кикен тавращĕ лекнĕ пулинех... Вĕсем выльăха ухмаха ертсе яраççĕ, тет...

— Апла пулсан — питĕ шел! Вăл куракçем вĕлерме те пултараççĕ, тĕрĕс калатăн,— терĕм эпĕ.— Питĕ пысăк хурлăх пулать, эппин, санăн...

Хĕрарăм мана хирĕç тем калас тесе çăварне уçрĕ, анчах çав самантрах хайхи ылтăн автан тахăш енчен тӳрех хуçи пуçĕ çине вĕçсе анчĕ те ăна шăп лĕпки тĕлĕнчен так! так! так! тутарчĕ. «Ан суй, ан суй, ак сана уншăн!» тенĕ пекех пулчĕ вара ку...

Автан ытла та кĕтмен çĕртен пырса тапăннипе, хĕрарăм çухăрса ячĕ те, трук аяккалла сиксе, чутах шыв валашки ăшне кĕрсе ӳкетчĕ. Эп тӳсеймерĕм, кулса ятăм, леш «сăмакунпа ураран ӳкиччен кĕрешекен» арçын та хихиклесе илчĕ...

— Куратăн ĕнтĕ, чăнах урнă вĕт! Чипер ăслă-пуçлă автан хăй хуçине ма тапăнтăр?— терĕм эпĕ.

— Урнă çав, урнă! Эп ăна ак халех çапса пăрахатăп! Тĕсĕ те ан пултăр!— тарăхса кăшкăрчĕ хĕрарăм.

— Ма çапса пăрахса сая ярас? Луччă пусса çиес ăна, питĕ меллĕ саккускă пулать,— шăлне йĕрчĕ леш арçынĕ.— Автан тукмакне сержант юлташ та тиркемест пулĕ-ха. милицин те тути-çăварĕ пур вĕт... хи-хи!

Эп ун çине тинкеререх пăхрăм... Ӳсĕр иккен вăл, куçĕсем кил хушшинче ахăрса çӳрекен сысна куçĕсем пекех пулса кайнă, аран уçăлаççĕ; сурма тăнă сурчăкĕ те тути çумнех çыпăçса ларнă. Пĕр сăмахпа, вăл ĕнтĕ «сăмакунпа кĕрешме» ĕлкĕрнĕ!

Эпĕ вара пĕтĕмпех тавçăрса илтĕм: çак арçын ку кил хуçи ӗрех юхтарнине малтанах пĕлнĕ те, паçăр лавкка патĕнче мана курсан тӳрех ăна системе чупса килнĕ... Вăл килсе çитнĕ чух хĕрарăмăн «агрегачĕ» сиксех вĕренĕ, «урнă шывĕ» шăпăртатсах юхнă, анчах çак арçын ялта милици пурри çинчен пĕлтерсен, хĕрарăмĕ вучаха пĕрер витре чашлаттарса ăна сӳнтерсе лартнă, пăракине тăкса янă, аппаратне пытарнă... Çак васкавлă ĕçсенче кил хуçине ку арçын хастаррăн пулăшнă, çав хушăрах вăл какăракан пуличченех ĕçсе лартнă, выльăхĕсем те хуçи тăкса панă пăракана лĕрккесе ӳсĕрĕлсе кайнă...

Эп шухăшлани пĕтĕмпех тĕрĕс пулнă!

— Атя-ха, инке, санăн кил-çуртна курса çаврăнар,— терĕм эп кил хуçине.

— М-мĕн тума?— хăраса пăхрĕ вăл ман çине. Паллах, эпĕ мĕн шырама шут тунине тӳрех ăнланчĕ ĕнтĕ...

— Сан выльăхусем мĕншĕн урнине пĕлес килет. Чĕмере-кикен таврашĕ татах тупăнмĕ-ши? Эсĕ понятой пулатăн!— терĕм арçына.

— Р-рад старатс!— честь парам пекки турĕ те вăл, хăй çавăнтах, тайăнса кайса, карта çумне пырса çапăнчĕ.

Эпĕ çав вăхăтра урампа иртсе пыракан пĕр йĕкĕте чĕнсе илтĕм. Питĕ аван пулчĕ — вăл шăпах ялти дружинникмĕн. Лаççа пăхрăмăр — вучахра шыв кӳлленсе тăрать, выльăх картине кĕтĕмĕр — унти куритаран тӳсме çук пăрака шăрши перет. Пĕтĕмпех паллă! Аппаратне пахчари хăмла çырли ăшĕнче тупрăмăр, мунча урайĕ айĕнчен виçĕ тулли четверть туртса кăлартăмăр. Лекрĕ хĕрарăм, нимĕн те калаймарĕ.

— Питĕ лайăх пулчĕ-ха ку, тахçанах сыхлаттăмăр эпир ăна, анчах ниепле те тытаймарăмăр ку таранччен, тинех шăпи тулчĕ,— терĕ дружинник.— Путсĕр хĕрарăм вăл, колхозра ĕçлемест, ханша юхтарса сутать те çынсем çинчен элек сарса кăна пурăнать...

Пӳрте кĕрсе протокол çырма ларсан, эпĕ кил хуçине кула-кулах:

— Санăн автану питĕ ăслă, инке, эсĕ эрех юхтарни çинчен чăн малтан вăл систерчĕ мана,— терĕм.

Хĕрарăм ним ăнланмасăр пăхса тăчĕ...

Çапла, юлташсем. Автан çăмарта тумасть пулсан та, тепĕр чух унтан та усси пур!

ХУРА КУШАК ТАТА ЫТТИСЕМ

Андрей Иванч Лысова эпĕ чылайранпа курманччĕ. Хули юмахри пекех ӳссе кайрĕ-çке-ха пирĕн, халăхĕ шутсăр нумай, çавăнпа та паллана çынсене час-часах тĕл пулаймастăн. Çитменнине тата, Андрей Иванч иквиçĕ çул каялла патшалăхран ссудă илсех пĕр тӳлек урамра лайăх кăна пӳрт лартнă, унтах сад ӳстерме тытăннă та, хула варринелле ытла тухсах çӳремест пулмалла.

Андрей Иванч вăл мĕнле çын тетĕр-и эсир? Тархасшăн, каласа пама пултаратăп...

Кăшт-кашт хирĕçсе илме тӳр килсен (кил-йышра унсăрах пулмасть ĕнтĕ!), арăмĕ ăна Кукша Энтри тесе вăрçать пулин те, Андрей Иванч — питĕ лайăх çын, аллисем унăн — ылтăн, сĕтел-пукан фабрикинче ăна пурте «столяр-художник», теççĕ. Кăмăлĕ вара... тĕлĕнсе каймалла кăмăл! Емĕрне те ытлашши ӳсĕр пулса курман вăл, çынпа харкашман, çапăçас-тӳпелешес пирки вара сăмах та пулма пултараймасть. Куна эпĕ сире тĕп-тĕрĕс калатăп, ма тесессĕн эпир унпа вăрçăра виçĕ çул хушши пĕрле пулнă. Çын мĕнлереххи унта ниçтинчен те лайăхрах курăнать-çке.

Хальхинче эпир унпа поликлиникăра, шăл кабинечĕ умĕнчи черетре, тĕл пултăмăр.

— Эсĕ те шăлпа аптрама пуçларăн-им?— ыйтрăм эпĕ Энтрирен, алă парса унпа юнашар ларнă хыççăн.

— Ан та кала-ха, тусăм, кĕтмен-туман çĕртенех шар куртăм, пĕр харăсах сакăр шăл çухатрăм!— терĕ вăл тарăхнă сасăпа.— Акă, пăх-ха эсĕ...

Вăл çăварне уçрĕ те — эп тĕлĕнсех кайрăм: çыннăн чăнах та малти шăлĕсем — çӳлтисем те, аялтисем те — тăваткаларăшĕ çук.

— Ай-уй, мĕн пулчĕ капла? Санăн шăлусем чиперехчĕ-çке? Иртнĕ кĕркунне кăна, иксĕмĕр кăмпара пĕрле çӳренĕ чух, мухтанса илтĕн: аллă çула çитрĕм пулин те манăн пĕр шăл та ӳкмен, хамăн шăлсемпе эпĕ пӳрне тачкăш пралука та ним мар кăшласа татма пултаратăп-ха, терĕн...

— Çаплаччĕ те-ха вăт... Мĕн тăвас тетĕн? Хуняма карчăк пĕтерсе хучĕ мар-и!

Эп тӳсеймерĕм, кулса ятăм:

— Санăн хуняму çав териех вăйлă-и вара, пĕрре çапсах сакăр шăл таран катса пăрахма пултарать-и? Боксер пулĕ, эппин, вăл санăн!..

— Çапассине вăл çапман та-ха, айăпĕ çавах ун çинче.

— Анланмастăп, Андрей Иванч...

— Пĕлмен çын куна ытла тӳрех ăнланас çук çав,— ассăн сывласа илчĕ ман юлташ.

— Тен, каласа парăн? Интереслĕ çапах та... Сакăр шăл таран пĕр харăс катса пăрах-ха! Тата хунямуна айăплатăн...

— Айăплатăп çав,— каллех ассăн сывласа ячĕ Энтри.— Шутсăр тĕшмĕш мар-и ара вăл манăн, ват супнаскер! Тĕшмĕшсен «саккунĕсемпе» тĕрлĕ паллисем çинчен калама тытăнсан, хуть те килтен тухса тар. Хамăр чĕнни-пе ялтан килнĕ кунах пуçларĕ хăйĕн юррине. Урамран кĕнĕ чух пирĕн хапха юпи çинче 13-мĕш номер çакăнса тăнине курнă иккен те, кил-çуртăмăр çунма тытăннă пекех хыпăнса ӳкнĕ, пӳрте кĕнĕ-кĕменех хăртма тытăнчĕ пире: «Мĕншĕн, мĕнле пуçпа шухăшласа кун пек номер çаптартăр? Вун виççĕ вăл — чи усал чихвăр-çке, вун виççĕпе нихçан та телей пулмасть! Пӳртне лартма пĕлнĕ, анчах номерне суйласа илме ăс çитереймен!»— тет. Аран-аран лăплантаркаларăмăр: номерне кил хуçи суйласа илмест, ăна хула Совечĕ парать, çитменнине тата Шупашкарта

вун виççĕмĕш номерлĕ çуртсем çĕр те ытла пулĕ, çапах вĕсенчен пĕрне те аçа çапман, пĕри те çунса кайман-ха ку тараннчен, терĕмĕр.

Ееннĕ пек пулчĕ ĕнтĕ çакă, анчах пĕр-ик кунтанах таçтан мурĕнчен темĕн пысăкăш тутăхнă лаша таканĕ тупса килнĕ те, эпир сисиччен çавна пӳрт алăкĕ умне çапса лартнă. Ун пек тусан çĕн пӳрте шуйттан таврашĕ те ермест, вăрă-хурах та пырса кĕреймест имĕш. Тепрер эрнерен, урай çунă хыççăн лапăрчăк шыв йăтса тухнă чух, çав таканран хăех такăнса ӳксе çамки çине чышкă пысăкăш мăкăль лартрĕ те, эпир унтан варсене тытсах култăмăр.

— Çапах та, пирĕн киле усал ернех пулмалла, çав такăнтарнă сана, ахаллĕн ма ӳкĕттĕнччĕ-ха эсĕ?!

Анчах вăл парăнмарĕ, пĕррех кăшкăрса пăрахрĕ пире:

— Ан ахăрăр! Усал ернĕшĕн мар ку, паян тунтикун пулнă пирки! Тунтикун — йывăр кун тенине илтмен-им?— терĕ.

Пурăна киле тĕрлĕ тĕлĕксем мĕне пĕлтерни çинчен «лекцисем» вулама тытăнчĕ. Тĕлĕкре юрласан е купăс каласан — яланах хурлăх пулать иккен, ташласан вара — пуçĕпех пĕтмелле! Пулă таврашĕ çисен те, конфет-сахăр ĕмсен те, навус курсан та ырă мар, мĕн те пулин йăтăнса анатех пуç çине...

Тата, тата темĕн те пĕр! Тĕлĕксен тупсăмне çав тери ăста чухлама ятарласа юмăçсен курсĕнче вĕренсе тухнă, тейĕн!

Малтанхи кунсенче эпир вăл каланисенчен кулкалаттăмăр кăна, анчах кайран хытах вăрçса тăкма лекрĕ, мĕншĕн тесен вăл çак тĕшмĕшле халапсемпе пирĕн пĕчĕк мăнукăн пуçне минретме тытăннă иккен. Кун çинчен пĕлсен, манăн ялан йăваш кăмăллă арăмăм Вĕçелис та тигр пекех пулса кайрĕ, кĕçех урама кăларса ывăтатчĕ тăвай амăшне, юрать-ха хам чартăм.

— Анчах та ку — умсăмах çеç-ха,— терĕ Энтри малалла.— Чи хăрушши пĕр вунă кун каялла пулса иртрĕ...

...Кирпĕч завочĕ таврашĕнче манăн арăмпа хуняман çитмĕл çиччĕмĕш сыпăк урлă тивекен хурăнташĕсем пурăнаççĕ. Тиркемелли çук, чипер çынсемех, упăшкипе арăмĕ те заводра ĕçлеççĕ. Ача çуралнă ятпа çавсем пире вырсарникун хăнана чĕнчĕç. Епле каймастăн-ха ырăпа чĕннĕ çĕре? Аван мар, çиленме пултараççĕ. Ман хĕрарăмсем ирех хатĕрленме тытăнчĕç — арăм чăх кукли пĕçерет,

хунями пылпа тунă сăрине сĕрет. Чăн-чăн чăваш йăлийĕркине тытсах каясшăн пулнă ĕнтĕ вĕсем — кукăльпе, сăрапа. Унта япăххи нимĕн те çук-ха...

Эпĕ хам та кăштах хатĕрленес, терĕм. Сухал хырас та, магазина кайса пĕр-пĕр парне илес çĕр çинче çĕнĕ çын çуралнă ятпа!

Çавăн пек ырă шухăшпа кантăк алăклă шкап патне пытăм та малтан хамăн хырăнмалли хатĕрсене илтĕм, унтан çаврака пĕчĕк тĕкĕре тытрăм. Хамăн кăмăлăм ла-айăх, сăмса витĕр темле кĕвĕ ĕнеретĕп — ара, хăнана каятăп мар-и! Анчах сасартăк... темле майпа-çке, сиссе те юлаймарăм, çав тĕкĕр алăран вĕçерĕнчĕ те пĕррех çĕре ӳксе чăнкăрр! арканчĕ...

— Тьфу, шуйттан алли! — вăрçса илтĕм хама хам. Питĕ хĕрхентĕм тĕкĕре — трофейччĕ вăл манăн.

Тĕкĕр ӳксе çĕмĕрĕлнĕ сасса кухньăра тăрмашакан арăмпа хуняма та илтсе юлнă-мĕн те самантрах ман пата сиксе пычĕç. Хунями, паллах, малта...

— Мĕн пулчĕ? Мĕн турăн? — кăшкăрса ыйтрĕç вĕсем пĕр харăс.

— Акă, тĕкĕр... — урайĕнчи ванчăксем çине кăтартрăм эпĕ.

— О-ой! Пĕтертĕн!.. — хăйне çĕçĕпе чикнĕ пек çухăрса ярса, пĕççине шарт! çапрĕ хуняма. — Пĕтрĕмĕр...

— Çав кантăк татки ваинăшăнах мĕн пĕтмелли пур? — терĕм эпĕ. — Тупнă... виçĕ пуслăх япала!

— Хакĕ пирки мар, укçи пирки ма-ар! — урипе тăрст! тапрĕ хайхи килти хурал. — Тĕкĕр-çке-ха вăл, тĕ-кĕр, ăнланатăн-и эс çавна?

— Ну, тĕкĕр, ну, мĕн-ха вара? Пин тенкĕ тăракан трюмо мар вĕт! Лавккана кайнă та тепĕрне илнĕ...

— Ăнланмастăн эсĕ нимĕн те! — татах пĕççине çапса илчĕ хуняма. — Тĕкĕр çĕмĕрĕлсен — инкек пулать, кĕтсех тăр.

— Ай, ан лăпăртат-ха кирлĕ мара! — алă султăм эпĕ.

— Ан айлат, ан хăлаçлан! Курăн акă! Хăвнах мĕн те пулин пулать!

— Чăнах та, тĕкĕрне чипертерех тытмалла марччĕ-и санăн? Аллуна йывăçран туман пуль? — мăкăртатса илчĕ ку таранччен шарламасăр тăнă арăм та.

Хам çине наступлени икĕ флангран та пĕр харăсах пуçланнипе оборонăра тăма йывăртарах пуласса туйса, хăпăл-хапăл тумлантăм та килтен тухса кайрăм. Малтан

парикмахерскинче пултăм, унтан магазина кĕрсе паян ят хуракан ача валли шăкăр-макăрсем илсе тухрăм. Çав хушăра ман хĕрарăмсем лăпланнăччĕ ĕнтĕ, манпа чиперех калаçрĕç, эп илсе пынă шăкăрчаксене те ырларĕç. Кĕскен каласан, çемьере каллех «мирлĕ самана» пуçланчĕ. Ырлăх вĕт ун пек чухне, хăвăрах пĕлетĕр,— пурăнас килет, кăшкăрса юрлас килет!..

Хатĕрленсе çитрĕмĕр хайхискер. Сăра лакăмне мана йăттарчĕç, куклине подносĕ-мĕнĕпех хуняма тытрĕ, арăм вĕт-шаксем тултарнă сумкăна çĕклерĕ. Унччен те пулмарĕ, хуняма подноса сĕтел çине лартрĕ те, малти кукăрта рамкă ăшĕнче çакăнса тăракан Шелепи портречĕ çине пăхса сăхха яра пачĕ: пат-пат-пат, пат-пат-пат...

— Эй, атте турă, пире чипер кайса килме пулăшах!

— Турра ĕненмен вăл çын, ахалех кĕл тăватăн ăна,— терĕм эпĕ, вăл сăх-сăхса тăрансан, Шелепи çине кăтартса.

— Ан лапăртат!— куçĕнчен ман еннелле хĕм саптарса илчĕ хуняма.— Çавăн пек кĕреçе сухаллă çын епле турра ĕненмен пулать вара?

— Чăн калатăп, вăл пупсенчен мăшкăлласа такмаксем çырнă сеç...

— Тьфу! Ма малтанах каламарăн? Юри çылăха кĕртес терĕн-и мана?— хыпăнса ӳкрĕ хайхискер.

Ана тек хирĕçтерес мар тесе, эп маларахран тухрăм. Кĕçех вĕсем те кĕшĕлтетсе тухрĕç — таçти инçетри похода кайма хатĕрленнĕ пекех ĕнтĕ. Çакăн пек багажпа вырсарникунхи автобус çине ларма май çуккине чухласа, çуранах кайма шут турăмăр,— кун пирки пирĕн хирĕçӳ пулмарĕ. Утрăмăр вара... Хуняма — малта, кукăллĕ подноса ресторанти официант пек çĕклесе патлаттарса пырать, ун хыçăн — арăм, эпĕ — чăн хыçалта, стройри «замыкающи» вырăнче. Тĕл пулакан паллана çынсем чарăна-чарăна пăхса юласçĕ пире...

Çапла пĕр квартал пек кайсан, манăн тăрук чĕлĕм туртас килсе кайрĕ. Кĕсъене тытса пăхатăп — çук нимĕн те! Ни пирус, ни шăрпăк çук, хĕоарăмсемпе шавлакаланипе çавсене чиксе тухма маннă кайнă. Вăт, хăямат! Мĕн тăвас пулать-ха?

— Чимĕр-ха, манăн йăпăрт киле чупса кайса килмелле!— терĕм хама ертсе пыракансене.

— Мĕн пулчĕ тата?— ыйтрĕ арăм.

— Туртмалли манса хăварнă... Эп халех...

Илтесчĕ санăн çав самантра хуняма мĕнле кăшкăрса пăрахнине, унăн куçĕ-пуçĕ епле хăрушланса кайнине курасчĕ! Аçа-çиçĕм çав, тупата...

— Ниçта та каймастăн! Ямастăп, илтрĕн-и?!— пуçне чĕтретсе урипе тапрĕ вăл.

— Эп туххăм кайса килетĕп...

— Юрамасть!— тата хытăрах кăшкăрчĕ вăл.

Тĕлĕнсех кайрăм:

— Мĕншĕн?

— Çула тухсан нихçан та киле таврăнса кĕме юрамасть, хуть те пуçу манса юлнă пултăр! Эс таврăнса каятăн пулсан — эпир те таврăнатпăр, пурĕ пĕр телей пулмасть!

Çĕр çăттăр! Чĕлĕмӳ-качку, çав пуш параппана янратас мар тесех малалла утрăм. Хамăн çав тери çилĕ килсе кайрĕ...

Анчах та ку пирĕн камитĕн пуçламăшĕ çеç пулчĕ-ха.

Утатпăр ĕнтĕ. Масартан иртрĕмĕр. Богдан Хмельницкипе пыратпăр. Пĕри те нимĕн те чĕнместпĕр. Малта хуняма карчăк вăхăчĕ-вăхăчĕпе păравус пек хашлатса илни çеç илтĕнет. Чылай хушă пытăмăр çапла. Унтан хуняма сасартăк çухăрса ячĕ:

— При-ис! При-ис, çĕр çăтман кушакки! Эй, шуйттан-ан... Наркăмăш тĕлне пуласчĕ санă-ăн!..

Пăхатăп — пирĕн çул урлă кушак чупса каçать. Çав тери илемлĕ, йăм-хура кушак, хĕвел çутинче тĕкĕ йăлтăр-йăлтăр тăвать.

— При-ис!..

Кушак çулне пӳлесшĕн пулса, ман хуняма, тем те пĕр кăшкăрса, талт-талт-талт чупса кайрĕ те... лапсăрт! татăлса анчĕ тусан çине. Кукăлĕ, подносĕ — пĕр çĕрте, хăй тепĕр çĕрте выртать. Кушакĕ, паллах ĕнтĕ, хӳрине çеç кăтартса хăварчĕ!

Эпĕ часрах чупса пырса хунямана ура çине тăратрăм, арăм подноса çĕклерĕ. Юрать-ха, куклине ним те пулман, ăна ал шăллипе чĕркесе çиелтен кантрапах çыхнă-мĕн.

— Куратăн-и?! Пуçланчĕ хайхискер, пуçланчĕ хурлăх!— кĕç-вĕç макăрса ярас пек кăшкăрчĕ хуняма, куçĕсене çутăлтарса.— Пĕтĕмпех сан пирки çакă! Ку çеç те мар пулĕ-ха!..

— Мĕншĕн ман пирки?

— Кам пирки пултăр-ха тата? Ирхине тĕкĕр кам çĕмĕрчĕ? Эс мар-и?

Эп, шăла çыртса, малалла утма тăтăм, анчах вăл мана санăран çавăрса тытрĕ:

— Ан кай унталла! Юрамасть кушак йĕрĕ урлă утса каçма, татах хурлăх пулать!..

— Мĕн вара, вĕçсе каçмалла-и манăн?— тарăхма пуçларăм эпĕ.

— Ав çав пралукпа çаврăнса тухатпăр!

— Çур çухрăм кукăр тума-и?

— Кукришĕн ан хăра эсĕ, урусем хăвăн, сутăн илмен!

Эп ăна хирĕç лайăх кăна лаплаттарса хурасшăнччĕ те— арăм чарчĕ, хулран пăчăртаса хуллен кăна:

— Ан çĕтĕлтер çавна пустуй!— терĕ.

Итлерĕм, чĕнмерĕм. Хайхискер, кушак йĕрĕ урлă каçса татах шар курасран хăраса, асфальтлă урамран ансăр пралукалла ертсе кĕчĕ. Вăл самаях вăрăм иккен. Кайсан-кайсан, тĕп урама тухма, тепĕр пралукалла кĕтĕмĕр. Анчах кунта... каллех инкек пулчĕ: пĕр вĕр-çĕнĕ хапхаран пире хирĕç хитре кăна хĕр икĕ пушă витрепе тухрĕ тăчĕ! Паçăрхи пекех малта пыракан хунямашăн ку çамкинчен тукмакпа çапнă пекех пулчĕ курăнать. Тăп! чарăнса тăчĕ те вăл, ним айăпсăр хĕре апла та капла пăсăрлантарма тапранса кайрĕ.

— Эсĕ мĕн, шуйттан чĕппи, юри пирĕнтен мăшкăллама пуш витресемпе тухса тăтăн-и? Шыв патне кайма урăх вăхăт тупаймарăн-и, кахал çăмхи! Мĕн шутпа пирĕн çула пӳлсе лартрăн, эсремет пуçĕ!

Хĕр хуняма çине йĕр хушă çав тери тĕлĕнсе пăхса тăчĕ, унтан вăл хăйне мĕншĕн вăрçнине тавçăрса илчĕ курăнать те — тӳрех каласа хучĕ ăна хирĕç:

— Эсĕ ху чисти эсремет пулмалла, кинемей! Санăн васкасах Шăхасана каяс пулать.

— Мĕнле Шăхасан тата? Мĕн тумалла ман унта?— ăнланаймарĕ хуняма.— Мĕн сӳпĕлтететĕн эсĕ, йĕксĕк?

— Шăхасана унта сан пек ухмаха ернисене пĕтĕм тавраран пухса сыватаççĕ, илтмен-и çавна?

— Э, эс тата ун пек мăшкăллатăн-и ват çынтан?!— хальхинче вĕри шывпа сапнă пекех çухăрса ячĕ хуняма.— Эсĕ ху кай унта, ху кай, санăн хăвăн лĕпке тĕлĕнче шăтăк пулмалла! Ак, эп сана...

Хапха умĕнчи хĕре аллинчи кукăллĕ подноспа пĕррех хăмсарса ячĕ çакă. Ман арăмăн ăна вара çурăмĕнчен чыпса илсех тăна кĕртмелле пулчĕ. «Чарăн, анне! Вун пилĕк талăк кайса ларассу килчĕ-им санăн?!»

Тĕрмепе хăратса илсен, тин кăштах лăпланчĕ вăл, хăямат. Анчах мăн урама пур пĕрех çак пралукпа тухмарĕ, каялла таврăнса тата аяккарахран пăрăнса кайма тиврĕ ăна пула.

Çакăн хыççăн пĕр хушă лăпкăнах пытăмăр. Хуняма «саккунĕсене» пăсакан тепрер инкек сиксе тухмасан, хăнана чиперех çитес шанчăк та пурччĕ ĕнтĕ. Вăхăт чылая кайрĕ,— килтен те ытла вăр-варах тухаймарăмăр, çул çинче те мыскарасем пулкаларĕç те, алăри сехет йĕппи иккĕ патнелле çывхарма пуçларĕ, анчах пире шăп вун иккĕ тĕлне пыма хушнăччĕ.

Çук вĕт, каллех инкексĕр пулмарĕ!..

Чебоксаркă шывĕ урлă каçса, çӳлти вĕçĕпе Çĕн урама тухакан вăрăм пусма тăрăх хăпарма пуçларăмăр та, пĕр çĕр картлашкана çитсен ман хуняма, паçăр хура кушак курнă чухнехи пекех, сасартăк чарăнса тăчĕ.

— Ывăнтăн-им?— ыйтрĕ арăм.

— Çук-ха, унпа мар...— хаштах сывласа ячĕ амăшĕ.— Пăх-ха эсĕ çӳлелле... Куратăн-и?

— Куратăп. Темле çын анать унтан, урăх ним те çук...

— Çын!..— тутине чалăштарса илчĕ хуняма.— Çын мар çав, пуп килет пире хирĕç! Пĕтрĕ пуçах, каллех ăнмарĕ пирĕн çул!— Çавăнтах каялла çаврăнса, ман çине çилĕпе пăхса илчĕ.— Веç сан пирки пулать çакă, санăн эсрел тĕкĕрĕ çĕмĕрĕлнĕ пирки!..

— Мĕнех вара пуп килнĕшĕн?— терĕм эпĕ.— Иртет те каять вăл хăйĕн çулĕпе...

— Эй, ухма-ах!— каллех куçĕсемпе çисе илчĕ хуняма.— Çул çинче пупа тĕл пулсан, пĕтрĕн вара! Хура кушак курнинчен те хăрушăрах вăл. Атьăр часрах каялла, вăл пирĕн пата çитиччен! Ана эпир курман, тесе шутлăпăр... Утăр!

Çавăнтах аллинчи подносне меллĕрех тытрĕ те картлашкасем тăрăх аялалла тăкăртаттарчĕ кăна. Хыçалтан такам хăваланă пекех вĕçтерсе пырать! Мĕн тăвас тетĕн, эпир те ун хыççăн каялла антăмăр вара...

Шăлсене шатăртаттарсах илтĕм çав! Шуйттан тĕшмĕшĕ, уттарать те уттарать паян пире! Чĕннĕ çĕре çитиччен тата миçе хут унталла-кунталла пăрăнса çӳремелле пулать-ши? Пĕреххут, килтен ма тухрăм пуль, тетĕп.

Пусмаран пăрăнса кăштах утсан, тарăхнипе, хунямана юриех йĕкĕлтес килçе кайрĕ.

— Итле-ха, анне, çав вăрăм çилхерен вĕсĕ мĕншĕн мăйракаллинчен хăранă пекех хăраса ӳкрĕн вара? Ахаль чух вĕсир ăна: «таса атте», «çеттуй атте» тетĕр-çке? Чиркӳре ун аллине чуп тăватăр, çиелтен укçа парса хăваратăр... э?

— Чиркӳри вăл — чиркӳре!— паçăрхи пекех куçĕсене хаяррăн çутăлтарса илчĕ хуняма.— Унта вăл турă çынни, пирĕншĕн турăпа калаçать, пирĕн çылăхсене каçарттарать...

— Урамра кам пулать вара?

— Шуйттан! Унтан та усалтарах! Çăткăн, ясар чăпти! Халь те пĕр-пĕр хусах матка патĕнчен пыл çисе тухнă пуль-ха!— ăна-кăна ним шухăшламасăр каласа тăкрĕ хуняма.

— Вăт ку тĕрĕс вара!— терĕм эпĕ. Хамăн кăмăл уçăлсах кайрĕ...

...Таçтан-таçтан, кукăр-макăр пралуксем тăрăх пăтранса, эпир юлашкинчен çапах та Çĕн урамăн тепĕр вĕçне пырса тухрăмăр. Кунтан пирĕн каймалли инçе те марччĕ, çапах та, хуняма тарласа лачкам шыва ӳкнипе, аран хашкакан пулнипе, кăштах канса тăтăмăр. Унтан Волгострой çурчĕсем тĕлне çитсе сылтăмалла пăрăнтăмăр. Акă ĕнтĕ, тепĕр çĕр метр çеç каймалла пирĕн... çитетпĕр...

Асту, çитетпĕр мар-и!

Хуняма урамри ешĕл курăк çинче сиккелесе çӳрекен икĕ кролике курах каять! Каллех чарăнса тăрать те усал кĕсре пек чăхăмлама тытăнать:

— Юрамасть кунтан кайма! Кролик вăл — мулкач ратти, анчах çул çинче мулкач тĕл пулакан ĕмĕрне те ыр курман! Атьăр, тепĕр пралукĕпе çаврăнса каятпăр!

Тьфу, тухатмăш пуçĕ!..

Лач! суртăм, тарăхнипе чĕтреме тапратса.

— Кайăрах, кайăр! Хуть те Хыркасси патĕнчен çаврăнса килĕр, хуть те Етĕрнене çитĕр, чармастăп, анчах эпĕ тек сирĕн хыççăн ытлашши пĕр утăм та тумастăп, çитет мана!..

Пĕррех ал султăм та малалла уттара патăм. Хуняма хыçалтан мана хăратса кăшкăрса юлчĕ:

— Асту, кĕрӳ, асту-у! Кайран ӳкĕнмелле пула-ать!..

Эп çаврăнса та пăхмарăм, васкакан салтак уттипех ярăнтартăм малалла. Ик минутранах çитес çĕре çитрĕм. Тинех пĕтрĕ ман асап! Халь ĕнтĕ пӳрте кĕмелле те, ытти хăнасемпе пĕрле ларса, ăш пиçнипе тӳрех пĕр-ик курка сив сăра çавăрса хумалла. Ай-ай, аван пулать!..

Ĕçмен сăра тутипех киленсе, алăк шашулкки çине пусса кил хушшине кĕтĕм те... Тур çырлах! Мĕне пĕлтерет ку?! Сарай умĕнче, ĕмĕлте, виççĕн-тăваттăн çапăçаççĕ. Чăнласах, çине тăрсах, эхлетсе-мехлетсех хĕнеççĕ пĕр-пĕрне!

Нач! Жач! Çат! Пат!

Сăмахпа вăрçни ытлашши илтĕнсех каймасть, хутранситрен çеç, пĕр-пĕрне меллĕрех тивертнĕ самантра, шăл витĕр кĕскен-кĕскен калаçса илеççĕ.

— Килет! Килмест!

— Пурĕ пĕр килет!

— Курăпăр!

— Ак сана — килмест тенĕшĕн!

— Ак сана — килет тесе суйнăшăн!

Çат, пат! Жач! нач!

Мĕскер хăтланаççĕ кусем? Мĕншĕн тӳнккеççĕ пĕрне-пĕри? Хуçи ма чармасть тата вĕсене? Тен, хăйĕн хăнисем автансем пек çапăçса кайнине пĕлмест те вăл, пӳртре ытти-семпе савăнса юрласа ларать? Çук, юрамасть кун пек, чарас пулать, хĕрĕнкĕскерсем пĕрне-пĕри тем туса хурĕç!..

Алăри лакăма çĕре лартрăм та, чупа патăм çаксем патне.

— Юлташсем, эсир мĕн, ухмаха ертĕр-и? Пăрахăр çапăçма! Епле намăс мар сире?

Итлемеççĕ. Хăнк та тумаççĕ, çаплах тӳпелешеççĕ.

— Килет! Ак сана!

— Килмест! Ак...

— Чарăнăр, тетĕп!— пĕтĕм вăя хурса кăшкăртăм эпĕ.— Чарăнмастăр пулсан, халех милицие чĕнетĕп!

Капла калани те витмерĕ. Вара эпĕ, çаксене вăйпах чарас тесе, паттăрлансах кĕрсе кайрăм вĕсем хушшине. Пĕрне аяккалла тĕксе ятăм, тепĕрне сирпĕнтертĕм...

— Чарăнăр, ухмахсем!

Анчах çав вăхăтра çапăçакансенчен пĕри хăйĕн чул пек чышкипе пĕррех тăхăнтартса ячĕ мана тута урлă. Палт! кайса ӳкрĕм каялла. Темиçе самант хушши тăнсăр пулса выртрăм пулмалла... Унтан хуллен кăна тăрса лартăм та, çăвар тăварлăрах ăшă шĕвекпе тулса ларнине туйрăм... Юн! Çăвар тулли юн иккен манăн. Лач суртăм курăк çине. Юн ăшĕнче шап-шур шăлсем курăнса кайрĕç. Сакăр штук! Питĕ стайлă лектернĕ вара мана!

Кайран мĕн-мĕн пулнине ытла йĕркипех астуса çитерейместĕп, пĕр хушă пуç çаврăнчĕ манăн. Пӳртрен кил хуçипе ытти хăнисем сиксе тухса çапăçакансене чарчĕç

пулмалла, пĕр-иккĕшне çыхса та пăрахрĕç курăнать, анчах çыхса пăрахсан та вĕсем: «Килет! Килмест!» тесе кăшкăрса выртрĕç. Унтан хуняма карчăкĕпе хамăн арăм пырса çитрĕç. Ман çăвартан юн палканине курсан, хунями хамах çунтарма тытăнчĕ:

— Каларăм вĕт сана çав çулпа ан кай тесе! Итлемерĕн! Халь куртăн-и ĕнтĕ, чухларăн-и?! Ваттисен сăмахĕнчен иртсен яланах çапла пулать вăл, асту çавна-а! Хăвах айăплă, хăва-ах!..

Арçури пек çухăрать, эсрелĕ!

Ну, паллах ĕнтĕ, хăнара ларасси пулмарĕ, арăм мана тӳрех поликлиникăна сĕтĕрсе кайрĕ... Халь те çӳретĕп авă — малти шăлсене ларттарас пулать вĕт-ха, каплипе шăлсăр пурăнма май çук... Çавăн пек ман истори, тусăм!

...Андрей Иванч хăйĕн калавне вĕçлесе ассăн сывласа илчĕ.

— Анчах кунта санăн хуняму айăплă пулнине курсах каймастăп-ха эпĕ,— терĕм ăна кăшт тăхтасан.— Ӳсĕрсем çапăçнă çĕре эсĕ ху кĕрсе кайнă-çке-ха, хуняму ăна куçпа та курман...

— Анчах вĕсем мĕншĕн çапăçса кайнă, тетĕн?— тарăхнă пек пулчĕ Андрей Иванч.

— Ăна пĕлместĕп вара.

— Ман пирки тӳпелешнĕ вĕсем!

— Епле апла — сан пирки?

— Çаплах. Мана кĕтнĕ-кĕтнĕ те тавлашма тытăннă: пыратăп-и эпĕ, çук-и? Çыннисем пурте палланăскерсем вĕт. Пĕрисем — килет, тенĕ, теприсем — килмест, тенĕ. Пĕри мана хӳтĕлет, Андрей Иванч — тĕрĕс çын, хăй сăмахне нихçан та улăштармасть, тет, тепри ăна хирĕç кастарать. Ну вара... хĕрĕнкĕрех çынна нумай кирлĕ-им? Çавнашкал тавлашкаласа илеççĕ те тытăçса ӳкеççĕ, унтан урсах каяççĕ. Эпĕ вĕсене чарма пырсан мана та паллаймарĕç... Çапах та хăйсем мĕн сăлтавпа çапăçса кайнине манман, пĕр-пĕрне тыллана чух та: килет! килмест! тесе çухăраççĕ. Ман пирки пулнă вăл сăмахсем. Анчах енчен те эпĕ хамăра пыма хушнă сехетре пырса çитнĕ пулсан, нимĕн те пулмастчĕ! Хăнана васкас вырăнне, эпир çул çинчи хура кушаксемпе, пуш витресемпе, вăрăм çӳçлĕ пупсемпе пăтрашса çӳрерĕмĕр, çавăн пиркиех ик сехет ытла кая юлса пытăмăр... Кам айăплă-ха ĕнтĕ уншăн? Хуняма мар-и? Э? Кала-ха эс мана!

— Тĕшмĕш айăплă,— терĕм эпĕ.— Тĕшмĕш!..

ÇАКĂН ПЕК ТЕ ПУЛКАЛАТЬ ИККЕН...

(Çул çинче курни-илтнисенчен)

ПОЕЗД ПĔР ПĔЧЕК разъездра йăпăртлăха чарăнса тăрсан, пирĕн вакуна темле тĕлĕнмеллерех çын кĕчĕ. Вăл вăрăмрах кăвак плащ тăхăннăччĕ, пуçĕ çинче — самаях лутăрканнă хура фетр шлепке; хĕрлĕ сухалĕ ытла пысăках мар, анчах кирлĕ чух тытса силлеме çителĕклĕ, сăмси хуран кукли манерлĕрех, çăварĕ сарлака, тутисем хулăн. Куçĕсем пирки нимĕн те калаймастăп, мĕншĕн тесен сулахайне вăл марлĕпе ним курăнми çыхса лартнăччĕ, сылтăмми кăваккăн-симĕссĕн шыçса тухнăччĕ.

Эпĕ хамăрăн купе тĕлĕнчи чӳрече умĕнче чĕлĕм туртса тăраттăм. Çав çын, хăй валли вырăн шыраса, кашни купе çинех хăрăх куçĕпе чалăшшăн пăха-пăха, ман паталла çывхарчĕ.

— Мĕнле этем вара ку?— шухăшларăм эп ун çинчен.— Пуп тес — пуп мар... Ахаль çын майĕ те çук... Тата унăн куçне-пуçне мĕн пулнă-ши? Карчăкĕ ăнсăртран çатмаруç-çипе лектернĕ-ши, е ĕçкĕре пĕр-пĕр пуçани тăхăнтартса янă?

Кĕçех вăл ман тĕле çитрĕ те, пирĕн купенелле пăхса:

— Кунта та пушă вырăн çук-ши?— тесе ыйтрĕ.

Ну, сасси вара! Аçтан кăна пулать пулĕ этемĕн çакăн

пек сасă!.. Сасă мар — труба! Духовой оркестри чăн пысăк трубаран тухакан сасă та кунтан çинçерех пулĕ! Çынни лăпкăн çеç ыйтрĕ вĕт-ха, кăшкăрса-туса мар, апла пулин те, ун сассине пĕтĕм вакунĕпе кĕрлесе кайрĕ. Енчен те, ку çын кăштах сыпса, кăшкăрса юрласа ярсан, мĕн пулĕши? Пурне те хăлхасăр туса лартать пуль çав, тупата!

Çак шухăшсем ман кукша пуçăмра çиçĕм пек хăвăрт çиссе илчĕç, çав хушăрах эпĕ ăна:

— Вырăн пур унта, пур, кĕрсе ларăр,— терĕм.

— Тавтапуç, дорогой тавариш,— каллех мĕкĕрсе илчĕ вăл, ман еннелле пуç тайса.

— «Тавариш» текенскер, ку пуп пулма кирлĕ мар...»— шухăшларăм хам ăшăмра.

Хайхискер, купене кĕрсе чӳрече патнерех вырнаçса ларчĕ те хашш! сывласа ячĕ. Этем тени çакăн пек хăватлăн сывланине ку таранччен те илтменччĕ...

— Вăт, пулать те иккен ӳпке! Тимĕрç лаççинчи вĕркĕч вĕт ку!— ирĕксĕрех ăмсанса илтĕм эпĕ.

Поезд вырăнтан хускалса малалла ыткăнчĕ, эпĕ те хамăн вырăна, çӳлти нар çине хăпарса выртрăм та çак çынна хăй сисмелле мар сăнама тытăнтăм. Вăл сулахай куçне çыхнине тӳрлетрĕ, унтан çумĕнчи сăран сумкинчен пĕр чĕрĕк ăрех, шаритленĕ пĕр чăх тата çур çăкăр кăларса чӳрече умĕнчи пĕчĕк сĕтел çине хучĕ те апатланма тытăнчĕ. Тĕлĕнмелле вăйлă апатланчĕ вăл! Чĕрĕкне пĕррех кутĕнчен çапса уçрĕ те аниченех ĕçсе ячĕ, унтан хăрах аллине тем пысăкăш çăкăр чĕлли, теприне — çур чăх тытса çавăрттарма тапратрĕ. Эх, çиет, эх, çиет çав, виçĕ çул ним çимен пек!

Çирĕ-çирĕ те — юлашкинчен какăрчĕ. Каçарăр мана, анчах вăл мĕнле какăрнине нимĕнпе те танлаштарса парăймастăп. Ун йышши сасă эпĕ çĕр çинче аллă çул пурăнса та илтмен!

Вăл какăрнинчен хăрасах пулас, ман айри сак çинче сывăракан ватăрах çын тăпăл-тапăл! сиксе тăрса ларчĕ те куçĕсене сăтăркаласа илчĕ. Кам пĕлет, тен ăна çак самантра хамăр ларса пыракан вакун тăрук арканса кайнă пек туйăннă-и?..

Ана-кăна пĕлместĕп, анчах çав ыйхăран вăраннă çын леш какăракан çынни çине, хăй умне упа килсе ларнă пекех, тĕлĕнсе пăхма тытăнчĕ. Татах куçĕсене чышкисемпе сăтăрса илчĕ. Çав вăхăтра лешĕ те ăна хăрах куçĕпе пăралланă пек пăхрĕ.

— Чим-ха, чим-ха...— терĕ юлашкинчен ыйхăран вăранни,— эсĕ... эсĕ, ăнсăртран, Мамун Петровччă мар-и? Панкрутов юлташ мар-и эсĕ?

— Чăн-чăн çавă,— пуçĕпе сулса илчĕ хăрах куçли,— анчах эсĕ ху кам пулатăн? Тем, уйăрсах илейместĕп-ха эп сана. Манăн халĕ куçĕсем те çавăн пекрех те-ха...

— Ара, эпĕ Хураçкин вĕт! Хураçкин! Илля Иллич! Неушлĕ паллаймастăн?! Асту-ха, Канашри çăмарта складĕнче пĕрле ĕçлерĕмĕр! Эсĕ заведующи пулсаттăн, эпĕ санăн складовщикчĕ. Питĕ лайăх пурăнсаттăмăр эпир, анчах кайран пире...

— Çапла, çапла!— мĕкĕрчĕ ăна хирĕç Мамун Петрович,— кайран пире иксĕмĕре те хыçран тапса кăларса ячĕç...

— Анчах эпир санпа нимĕн чухлĕ те айăплă марччĕ!— аллипе кăкрине çапса илчĕ Хураçкин.

— Çапла, çапла!— каллех мĕкĕрчĕ хăрах куçли.— Пирĕн нимĕнле айăп та пулман, сасартăк пырса ревизи тусан, вунă пин çăмарта тухмарĕ кăна...

Авалхи туссем хăйсен ĕлĕкхи пурнăçĕнчен тем те пĕр аса илме пуçларĕç. Шутсăр лайăх пурăннă иккен вĕсем, çав тери ыр курнă! Чăх çăмарти пысăк япала мар пулин те, вĕсем иккĕшĕ те, çăмарта çине çăмарта купаласах, Канашра çуртсем лартнă-мĕн, анчах кайран вăл çуртсем хула Совечĕ аллине куçнă... Туссем те нумай пулнă вĕсен, ĕçкĕ-çикĕ тусан ниçта шăнăçса пĕтмен, анчах кайран, кусене суда парсан, таракансем пекех тарса саланнă...

Хăйне ĕлĕк нумай ыр тунă çынна тĕл пулнăшăн савăннипе ирĕлсех кайнă Хураçкин Çĕрпӳре вакунран чупса тухса çур литр илсе кĕчĕ, вара вĕсен калаçăвĕ татах ăнса кайрĕ. Музыкантсен чĕлхипе каласан, Хураçкинĕ балалайкă пек тăнкăртатрĕ, Панкрутовĕ контрабас пек кĕрлерĕ.

Вĕсем мĕн-мĕн çинчен калаçнине çырса та пĕтереймĕн. Тата вăл кирлех те мар пуль. Анчах вĕсен калаçăвĕн пĕр сыпăкне ниепле те пăрахса хăварма çук... Темĕн те пĕр аса илнĕ, такама та асăннă, хăйсем халь ăçта, мĕн туса пурăнни çинчен пĕлнĕ хыççăн (иккĕшĕ те тăван ялĕсенчех пурăнаççĕ, нимĕнле «должнăçра та тăмаççĕ» иккен) И. И. Хураçкин, хăйĕн авалхи пуçлăхĕнчен именнĕ пекрех пулса, хăюсăртараххăн калаçма пуçларĕ:

— Мамун Петровччă! Эс каçар та-ха... анчах санăн пит-куçу тĕлĕнтерет-ха мана. Мĕн пулчĕ капла? Эп астă-

васса, эсĕ çапăçса-çĕмрĕлсе çӳрекен çын та марччĕ... Э? Кам кун пекех пăсса хучĕ санăн фотографине?

Ответ вырăнне Панкрутов паçăрхи пекех хашш! сывласа ячĕ те, унăн сывлăшĕ пырса çапнипе сĕтел çинчи эрех кĕленчи те ташласа илчĕ.

— Кулмастăн-и?— ыйтрĕ унтан Панкрутов.

— Ай-уй, Мамун Петровччă, ан тĕлĕнтер-ха!— хăранă пекрех пулчĕ Хураçкин.— Кун пеккине курсан, кулма мар — макăрса ямалла-иç!

— Турра ĕненекенсем çавăн пек юсаса ячĕç мана,— сăмса витĕр нăрлатса илчĕ Панкрутов.— Православнăй халăх илемлетрĕ. Христос тĕнĕшĕн асап курма тиврĕ...

— Ан шӳтле-ха эсĕ! Мĕнле майпа?— сак çинче сиксе илчĕ Хураçкин.— Пулма пултараймасть!..

— Пирĕн çылăхлă çĕр çинче тем те пулма пултарать тусăм.

— Вăл çапла-ха, вăл тĕрĕс,— килĕшме васкарĕ Хураçкин,— анчах эсĕ Христос тĕнĕшĕн асап куртăм, тетĕн те-ха... Эпĕ ку таранччен пĕлнĕ тăрăх, эсĕ... чиркӳ çынни, пуп таврашĕ мар вĕт-ха?.. Е... хе-хе-хе...

— Чутах архимандрита тухаттăм!— аллипе сулчĕ те Панкрутов хăй те кулса ячĕ.

— Нимĕн те ăнланмастăп!— пĕççине шарт! çапрĕ Хураçкин.

— Ничево, халех ăнланатăн акă. Итле,— терĕ Панкрутов, тепĕр çур стакан ярса ĕççе.

Хураçкин сĕтел патнерех шуса итлеме хатĕрленсе ларчĕ. «Хăлхисене чăнк! тăратрĕ», теççĕ ун пек чух. Эпĕ те, çӳлте ним чĕнмесĕр выртаканскер, Панкрутов калавне тимлесех итлес-ха, терĕм...

— Еçĕ çапла пуçланчĕ,— терĕ вăл, эрех хыççăн ĕмнĕ пулă хӳрине аяккалла ывăтса.— Пĕлтĕр-виçĕм çулхи пекех, эпĕ кăçал та ял-йышсенчен йӳнĕ хакпа пĕр вакун паранкă пухрăм та Атăл тăрăх анаталла кайса килтĕм. Питĕ лайăх кайса килтĕм, тес пулать. Укçа — пĕр чăпта. Тавăрăнтăм та — яла тĕлĕнтермелле ĕçкĕ тума шутларăм. Утмăл çул тултартăм-çке кăçал! Тăван-хурăнташсене çеç мар, кăшт палланăрах çынсене те чĕнтĕм — асăннчăр пĕрре. Виçĕ кун тĕпĕртетрĕç, аран-аран саланкаласа пĕтрĕç. Тăваттăмĕш кун ирхине те пурччĕ-ха темиçе çын, чăн инçетрен килнисем. Анчах мухмăр уçмалли нимĕн те юлман иккен — пĕтĕмпех типĕтнĕ! Лавккана чуптартăм — питĕрнĕ, продавщикĕ района кайнă, каçсăр пулмасть, терĕç. Мĕн

тăвас? Хамăн та ĕнтĕ пуç çурăлса тухать... Çиччас, терĕм хăнасене, Юманлăха кайса килетĕп, инçе мар унта, пулсан пулĕ пĕр тăватă сухрăм. Халь çеç илсе килнĕ ак çак çĕнĕ плаща тăхăнтăм, пуç тăрне шлепке лартса ятăм (унччен эпĕ нихçан та шлепке таврашĕ тăхăнман), чăматан йăтрăм та тухса танккарăм... Юманлăха çитетĕп — унта та хупă, продавщик районра, теççĕ. Канашлу иккен вĕсен! Анчах манăн ниепле те пуш алăпа таврăнма юрамасть. Тытрăм та — тепĕр пилĕк çухрăмри яла, Кăвапакассине, уттара патăм. Ку ял — пирĕн район мар, çавăнпа та продавщик килтех пулмалла-ха, тетĕп. Чăнах та, уçă иккен лавкки, мана кирлĕ таварĕ те тем чухлех. Чăматана тултартăм та хамăн ăш хыпсах тухнă пирки тепĕр чĕрĕк илсе çавăнтах ланкăртатартартăм. Пурнăç тӳрех лайăхланчĕ манăн, урасем те çăмăлланчĕç, юрлас та килсе кайрĕ. Тем сăлтавпа-çке, çăвара чиркӳ кĕвви пырса кĕчĕ те пĕрмай çавна мăрлатса пытăм. Пĕр ял витĕр тухрăм, тепĕр ял витĕр. Виççĕмĕшĕнче, çырмари çăл тĕлĕпе иртсе пынă чух, мана сасартăк икĕ карчăк чарса тăратрĕç.

— Итле-ха, ырă çын, эсĕ пачăшкă мар-и?— тесе ыйтаççĕ.

Ним шутламасăр-тумасăр, кайран-малтан мĕн пуласси-не чухламасăр, шӳтле пек мĕн пек, çаксене хирĕç: «Пачăшкă-çке!» тесе пер яр! Нумай та пулмасть лавккара ĕçсе тухнă чĕрĕк салтса ячĕ пулас çав ман чĕлхене! Карчăксем картлă кĕвентисене пăрахсах калаçма тытăнчĕç вара манпа...

— Илтнĕччĕ çав эпир, Çĕнъял чиркӳне çĕнĕ пачăшкă килмелле, тетчĕç. Эппин, эсĕ-ха вăл?

— Эпĕ,— тетĕп.

— Ах, пачăшкă, пирĕн пĕр ĕç пур та... Те ерçетĕн эсĕ, те ерçейместĕн ĕнтĕ...

— Сирĕн кам та пулин вилнĕ-им? Вилнĕ пулсан, тăпри çăмăл пултăр, çылăхлă чунĕ çӳлти патшалăха лектĕр!— терĕм те, хам çавăнтах вăшт-вашт сăх-сăханçи туса илтĕм.

— Çук-çук, пачăшкă, вилмен, çуралнă!— терĕç карчăксем.— Пирĕн иксĕмĕрĕн те мăнуксем çуралчĕç...

— Питĕ аван ку! Вара мĕн-ха?

— Ара, вĕсене тĕне кĕртмен-çке! Чиркӳ йĕркипе ят хуман, çавă чуна ыраттарать пирĕнне! Ашшĕ-амăшĕсем, ну, пирĕн ывăлсемпе кинсем ĕнтĕ, туррине питех ĕненмеççĕ те ачисене ним тусан та чиркĕве парса ямаççĕ-çке... Çавăнпа

та эпир ку ĕçе епле пулсан та килтех майлаштарасшăн та... Пулăшмăн-ши пире, пачăшкă?

Чухлатăн-и, Илля Иллич, ĕçсем ăçталла çаврăнса кайма пуçларĕç? Малтан эпĕ, хăйсем ыйтнăран, шӳтлесе калаçрăм, анчах халĕ чăн-чăн пупах пулма пуçларăм вĕт! Манăн вĕсене: «Ухмахсем эсир, мăйракаллă шуйттана пуп-ран уйăрса илме пултараймастăр»,— тесе, уттара памаллаччĕ, анчах ман ăшри шуйттанĕ — леш чĕрĕкĕ — тата ытларах йĕкĕлтерĕ пулмалла çав! Итлемелле марччĕ ăна, анчах вăхăчĕ иртсен мĕн тăвас-ха?

— Тарха-асшăн, пачăшкă! Чăрмав пулсан та, ыр туса хăвар ĕнтĕ пире... Эпир сана уншăн ахаль тумăпăр, чиркӳ-ри хакпах тӳлесе ярăпăр, ытларах та парăпăр...— йăлăнма тытăнчĕç хайхи кинемейсем. Хăйсем ман çине çеттуй турăш çине пăхнă пекех пăхаççĕ; пĕри ик-виç хут сăхсăхса та илчĕ.

Э, мĕн пулать, мĕн килет, мăшкăллас-ха пĕрре ку ухмахсенчен, кайран кулса пурăнмалăх пултăр!— терĕм вара. Тепĕр тесен, ачана хуранти шыва хуть пуп чиксе кăлартăр, хуть эп чиксе кăларам — вĕсемшĕн пурĕ пĕр мар-им? Тата лешсем те ман пекех шарлатансем вĕт-ха! Пĕр çĕр çинчех çӳретпĕр, пĕр йышши эрехех ĕçетпĕр-иç? Карчăксен те кăмăлĕ тулать, хамăн та пĕрре мухмăр уçмалăх укçа пулать!

— Акă мĕн, инкесем,— терĕм хайхисене,— манăн халĕ чăнах та вăхăт çук, питĕ шутсăр васкатăп, анчах сире те кӳрентерес килмест... Тĕне кĕртсе паратăп сирĕн мăнукăрсене!

— Сăпаççипах, пачăшкă, ырă кăмăлушăн, сăпаççипах!— каллех сăх-сăхса илчĕ пĕри.

— Анчах та ку ĕçе питĕ хăвăрт тăвас пулать. Тата... вăрттăнтарах вырăн кирлĕ, мĕншĕн тесен халь пире килтен киле çӳресе тĕне кĕртме чарнă. Чиркӳре çеç кĕртмелле, ĕççĕ. Эсир хăвăр тархасланăшăн кăна йĕркене пăсатăп, ăнланатăр-и?

— Анланмасăр, ара, пачăшкă, эпир ухмахсем мар вĕт!

— Вырăнĕ пирки ан пăшăрхан, ăна халех тупăпăр, никам та курмĕ, никам та илтмĕ...— пакăлтатса илчĕç карчăксем.

Тепĕр пилĕк минутранах вĕсем мана пысăк сад çумĕнчи çĕнĕ пӳрте илсе кĕртрĕç. Пуп пулса тăнă май, эпĕ пӳрте кĕрсенех: «Çак киле ĕмĕр-ĕмĕр турă сыхласа усратăр», тесе хĕрес хурса илтĕм.

— Ĕçнĕ тума мĕн-мĕн кирлĕ пулать-ши, пачăшкă?— ыйтрĕ пĕр карчăкĕ, ман çине пăхса тек сăх-сăхаканни. Вăл çак кил хуçи пулнă.

— Эсир мĕн, çак таранччен пурăнса та ача тĕне кĕртсе курман-и?— кăмăлсăрланнă пек пултăм эпĕ.— Така хуранĕ пур-и сирĕн?

— Пур.

— Ашăрах шыв пур-и?

— Пур.

— Урăх нимĕн те кирлĕ мар. Хатĕрлĕр часрах, калаçăм вĕт-ха — васкатăп эпĕ!

— Чиччас, чиччас, пачăшкă!

Карчăксем тухса вăркăнчĕç. Эпĕ, пĕччен юлнăскер, чăматанран пĕр çур литр кăларса шап! уçрăм та пĕр тăватпилĕк хут ĕмсе илтĕм. Ĕçе тытăнатăп-çке, вăй кирлĕ мана! Хамăн ниçта кайса кĕмелле мар кулас килет: мĕн хăтланкалăп-ха эпĕ? Ача тĕне кĕртнĕ чух пупсем мĕнле сăмахсем каланине ним астумастăп!

Анчах манăн шухăшласа тăма вăхăт пулмарĕ. Кил хуçи карчăкĕ çурри таран шыв тултарнă така хуранĕ йăтса та кĕчĕ.

— Ăçта лартас, пачăшкă?

— Акă, турă кĕтессине, сĕтел çине!

— Урăх ним те кирлĕ мар-и, эппин?

— Калаçăм-çке! Тавайăр ачисене, ăçта вĕсем?

— Чиччас, чиччас...

Карчăк каллех тухса чупрĕ. Эпĕ малтан шлепкепе плащца хывса хурас, тесеттĕм, анчах ку шухăша çавăнтах пăрахрăм, мĕншĕн тесен вĕсене хывсан манăн пĕтĕм пуп тĕсĕ каять: çӳç те кĕске, брюкийĕ те галифе... Пултăрах, терĕм вара, вĕсем пурпĕрех нимĕн те ăнланмаççĕ вĕт!

Кĕç урамран хайхи карчăк икĕ ача илсе кĕчĕ: пĕрине çĕкленĕ, теприне çавăтнă.

— Çаксене иккĕшне те кĕртесчĕ,— терĕ вăл, хашкаса.— Тĕне кĕмесĕрех çитĕнеççĕ вĕт, шуйттан чĕпписем!

— Хывăнтар! — командă патăм эпĕ.— Халех Христос тĕнне паратпăр эпир вĕсене!..

Карчăк пĕчĕккине сак çине тăратса вăшт кăна кĕпине хывса илчĕ. (Йĕмми çукчĕ унăн). Ача нăшăклама тытăнчĕ.

— Ан макăр, ачам, ан макăр,— ӳкĕтлерĕ ăна карчăк,— пуп мучу сана нимĕн те тумасть, вăл сана чăпăл кĕртет çеç... Пуп мучу ла-айх çын вăл... Ыран сана канфе-ет илсе парăп...

Анчах та ачана ман пата илсе пырсан, вăл хăйне сасартăк йĕппе тирнĕ пекех ал-урипе тапкаланса çухăрса ячĕ. Хытăран хытă, хытăран хытă! Манăн ăна-кăна пăхса тăмалла пулмарĕ, эпĕ часрах: «Рождество твоё христе-бо-оже на-аш!» тесе юрласа ятăм та ачана виçĕ хутчен хурана чиксе кăлартăм.

— Ашшĕпе ывăлĕ, святой сывлăшĕ ячĕпе — амин! Ме, тыт, пулчĕ!— терĕм те унтан, чыхăнса кайнă ачана карчăка каялла патăм.

— Ятне каламарăн-çке эсĕ, пачăшкă?— иккĕленерех ыйтрĕ вăл.

— Вăл не обязательнă!— терĕм ăна хирĕç.— Тавай теприне!

Карчăк алăк патĕнче тăракан куçне-пуçне чарса пăрахнă арçын ача патнелле утрĕ, анчах лешĕ пĕррех çенĕкелле тапса сикрĕ. Карчăк — ун хыççăн. Çенĕкре тĕпĕртетни, кĕрешни, унтан ача шари! кăшкăрса яни илтĕнчĕ, анчах самантранах карчăк ăна кутăн çĕклесе кĕчĕ.

— Эсрелĕ ачи! Çыртать тата!— хыçĕнчен нач, нач! тутарса илчĕ те вăл ăна, сак çине пăрахса кĕпи-йĕмне хывма тытăнчĕ. Ачи — пĕр улттăсене çитнĕскер — этем майсăр тапкаланчĕ, кукамăшне çапрĕ, тапрĕ, чышрĕ, çыртрĕ...

— Ан тив мана-а! Чăпăл тутармастăп эпĕ-ĕ! Апия кала-ап!— çухăрчĕ хăй.

Ĕç вăраха кайма пултарнине кура, эпĕ вĕсем патне пырса ача аллисене каялла пăрса лартрăм, карчăк вара тинех унăн йĕмне хывса илчĕ. Çакăн хыççăн пĕр самант та тăхтамасăр, эпĕ ачана хăпăл-хапăл çĕклерĕм те хурана чикме тăтăм, анчах та вăл, мошельник, икĕ аллипе те пĕр харăсах мана сухалтан ярса тытрĕ.

— Апия кала-ап!— çухăрать хăй.

— Яр сухала!— тетĕп.— Яр сухала!

Ямасть! Пĕчĕк пӳрнисене хурçăран тунă, тейĕн!

— Яр теççĕ сана, хулиган эдăкки! Асту эп сана!..

Çаплах ямасть! Ирĕксĕрех каçанĕнчен паркаласа илмелле пулчĕ. Тин вĕçертрĕ сухала. Тарăхнипе вара эп ăна хурана пуç хĕрлĕ чике-чике кăлартăм. Анчах кунта та сăтăр туса илчĕ шуйттан çури: виççĕмĕш хут чикнĕ чух пуçне тăрук аяккалла пăрчĕ те, хуран пĕррех урайнелле вăркăнчĕ, шывĕ тăкăнса кайрĕ...

— У-у, вилменскер!— çӳçĕнчен тытса лăскаса илчĕ ăна кукамăшĕ. Ачи вара, кĕпи-йĕмне тăхăнмасăрах, пӳртрен пульă пек тухса сирпĕнчĕ...

Çав вăхăтрах тепĕр карчăкĕ икĕ пĕчĕк ача йăтса пырса кĕчĕ — иккĕшĕ те хуп-хура та кăп-кăтра, пуçĕсене чи хаклă каракульпе витнĕ, тейĕн.

— Йĕкĕрешсем-ха вĕсем пирĕн,— терĕ карчăк, именнĕ пек пулса.

— А маншăн пурĕ пĕр, хуть те пиллĕкĕн пĕр харăс çуралнă пулччăр,— терĕм ăна хирĕç.

Кусемпе чăрмавах пулмарĕ, рас-рас анчах чике-чике кăлартăм хурана. Макăрса яма та ĕлкĕреймерĕç.

— Халь ĕнтĕ каяс пулать манăн, килте кĕтекенсем пур!— терĕм çакăн хыççăн.

— Мĕн чухлĕ парас пулать-ха сана, пачăшкă?— ыйтрĕ кил хуçи, аллине хĕвне чиксе ярса.

— Сирĕнтен хаклă илместĕп, кашни ачишĕн çуршар литрлăх парсан çитет,— терĕм.— Хама сухалтан турткаланăшăн ытларах илмелле те — юрĕ ĕнтĕ, каçарăп...

Карчăксем пĕр сăмахсăрах аллăшар тенкĕ кăларса пачĕç.

— Сăпаççипах сана, пачăшкă!..

— Мана мар, турра тав тăвăр,— алăпа султăм эпĕ.

Вĕсен укçине галифе кĕсйине вырнаçтарса хамăн чăматана алла тытсаттăм кăна — пӳрт алăкĕнчен шăкăрт! тата икĕ карчăк кĕрсе тăчĕç. Иккĕшĕ те пĕчĕк ачасем йăтнă.

«Ак тамаша, кусем те çав шутпах килчĕç-ши?»— хăрасах кайрăм эпĕ.—«Мĕн пулса тухать-ха капла? Лекме те пултаратăп вĕт!..»

Эп йăнăшман иккен, кусем те мăнукĕсене тĕне кĕртте-ресшĕн пулнă.

— Пĕрре килнĕскер, пире те ыр туса хăвар ĕнтĕ, пачăшкă...

Тархасласах ыйтаççĕ! Ним тума та çук, ирĕксĕрех тата аллă тенкĕ ĕçлесе илмелле пулчĕ. Анчах кусемпе аппаланнă вăхăтра виççĕн тан пырса кĕчĕç! Пĕтрĕ пуç! Хăçан пушанас капла, хăçан киле çитес?

— Вăхăт çук манăн, йышăнмастăп урăх,— тесе те пăхрăм, усси пулмарĕ. Хупăрласах илчĕç, пирĕн ачасене тĕне кĕртмесĕр кăларса ямастпăр, теççĕ.

Вара тата виçĕ ачана хуранти шывра чӳхесе илтĕм, тата çитмĕл пилĕк тенкĕ пулчĕ манăн!

— Ну, урăх тытăнса тăмастăпах, ман каймалла! Сывă пулăр, турă сыхлатăр сире!— терĕм те юлашкинчен çирĕппĕн, чăматана йăтса алăк патнелле утрăм. Анчах мана хи-

рĕç тепĕр хĕрарăм кăштăрт! кĕрсе тăчĕ. Хăйĕн çине пăхма та хăрушăччĕ — çӳçĕ-пуçĕ милкĕ пек, кĕпи çĕлесе тăхăннăранпа та шывра пулман пулĕ, кăкрисем тĕлĕнче сăранлансах ларнă, ачин питне те пĕр уйăх çуман пулмалла. Çав упăте пĕтерсе хучĕ те вара мана, вăл пырса кĕмен пулсанах нимĕн те пулмастчĕ...

— Ай-уй, пачăшкă, эс кайма та-хатĕрленнĕ тем? — ман çула пӳлсе тăчĕ вăл.— Чим-ха, ан васка, ман Ваньккана та тĕне кĕртсе хăвар-ха!

— Вăхăт çук, кайран, тепре килсен кĕртĕпĕр,— терĕм ăна.

— Кая юлсан, каю шăтать, теççĕ, пачăшкă! Çук ĕнтĕ, ун пек килĕшместĕп, эс ăна халех...

— Пултараймастăп, васкатăп!

— Ак ĕнтĕ тата! Çич-сакăр ачана чиксе кăларнă чух васкаман пулать те, ман Ванькка валли вăхăт юлман иккен! Юрамасть ун пек, пачăшкă... Манăн та çынсен ачисем пек ачах вĕт, эп ăна хăраххăн çуратнă пулсан та, арçынсăр туман! Как нипуть уш, э?

— Каланă сана вăхăт çук, тесе!— Эп ăна алăк патĕнчен сирсе яма тăтăм, анчах вăл вырăнтан та хускалмарĕ.

— Алăпах тивес марччĕ, пачăшкă, çынсем умĕнче аван мар ун пек!— терĕ вăл, шăлĕсене йĕрсе.— Тавлашса тăриччен эс луччă часрах ман ачана тыт та мĕн кирлине ту. Чăрмавшăн саплама укçа çукрах тă, эпĕ акă сан валли вунă çăмарта илсе килтĕм... Çитет пуль? Çитменнине тепĕр чух парăп...

Вăт, шуйттан матки! Тухса кайма та памасть, çийĕнчен мăшкăллать тата, йĕксĕк!

— Нимĕн те тумастăп саншăн, пăрăн çул çинчен!— кăшкăрсах пăрахрăм çакна.

— Пăрăнмастăп! Ман ачана чипер тĕне кĕртмесĕр кăларса та ямастăп!— тесе хучĕ вăл.

Ытти хĕрарăмсем те (вĕсем халь улттăн-çиччĕнччĕ ĕнтĕ) ӳкĕте кĕртме тăчĕç ăна:

— Кутăнланма пăрах ĕнтĕ, Марье... Аван мар ун пек... Пачăшкă паçăрах васкать...

— Эсир ан йăсласа тăрăр кунта!— пĕррех урипе тапрĕ ку.— Эпĕ хамăнне хам пĕлетĕп. Пачăшкăна хам пата хăнана илсе кайсан та сирĕн ĕç çук, ăнлантăр-и?!

Ай-вай-вай... Ку арçурирен хăпасси пулас çук, тем те туса хурĕ, намăс та кăтартса пĕтерĕ, тавай-ха луччă мĕн

ыйтнине туса парас та ырăпа тухса каяс кунтан, терĕм вара.

— Хывса ил ачун кĕпине, халех тĕне кĕртсе паратăп!

— Тахçанах çапла кирлĕччĕ, пачăшкă!— кулса ячĕ хайхискер.

Эпĕ унăн ачине хуран тĕлне тытрăм та тарăхнипе мĕн вăйăм çитнĕ таран юрласа ятăм:

— Рождество твое христе-бо-оже наш...

Çав вăхăтра пӳрте пĕр арçын кĕрсе тăчĕ. Пĕтĕмпех салтак тумĕпе, погонĕсем кăна çук. Аллине леш полевой сумкă тенине тытнă.

Пĕтрĕм!.. Алăри çара пакка ачана чутах çĕре ӳкереттĕм, аран-аран амăшне тыттарма ĕлкĕртĕм.

— Так, та-ак...— терĕ çав çын, малалла темиçе утăм туса.— Мĕскер-ха ĕнтĕ кунта сирĕн: чиркӳ-и, костел-и, мечет е синагога? * Мĕн тăватăр эсир кунта?— хĕрарăмсене ерипен пăхса çаврăнчĕ вăл.— Ну-ка, кил хуçи, каласа пар-ха мана тархасшăн...

— Ара, нимех те тумастпăр-ха, Якку шăллăм,— терĕ кил хуçи йăвашшăн.

— Ĕпле апла — нимĕн те тумастăр? Сăмахран каласан, çак така хуранĕ мĕн сăлтавпа сĕтел çине хăпарса ларнă? Ачасене тĕне кĕртетĕр?

— Ара, ачасене тĕне кĕртме саккун чармасть пуль?— хăюлланчĕ кил хуçи.— Пачăшкăна тĕл пултăмăр та, чĕнсе кĕртрĕмĕр çав, чиркĕве кайса çӳреме инçе те-ха...

— Так, та-ак...— терĕ сумкăллă çын каллех.— Тĕне кĕртме те, турра ĕненме те чаракан çук пирĕн, ку тĕрĕс. Анчах халăха улталаса çӳрекенсене пи-итĕ хытă тыткалаççĕ. Да! Ку та тĕрĕс...

Манăн чĕркуççисем лĕнчĕрех авăнса анчĕç. Тытрĕ вĕт ку мана, ухмах шăши çури пекех капкăна килсе лекрĕм, мĕн тăвас?

— Сăмахран каласан, сирĕн шутпа çак гражданин — кам вăл?— ман çинелле тĕллесе кăтартрĕ сумкăллă çын.

— Кам пултăр? Пачăшкă!— терĕç хĕрарăмсем.

— Так, та-ак... Сирĕн шутпа вăл — пачăшкă? Урăхла каласан — пуп, священник, çапла-и? Анчах ман шутпа вăл никам та мар. иртен-çӳрен рядовой жулик кăна! А ну-ка, гражданин, пĕр-пĕр документ кăтарт-ха мана! Эпĕ куна выраннти Совет влаçĕ ячĕпе ыйтатăп. Асту, кăтартмасан эп

---

* Католиксен, мусульмансен тата еврейсен чиркĕвĕсем.

сана халех района ăсататăп, унта сан пеккисем валли питĕ меллĕ учреждени пур — КПЗ, камера предварительного заключения, теççĕ ăна.

Ни вилĕ, ни чĕрĕ тăраканскер, эпĕ хамăн паспорта кăларса тыттартăм. Ял Совет председателĕ ăна васкамасăр, пур страницисене те уçса пăхса тухрĕ. Унтан хамран ыйтрĕ:

— Ялсем тăрăх çакăн пек ачасене тĕне кĕртсе çӳреме мĕнле правасем пур санăн? Удостоверени, ордер, талон, квитанци тата мĕн те пулин кăтарт-ха? Ну?

Манăн чĕлхе çăвар маччи çумне çыпăçса ларчĕ пулмалла...

Председатель хĕрарăмсем еннелле çаврăнчĕ те:

— Ну, вот... Сирĕн умăрта чăн-чăн жулик тăрать. Нимĕнле пачăшкă та мар вăл,— терĕ.

Лешсем пĕр-пĕрин çине тăн-тан пăхкаларĕç те пăлханма пуçларĕç, куçĕсене çутăлтаркаласа илчĕç...

— Пачăшкă мар, эппин, вăл?— пуринчен малтан ыйтрĕ кил хуçи.

— Ĕмĕрне те пулман,— терĕ председатель.

Ну, ахăр самана пуçланса кайрĕ те вара! Председатель чарман пулсан, çавăнтах çурса тăкатчĕç пуль çав, тупата!

— У-у, йытă, намăссăр! Антихрист! Вун икĕ мăйракаллă шуйттан! Вĕри çĕлен! Явăл! Сатана ратти!..— Мĕн кăна илтмерĕм пуль, мăнтарăн, мĕнле кăна ылханмарĕç пуль, мана аса илме хăрушă вĕт!..

Хăйсен укçисене, паллах, манран наччас тăпăлтарса илчĕç. Хамăн укçа та чылаях кайрĕ пулмалла — шутласа тăратăн-им унта? Председателĕ ман адреса çырса илчĕ те хамăр района пĕлтеретĕп, терĕ...

Анчах та чи хăрушши эпĕ киле кайма тăрсан пуçланчĕ. Хайхи хĕрарăмсем хăпмарĕç вĕт манран, хăйсен ялĕнчен тухичченех ăсатса ячĕç. Анчах мĕнле ăсатрĕç, тетĕн? Кам аллине мĕн лекет, çавăнпа переççĕ. Чăн малтан леш юлашкинчен пынă çыпçанккă-хĕрарăм пример кăтартрĕ, хама пама илсе пынă вунă çăмартана мана пуçран персех пĕтерчĕ вĕт, лач та лач! лач та лач! тутарать. Пĕтĕм кĕлетке тăрăх çăмарта сарри юхать! Ыттисем те вара унран юлмарĕç — хăшĕ писнĕ помидорпа ярать, хăшĕ çĕрĕк хăярпа, хăшĕ хытă навуспа... Унтан ал туйисемпе чулсем те хута кайрĕç, ниçтан сыхланса çитмелли çук!

— Жулик! Вăрă! Бандит! Антихрист!— тесе кăшкăрни çеç янраса тăрать хăлхара...

Тӳсме çуккипе эпӗ тарма тытӑнтӑм, анчах тарса ӳкегӗн-им? Хапхасем айӗнчен кашкӑр пек хаяр йытӑсем сиксе тухса, туллама тапратрӗç, эпӗ вӗсене хирӗç алӑри чӑматанпа çапӑçрӑм, вара ман ӗрех кӗленчисем пӗри те юлманччӗ, веç арканнӑ...

Киле таврӑнсан ӗрне чирлесе выртрӑм вӗт çавӑн хыççӑн. Ыратман вырӑн çук! Унтан, ура çине тӑрсан, тӗкӗр çине пӑхрӑм та, хама хам паллаймарӑм. Тепӗр упӑте те манран хитререх пулать пуль!..

— Çапла, пуп пулма пит лайӑх вӗрентӗçç мана. ӗмӗрне те манас çук çав,— тесе вӗçлерӗ Мамун Петрович Панкрутов хӑйӗн калавне.

— Пурнӑçра тем те курма тивет мар-и, мӗн тӑвас?— ӑна хӗрхеннӗ пек ассӑн сывласа илчӗ Хураçкин.

Эпӗ çӑвара картуспа хупласа кулса выртрӑм. Мӗн тумаллаччӗ-ха тата манӑн?

АХ, ÇАВ ХАЛЬХИ АЧА-ПАЧА!

ÇАК САМАХСЕНЕ Виççырма çыннисем хальхи ачасене хурласа мар, çук, пачах урăхла, вĕсене чунтан ырласа калаççĕ, тет.

Ун çинчен мана çак ялти клуб заведующийĕ Андрей Петрович Мазяков, кăмăллă та сăпайлă çын, иртнĕ çулла Атăл леш енчи канмалли çуртра пĕрле пурăннă чух калаçа кăтартрĕ.

— Пирĕн Виççырма ялĕ виçĕ çырма пĕрлешнĕ тĕлте ларать,— терĕ вăл.— Шутсăр тарăн çав çырмасем.. Çыр хĕрринчен аялалла пăхсан пуç çаврăнса каять, кĕç-вĕç кутăн чикеленсе каяссăн туйăнать, аялтан çӳлелле пăхсан — ху таçта çĕр тĕпне анса тăнă пек туятăн, икĕ çыран хушшинчен пĕлĕт çĕтĕк кăвак саппун пек çеç курăнать... Ĕлĕк-авал çак çырмасенче сĕм вăрман кашланă, унта арçурисем, шуйттансем тата ухмахсене хăратма шухăшласа кăларнă ытти çавăн пек чĕрчунсем ашкăнса пурăннă, теççĕ. Унтан вăрманне касса пĕтернĕ те, çав чĕрчунсем кунтан тухса тарнă пулмалла. Çара çырмасем пĕрмай ишĕлсе, сарăлса пычĕç, çавăнпа та эпир темиçе çул каялла пĕтĕм колхозĕпе тухрăмăр та унта темĕн тĕрлĕ йывăç лартса тултартăмăр —

çӳçе, çирĕк, йӑмра, хурӑн, вĕрене... Çырансем ишĕлсе сарӑлма чарӑнчĕç, çырмасенче авалхи пекех «сĕм-сĕм вӑрман, сĕм вӑрман» пулса тӑчĕ...

Мухтанмасӑрах калатӑп, питĕ селĕм вӑрман лартса ӳстертĕмĕр çав çырмасенче! Хӑш-пĕр ӳсĕрсем пырса кĕрсен çухалса кайни те пулнӑччĕ унта. Шутпа, халĕ пирĕн вӑрмана арçурисем те таврӑнма пултарнӑ ĕнтĕ, анчах вĕсем комсомолецсен вӑрманне пыма тытӑнарах тӑчĕç пулмалла — сасси илтĕнмерĕ.

Арçурисемпе шуйттансем вырӑнне çавӑнта пĕррехинче... тур амӑшĕ пырса вырнаçнӑ иккен. Хӑех мар ĕнтĕ, унӑн сӑнĕ пырса выртнӑ!

Йĕркипе калас-тӑк, ĕçĕ-пуçĕ çапла пулнӑ.

Варринчи çырма тĕпĕнче, Арçури варĕ тенинче, çӑл куçĕ пур. Шутсӑр лайӑх çӑл куç. Шӑнкӑртатсах юхса выртать. Хĕлле те шӑнмасть хӑй. Шывĕ вара — ача куççулĕ пек таса, ĕçсе тӑранмалла мар! Çуллахи чи шӑрӑх кунсенче эпир юриех çавӑнтан шыв ӑсса килетпĕр, ма тесессĕн ӑш-чике пит лайӑх кантарать вӑл. Эрех-сӑра тулккине пĕлекенсем унти шыва «столичнӑй» тесех ят панӑ. Колхоз бухгалтерĕ Прокоп Прокопч, ялан шӳт тума юратакан çын, çуллахи вӑхӑтра çав шыва «столичнӑй» кĕленчинех тултарса сĕтел айĕнче усрать.

— Ах, пыр типсе ларчĕ-ха, пĕр çĕрĕшне çавӑрса хурас пуль,— тет те вара çав кĕленчене туртса кӑларать. Хӑй те ĕçет. ыттисене те хӑналать.

Пĕлтĕр çулла çанталӑк питĕ шӑрӑх тӑчĕ. Курӑк та типсе ларма пуçларĕ, кӑнтӑрла пахчасенчи купӑста-хӑяр çулçисем те шанса каятчĕç.

Шӑп çав вӑхӑтра ялта çакӑн пек хыпар сиксе тухрĕ: Арçури варне темле майпа ялти Шĕвĕр Мари тенĕ пĕр хĕрарӑм пырса тухнӑ. Колхозӑн кайӑк ферминче ĕçленĕ чух хур-кӑвакал вӑрланӑшӑн пĕр çулталӑк, сӑмакун юхтарса сутнӑшӑн тепĕр çулталӑк тĕрмере ларса тухнӑ пулин те, турра питĕ ĕненекенскер вӑл. Чан сасси илтсенех чиркĕве тухса чупать. Чиркӳ праçникĕсем вӑхӑтĕнче вара пупсене пулӑшма çĕр выртмаллах каять, анчах унта вӑл мĕн тунинех пĕлместĕп: ирсерен чечук хваттерĕнчен вӑрӑ пек унӑн-кунӑн пӑхкаласа тухса шӑвӑнать, тенине çеç илтнĕ.

Хайскер, çав Шĕвĕр Мари Арçури варĕнчи çӑл куç патне пынӑ пулать те — çӑл куçĕнче турӑ амӑшĕн вĕр-çĕнĕ патречĕ йӑлтӑртатса выртнине курах каять.

— Эй, турă чури Мари, эсĕ ман ятлă пулнипех сана ангелсем çакăнта килме хушрĕç пулĕ!— тесе каларĕ тет çав патрет.— Эпĕ хĕрĕх çул ытла çĕр айĕнче выртрăм, анчах халĕ çăл куçĕнчи тăрă шыв мана çут тĕнчене юхтарса кăларчĕ. Мана ил те часрах турă çуртне, таса чиркĕве кайса пар. Мана кĕл тăвакансен çылăхĕсем каçĕç, чирлисем сывалĕç, асапланакансем ырă курса пурăнма пуçлĕç!..

Мари çавăнтах тур амăш Марин патретне (ну, урăхла каласан — иконăна ĕнтĕ) йăтать те тӳрех чиркӳ патнелле ыткăнать, пачăшкăна шыраса тупса ăна тыттарать. Лешĕ, ӳсĕртерех пулнă пулин те, Мари çине темиçе хут хĕрес хурать:

— Эй, турă чури Мари! Санпа турă амăшĕ калаçрĕ пулсан, эс вилсессĕн тӳрех рая каятăн! Ку турăш — пирĕн турра ĕненекенсемшĕн савăнăç та пулĕ, вĕсене вĕçĕмсĕр телей кӳрĕ! Часрах кун çинчен пурне те пĕлтерес пулать. Ан ӳркен, пур çĕре те çит, пурне те систер, çĕнелнĕ турăш тупăнчĕ, те...

Ну, пуçланса кайрĕ те çакăн хыççăн асар та писер шăв-шав! Ăçта ан пыр — карчăксем пĕр çавăн çинчен çеç калаçаççĕ.

— Арçури варĕнче сĕнĕ турăш тупăннă...

— Çеттуй турăш! Турă амăшĕ, таса Мария, Христос амăшĕ аннă пирĕн пата!

— Ахальтен мар ку, ахальтен ма-ар! Пулатех мĕн те пулин, кĕтсех тăр!

— Ара, курмастăр-им, хăçантанпа çумăр çук! Выçлăх пулать пуль кăçал...

— Ниушлĕ вара турă амăшĕ сиен тăвать пуль пире?

— Пуç çапас пулать ăна, кунĕн-çĕрĕн кĕл туса çылăхсене каçарма ӳкĕтлес пулать!

Малалла мĕн пулнине тавçăрса илме йывăрах мар. Чиркӳ тăрринчи çурăк чан кашни кун чанклатма тытăнчĕ, кашни кун икшер хут кĕлле кĕреççĕ. Амвон çинчен пачăшкă проповедьсем калать,— çапла та капла, пирĕн патра асамлă тур амăш тупăнчĕ, ăна пире турă хăй пиллесе панă, тет.

— Пăхăр-ха, епле таса, хĕпел пекех çутă тур амăшĕн сăнĕ! Анчах та вăл хĕрĕх çул çĕр айĕнче выртнă вĕт-ха! Пуç çапăр ăна, кĕл тăвăр, ун умĕнче çылăхăрсене каçарттарăр! Ун ячĕпе чиркĕве пулăшăр!

Малтанхи вырсарникунах «çĕнĕ тур амăшне» йăтса, чиркĕве пухăннă карчăксемпе стариксем Арçури варне

илсе кайса молебен тăваççĕ. Темĕн чухлĕ çамрăк йывăççене амантса пĕтернĕччĕ, эсрелсем! Каялла таврăнсан, кадилăсене йăсăрлантарса, виçĕ хутчен чиркӳ тавра çаврăнаççĕ, Шĕвĕр Мари пеккисем çав вăхăтрах вĕçĕмсĕр укçа пухаççĕ.

— Таса тур амăшĕ ячĕпе, çĕнелнĕ турăш ячĕпе!

Кайрĕ пурнăç пачăшкăсен! Унччен чиркĕве пысăк праçниксенче те пĕр 30—40 çын çеç пыратчĕç, тет, халĕ вара, Арçури варĕнче «çĕнĕ турăш» тупнă хыççăн, айванcен йышĕ çав тери ӳссе кайрĕ. Хыпарне сарма пĕлнĕ ĕнтĕ чиркӳ çыннисем, çавăнпа та «асамлă турă амăшне» пуç çапма ытти районсенчен те пыма пуçларĕç.

Унччен пачăшкăпа чечук кивелсе кайнă рясăсемпе, чалăшнă кĕлеллĕ атăсемпе кăна çӳретчĕç, халĕ вара иккĕшĕ те туй ачисем пек якалса кайрĕç. Тумтирĕсем вĕр-çĕнĕ, йăлтăртатса кăна тăраççĕ, урисенчи хром сăран атăсем чĕрик! чĕрик! чĕрик! тăваççĕ, сăнĕсем çăмарта пек çаврака-ланчĕç, пачăшкăн хырăмĕ те мăкăрăлса тухма пуçларĕ. Ку çеç те мар-ха: пĕр тăват-пилĕк уйăхран пачăшкă хăй валли петтистеннăй пӳрт лартрĕ, унтан «Победа» илсе ячĕ вĕт! Шофер та тытрĕ!

Анланаканнисем кулчĕç:

— Питĕ вăйлă пулăшать çĕнĕ тур амăшĕ пирĕн пачăшка, калама та çук!

— Турăшне Арçури варне кайса пăрахни ахаль пулмарĕ! Пĕлнĕ вĕсем мĕн тусан мĕн пулассине!..

Паллах, ку вăхăтра эпир, культурă фронтĕнче ĕçлекенсем, алăсене усса, çăварсене карса лармарăмăр, тĕн сĕрĕмне хирĕç лекцисем, калаçусем ытларах ирттертĕмĕр, халăх хушшинче тĕрлĕрен «чудăсем», «çĕнелнĕ турăшсем» мĕнле пулса тăни çинчен калакан кĕнекесем сарма тăрăшрăмăр, анчах Арçури варĕнчи тур амăшĕ çаплах-ха ĕненекенсене хăй патнелле туртрĕ. Мĕн тăвас тетĕн, тĕн сĕрĕмне труках сирсе яма çук! Йывăр чир вĕт вăл.

Пурăна киле, çăварни тĕлĕнче, ялта сасартăк тепĕр хыпар сарăлчĕ: пачăшкăпа чечук пĕр-пĕрине çав тери хытă хĕнесе тăкнă, терĕç. Чечукăн менелник пулнă имĕш. Унта пачăшкăпа матăшкă, чиркӳ старести тата таçти урăх прихутран пынă тепĕр чечукпа хайхи Шĕвĕр Мари пулнă. Ну, хăвăрах пĕлетĕр, менелник тени сыпмаллисĕр пулмасть. Çаксем те какăричченех, пĕр-пĕрине паллами пуличченех ĕçсе лартнă. Ара, укçи нумай та-ха, турра ĕненекенсен кĕсйинчен кусен кĕсйинелле шыв пекех юхса тă-

рать те-ха. Ĕçе-ĕçе картран иртсен, юрласан-ташласан, менелник тăваканни, чечукĕ ĕнтĕ, сасартăк пачăшкăпа старостă çине сиксе ӳкнĕ.

— Çапах та жулик эсĕ, Варсонофи атте! Эсĕ те жулик, старостă!— кăшкăрмa тытăннă вăл.— Эсир иксĕр те ман юна ĕçсе пурăнатăр. Тупăшсене яланах манран пытарса валеçетĕр, хăвăра çĕклемĕпе илетĕр, мана ик пӳрне витĕр кăтартатăр! Тăрă шыв çине кăларатăп ак эп сире!..

— Çăварна хуп, анафемă!— кăшкăрнă ăна хирĕç пачăшкă.

— Кам анафемă? Эпĕ-и?!— тата ытларах вĕресе кайнă чечук.

— Эсĕ çав, кам пултăр тата?— пачăшкă майлă пулса урипе тапнă старостă.

— Аха-а! Эсир халь кун пек калаçатăр-и?— Чечук пĕррех сĕтел çине чышкипе шанлаттарнă.— Анчах кам пуйтарчĕ сире?! Калăр, кам пуйтарчĕ çав тери? Турăшне кам çĕнетрĕ? Арçури варне кам кайса хучĕ? Тур амăшне тупса килме Маруçа кам хушрĕ, мĕн каламаллине кам вĕрентрĕ, эпĕ-и, эпĕ мар-и? Эпĕ, Фонифатий чечук!..

— Анчах сана хăвна кам вĕрентрĕ ун пек тума?— мĕкĕрсе янă пачăшкă.— Санăн хăвăн ĕмĕрне те ăс çитес çукчĕ-ха, мĕскĕн кĕлмĕçĕ! Хуп шăршлă çăварна, антихрист!..

— Эпĕ мар, эсĕ вăл антихрист! Жулик, вăрă! Мана улталаса пурăнатăн, ху пуясшăн çеç тăрăшатăн, мăнтăр сысна!

— Эсĕ ху сысна! Чух-чух!

— Ха, эсĕ манран хамăн килтех мăшкăлласшăн тем? Акă, эп сана пĕрре...— Çавăнтах пӳртре акăш-макăш тӳпелешӳ пуçланса кайнă. Тĕпĕр-тепĕр, кĕмсĕрт-кемсĕрт, нăч-нач!

Чечукĕ пур алăксене те урлуççисем ярса питĕрнĕ пулин те, чӳречисене утиялсемпех картланă пулин те, çак çапăçу çинчен пĕр-ик кунтан пурте пĕлчĕç.

— Ара, хайхи Арçури варĕнчен пынă тур амăшĕ çеттуй аттесене çапăçтарса янă вĕт!..

— Пачăшкин сăмси катăлнă, тути çурăлнă, тет, чечукĕн хăрах куçĕ сиксе тухнă, тет, старости вĕсене чарма тăрса хушша кĕрсе кайсан, лешсем ун çине сиксе ларса малти шăлĕсене пĕрре те хăварман, тет. Вĕсен йĕке хӳрине, Шĕвĕр Марине те, самаях паркаласа илнĕ пулас, куçĕпуçĕ кăн-кăваках, теççĕ...

— Укçа çавăн пек вăл, ытлашши нумай пулсан, çынна ахăрттарсах ярать!

Çавăн пек калаçрĕç ял хушшинче..

Анчах çав чечук менелникĕнче çакнашкал «батали» пулса иртнине халăх мĕнле пĕлме пултарнă? тетĕр ĕнтĕ эсир. Кайран хăйсем каласа панă тăрăх пĕлнĕ, тетĕр-и? Асту, калаççĕ пуль! Кама та пулин систерме мар — ун çинчен пачăшкăпа чечук та, старостăпа Шĕвĕр Мари те пĕр сăмах та каламарĕç, хăйсем хушшинче ним пулман пекех пытарчĕç — шăпăрт пулчĕç! Çапăçу мĕншĕн тапранса кайнине, уйрăмах тата чечук турăша хăй «çĕнетни» çинчен кăшкăрнисене чиркĕве çӳрекенсем пĕлсен, вĕсем пĕтĕм «коммерцийĕ» пĕтсе ларма пултарнă вĕт-ха!

Çакна ăна чăн малтан пирĕн шкул ачисем — çиччĕмĕш класра вĕренекен Çимукпа Тимук пĕлнĕ. Çав каçхине вĕсем ял хуралçисем пулса урамсем тăрăх шăкăрчак шăкăртаттарса çӳренĕ. Йăли çавăн пек пирĕн — каç-каç черетпе хурал тăраççĕ. Малтан çак ачасем шкулта вечерта пулнă, унтан тухнă та ерипен тăвалла уттарнă. Чечук пурăнакан пӳрт тĕлне çитсен, шалта хытă шавланине илтех, каяççĕ. Мĕнле япала ку? Чиркӳ çыннисен укçа нумайăшне пĕлсе, кам та пулин çаратма пыман-и? Часрах чӳрече патне пырса тăраççĕ те шалта акăш-макăш юрланине, ташланине илтеççĕ.

— Ĕçкĕ вĕт кунта! Ниушлĕ Фонифатий авланма шут тытнă? Ытлашши çамрăках та мар-çке вăл?— тĕлĕнеççĕ çамрăк патрульсем.

Унтан чечук çухăрашма тапратать. Лăпкăн сывăрса кайнă ялта нимĕнле сас-чĕв те çуккипе пӳртре мĕн кăшкăрни урама питĕ лайăх илтĕнет. Ачасем хăйсен хăлхисене мулкачсем пекех чăнк! тăратаççĕ. Ӳсĕр пуп таврашĕсем мĕн çинчен шавлама пултарни питĕ интереслĕ-çке вăл!..

Итлеççĕ-итлеççĕ те çаксем, пĕтĕмпех ăнланаççĕ: хайхи çĕнĕ тур амăшĕ кӳрекен тупăшран чечука укçа сахал лекет иккен, вăл çавăнпа ӳпкелешет, анчах турăшне вăл хăй «çĕнетнĕ»-мĕн. Ăна Арçури варне кайса пăрахма та хăех хушнă! Чăн та ĕнтĕ, çавăн пек тума ăна малтан пачăшки вĕрентнĕ, анчах ĕçне тăваканни чечукпа Шĕвĕр Мари пулнă...

— А-ав епле фокус-покус иккен кунта!— чĕлхисене чаклаттарса илнĕ те Çимукпа Тимук, тепĕр ирхине кун çинчен хăйсен шкулти юлташĕсене пĕтĕмпех каласа кăтартнă.

Кайрĕ вара ял тăрăх хыпар! Килтен киле, урамран урама...

Эпир çав кунсенче хамăр клубра шăпах концерт лартма хатĕрленеттĕмĕр. Пĕр каçхине, репетици ирттернĕ чух, ман пата хайхи ачасем, Çимукпа Тимук пырса кĕчĕç.

— Концерт программине пире те кĕрт-ха,— теççĕ çаксем.

— Мĕн пур вара сирĕн халăха кăтартмалли? Юрăсем-и, ташăсем-и?

— Эпир фокус кăтартма хатĕрлентĕмĕр.

— Мĕнле фокус?

Ачасем пĕр-пĕрин çине пăхрĕç те именнĕ пекрех кулса илчĕç.

— Турăш çĕнетсе кăтартăпăр. Халăхшăн питĕ усăллă пулать вăл...

Ачасем мĕн шухăш тытнине эпĕ тӳрех ăнланса илтĕм те — концерт программине çавăн пек «номер» кĕртме пĕр самахсăрах килĕшрĕм.

— Астăвăр, намăс курмалла ан пултăр!— тесе асăрхэттартăм çеç.

— Ан хăра, Андрей Петрович,— терĕç ачасем,— эпир шкулта хими вĕренетпĕр вĕт! Фонифатий чечукран каях юлмăпăр! Темиçе опыт та туса пăхрăмăр ĕнтĕ, питĕ лайăх пулса тухать!

Хайхискер, пĕр шăматкун каçхине клубра пысăк концерт пуласси, унта ытти номерсемпе хутăш «индийски фокус» кăтартасси çинчен пĕлтертĕмĕр. Яланхи пекех клуба халăх лăкаç тулчĕ. Арçынĕ, хĕрарăмĕ, ватти, вĕтти.

Пуçларăмăр...

Малтан пĕчĕк спектакль пулчĕ, иккĕмĕш пайĕнче — юрă-сăвă, ташăсем, акробатикă. Анчах çынсем урăххине кĕтрĕç...

— Фокус хăçан пулать?

— Тавай, фокус кăтартăр!— кăшкăрма пуçларĕç унтан та кунтан. Хăшĕсем урисемпе те тăпăртатса илчĕç.

— Фоку-ус!..

Мĕн тăвас тетĕн халăхпа? Ирĕксĕрех программăри номерсене улăштарса лартма тиврĕ. Пирĕн «фокусниксем»— Çимукпа Тимук — сценă хыçĕнче тахçанах хатĕрленсе тăнăччĕ ĕнтĕ, уншăн хăрамалли çукчĕ.

Чаршав умне тухрăм та шавлакан халăха хыттăн кăшкăрса пĕлтертĕм:

— Халĕ сире пирĕн пата юмахри çĕршывран килнĕ

Факир Шарлатан Балдайпа унăн помощникĕ Халтур-бей хăйсен фокусĕсене кăтартаççĕ!

— Шапăр-шапăр-шапăр!— алă çупса ячĕ залри халăх. Савăннипе пулас, тахăшĕ ши! ши! шăхăрса илчĕ.

Кĕç чаршав уçăлчĕ. Сценă варринче йăрăм-йăрăмлă пусмапа витнĕ пĕчĕк кăна сĕтел тăрать, ун çине темиçе пуçлă çĕлен ӳкерсе эрешленĕ ещĕк лартнă. Унччен те пулмарĕ, сценă çине Çимукпа Тимук вăркăнса тухрĕç — чăн-чăн факирсем пекех! Иккĕшĕ те сăрласа пĕтернĕ хулăн хутран тунă вăрăм халат пеккисем тăхăннă, пуçĕсем çинче — муркаллă шĕвĕр калпаксем, янахĕсем çумне сӳрен тунă тем тăршшĕ сухалсем çыпăçтарнă, пичĕ-куçĕсене сăрласа палламалла мар туса хунă...

Сценă хĕрринерех утса пырса аллисене çĕклерĕç те пуç тайса илчĕç:

— Салам-аликкĕм!

Халăх çăвара шыв сыпнă пек ларчĕ...

Самантранах Çимук такмаклană пек калама тытăнса кайрĕ.

— Çитмĕл çичĕ уй урлă, утмăл ултă шыв урлă, çумăр витĕр, юр витĕр, çĕрĕн-кунĕн, канмасăр, сире чунтан юратса, çитрĕмĕр пит васкаса!

— Эпир ахаль çынсем мар.— терĕ малалла Тимук,— эпир чăн-чăн факирсем, турра та ĕненместпĕр, шуйттанран та хăрамастпăр, ултавçăсене кураймастпăр, айвансенчен тăрăхлатпăр...

— Эсир фокусне кăтартăр!

— Такмаклама эпир хамăр та пĕлетпĕр!..— кăшкăрчĕç çав вăхăтра залран. Анчах Çимукпа Тимук çухалса каймарĕç, тӳрех хирĕç тавăрса хучĕç:

— Фокусĕ те пулĕ, сирĕн кăмăлăр та тулĕ!

— Пĕрисене намăс пулĕ, теприсен тухса тарас килĕ!..

Унтан вара вăрт çаврăнса сĕтел хыçне кайса тăчĕç те, сĕтел çинчи ещĕкĕн икĕ енче пĕр харăсах темĕн пысăкăш çулăмсем ялкăшса илчĕç. Çавна пула, нумайăшĕ шартах сикрĕç. Унччен те пулмарĕ, Çимук ещĕкрен хутпа чĕркенĕ пысăках мар тăваткал япала туртса кăларчĕ.

— Сан шутпа, çакăнта мĕн пытарнă?— ыйтрĕ вăл Тимукран.

— Пĕлместĕп,— пуçне пăркаласа илчĕ лешĕ.

— Уçса пăх-ха, эппин...

Тимук çиелтен чĕркенĕ хутне сӳтсе пăрахрĕ.

— Темле хăма ку санăн... Кив хăма!

— Э-эх, хăвна ху факир-фокусник тетĕн, анчах санăн ăсу пĕр пуслăх та çук иккен! Аннӳ сана çуратнă кунах кăмака çинчен ӳкернĕ пулмалла. Ху чухлаймастăн пулсан, хамăра курма пухăннă халăха кăтарт-ха, эппин, ăна, вичкĕн куçĕсемпе пăхчăр, аллисемпе хыпашласа курччăр та çак япала мĕн иккенне каласа паччăр!— хушрĕ Çимук.

Тимук çавăнтах сценă хĕррине пычĕ те:

— Пăхăр-ха, тăвансем, çакă мĕскер вăл?— терĕ.

Ун патне харăсах темиçен чупса пычĕç те хайхи хăма таткине куçĕсемпе çиме тытăнчĕç.

— Турăш ку! Иконă! Тур амăшĕ! — кăшкăрчĕç унтан.

— Чăнах-и? Улталамастăр-и? Атту халь вĕт тур амăш ячĕпе улталакансем нумайланса кайнă, теççĕ...— пӳрнипе юнанă пек турĕ Тимук.

— Пур ун пеккисем!— кăшкăрчĕç залран.

— Ак ку вара тур амăшех пулсан, каялла парăр-ха, эппин, ăна!— Тимук хăма таткине илсе Çимука тыттарчĕ.— Ăçтан тупрăн эс ăна, чаплă факир Шарлатан Балдай? Ăнсăртран, кунта килнĕ чух Арçури варне кĕрсе тухмарăн-и? Ку чухне тур амăшсем унта та выртакалаççĕ, тет!

Залри халăх лăх-лăх-лăх кулса ячĕ.

— Çук, Халтур-бей шăллăм,— терĕ ăна хирĕç Çимук,— ку турăша эпĕ хамăн асанне шупашки тĕпĕнче тупрăм, вăл унта çĕр çул ытла выртнă...

— Апла вăл питĕ ватă-çке!

— Ватă çав, питĕ шутсăр ватă! Куратăн — сăнĕ те пĕтнĕ, вуçех палăрми пулса ларнă. Эсĕ ху та уйăрса илеймерĕн авă. Çавăнпа та пирĕн иксĕмĕрĕн ăна халех çамрăклатас пулать, унăн сăнĕ каллех хĕр чухнехи пек çиçсе тăракан пултăр...

— Ăна çамрăклатни мĕн тума кирлĕ сана? Кайран Арçури варне кайса хурас теместĕн пулĕ-çке?

— Айван та иккен эсĕ, тусăм! Эпир жуликсем мар пулĕ ун пек хăтланма?

— Эппин, мĕн тума кирлĕ-ха вăл турăша çĕнетни?

— Музее кайса паратпăр. Унта авалхи турăшсене пухаççĕ, тет. Авалхи художниксен ĕçĕсене тĕпчесе вĕренме кирлĕ, тет, вĕсем. Ну, тата... çакăнта пухăннă халăха хамăр мĕн тума пултарнине те кăтартмалла пирĕн. Атту вĕсем

эпир иксĕмĕр чаплă факир-фокусниксем пулнине те ĕненмĕç. Хамăртан кулса тăна кăларĕç. Анчах эпĕ хамран кулнине юратмастăп. Эп хам кулма юрататăп!

Çапла шӳтлесе калаçнă хушăрах Çимук сĕтел çинчи ещĕкрен темле эмел кĕленчисем кăлара-кăлара лартрĕ.

— Кусем мĕнле эмелсем санăн?— пĕлмен пек ыйтрĕ Тимук.— Таракан-хăнкăла пĕтермелли им-çамсем мар пулĕ те?

— Тьфу!— тарăхнă пек пулчĕ Çимук.— Чăнах та санăн пуçна çуралнă-çуралманах автан сăхса шăтарнă пулĕ! Тур амăшне çамрăклатмалли эмелсем вĕсем! Ак, ку акă, нашатырь спирчĕ, унта эпĕ кăштах скипидар янă. Ак ку — азот йӳçекĕ. Ĕненместĕн пулсан — шăршласа пăх...

Тимук эмел кĕленчисене сăмси патне илсе пычĕ те питкуçне çав тери килĕшӳсĕр пĕркелентерсе илчĕ.

— Вăйлă!..

— Халĕ ĕçе тытăнăпăр,— терĕ Çимук.— Ак çак кипке татăкне азот йӳçекĕпе йĕпететпĕр те тур амăш питне-куçне çуса яратпăр. Куратăн-и, епле тасалать вăл? Пĕр тутăх та юлмарĕ. Халĕ тата нашатырьпе сăтăрăпăр... Епле пек? Тасарах пултăр тесе, тата тепĕр хут çуса ярăпăр, эмелсене шеллемĕпĕр...

Турăш чăнах та çутăлнăçемĕн çутăлса пычĕ. Курса ларакансем кулма пуçларĕç...

— Пулчĕ! Çамрăкланчĕ тур амăшĕ, вун çич çулхи хĕр пекех пулса тăчĕ!— терĕ юлашкинчен Тимук. Вăл турăша çĕклерĕ те пурне те курăнмалла çавăркаласа кăтартрĕ.— Арçури варĕнче тупнинчен кая мар вĕт, э?

— Унтан та çамрăкрах!— кăшкăрчĕ тахăшĕ.

— Турăшсене ялтăртатса çутăлакан тумалли ансатрах меслет те пĕлетпĕр эпир,— терĕ Çимук.— Малтан сухан пуçĕпе темиçе хут сăтăрмалла, унтан тип çупа çуса ямалла, вара хуть те мĕнле кивĕ турăш та вĕр-çĕнĕ пулса тăрать... Айвансене çавăн пек улталаççĕ ăна! Анланатăр-и халь?

— Ăнланатпăр!— кăшкăрчĕç темиçен пĕр харăс.

— Фокусниксем пулма пултаратпăр-и ĕнтĕ эпир?

— Пултаратăр! Маттур!— ала çупрĕç ял çыннисем.

— Тавтапуç, эппин, сире!— маларах тухса пуçĕсене тайса илчĕç те Çимукпа Тимук, хăйсен хатĕрĕсене илсе, сценă хыçнелле чупса кĕрсе кайрĕç. Халăх нумайччен алă çупрĕ...

...Çавăн хыççăн Шĕвĕр Мари иртнĕ çулла Арçури варĕнчен йăтса пынă тур амăшĕн пĕтĕм «хăвачĕ» пĕтсе ларчĕ. Ана тек никам та ĕненмерĕ. Чиркĕве çӳрекенсем те çав тери сахалланса юлчĕç. Пурăна киле никам та ухмахланмасть пулĕ-ха.

— Ах, çав хальхи ача-пăча! Ытла та çивĕч-çке вăл, теме те пултарать!— теççĕ Виççырма çыннисем ăшă кăмăлпа.

«ТЕ АРÇУРИ, ТЕ ШУЙТТАН...»

ЫТЛА ПУР ЧУХ та машинăпа ларса çӳреме май пулмасть, тепĕр чух лашапа та кайма тивет...

Çапла, пĕлтĕр çулла чылай хушă çумăр çуса тăнă хыççăн çанталăк уяртсан, эпĕ пĕр колхозран тепĕр колхоза кайма тухрăм та çул çинче машинă таврашĕ кĕтсе илеймерĕм.

— Инçех мар, каçчен çитĕп-çке,— терĕм те вара çурăнах утрăм.

Анчах манăн нумаях та утмалла пулмарĕ, хыçалтан пĕр ула кĕсре кӳлнĕ лав хуса çитрĕ. Пăхатăп, урапи çине темиçе сĕт бидонĕ лартнă, вĕсен умне пĕчĕкрех кăвак сухаллă старик вырнаçнă.

Эпĕ хама лартса кайма ыйтас та теменччĕ,— лавĕ пушă мар-çке-ха,— анчах çав старик тилхепине карăнтарса лашине чарчĕ те хăех сăмах хушрĕ мана:

— Аçталла утатăн, юлташ?

— «Шуçăм» колхоза çитес пулать-ха,— терĕм эпĕ.

— Эппин, эс пирĕн пата пыратăн? Эпĕ шăпах «Шуçăмран». Лар, пĕрле кайăпăр, иксĕмĕре те хаваслăрах пулĕ!

— Тавтапуç. Анчах лашуна йывăр пулмасть-и?

— Мĕн йывăрри? Бидонĕсем пушă ман вĕсем, лар! Эпĕ урапа хĕррине сиксе лартăм.

— Ху ăçта кайрăн вара кун пек?— ыйтрăм старикрен.

— Колхоз ферминчи сĕте çу заводне леçсе таврăнатăп,— терĕ вăл.

Сăмах хыççăн сăмах. Паллашрăмăр. Чĕлĕм чĕртсе ятăмăр. Старик ку çулпа кашни кунах çӳрет иккен, сĕт турттарать. Хăй Еремеи ятлă. Кĕçех çитмĕле çитет. Карчăкĕпе иккĕшех пурăнаççĕ. Ултă ача пулнă вĕсен, анчах халĕ ĕнтĕ пурне те ӳстерсе «йăваран вĕçтерсе кăларса янă».

Хăйсен колхозĕ çинчен те питĕ кăмăллă калаçрĕ Еремеи мучи. Ана тунă та кăна тунă, виçĕм çул кашни килех электричествă, радио кĕртнĕ, пĕлтĕр кĕркунне клуб туса çитернĕ — пилĕк çĕр çын шăнăçать. Выльăх-чĕрлĕх усрамалли çурт-йĕрсем те питĕ капмар.

— Председатель вăйлă пирĕн, çавăнпа ĕçсем ăнса пыраççĕ,— терĕ старик тулли кăмăлпа.

— Хăвăр ялсемех-и?

— Хамăр ялсемех. Малтан вăл Шупашкарта пысăк вырăнта ĕçлесе пурăнатчĕ. Унтан, пĕр тăватă çул каялла, партейнăйсене яла ĕçлеме кайма йыхăрсан, киле таврăнчĕ те пĕтĕм пурнăçа урăх майлă çавăрса хучĕ...

— Халăх юратать пуль, эппин, ăна?

— Ара, ун пек çынна мĕнле юратмастăн-ха? Нумай вĕреннĕскер вĕт, тем те пĕлет, хăямат! Акă, иртнĕ хĕлле хамăрăн клубра, пĕтĕм халăх умĕнче, пачăшкăпа тавлашрĕç вĕсем. Тискут теççĕ-и-ха çавна?

— Диспут...

— Ийĕа, ийĕа! Турă пирки тавлашрĕç — пур-и вăл, çук-и? Пачăшки те вĕреннĕскер, туховни академи пĕтернĕ, теççĕ. Анчах та пирĕн председатель Василь Васильч çавна наччасра месерле çавăрса хучĕ вĕт, туххăм çĕнтерсе пăрахрĕ! Лешин халăх умĕнче намăс курни çеç пулчĕ...

— Туррине ĕненекенсем нумай-и сирĕн?— ыйтрăм эпĕ, сăмах çавăнталла çаврăнса тухнă май.

— Ĕненекенсем-и?..— Еремеи мучи шухăша кайнă пек пулчĕ.— Пытармалли çук, пур ĕнтĕ вĕсем, анчах та нумай мар. Сахаллансах пыраççĕ. Аслăланать мар-и халăх!

— Сăмахран, эсĕ ху мĕнле? Ĕненетĕн-и турă пурринне?— унăн куçĕнчен пăхса илтĕм эпĕ.

— Мĕнле калас сана... Елĕкрех ĕненеттĕм те пулмалла,

анчах мана турра ĕненме хăйсем пăрахтарчĕç вĕсем,— терĕ те Ереми мучи ман çине темле чееречĕн пăхса илчĕ.

— Камсем?

— Чиркӳ таврашĕсем, ара...

— Мĕнле майпа?

— Кулăшла пулчĕ вăл. Аса илсенех кулас килет...

— Каласа пар-ха, эппин! Кулăшла историсем итлеме питĕ юрататăп эпĕ...

Калама пуçличчен малтан Ереми мучи, кăмăллăн кулкаласа, чĕлĕмне тепĕр хут чĕртсе ячĕ те аллинчи пушă аврипе малалла тĕллесе кăтартрĕ мана:

— А-ав çавăнта, пирĕн ял çумĕнчи çырмара, кĕпер пур. Хамăр тунă кĕпер. Ытла пысăках та мар вăл, пĕчĕкех те мар. Чаплă та теме çук, хурлама та юрамасть,— йывăр тиенĕ машинăсене те чиперех чăтса каçарса ярать... Пĕр пилĕк çул каялла çав кĕпер пирки питĕ тĕлĕнмелле сăмах тухрĕ: ун айĕнче ангел — урăхла каласан пирĕшти пурăнать, теççĕ! Эрнере ик-виç хутчен, çур çĕр тĕлĕнче, çав чĕрчун кĕпер айĕнчен тухать, тет, иртен-çӳренсемпе ытем чĕлхипех калаçать, унтан пач! çухалать, теççĕ...

— Мĕн çинчен каласать, тет, вара?

— Ара,— ал сулчĕ Ереми мучи,— ангел таврашĕ мĕн çинчен калаçатăр ĕнтĕ? Паллах, турă çинчен! Тĕрĕс мар пурăнатăр, турра манатăр, чиркĕве çӳреместĕр, сирĕн çылăхсем нумайлансах пыраççĕ-ха, çавăнпа та вилсессĕнех тамăка лекетĕр акă, унта сирĕн лапăрчăк чунăрсене усалсем вĕри çатма çинче шаритлеççĕ, тесе калать, тет, унтан тата темĕн те пĕр.. Çавăн пек вăл чылай çынсене, пуринчен ытла хĕрарăмсене, кăратса пĕтернĕ вĕт! Ара, айвансене хăратса ăнран яма нумай кирлĕ-им?.. Хăйсен куçĕпех ангел кураççĕ те-ха, çавăн хыççăн вара, паллах, чиркĕве çӳреме тытăнаççĕ, çамкисем шыçса тухичченех турра пуç çапаççĕ!

Пĕрре пулать çавăн пек, иккĕ, виççĕ... Кам эсрелли хăтланать куна, çынсен ăс-пуçне кам пăтраштарать? Пирĕн комсомолецсем темиçе хут та çĕрле çав кĕпер айне пытанса ларса сыхланă çакна, анчах тĕл пулайман, ахăртнех, кам та пулин систернĕ пуль лешне... Ангел таврашĕсен те хăйсем майлă сынсем пур вĕт-ха!

Ну, юрĕ... Кĕр енне, çур тыррисем вырса пĕтерсен, пĕррехинче эпĕ пасара кайсаттăм. Унта авалтанпах палланă пĕр çынна тĕл пултăм та, вăл мана вăйпах чайнăя туртса кĕртрĕ. Ытлашши ĕçмерĕмĕр, кăшт, чĕлхе-çăвар çаврăнма-

лăх кăна сыпрăмăр. Ну, тен, пăртаках пуçа та кайнă пуль çав. Çапах та вăхăт чылай иртрĕ. Киле килме тухнă чухнех тĕттĕмленме пуçланăччĕ ĕнтĕ.

Килетĕп хайхискер. Васкамастăп та — лашана та, пустуй ĕшентерес мар тесе, хăваласах каймастăп. Юртать вăл хăйĕн çеммипе... Хамăн кăмăлăм çав тери лайăх! Хуларан тухсанах темле авалхи хитре юрă кĕвви аса килчĕ те, çула тăршшипех çавна сăмса витĕр ĕнĕрлесе килтĕм... Çанталăкĕ те питĕ ырăччĕ — ăшă, çил-мĕн çук, шăп...

Çапла хуллен кăлтăртаттарса килнипех хамăр ял патнелле çывхартăм. Акă ĕнтĕ, сăртран анса кĕпер урлă каçмалла та — çур çухрăмран кил пулать. Анчах та шăп кĕпер çине пырса кĕреспе ман лаша тăрук чарăнса тăрса харт! харт! турĕ те, эпĕ мĕн те пулин чухласа иличчен, пĕррех сулахаялла сиксе урапана пăлтăр-палтăр! тӳнтерсе пăрахрĕ. Лапсăрт! тухса ӳкрĕм тусанлă çул çине.

Мĕн амакĕ пулчĕ ку? Камран кун пекех хăраса сикрĕ ман лаша? Çул çинче кашкăр таврашĕ курмарĕ пулĕ-çке?!

Çапла хăрарах шухăшласа, эпĕ йăпăр-япăр сиксе тăтăм: пăхатăп — тĕттĕмре, кĕпер карлăкĕ çумĕнче, темле шурă пĕркенчĕкпе хупланнă мĕлке тăра парать. Хай, пĕр кĕнекере каланă пек, «те арçури, те шуйттан...» Унтан тăруках тавçăрса илтĕм: ара, ку леш кĕпер айĕнче пурăнакан ангелиç, çав тухса тăнă мана кĕтсе илме!..

Çурăлас пек тарăхса кайнăскер, эпĕ темлерен хам алăрах юлнă пушша çĕклерĕм те тӳрех çав мĕлке патнелле ыткăнтăм.

— Кам шуйттанĕ эсĕ, мĕн туса тăратăн кунта?! Халех çапса пăрахатăп!..

Анчах вăл манран питех хăраса ӳкмерĕ пулас, сылтăм аллине çĕклесе ман еннелле хĕрес хыврĕ.

— Эй, сылăхлă çын, турă чури, лăпкă пул, итле ман сăмаха!— тет.

— Чура кăтартăп эп сана!— кăшкăрса ятăм та çакăн çине, çав самантрах пушăпа çурăм урлă чашш! кастарса илтĕм.

— Апа-ай! Ма çапа-ан?!— çухăрса ячĕ хайхи ман ангел. Сассинченех пит лайăх уйăрса илтĕм — хĕрарăм иккен.

Эпĕ ăна тепре çунтарса илес тесе татах пушăпа сулса ятăм, анчах лектереймерĕм, мĕншĕн тесен вăл кĕпер çинелле тапса сикрĕ. Эпĕ, паллах, ун хыççăн! Темиçе утăмранах хуса çитрĕм те татах чашлаттартăм...

— Вĕрентĕп эп сана çын лашисене çĕрле хăратса çӳреме, йĕрĕх!

Вăл тата хытăрах тарма тытăнчĕ. Анчах нумай та каяймарĕ — çул çине кĕпсĕрт! тăсăлса ӳкрĕ. Чупнă чух леш пĕркенчĕкĕн арки çине пусрĕ пулмалла... Паллах, эпĕ ăна-кăна пăхса тăмарăм, сиксе пытăм та ун патне, тата хытăрах тарăхса, çине-çине вĕтелеме тытăнтăм — чашш! чашш!

— Ак сана! Ак сана! Ку ман лашана хăратса тартнăшăн, ку хама урапа çинчен ӳкернĕшĕн, ак ку акă халăха улталанăшăн!

— Еремеи мучи, ан вĕлер! Тархасшăн, ан вĕлер! Ĕмĕр саншăн турра кĕл тăвăп!— кăшкăрма тытăнчĕ хайхискер.

— Суратăп сан турру çине!— терĕм эпĕ, анчах хам хĕнеме чарăнтăм.— Кала луччă, кам эсĕ? Кам хушрĕ сана çакăн пек хăтланма?

— Каласа пара-ап, пĕтĕмпех каласа парап... Эс ан хĕне тулькки ш!— хурлăхлăн йынăшса илчĕ çакă.— Эп ахаль те алла мăкăлтарăм пулмалла, тӳсмелле мар ыратать...

— Çавă чух сана! Тăр тавай! Тăр!— терĕм те эпĕ, ăна хамах хулĕнчен тытса ура çине тăратрăм.— Ну, кам эсĕ?

— Ара, Еремеи мучи, хамăр ялсене те палламастăн-и?— терĕ вăл кӳреннĕ сасăпа.— Сар Анна-иç эпĕ...

Аçа çаптăр!.. Чăнах та хамăр ялти Сар Анна пулнă çавă! Чиркӳ валли просвир пĕçерсе пурăнакан хусах матка! Малтан вăл тăват-пилĕк упăшкана та çитрĕ, питĕ путсĕр хĕрарăмччĕ, унтан сасартăк чиркӳ çынни пулса тăчĕ.

— Эппин, эсĕ-и-ха вăл çынсене çăвĕпе хăратса пурăннă эсремет?!— хул пуççинчен тытса лăскаса илтĕм çакна.— Мĕн шутпа хăтланатăн эсĕ ун пек?

— Мана мĕн... мана... мĕн... — чĕлхи çыхланса ларчĕ Аннан.

— Мĕн сана? Кам хушрĕ?

— Ара, мĕн... Чиркĕве çынсем сахал çӳреççĕ те...

— Пачăшкă хушрĕ-им?

— Пачăшкă çав... Таса чиркӳшĕн ырă ĕç туни пулать ку, терĕ те... Итлемелле пулчĕ. Мĕн тăвас-ха ĕнтĕ...

Вăл ман умра макăрса ярас пек пĕтĕм кĕлеткипе чĕтресе тăчĕ.

— Еремеи мучи, турă пул... Тархасшăн, кун çинчен никама та каласа ан пар!— ӳкĕтлеме тытăнчĕ хайхискер.— Ан пĕлтер! Эп сана укçа та парăп, ĕçтерĕп, хуть те кашни кун пырса кай, ман яланах пур...

Манăн çав тери кулас килсе кайрĕ. Пăх-ха, çак ирсĕр чĕрчун мана эрехле сутăн илесшĕн! Хам çамрăкрах пулнă пулсан, вăл мана тата тем те пĕр сĕнетчĕ-и тен?

— Юрĕ, ан йăсла!— терĕм ăна.— Тупăннă ангел... тьфу! Ара, сан пек çылăхлă çын, санашкал чупкăн прихучĕпе те çук вĕт! Йĕксĕк!

— Эп хамăн çылăхсене кашни эрнерех каçарттаратăп, турра кĕл тăватăп, çурта лартатăп,— тӳрре тухасшăн пек пулчĕ Анна.

— Ан лăпăртат!— терĕм ăна хирĕç.— Санăн çылăхусем кашни кун телефон юпи пысăкăш çуртасем лартсан та каçса пĕтес çук! Эсĕ миçе хутчен вăрттăн ача пăрахнисене турă пĕлес пулсан, сана вăл чиркӳрен шăршлă шăпăрпах хăваласа кăларса ямалла хальччен!

Анна нимĕн те калаймарĕ, шурă пĕркенчĕкне çĕртен илсе хул хушшине хĕстерчĕ те ял еннелле вăркăнчĕ...

Çав каçхине кĕпер патĕнче мĕн пулса иртни çинчен эпĕ тепĕр ирхине ирех правленине кайса каласа патăм. Ну, кулчĕç вара, ну кулчĕç!.. Хам та култăм вĕсемпе пĕрле.

Пĕр икĕ эрне хушши канăç памарĕç мана ял çыннисем. Кĕпер патĕнче ĕç мĕнлерех пулса иртни çинчен çĕнĕрен те çĕнĕрен калаттараççĕ.

— Эппин, эс ăна пушăпа, пушăпа?— теççĕ те, хăйсем варĕсене тытса кулаççĕ.

— Пушăпа çав,— тетĕп — ман ал айĕнче урăх нимĕн те пулман та!

— Ой, тĕрĕс тунă, ой тĕрĕс!..

Кĕçех комсомолсем стена хаçатĕнче ӳкерчĕк туса кăларчĕç: çĕр çинче Анна выртать, эп ăна пушăпа вĕтетĕп. Аяла: «Еремеи мучи хамăр ялти ангела тĕне кĕртет» тесе çырнă. Питĕ ăста ӳкернĕччĕ, каламалли те çук!

Çакăн хыççăн Сар Анна пĕр çулталăк пулĕ ял-йышсен куçĕ умне курăнмарĕ, ăна çавăн пек «ангел» пулса çынсене хăратма вĕрентнĕ пачăшки те пирĕн патран тухса кайрĕ. Намăса тӳсеймерĕ пулас...

КАЧАКА ТАКИСЕМ

ТЕРЕССИПЕ КАЛАСАН, ку пухăва никам та ятарласа пуçтарман. Вăл темле хăй тĕллĕнех, сисĕнмесĕрех пухăнчĕ. Пĕррехинче, хĕллехи шартлама сивĕ кун, кăнтăрла иртсен, Иван арăмĕ Мари патне Петĕр арăмĕ Варвари пырса ларчĕ. Тем ĕçпе мар, ахалех,— пушă вăхăтра кӳршĕсем пĕр-пĕрин патне калаçса ларма çӳреççĕ вĕт-ха. Анчах вĕсем сăмах пуçлама та ĕлкĕреймерĕç — урам урлă пурăнакан Хветĕр арăмĕ Тари пырса кĕчĕ. Унтан Микулапа Ярмула арăмĕсем — Уринепе Кулине çитсе кĕчĕç. Кăшт тăхтасан, Вăтакасри Трахви матки Укахви алăка шăлт-шалт! уçса хупса кĕрсе тăчĕ. Кĕске вăхăтрах улттăн пухăнчĕç çапла...

«Ик хĕрарăм — пĕр пасар, виç хĕрарăм — ярмаркка», тенине шута илсен, Иван арăмĕ патĕнче халĕ пĕр харăсах икĕ ярмаркка пулма пултарнă. Анчах та çак хĕрарăмсем сăмах арпи вĕçтерме юратакан йышшисем мар, пурте йĕркеллĕ, халăх çинче ырă ятлă колхозницăсем пулнă, çавăнпа та ни пасар, ни ярмаркка пулма пултарайман кунта.

Вулакансемшĕн ăнланмалларах пултăр тесе, авторăн çакна та каласа хăварма тивет: вĕсем пурте тантăшсем пулнă — ача чухне пĕрле ӳснĕ, шкулта та пĕр вăхăтра вĕреннĕ, вăрçă вăхăтĕнче вĕсен çамрăклах ырми-канми ĕçлеме, пур йывăрлăхсене те пĕрле тӳссе ирттерме тивнĕ. Ĕçре пиçнĕ вĕсем!

Вăрçă пĕтнĕ тĕлелле пурте пĕр харăсах хĕр пулса çитнĕ те, мирлĕ пурнăç пуçлансан, пĕрин хыççăн тепри кавча кайнă, унтан — каламасăрах паллă ĕнтĕ ку — ачаллă-пăчаллă пулса тăнă... Упăшкисене те пăхнă вара, ачисене те ӳстернĕ, колхозра та ĕçленĕ, килĕсенче мĕн тумаллисене те тунă. Халăх ĕçне те хутшăнман мар — хăшĕ Совет членĕнче, хăшĕ колхоз правленинче тăнă, кирлĕ чухне наянтарах çынсене çунтарса илме те, пуçлăхсене хăтăрма та шикленмен,— ку чухнехи хĕрарăмсем питĕ çивĕч шăллă вĕт!

Кĕскен каласан, маттур хĕрарăмсем пулнă вĕсем пурте, лайăх çынсем, никам та тиркемелле мар. Çавăнпа пурнăçĕ те ăнса пынă вĕсен, пурин те кил тулли телей пулнă...

Анчах та, хăвăрах пĕлетĕр ĕнтĕ, пурнăç тени вăл пур чухне те пĕр пек тикĕс пымасть çав. Тепĕр чух, темле лайăх пурăнас тенĕ çĕртех,çав тери кӳренмелли е тарăхмалли япаласем сиксе тухаççĕ. Çак хĕрарăмсен те: Марийĕн те, Варварипе Тарийĕн те, Уринепе Кулинен те, вĕсемпе пĕр вăхăтрах Укахвийĕн те — сасартăк пĕр хурлăх сиксе тухнă. Кĕтмен-туман çĕртенех вĕсен упăшкисем чирлеме тытăннă. Çитменнине, чирĕ йăпăр-япăр иртсе каяканскер мар, шутсăр вăраха каяканскер пулнă, вырăсла ун пек чирсене «хронически», теççĕ. Эрне иртет, уйăх, иккĕ, çур çул, анчах чир çаплах иртсе каймасть, пĕтмест, пĕтме мар — шалтан шала кайса пырать, йывăрланать, унăн вĕçĕ те, хĕрри те курăнмасть... Епле хыпăнса ӳкместĕн-ха ун пек чух, епле хуйхăрмастăн?! Этем вĕçĕмсĕр, пĕрмай, уйăхĕ-уйăхĕпе, çулталăкĕпе чирлесе пурăнсан, юлашкинчен пуçĕпех пĕтме пултарать вĕт-ха! Çывăх çын, юратнă упăшка çавăн пек хĕн курать пулсан, мĕнле хĕрарăм чунĕ тӳссе тăтăр-ха, камăн чĕри хыпмĕ?

Çак хĕрарăмсем те, хăйсен упăшкисем чирлени палăрсанах, пăшăрханма тытăннă, пурăна киле питĕ хытă кулянма пуçланă, унтан вара, чирĕ ытла вăрăма кайсан — хыпăнсах ӳкнĕ.

— Ара, пĕтеççĕ вĕт пирĕн упăшкасем! Мĕнле пурăнас капла, ача-пăчана ӳстерсе епле çын тăвас?..

Пуринчен ытла, упăшкисене нимĕнле тухтăр та сыватма пултарайманни, вĕсене нимĕнле эмел те пулăшас çукки çунтарнă хĕрарăмсен чĕрисене.

— Мĕнле ун пекех хăрушă чир пулнă вара вĕсен упăшкисен? Ку чухнехи медицинă пур чирсене те çĕнтерет-çке?— тесе ыйтасшăн ĕнтĕ эсир манран.

Ытах пĕлес килет пулсан, вăрттăн кăна, çынсем илтиччен пĕлтерем, эппин, сире: çав хĕрарăмсен упăшкисем пурте кахал чирĕпе чирлесе кайнă... Ан кулăр, ан кулăр! Чăнах та кахал чирĕ пулнă вĕсен! Эсир мĕн, хăрушă чир мар тетĕр-и ăна? О, епле хăрушă-шшă! Вăл чир этеме пĕр çыпăçсан, хăтăлма çав тери йывăр унтан, çынна пĕтерсех хума пултарать, усал эпидемирен те усалтарах вăл!

Сăмах çаврăнса килнĕ май, ку чирĕн тĕп паллисем çинчен те каласа хăварар ĕнтĕ.

Кахал чирĕ сисĕнмесĕр, майĕпе пуçланса каять: çын малтан нумай çывăракан пулать — тĕттĕм пулнă-пулман выртать те, тепĕр кун кăнтăрлаччен харлаттарма пултарать, унтан, тăрса апат çисен, татах ăçта та пулин пырса тĕренесшĕн çӳрет... Арăмĕ уншăн вăрçкаласа илсен, çын каллех килтен тухса каять, йĕп пекех çухалать. Çывăрать ĕнтĕ ăçта та пулин, урăх мĕн тутăр вăл? Каç пулсан тин киле лăпсăртатса пырать те кăмака кукринче çимелли шырама тытăнать.

Арăмĕ, паллах, тӳсеймест, вăл хăйĕн упăшки ăçта сĕтĕрĕнсе çӳрени çинчен ура тапсах ыйтать... Ун пек чух хăшĕсем нимĕн те чĕнмеççĕ, кăмака çине е унтан та çӳлерех, сентре çинех хăпарса выртма васкаççĕ, анчах теприсем арăмне хирĕç хăр-хар! туса илме те вăтанмаççĕ.

Ку вăл — малтанлăха. Пурăна киле чир шаларах каять.

Калăпăр, каçхине бригадир пырса ĕç хушать: ыран ир йăлăма утă патне каймалла.

— Халăм çук та ĕнтĕ, çапах та кайса килкелĕп-и мĕнле пулин,— мăкăртатса юлать çын, анчах ирхине килтен те тухмасть.

— Сылтăм хулла тем шуйттанĕ пулнă кĕçĕр! хускатма та çук, каккуй утă лавĕ тиемелли! Пĕтес пулать!— тет вăл, кĕç-вĕç йынăшса ярас пек.

Е сасартăк варсăр пулса ларать.

— Пыршăсене такам çĕçĕпе касать пулĕ манăнне!— ахлатса выртать çын. Анчах ачисем шкула, арăмĕ колхоза ĕçлеме тухса кайсанах выран çинчен сиксе тăрать те — вĕри кăмакара ухтарма тытăнать. Аш яшки пулать-и вара

унта, чӑмӑрла паранкӑ-и,— пурӗ пӗр, тиркесе тӑмасть, туртса кӑларать те какӑраймн пуличченех пехлесе лартать, унтан каллех кутник сакки çине месерле тӑсӑлса выртать те хырӑмне тулли кӑмӑлпа шӑлкалама тытӑнать. Эх, ыр курать! Анчах тулта ура сасси таврашӗ илтӗнсенех йӑпӑрӑпӑр ахлатма, йынӑшма пуçлать...

Çапла аталанса пырать кахал чирӗ. Пирвайхи тапхӑрсенче — хӑнӑхиччен ӗнтӗ — çавӑн пек наянсем çынсенчен вӑтаннӑ пек те пулаççӗ. Тем тесен те, аван мар-çке-ха халӑх умӗнче плахая персе пурӑнма, çыннӑн нимӗн те ыратманнине, вӑл вӑкӑр пекех сыввине пурте пӗлеççӗ вӗт. Анчах каярахпа çаксем хӑнӑхаççӗ те — хӑнк та тумаççӗ вара, намӑсне пуçӗпех çухатаççӗ. Халӑх хушшинче чипер çынсем пекех çӳреççӗ, унта-кунта тавлашмалли тупӑнсан, пуринчен те хытӑрах кӑшкӑраççӗ, анчах çав вӑхӑтрах ӗçе каймалла пулсан, курса та юлаймастӑн эçреметсене!

«Вӗсем пачах та нимӗн те тумаççӗ, выртса кӑна пурӑнаççӗ»,— тесен ытла та тӗрӗсех пулмасть пулӗ. Пӗрмай выртса пурӑнсан, çыннӑн аякӗ те шӑтса юхма пултарать вӗт-ха. Çавӑнпа та хӑйсене майлӑ ӗç тупаççӗ вӗсем, вӑхӑта пур чух та пушӑллах ирттермеççӗ.

«Ӗçке ерсе каяççӗ»,— тесе ан шутлӑр. Пур ӗнтӗ ун пеккисем те, анчах пурте мар. Ӗçменнисем ытларах. Вӗсем... вӑйӑ выляса пурӑнаççӗ. Пӗрисем — шашкӑлла, теприсем — доминолла. Хӑш чух картла та çапаççӗ. Укçалла мар, ахалех, кӑмӑла тултармалла. Питӗ те кулӑшла-çке вӑл: пӗри чип-чиперех нушнике кӗрсе ларать, тепри кӗтмен çӗргенех качака таки ятне илтет, виççӗмӗшӗ ухмаха юлать. Пӗрре кӑна мар тата, кун каçа аллӑ-утмӑл хут!

Паллах, нушнике кӗрсе ларнин унтан тухас килет, качака таки е ухмах пулса юлнин те çак мӑшкӑлган тасалас килет...

— Тавай, тепре вылятпӑр!— тет вӑл.

— Тавай ара, тата тепре çапам сана! — тет çӗнтерекенӗ.

— Ничево та çапаймастӑн!

— Курӑпӑр! Атя, пуçлар!..

Икӗ енӗ те çав тери хӗрсе каять. Тытӑнаççӗ вара пӗрпӗрне «çапма!» Вӑхӑт мӗн чухлӗ иртнине те пӗлмеççӗ, хырӑмӗсем выçнине те туймаççӗ, килӗсем, ачи-пӑчисем пурри çинчен те, çӗр çинче пурӑнаканӑн ӗçлеме кирли, ӗçлемесен хырӑм тӑранманни çинчен те манса каяççӗ. Ай тӑрӑшаççӗ, ай çатлаттараççӗ,— тӳсме çук! Чипер ӑслӑ-пуçлӑ çынсем

колхозра ĕçлеççĕ — тырă акаççĕ, утă çулаççĕ, авăн çапаççĕ, çуртсем тăваççĕ, кусем пур — отне пĕр-пĕрине кĕтессе хăваласа кĕртесшĕн, отне качака таки туса хурасшăн е ухмаха кăларасшăн çапăçаççĕ. Шăлĕсене çыртса, çамкисене картлантарса, ниçта кайса кĕме пĕлмесĕр тăрăшаççĕ:

— Чант! Çат! Пат!..

Вăхăчĕ-вăхăчĕпе хирĕçсе те илеççĕ, пĕр-пĕрине хăлха чиккинчен янклаттарса яма та хатĕр пулаççĕ (вăйă тени улгавсăр пулмастех ĕнтĕ вăл, улталани — тарăхтарать!..), анчах çавăнтах мирлешеççĕ те ывăç тупанĕсем çине сурса сăтăркалаççĕ, хырăм выçни ан сисĕнтĕр тесе, шит тăршшĕ чикарккăсем чĕркесе хыпаççĕ те çĕнĕрен çапма тапратаççĕ. Çĕрле пулса ларичченех, куçĕсем курми пуличченех çапаççĕ вара! Тепĕр кунне каллех пухăнаççĕ, унтан тепĕр кунне те пурте пĕрле пулаççĕ. Прогул таврашĕ тумаççĕ, çук! Хăшĕсем, арăмĕсем сисиччен, çăкăр е кукăль сăмси те чиксе пыраççĕ, тет. Кун каçа, талăкĕ-талăкĕпе епле-ха выçă вылятăн?

Колхоз çине те, кил çине те алă сулаççĕ вĕсем, пĕтĕмпех арăмĕсене шанаççĕ — уйри ĕçсене те, килтисене те, ачипăчине те, выльăх-чĕрлĕхне те.

— Улпут майрисем мар, ĕçлеччĕр!

— Çемьене тăрантарояс çук — ма кавча тухнă? — теççĕ вĕсем хăйсен арăмĕсем пирки.

Ĕçлеççĕ вара мăнтарăн хĕрарăмĕсем, çĕрĕн-кунĕн, ларса канма вăхăт тупаймасăр ĕçлеççĕ, упăшкисем вĕсем çумĕнче пыл та çу пурăнаççĕ — вăйă выляса, шик! шăхăрса, тенĕ пек...

...Эпир асăннă хĕрарăмсен упăшкисем те шăп çавăн пек пурăнма тытăннă. Кĕтмен çĕртенех кахала тухса кайнă вĕсем, ни колхозра, ни кил таврашĕнче ним ĕçлеми пулса, шашкăлла та доминолла çапса кăна пурăннă. Каларăм-çке, арăмĕсем питĕ ĕçчен пулнă вĕсен, вăрçă вăхăтĕнче арçын ĕçĕсене хăнăхнăскерсем тем тума та пултарнă — хуть капан хывтар, хуть вăрман кастар, ниçта та аптрамаççĕ! Килĕсенче те йĕркеллĕ — пӳрт-çуртне пуçтарнă, апатне пĕçернĕ, кĕпи-йĕмне çунă, кирлех пулсан, нӳхрепре сăри те пур... Упăшкисем кăна юлашки çур çул хушшинче ялан, кунĕ-кунĕпе килте çук — ирхи çисен тухса каяççĕ те çĕрлеччен сăмсисене те пырса кăтартмаççĕ. Выляççĕ, пĕрмай, кашни кун выляççĕ, явăлсем! Ним çине те çаврăнса пăхмаççĕ, хуть те тĕнче пĕттĕр вĕсемшĕн пулсан!

Мĕн тăвас тетĕн — чир! Ĕçкĕ чирĕнчен те хăрушăрах...

Малтанласа вĕсем пĕрмай правлениинче вылятчĕç. Кивĕ председатель чарсах каймастчĕ вĕсене. Хăйне бюрократ ятне парасран шикленнипе, кусем ăна ĕçлеме кансĕрленĕ пулин те, хăваламастчĕ, тепĕр чух хăй те вĕсемпе пĕрле ларса пĕр-икĕ хут нушнике кĕрсе тухатчĕ. Анчах кăçалхи председатель Мари Петровна, ялти пек каласан — Маюк, наянсене тӳсме пултарайманскер, наччасрах хӳтерсе кăларса ячĕ çаксене.

— Правлени — качака такисен клубĕ мар, тухса вăркăнăр кунтан!— терĕ вăл. Çитменнине тата, ĕçе каймасăр выляса пурăннăшăн «преми» пама та пулчĕ:

— Çине-çине штраф тăватăп акă сире!

Ку пурне те килĕшрĕ; никамран ытла куншăн хĕрарăмсем савăнчĕç, Маюка чунтан тав турĕç.

Çавăн хыççăн ялта доминолла çапса пурăнакансене «качака такисем» теме пуçларĕç. Вĕсемшĕн ку питĕ тĕрĕс ят пулнă ĕнтĕ: домино вăйăн яланах «качака таки» тунипе вĕçленет, ку пĕрре, унсăр пуçне тата доминона пула пур ĕçсене те манса каякан çын хăй те качака таки чухлĕ кăна усă кӳрекен пулса тăрать — ни çăмĕ, ни сĕчĕ, тенĕ пек...

Питĕ лайăх ят панă çĕнĕ председатель колхозри наянсене!

...Правленирен çавăн пек хăваласа янă хыççăн «качака такисем» пĕр хушă лăпланнă пек пулчĕç. Хăшĕсем ĕçре те курăнкаларĕç. Анчах та нумая пымарĕ вăл... Пĕрре купăста йăранĕ çине вĕреннĕ качака картана кĕмелли шăтăк-çурăк тупатех çав. Çаксем те хăйсем валли вырăн тупнă — вĕсем ял тулашне, лаша витисем патне, конюхсем пурăннă çĕре çӳреме пуçланă. Каллех вара кунĕ-кунĕпех качака такине хăвалама тытăннă вĕсем.

Арăмĕсем тепĕр хут хыпăнса ӳкрĕç. Ӳкĕтлесе те пăхрĕç, ятлаçса та, пĕррехинче виççĕн-тăваттăн пухăнса упăшкисем выляни çĕре çил-тăвăл пек пырса кĕрсе çавăрттарчĕç, домино карчĕсене çапа-çапа сирпĕтрĕç, ун пирки чутах вăрçă пуçланса каятчĕ... Кун пек атакă пуласса кĕтмен упăшкисем арăмĕсене пĕрерĕн-пĕрерĕн кăларса ывăтрĕç те алăка шăкăр-шакăр питĕрсе ларса оборонă йышăнчĕç. Арăмĕсем хăйсене пулăшма йывăр артиллери — колхоз председательне чĕнсе илсен тин парăнчĕç вĕсем. Паллах, Мари Петровна вĕсене кунтан та хăваласа ячĕ, аслă конюха чышкипе юнасах асăрхаттарчĕ:

— Çак лодырьсен командине тепре çакăнта выляма ирĕк парсан, эп сана хăвна лектеретĕп! Асту, сăр сухал!

Тата тепĕр хушă чарăннă пек пулчĕç хайхи «качака такисем». Анчах та каллех нумайлăха мар. Кĕçех вĕсем хăйсене валли тепĕр «опорнăй пункт» тупрĕç — колхозăн çил арманĕ çумĕнчи хурал пӳртне çӳреме тытăнчĕç. Ку вăхăтра Мари Петровна пĕр уйăхлăха темле семинара кайнăччĕ те, чаракан пулмарĕ...

Каллех вара кунĕ-кунĕпе киле пымарĕç çаксем, ăнран тухса кайичченех çатлаттарса ларчĕç! Тӳсме те çук пăчă пӳртре, сывлăш курмасăр, чĕлĕм тĕтĕмĕ çăтса ларса, выçăллă-тутăллă пурăннипе хăйсем кĕл тĕслĕ пулса, веç ырханланса ларчĕç.

Тем те туса пăхрĕç арăмĕсем вĕсемпе, епле те пулсан тăна кĕртес тесе. Сăмахпа итлеттерме май çуккине кура, вĕсем пĕрре упăшкисенчен лайăх кăна мăшкăлласа илме шут турĕç: ятарласа, уйра ĕçлекен трактористсене çитерме кайнă пек, вĕсене апат çитерме кайрĕç...

Арман пӳртне кĕнĕ-кĕмен кашниех хăйĕн упăшки умне хăшĕ куршак, хăшĕ котелок лартрĕ, пĕрер чĕлĕ çăкăр кăларса хучĕ.

— Ыртăр та пулĕ паян, хырăмăрсем те выçрĕç пулĕ, çавăнпа та кăштах вăй кĕмелĕх килсе çитерес терĕмĕр-çке... Шалккă вĕт, ĕлĕкхи кил-çуртсăр таркăнсем пекех пурăнатăр та...— тӳрех тăрăхлама пуçларĕ ыттисенчен çивĕчрех чĕлхеллĕ Варвари.

Унтан ыттисем те йĕплеме тытăнчĕç:

— Паян сан ятпах чăх пусса пĕçертĕм-ха, тутлăрах çитерес, терĕм...— юрласа илчĕ Ярмула арăмĕ Кулине.

— Эп ĕнерхи апатах ăшăтса килтĕм-ха, ан ятла ĕнтĕ, пĕррелĕхе каçар,— хаклă хăнана хисеп тунă пекех пуçне тайрĕ Микула арăмĕ Урине.

— Пăтти хытăрах пулчĕ те, çемçетес тесе çуне хĕрхенсе тăмарăм,— терĕ Иван арăмĕ Мари.

«Качака такисем» чăр-чар пăхкаласа илчĕç. Тĕлĕнчĕç те, тарăхрĕç те пулмалла вĕсем, анчах арăмĕсене хирĕç нимĕн те чĕнмерĕç. Пĕри çиме пуçларĕ те — ыттисем те каçса кайсах кавлеме тытăнчĕç. Арăмĕсем пĕр хушă ним чĕнмерĕç, вĕсем çине шăтарас пек пăхса тăчĕç, унтан сасартăк, тахăшĕ команда панă пекех, пурте пĕр харăс упăшкисем патнелле ыткăнчĕç те вĕсем умĕнчи апачĕсене, çăкăр чĕллисене карт! карт! турта-турта илчĕç.

— Намăссăрсем! Питсĕрсем!— кăшкăрчĕ пĕри...

— У-у, аçа çапман эсрелĕсем!— çухăрчĕ тепри...

— Ĕçленĕ чух çук эсир, анчах хыпма пĕлетĕр!

— Алла çăкăр чĕлли тытма та намăс сире!

— Сире çитериччен сыснасене çитерсен, пин хут усăллăрах пулать!..

Упăшкисем тинех арăмĕсем хăйсенчен юри мăшкăллама килнине чухласа илчĕç те, тарăхса кайса, пĕр харăсах сикесике тăчĕç. Куçĕсем апайтурух хаяррăн çутăлса илчĕç вĕсен — халь тесен халь тем туса тăкмалла!

— Пшол вон!— кăшкăрса ячĕ пĕри.

— Мăйăрсене каялла пăрса яриччен тухса вăркăнăр кунтан!— сĕтел çине чышкипе çапрĕ тепри.

Арăмĕсем, упăшкисенчен каялла туртса илнĕ апат-çимĕçсене кăкрисем çумне пăчăртатса тытса, арман алăкĕнчен чакса тухрĕç. Анчах вут-çулăмсăр пулеметсем вĕçĕхĕррисĕр шатăртатрĕç...

— Киле те кĕртместпĕр! Çакăнтах çĕрсе пурăнăр!

— Харам пырсем! Шăршлă качака такисем!..

— Кăтартăпăр-ха эпир сире!— чышкисемпе юна-юна кăшкăрчĕç хĕрарăмсем.— Тыткалăпă-ăр!..

Çакăн хыççăн, чăнах та, пĕр пилĕк-ултă кун качака такисем килĕсенчех пурăнчĕç, анчах унтан... каллех хăйсеннех тапратрĕç вĕт! Мĕн тăватăн вĕсене? Чир!

Акă, паян та выляççĕ вĕсем...

Иван арăмĕ Мари патне Петĕрпе Хĕветĕр, Микулапа Ярмула, унтан Вăтакасри Трахви арăмĕсем — пĕр-пĕринпе калаçса татăлман пулин те — çав хуйхăпа пухăнчĕç. Пĕрпĕрин çине пĕрре пăхса илсенех ăнланчĕç вĕсем пурин упăшкисем те вăйăра пулнине.

— Çук, тантăшсем, текех капла пурăнма пулмасть, пĕтĕм вăй пĕтсе çитрĕ,— хаштах сывласа ячĕ Варвари.

— Халтан кайрăм ĕнтĕ эпĕ те,— терĕ Тари.

— Епле пулсан та чарасчĕ вĕсене вăй выляса пурăнма,— килĕшрĕ Урине.

— Атьăр-ха, пурĕ пĕрле пулса, мĕн те пулин шухăшласа тупар пĕрех хут,— терĕ Кулине.— Неушлĕ чараймăпăр çав качака такисене?

— Майне тупас пулать! Пуçĕсене кил еннелле çавăрасахчĕ!— терĕ Укахви.

— Выçă лартас пулать шуйттансене!

Пĕр хушă шăп пулчĕ. Ултăшĕ те шухăша кайрĕç...

Унтан чăн малтан кил хуçи Мари сăмах пуçларĕ.

— Итлĕр-ха, тантăшсем, манăн пĕр шухăш пур... Эп шутланă пек тусан, хамăрăн качака такисене пит лайăх тăн кĕртме пулассăн туйăнать...— терĕ вăл, чеереххĕн кулса

илсе.— Пăрахтаратпăр эпир вĕсене качакалла сиксе пуранма! Калам-и?

— Кала, Мари, кала!— терĕç ăна пурте пĕр харăс.

— Тем пекехчĕ мелне тупсан!..

Ултă хĕрарăм йăпăртах пĕр çĕрелле пухăнса ларчĕç. Иван арăмĕ Мари вĕсене шăппăн калама пуçларĕ...

* * *

Тепĕр кунне ялти «качака такисем»— Петĕрпе Хĕветĕр, Микулапа Ярмула, Иванпа Трахви тата ик-виçĕ çын, яланхи пекех, ирхи апат хыççăн арман пӳртне пуçтарăнчĕç те чант! пант! тутарма тытăнчĕç. Яланхи пекех, тĕттĕмченех вылярĕç вĕсем. Унтан, халтан кайса çитсен, пуçĕсем анкă-минкĕ пулса кайсан, ялалла тухса утрĕç. Ывăнса çитнипе, ӳсĕрсем пекех сулкаланса пычĕç...

Ыттисенчен сывăхарах пураннипе, киле чăн малтан Иван çитрĕ. Пĕчĕк ĕçпе лупас айне кĕрсе тухсан, вăл крыльца çине утса хăпарчĕ те... алăк çинче çĕлĕк пысăкăш çăраççи çакăнса тăнине курах кайрĕ.

— Мĕнле çăраççи ку? Кун пек пысăк çăраççи çукчĕ-çке пирĕн, ăçтан тупнă ăна Мари?— тĕлĕнчĕ Иван.— Тата каçа хирĕç ăçта мурне тухса кайнă вăл ачи-мĕнĕпех?..

Аптранă енне, вăл урама тухса тапак туртса ячĕ, унталла-кунталла пăхкаларĕ. Урам пуш-пушах... Пĕр çур сехет пек тăрсан, ăна сивĕ пулма пуçларĕ, уçă сывлăшпа сывланă май, хырăмĕ выçни ытларах сисĕнме тытăнчĕ...

— Мĕн хăямачĕ?— тарăхма пуçларĕ хайхискер.— Ăçта сĕтĕрĕнсе çӳрет вăл çак таранччен?!

Ирĕксĕрех юнашарти кӳршĕсем патне кĕчĕ. Лешсем пĕтĕм кил-йышĕпех каçхи апат çисе лараççĕ-мĕн. Сысна какай яшки шăрши тӳрех сăмсинчен пырса çапрĕ ăна, çнес килнипе çăварне сурчăк тулчĕ, пушă хырăмĕ пăкăр-пакăрр... туса илчĕ.

— Арăм пӳрт питĕрсех таçта тухса кайнă-ха манăн,— терĕ вăл кăшт тăрсан, хырăм выççине лăплантарма каллех чикарккă чĕртсе ярса.— Эсир курман пулĕ те вăл ăçталла кайнине?

— Асăрхамарăм çав,— терĕ кӳршĕ арăмĕ.

Вĕсем апат çисе тăранчĕç, упăшки тулли кăмăлпа какăрса илчĕ те çиелтен пĕр мăн стакан турăх ĕçрĕ.

«Пăх-ха, епле пехлет!— шухăшларĕ Иван, кӳршĕ çине темшĕн çиленме пуçласа.— Штопанчĕ мана симе лартас! Ухыт кукар, чорт!»

Çав вăхăтра сехет йĕппи вун пĕр çине куçрĕ.

— Каяс, хальччен килчĕ пуль ĕнтĕ,— тесе, Иван килне тухса утрĕ. Анчах çенĕк алăкĕ çинче çав-çавах çăраççи çакăнса тăрать иккен. Арăмĕ таврăнман. Ăçта кайса кĕнĕ вăл, чăнах та?.. Иван урама тухрĕ те ним тĕлсĕрех хуллен анаталла утрĕ. Çынсем çывăрса пĕтнĕ ĕнтĕ, сайра хутра пĕр-пĕр çутă çеç курăнать. Сивĕ тата, тӳсмелле мар! Хырăмĕ те выçнăçемĕн выçать, вунă кун ăша пĕр тĕпренчĕк яман, тейĕн!

Сасартăк юнашар пралукран Иван умнелле пĕр çын утса тухрĕ.

— Иван мар-и ку?— ыйтрĕ çав çын.

— Эпĕ-çке. Петĕр тем? Мĕн туса çӳретĕн çĕр хута?

— Арăм çухалнă-ха манăн,— ассăн сывласа ячĕ Петĕр.— Пӳрте калпак пек çăраççипех питĕрсе хăварнă... Темиçе çĕре те çитрĕм шыраса — ниçта та çук, эсрелĕ!

— Манăн та Мари çухалнă çав,— терĕ Иван.— Манăн та алăка çĕлĕк пек çăраççипе питĕрсе хăварнă...

— Ан калаç.

— Истинна!

— Ак тата япала, арăм валли çăпала!— пĕççине шарт! çапрĕ Петĕр.— Мĕне пĕлтерет-ха ку?

— Шуйттани-и, тен...

— Атя-ха, Хветĕр патне кайса пăхар, тепĕр чух вĕсем Тари патне пухăнса ларакан...

Анчах Хĕветĕр килте çук иккен, унăн пӳрт алăкĕ çинче те пĕр кило тургакан çăраççи çакăнса тăрать. Тамаша!

Шăнса хытма пуçланă, выçăпа аптранă Иванпа Петĕр, шăлĕсене шаккаса, мăн урамалла тухрĕç те... кĕçех хăйсен тусĕсене, Микулапа Ярмулана тĕл пулчĕç.

— Ăçта каятăр?

— Арăмсем çук-ха пирĕн!— терĕç лешсем пĕр харăс.

— Сирĕн те-и?!

— Мĕч вара, сирĕн те çук-им?

— Йĕп пекех çухалнă!

— Эппин, пурте хусаха юлтăмăр пулать?

— Мĕн хăямачĕ пулса тухать капла?

— Мĕн пулни паллă ĕнтĕ. Тăн кĕртесшĕн вĕсем пире. Сивĕпе, выçăпа муритлесшĕн!

— Çу-ук, мăшкаллатармăпăр-ха хамăртан! Шыраса тупасчĕ кăна, тытăлăттăмăр пĕрре!..

Чылайччен тарахса тăчĕç качака такисем урамра. Унтан пурин килĕсене те тепĕр хут тĕрĕслесе тухрĕç. Мал-

танхи пекех, пурин пӳрчӗсем те пы-ысăк çăрасемпе питӗрӗнсе тăнă...

— Мӗн тăвагпăр ӗнтӗ халь? Çӗрӗпех урамсене виҫсе çӳреме çук вӗт-ха, шанса вилес пулать! Атьăр, кам патне те пулин кӗрсе выртар,— терӗ юлашкинчен Иван, пуринчен те ытларах шăнса кӳтнӗскер.

Хурлăха лекнӗ туссем çырма хӗрринче пурăнакан Хветут патне пырса шаккарĕç — пӗлтӗр пӗр хушă ун патӗнче выляса пурăннăччӗ вӗсем. Лешӗ хăй те вылякалатчӗ, анчах арăмӗ унăн çурăмӗ çинче ухват аври хуҫса пăрахсан — чарăнчӗ.

— Тархасшăн, кӗҫӗрлӗхе хваттере яр пире, Хветут, хамăр килсене пӗри те кӗрейместпӗр, арăмсем питӗрсе кайнă,— тӗрӗссипе каласа пачӗç ăна качака такисем.

Хăйсем патне çак арçынсем мӗн пирки пырса кӗнине пӗлсенех Хветут арăмӗ ним майсăр хăтăрса тăкрӗ вӗсене:

— Çавă чух, çавă чух сире! Ытла иртӗнсе кайрăр-ха, килӗрсене мантăр! Лайăхрах тыткалаччăр сире арăмăрсем, эрнипе киле ан кӗртчӗр, пӗр чӗлӗ çăкăр та ан паччăр. Харам пырсем вӗт эсир!..

Вăл татах та пăскăртатчӗ пулӗ те, упăшки чарчӗ:

— Çитӗ сăна! Çыннисен ахаль те ăшӗсем хыпаççӗ пуль, эсӗ пур — татах вут хуратăн... Тен, çыннисен çиесси те килет пулӗ...

— Ку тӗрӗс вара, Хветут, питӗ тӗрӗс,— тăруках хавасланчӗ Иван, çиесси çинчен илтсен.— Хам çинчен каластăк, ман хырăм паçăрах çурăм çумне çыпăҫса ларчӗ. Марфа аппа, чăнах та, пӗрер татăк çăкăр паратăн пуль пире... кивçенле те пулин!

— Çăкăр тата сире!— каллех кăшкăрса пăрахрӗ лешӗ.— Çăкăр çийиччен малтан ӗçлес пулать ăна! Питех выçса вилме пуçларăр пулсан — авă, кăмака кукринче пӗр куршак сив паранкă ларать, сысна çурисем валли пӗçерсеттӗм. Кӳпӗр çавна!

— О, пире паян вăл та юрать! Пуçмалăх тăварӗ пултăр кăна!— аллисене сăтăркаласа илчӗ Иван.

Пӗр витре кӗрекен чугунри вӗтӗ паранкăна тăватă «качака таки» наччасра тирпейлесе хучӗç. Унтан, тумтирӗсене урайне сарса, пурте юнашар тăсăлса выртрĕç.

— Çапах та, ăçта кайса кӗме пултарнă-ха пирӗн арăмсем ачи-пăчипе пӗрлех?

— Мӗн хăтланаççӗ вӗсем?

— Неушлĕ юриех тăваççĕ çакăн пек?— шухăша кайса калаçкаласа илчĕç хăйсем хушшинче.

— Таçтах тухса тарман пулĕ-ха, ирхине тупăнĕç, сывăрăр,— лăплантарчĕ вĕсене кил хуçи.

Анчах арăмĕсем ирхине те тупăнмарĕç. Упăшкисем тул çутăлнă-çутăлманах тухса чупрĕç килĕсене,— усси пулмарĕ, каçхи пекех, мăн çăраççисем çеç курчĕç вĕсем хăйсен пӳрчĕсем çинче. Каллех пурте пĕрле пухăнчĕç, канашларĕç, тарăхса шавларĕç...

— Хăйсем тухса тарнă пулсан та, ачисене ăçта чикнĕха вĕсем?

— Май килмест капла, евит тăвас пулать!

— Кама евит тăватăн?

— Милицине пĕлтерес...

— Мĕн тесе? Арăмсем тухса тарнă, тесе-и?

— Апла та юрать.

— Тăхтăр-ха, ытлашши намăс пулĕ апла... Пĕтĕм район кулма тытăнĕ пирĕнтен.

Кунĕпех выçă çӳрерĕç хăйсем. Пӳрчĕсене питĕрнĕ вĕрçĕнĕ мăн çăраççисене çĕмĕрме, темшĕн, хăяймарĕç. Каçхине каллех хваттере-кĕрсе çывăрчĕç, Хветут арăмĕ вĕсене вăрçа-вăрçах сыснасем валли пĕçернĕ тепĕр куршак паранкă лартса пачĕ...

Усал сăмах утпа çӳрет, тенĕ пек, ял тăрăх питĕ тĕлĕнмелле хыпар сарăлчĕ:

— Хайхи качака такисене арăмĕсем ачи-пăчипех пăрахса тарнă!

Хăшĕсем варĕсене тытсах кулчĕç кунтан, хăшĕсем «çав кирлĕ-ха вĕсене!» терĕç.

Арăмĕсем виççĕмĕш кунĕнче те тупăнмасан, «качака такисем» тек тӳссе тăраймарĕç, колхоз председателĕ Мари Петровна патне тĕркĕлтипех пырса кĕчĕç.

— Илтнĕ пулĕ... Çемьесем çухалчĕç вĕт пирĕн. Мĕн тумалла халь?

Лешĕ малтанах пĕлмĕш пулчĕ, анчах хăйĕн куçĕсем çав тери тăрăхламалла кулса тăчĕç...

— Ай-яй-ай! Хĕрхенетĕп сире, шутсăр шеллетĕп, анчах нименпе те пулăшаймастăп,— терĕ вăл.— Чăнах та, ăçта кайса кĕме пултарнă-ха вĕсем сирĕн?.. Иртнĕ эрнере вербовщик килнĕччĕ, çав илĕртсе кайман-ши, мур пуçĕ! Калăпăр — Свердловскине, е унтан та инçерех — Камчаткăна, Сахалина... Пулма пултарать вĕт çавăн пек, э? Хăвăр тарăхтарса çитеретĕр те, тӳссе тăрайман ĕнтĕ вĕсем... Хайхи

вăйăран вăкăр пулать тени пулчĕ пулĕ! Качака таки хăваласа пурăнсах çемйесĕр тăрса юлтăр вĕт!..

Тăлăха юлнă упăшкасем нимĕн те чĕнеймерĕç. Председатель хăйсенчен тăрăхланине сиссе, вĕсем ун патĕнчен кайма тапранчĕç. Анчах Мари Петровна сĕтел хушшинчен тăрса пӳлĕм алăкне шăнкăрт питĕрсе лартрĕ.

— Чимĕр-ха,— терĕ вăл,— ан васкăр. Этемле калаçса илер май килнĕ чух... Миçе кун выçлă-тутлă, унта-кунта йăваланса çӳретĕр-ха эсир?

— Тăваттăмĕш кун ĕнтĕ,— пуриншĕн те ответ пачĕ Иван.

— Ытлах кăмăла каймасть-им кун пек пурăнни?

— Шутсăр усал.

— Айăпĕ камра-ха? Хăвăрăн шутăрпа, кам айăплă куншăн?

— Кам пултăр? Арăмсем! Вĕсем пăрахса тухса кайнă вĕт пире, эпир мар!— терĕ Петĕр.

— Анчах мĕншĕн тунă вĕсем çавăн пек, чухлатăн-и? Эсир хăвăр эрни-эрнипе, уйăхĕ-уйăхĕпе килте ларманнине мантăр-и?

— Вăл çапла та-ха...— мăкăртатса илчĕ Хĕветĕр.

— Тоттă, çапла çав, савнă та юратнă... качака такисем! Анчах халĕ акă, ăнсăртран арăмăрсемпе ачăрсем тупăнас пулсан, малашне те çавăн пекех пурăнма шутлатăр-и? Ним ĕçлемесĕр, вăйă выляса, колхоз ятне çĕртсе пурăнас тетĕр-и?

Арçынсем чĕнмерĕç...

— Ну, калăр ĕнтĕ!— çине тăрсах хистерĕ председатель.— Мĕн, çăвара сухан хыпнă пек ларатăр?

Пĕр минут иртрĕ, иккĕ... Петĕр — Хĕветĕр çине, Иван — Трахви çине, Ярмула — Микула çине пăха-пăха илчĕç.

— Эпĕ сирĕн татăклă сăмахăра кĕтетĕп!— сассине хытарчĕ Мари Петровна.

— Малашне ун пек пулмасть пулĕ...— терĕ вара Иван, çĕрелле пăхса.

— Эс мĕнле шутлатăн?— куçĕсемпе Петĕр çине тĕллерĕ председатель.

— Эпĕ те çаплах шутлатăп...

— Эс мĕнле, Хĕветĕр?

— Эпĕ те çавăн майлах...

— Ярмулапа Микула мĕнле шутлаççĕ?

— Эпир мĕн... эпир те çапла ĕнтĕ!— терĕç кусем.

— Апла пулсан, юлташсем,— терĕ вара Мари Петровна,— сире тĕп-тĕрĕс калама пултаратăп: ыран сирĕн арăмăрсем киле таврăнаççĕ.

— Ăçта вĕсем? Ăçтан таврăнаççĕ?— сике-сике тăчĕç «качака такисем».

— Вăрмантан таврăнаççĕ. Эсир кунĕ-кунĕпе тарса çӳренĕ пирки сирĕн выраăна вăрман ĕçлеме кайрĕç вĕсем. Клуб валли йывăç касма.

— Ачисем ăçта вара? Ачисем ăçта?

— Ял хĕрринчи Анюк патĕнче вĕсем валли вăхăтлăх ясли пекки турăмăр. Питĕ лайăх пурăнаççĕ, эп унта кашни кунах кайса пăхатăп... Халь ĕнтĕ пĕтĕмпех ăнлантăр-и?

— Анлантăмăр...

— Текех «качака такисем» пулмастăр, эппин?

— Пулмастпăр!

...Чăнах та, çакăн пек вĕрентсе илнĕ хыççăн «качака такисем» колхозра чип-чиперех ĕçлеме тытăнчĕç те, вĕсене çав усал ятпа чĕнме пăрахрĕç. Питĕ лайăх пурăнаççĕ халь вĕсем...

ВАРТТАН УПАШКА

ШАП ÇУР ÇЕРТЕ икĕ çамрăк дружинник хăйсен штабне пĕр аллă пиллĕксене çитнĕ арçынна илсе пычĕç те, штаб начальникĕн сĕтелĕ умне тăрса, пĕр-пĕрине пӳлепӳлех каласа пама тытăнчĕç...

— Ирĕклĕх урамĕнче тытрăмăр эпир ăна,— терĕ пĕри, пĕчĕкрех каçăр сăмсаллăскер, хура куçĕсене мăчлаттарса.— Тĕттĕм тăкăрлăкран йăпшăнса тухрĕ те вăл, пĕр калинккене темиçе хут тĕртсе пăхрĕ. Калинкки уçăлмарĕ. Вара нумай шухăшласа та тăмарĕ, пушмакĕсене хывса хул пуççи урлă çакрĕ, йĕм пĕççисене тавăрчĕ те хӳме çинелле чакаланма тытăнчĕ. Эпир ăна урамăн тепĕр енчен сăнаса тăтăмăр. Кăштах уйăх çути пулнипе, пире вăл питĕ лайăх курăнчĕ...

— Унтан вара мĕн пулчĕ?— ыйтрĕ штаб начальникĕ.

— Унтан эпир часрах урам урлă чупса каçрăмăр та, кашни пĕрер уринчен ярса тытрăмăр,— ăнлантарма пуçла-

рĕ тепĕр каччи, сĕвекрех çамки çинчи тарне шăлса.— Ăçта кĕрсе каятăн?! Халех каялла аннă пултăр!— тетпĕр. Анчах та вăл хӳме çинчен ним тусан та анасшăн пулмарĕ, арçури пек тапкаланма тапратрĕ. Унтан темлерен пĕр урине вĕçертрĕ те Петюка пĕррех ура кĕллипе сăмсинчен начлаттарчĕ. Çыннин сăмси ахаль те пĕчĕккĕ, вăл ăна тата ытларах лапчăтрĕ пулмалла. Çакăн хыççăн ăна вăйпах туртса антарма тиврĕ...

— Кам эсĕ? Мĕн тума çĕрле сапурсем урлă сикме хăтланса çӳретĕр?— тесе ыйтатпăр. Чĕнмест. Ним те каламасть! Иккĕн ик енчен тытса кунталла çавăтса килме пуçласан тин сăмах хушрĕ: «Ярăр мана, эпĕ вăрă та, шульăк та мар. Йăпăрт пĕр хĕрарăм патне кĕрсе тухасшăнччĕ кăна, урăх пĕр шухăш та пулман манăн»,— терĕ. Ну, паллах ĕнтĕ, вăл çапла каласан тӳсеймерĕмĕр эпир, ахăлтатсах кулса ятăмăр! Шухăшласа пăхăр-ха, начальник юлташ, çакăн пек ват çын сĕм çĕрле тем çӳллĕш сапур урлă сиксе хĕрарăм патне кĕрет! Хăйĕн килĕнче çич-сакăр ача пулĕ-ха, тен, мăнукĕсем те пур-тăр! Пулать вĕт этем, э? Чисти ял кулли!..

Анчах эпир ăна ĕненмерĕмĕр. Пирĕн шутпа, вăл унта юрату ĕçĕпе мар, çаратас ĕмĕтпе кĕресшĕн пулнă... Çавăнпа тытса илсе килтĕмĕр те кунта.

Дружинă штабĕн начальникĕ, вăрçăра сылтăм аллине çухатнăскер, Чапаевăнни пек уссийĕсене сулахай аллипе пĕтĕркелесе илчĕ те çамрăксем тытса килнĕ «нарушителе» куçĕсемпе шăтармаллах пăралама тытăнчĕ.

Ун умĕнче вăтам пӳллĕ, ятарласа самăртнă сысна аçи пекрех çын тăрать. Пичĕ арбуз евĕрлĕ, çап-çаврака. Уссийĕ шăрт пек, кăштах кăвакарнă. Янахĕсем виççĕ. Малалла мăкăрăлса тухнă хырăмĕ тăват-пилĕк витре кĕрекен сăра пичкине аса илтерет... Хырăмĕ çинчи кĕпи çурăлса аннă та (ку хăйне хӳме çинчен сĕтĕрсе антарнă чух пулнă пуль ĕнтĕ) — çав çурăк витĕр хура çăм ăшне путнă кăвапа курăнать. Чĕркуççи таран тавăрнă хăрах йĕм пĕççи çӳлтен аяла çитичченех çурăлса тухнă. Çара уран, анчах пуçĕнче — самаях хаклă йышши шлепке. Сăмси вара чышкă пысăкăш шыçса, хĕрлĕ-кăвак тĕслĕ пулса ларнă,— хӳме çинчен туртса антарсан тӳрех сăмса çине тăрăннă пулмалла.

— Чăн-чăн карикатурă ку...— хăй ăшĕнче кулса илчĕ начальник.— Укерсе илмелле те «Капкăн» хуплашки валли леçсе памалла çеç, тупата: Питĕ вăйлă хуплашка пулать!..

— Ларăр,— терĕ вăл унтан, тытса килнĕ çынна хăй умĕнчи пукан çине кăтартса.

Ку ларчĕ. Ним каличчен малтан вăл начальник куçĕнчен çав тери хурлăхлăн пăхрĕ те:

— Пушмак тăхăнма ирĕк парсамăрччĕ, сирĕн урай сивĕ кунта, анчах манăн урасене шăнтма юрамасть — ревматис,— терĕ.

— Тархасшăн, тăхăнăр,— пуçĕпе сулчĕ начальник, хăй ăшĕнче çак этемрен халĕ те кулма чарăнаймасăр.

Пĕр вунă минут тăрмашрĕ вара çав çын хăйĕн пушмакĕсемпе. Пĕшкĕнме хырăмĕ кансĕрлерĕ ăна. Аллисем ниепле те пушмакĕ патне çитеймеççĕ. Асапланмаллипех асапланчĕ шеремет! Эхлетрĕ, ахлатрĕ, виçине пĕлмесĕр клевер çисе тултарнă ĕнерен те кая мар хашкарĕ, хушшăн-хушшăн сывлăшĕ те пӳлĕнсе ларчĕ курăнать. Юлашкинчен, шнурокĕсене çыхкаласа пĕтерсен, пукан хыçĕ çине тайăнчĕ те, хырăмне ик аллипе ыталаса тытса, тепĕр пилĕк минут хушши сывлăш çавăрса ларчĕ. Çавăн хыççăн тин дружинă штабĕн начальникĕ унпа сăмах пуçларĕ...

— Ну, гражданин, халь ĕнтĕ калаçма пултаратăр-и? Пирĕн сирĕнтен ăна-кăна ыйтса пĕлес пулать. Йĕркипе çапла.

— Халь пултаратăп,— терĕ те лешĕ ăна хирĕç, тем аса илме тăрăшнă çын пек куçĕсене хупрĕ.

— Сирĕн хушаматăр, ятăр тата аçăр ячĕ мĕнле-ха?

— Поросенков, Макар Кузьмич.

— Аçта пурăнатăр?

— Коммунальнăй слобода, 33. Частнăй хваттер.

— Çемьеллĕ-и эсир, хусах-и?

— Арăмран судпа уйрăлни пĕр уйăх çитет.

— Ачусем пур-и?

— Виççĕшĕ арăмпа, виççĕшĕ манпа.

— Мĕнле професси сирĕн, ăçта ĕçлетĕр?

— Бухгалтер эпĕ. Картус-çĕлĕк çĕлекен мастерскойĕнче. Вун виçĕ çул ĕçлетĕп унта.

— Так, так... Халь каласа парăр ĕнтĕ: мĕн шутпа, мĕн ĕмĕтпе эсир çакăн пек сĕм çĕрле ют çын килне хӳме урлă каçса кĕме хăтлантăр?

Поросенков ытла тăруках ответ памарĕ, каллех хырăмĕ кӳпме пуçланă ĕне пек йывăррăн сывла-сывла илчĕ. Начальник тепĕр хут ыйтрĕ:

— Мĕншĕн эсир çĕр варринче çын хӳми çине чакалантăр? Калăр тӳррипе, мĕн сăлтавпа?

— Манăн... ачасенĕ курас килекен пулчĕ, çавăнпа кĕрес, терĕм. Хамăн вĕт-ха вĕсем, ман юн...— чылайран тин хуравларĕ Поросенков.

— Санăн арăму пулни çав çуртра пурăнать-им?

— Ийя çав. Вăл çурчĕ манăн хамăн пулнăччĕ-çке, анчах суд мана унтан хăваласа кăлармалла, çуртне арăма памалла турĕ. Халĕ вăл, пӳтсĕрскер, качча кайма шут тытнă пулмалла, нотариус патне кайса кил-çурта пĕтĕмпех йăмăкĕ çине çыртарнă, теççĕ. Ну, парнеленĕ эппин. Ахалех, пĕр пуссăрах, тăванла. А мана пуçĕпех шăхăртса хăварчĕ... Çвер мар-и ара вăл!

— Эсир уйрăлнах пулсан, арăму пулни сире киле кĕртмест те пуль вĕт?

— Ачасем патне пыма чармасть. Эпĕ вĕсем валли кашнинчех кучченеç илсе каятăп-çке. Хăш чух канфет, хăш чух шăкалад...

Çак самантра Поросенков хӳмерен çакăнса тăнă чух хăйне сăмсинчен ура кĕллипе тăхăнтартса янă дружинник унăн пиншакĕн шал енчи кĕсйинчен эрех кĕленчин пырĕ курăнса тăнине асăрхарĕ те, ăна пĕррех туртса кăларса сĕтел çине лартрĕ.

— Çакăн йышши шăкалад илсе каятăн-и эсĕ ачусем валли?— ыйтрĕ вăл унтан çилĕпе.— Мĕн ятлă-ха ку шăкалад? Перцовкă теççĕ пулас ăна?

— Ку вăл ачасем валли мар, эп унпа хама грип ерессрен карланка чӳхесе дезинфекци тăватăп...— пуçне унталла-кунталла пăркаласа кăтартрĕ Поросенков.

— Çапах та, тен, эсир суятăр? Улталатăр пире?— ун куçĕнчен каллех чарлаттарса пăхрĕ начальник.— Темле, эсир каланисем ытлах çыхăнса пымаççĕ! Арăмупа уйрăлни пĕр уйăх çеç, анчах эсир ун патне çӳретĕр...

— Эпĕ: ачасем патне, терĕм-çке!— хирĕçлерĕ Поросенков.

— Эппин, ма-ха эсир унта кун çутинче мар, çĕрле, пăч тĕттĕм чух çӳретĕр? Вăрă пек, хӳме урлă каçса кĕретĕр?

— Кăнтăрла... мĕн... аван мар!

— Мĕншĕн?

— Çыйсем курма, кайран хамран кулма пултараççĕ. Арăмĕпе каллех пĕрлешесшĕн пуç çапма çӳрет, тейĕç. Анчах эпĕ мăн кăмăллă çын, хама тиркенине тӳсме пултараймастăп. Апломб вăйлă манăн...

— А-ав мĕн иккен! Пĕлмен, каçарăр. Чăн та мăн кăмăллă пулмалла çав эсир. Халь пăхсан та курăнать вăл —

Наполеон пекех ларатăр ав. Хырăму çурăк, йĕммӳ çĕтĕк, сăмсу пиççе çитмен помидор пек курăнать. Картинкă вĕт, хуть те халех выставкăна яр!

— Эсир мана кӳрентеретĕр, начальник юлташ!— сасартăк паттăрланчĕ Поросенков.

— Юрĕ, юрĕ, кӳрентермĕпĕр. Çапах та сирĕн пирки ыран пурĕ пĕр тĕплĕрех тĕрĕслесе пĕлмелле пулать. Тем, питех шанас килмест-ха манăн сире!

— Тархасшăн, ара, тĕрĕслĕр! Ним чухлĕ те хăрамастăп, мĕншĕн тесен эпĕ пур енчен те тап-таса çын! Анчах халĕ мана эсир киле кайма ирĕк парăр: ирччен кунта юлма пултараймастăп эпĕ, кам та пулин эп милицирен тухнине курсан, пĕтĕм авторитет пĕтсе ларма пултарать. Хулара мана пĕлмен çын та çук вĕт...

— Чармастăп. Вĕçтерĕр,— пуçĕпе алăк еннелле сулчĕ начальник. Унтан çапах та тĕртсе илмесĕр тӳсеймерĕ: — Çĕрле пĕччен çӳреме хăрамастăр вĕт эсир? Хăнăхнă?

Поросенков хăйĕнчен тăрăхланине сисрĕ, анчах хирĕç нимĕн те каламарĕ, шăрт пек уссийĕсене хăвăрт-хăвăрт хускаткаласа илчĕ çеç.

* * *

Акă мĕн пĕлнĕ вара дружинниксен начальникĕ тепĕр кунне, Поросенков пирки тĕрĕслеме кайсан.

Кӳршĕсем каланă тăрăх, Макар Кузьмичпа унăн арăмĕ Варвара Федоровна нумай-нумай çулсем хушши лайăх пурăннă. Пĕр-пĕрине чунтан-вартан юратса, кăвакарчăнсем пекех килĕштерсе, пĕр сивĕ сăмах каламасăр. Пĕрне-пĕри вĕсем хуть те хăçан та «Макарушка», «Варварушка» тесе кăна чĕннĕ. Çӳçĕсем кĕмĕлленме пуçланă пулин те, ялан пĕрле, хулĕсемпе çаклансах çӳренĕ — пасара та, кинона та, шăрăх кунсенче Атăл леш енчи хăйăр çинче хĕртĕнсе выртма та, кăмпа татма та. Хăш чухне çынсем умĕнчех чаплаттарса чуп тунă...

Килĕ-çурчĕ вĕсен хăйсен пулнă — ăна Макар Кузьмич пĕр çирĕм пилĕк çул ĕлĕкрех, хăй леспромхоз бухгалтерĕнче ĕçленĕ чухне майлаштарса юлнă. Темшĕн-çке, авланнă хыççăн малтанхи вунă çул хушшинче ача таврашĕ пулман вĕсен, анчах кайран Варвара Федоровна, такам çине тарăхнă пекех, умлăн-хыçлăн улттă туса панă, патшалăхран пособи те илекен пулнă. Кĕскен каласан, Поросенковсен пурнăçĕ пур енчен те ăнсах пынă, вĕсен пурнăçне хуть те кам та ăмсанма пултарнă!

Унтан сасартăк çаксен килĕнчен ырă мар шăв-шав илтĕнме пуçланă. Ятлаçу, харкашу. Пĕрне пĕри калама та çук кӳрентермелле вăрçнисем...

Кӳршĕсем шалт тĕлĕннĕ: мĕн амакĕ пулчĕ кусене? Мĕнле тухатмăш пăсса ячĕ вĕсен чип-чипер пурнăçне? Мĕн пирки çуйхашаççĕ?

Хаçатра Варвара Федоровна хăйĕн упăшкинчен уйрăлма «ĕç пуçарни» çинчен калакан пĕлтерӳ тухсан вара, вĕсене пĕлекенсем пурте ах! тенĕ, турра ĕненекеннисем геми-çешер хут сăх-сăхса та илнĕ.

— Кай, кусем ухмаха ернĕ пуль!

— Ачи-пăчи те пĕр кĕтӳ, хăйсем те ватă ĕнтĕ...

— Çынсенчен вăтанасчĕ хуть...

— Тьху, каяннисем! Иккĕшне те чĕн пушă çеç кирлĕ...

Суд пулнă кун ăна итлеме пĕр ик çĕр çын ытла пухăннă. Ай тур-тур, мĕн кăна илтмен вĕсем унта! Макар Кузьмиччи Варвара Федоровна çинчен, Варвара Федоровни Макар Кузьмич çинчен каламанни те хăварман, тет, çав. Эс апла та эп капла, эп апла та эс капла! Хăйсен сăмахĕсене ĕненсен, вĕсем чăн-чăн вĕри çĕленсемех пулнă, çирĕм пилĕк çул хушшинче пĕрне пĕри пĕр çутă кун та кăтартман, пĕр-пĕрин юнне ĕçсе кăна пурăннă пулать. Упăшки арăмĕ çинчен тем те пĕр каланă чух та, арăмĕ упăшкине кăшлама тытăнсан та залра ларакан тӳрĕ чунлă çынсем, тӳсеймесĕр, урисемпе тăпăртатсах кăшкăрнă:

— Тĕрĕс мар! Эле-ек! Варвара Федоровна ырă çы-ын!..

— Суять! Макар Кузьмич нихăçан та ун пек пулма-ан!

Анчах урса кайнă мăшăра мирлештересси çинчен сăмах та пулма пултарайман. Вĕсем çав самантра пĕрне пĕри тытса хĕнесе тăкма та хатĕр пулнă...

— Уйăрас,— тенĕ суд.— Пурлăхне çурмалла, пĕр тан пайламалла тăвас.

— Мана нимĕнле пурлăх та кирлĕ мар,— халăха каллех тĕлĕнтерсе пăрахнă Макар Кузьмич.— Маншăн çак арçурирен хăпни те темех тăрать,— Варвара Федоровна çине тĕллесе кăтартнă вăл.— Анчах виçĕ ачи манпа пулччăр. Вĕсемсĕр пурăнма пултараймастăп, çакăнса вилетĕп эпĕ.

Çак суд çинчен кайран чылайччен пĕтĕм хула калаçса пурăннă...

Анчах хулари шавлă пурнăçра тем те пулса иртет — кулмалли те, хурланмалли те, тĕлĕнмелли те, тарăхмалли

те,— пурне ăçтан астуса çитеретĕн? Тата этем пуçĕ патшалăх архивĕ мар вĕт, унта ытла пурте упранмасть.

Поросенковсем çинчен те манчĕç сынсем. Çавăнпа та дружинă штабĕн начальникĕ вĕсем çинчен кӳршĕсенчен ыйтса пĕлме тăрсан, ăна никам та нимех те каламарĕ.

— Уйрăлнă тăк — уйрăлнах ĕнтĕ... Вĕсенчен тухман ку йăла, вĕсем пĕтерес çук ăна. Хăйсене хăйсем пĕлеççĕ пуль!..

Макар Кузьмич судпа уйрăлса тухса кайнă хыççăн хăй килне çӳренипе çӳременни çинчен ыйтсан, вĕсемпе юнашар пурăнакан йĕтĕн сӳсĕ пек сухалла пĕчĕк старик ним тытăнса тăмасăрах каласа хунă:

— Сисĕнкелет тепĕр чух, сисĕнкелет. Эп час-часах ыйхă килменнипе аптратăп та асăрхакалатăп: чăн та вăрă пекех килсе кĕрет хăйĕн килне Макар Кузьмич. Çур çĕрсем иртсен килет те, кăвак çутăпа тухса шăвăнать вара. Хи-хи-хик!.. Эпир те яш чухне çӳрекелеттĕмĕр çавăн пек. Анчах та — кам пĕлет?— тен, кун пирки вĕсем малтанах соклаç тунă? Уйрăлнă пулсан та, ватлăхра ют килсем тăрăх сĕмсĕрленсе çӳрени те, ют çынна киле кĕртни те килĕшсех каймасть те-ха, ара... çавна шута илеççĕ пуль! Соклаççăрах мар ĕнтĕ ку, соклаç пурах вĕсен...

Çакăнсăр пуçне дружинă штабĕн начальникĕ урăх нимĕн те пĕлеймен. Юлашкинчен, вăл хăй те сӳс-сухал каланисемпе пĕтĕмпех килĕшнĕ: «Соклаççăр мар ĕнтĕ ку...»

* * *

«Соклаç» пулнă çав Поросенковсен. Питĕ пысăк та çирĕп «соклаç»! Пĕр-пĕринпе пур кӳршĕсене те илтĕнмелле ятлаçма-вăрçма пуçлинченех, пите кĕççе çĕленĕ пекех намăса пĕлмесĕр суд умне, пĕтĕм халăх умне тухса тăрса пĕрне пĕри çĕр çинчи чи усал сăмахсемпе хăртма тытăниченех пулнă вăл килĕшӳ...

Чăн та ĕнтĕ, çав килĕшĕве хут çине çырман. Ун çине пичет те пусман. Нотариус патне кайса та çирĕплеттермен. Анчах пĕр-пĕрине чунтан-вартан юратакан упăшкипе арăмĕ кăмăллăн калаçса татăлни пур йышши хутсенчен те çирĕпрех пулать-çке! Вĕсем пĕрре ыталанса чуп туни те çитмĕл çичĕ пичет пуснинчен вăйлăрах.

Тĕп-тĕрĕссипе каласан, вĕсен пĕтĕм ĕçĕ-пуçĕ ак мĕнлерех пуçланса аталанса пынă...

Юлашки çулсенче Поросенковсен нумай-нумай паллăнă çыннисем темиçешер хутлă çĕнĕ мăн çуртсене пурăнма куçнă. Хăшĕсем икшер, теприсем — пысăкрах çемьеллисем — виçшер пӳлĕмлĕ хваттерсем туяннă. Поросенковсене пĕрре кăна мар çав хваттерсене «çума», ялти пек каласан — çĕн пӳрт ĕçкине чĕннĕ.

Ах, ăш-чикки хыпнă вара Варвара Федоровнăн! Кĕвĕçнипе, ăмсаннипе ниçта кайса кĕреймен вăл унта. Ытла та чаплă пулнă-çке хваттерĕсем: асли те аслă, тата, кунсăр пуçне, вут-мĕн хутас, шыв патне каяс хуйхи те çук, мунчи те, тула тухмалли те пӳртрех — нихçан та шăнса пăсăлас çук. Пăрăлтатса газĕ çунать, шăкăртатса шывĕ юхать... Çулла пулсан, балкон çине кресла туртса кăларса улпут пек саркаланса лар — сывлăшĕ уçă, куçа пĕтĕм хула курăнать, радиопа паракан хаваслă юрăсем пĕтĕм чуна килентереççĕ...

Ы-ых, мĕн каламалли! Виличчен пурăнса курасчĕ пĕрре çавăн пек пурнăçпа! Тепĕр тесен, ун пек пурăнма пуçласан, вилес те килес çук пулĕ çав...

Варвара Федоровна малтан ыт ахальтен пек, унтан çине тăрсах хистеме тытăннă Макар Кузьмича:

— Атя-ха, эпир те çавăн пек хваттер ыйтатпăр... Йăлăхрăм эпĕ çак йывăç лупасра пурăнса! Вут хут та шыв çĕкле, хĕлле хĕрĕх градус сивĕре те сарай хыçне кай...

— Памаççĕ пире,— тенĕ Макар Кузьмич, пуçне пăркаласа.

— Мĕншĕн памаççĕ пулать? Эпир çынсенчен мĕнрен катăк?

— Пирĕн хамăрăн кил-çурт пур...

— Вăл ниме те пĕлтермест. Кала, хваттер илсенех çуртне сутса яратăп, те.

— Май килмест çав ун пек. Малтан çуртне хула Советне памалла, вара тин калаçма пулать...

— Мĕнле вăл... памалла? Ахалех-и? Пĕр пуссăрах-и?

— Ахалех çав.

— Ну, капла килĕшместĕп эпĕ! Çав териех ухмаха ермен-ха çакăн пек кермене пĕр пуссăр парса ларма!

— Эппин, мĕнле пĕлнĕ — çавăн пек ту.

— Эсĕ çапах та тăрăш! Черете çыраççĕ, тет, унта!

— Кил-çурт пуррисене черете çырмаççĕ. Саккунĕ çапла.

— Ухмахла саккун вăл! Кала эс вĕсене!

— Эс, ху кайса кала...

— У-у, çулламан пăру! Санран ĕмĕрне те нимĕн те пулас çук! Пĕр кĕтӳ ача туса тултартăн, анчах вĕсене лайăхрах условисенче усраса ӳстересси çинчен шутлама та пĕлместĕн!

— Эп вун икке çитиччен хура пӳртре пурăннă та, çапах çын пулнă, ыттисенчен кая мар...

— Тьху! Мĕн çынĕ пур сан çумăнта?! Мăкла ĕне вĕт эсĕ! Лаша! Упа! Сурăх!..

Кĕскен каласан, малтанхи вăхăтра Макар Кузьмич чаплă хваттер илесси пирки питех шухăшламан, мĕншĕн тесен хăйĕн килне те тиркемен вăл (пятистеннăй пӳрт, сарай, нӳхреп, сад, ун варринче беседкă...). Анчах шыв тумламĕ те, пĕр май пĕр çĕре тумласа тăрсан, чула шăтарма пултарать, теççĕ. Варвара Федоровна атакисем ăна пурăна киле тăнран кăларма пуçланă. Тытăннă вара Макар Кузьмич çӳреме... Паян кунта çитнĕ, ыран унта,— ыйтнă, тĕпченĕ, сăнанă... Опыт та пухнă хăш-пĕрисенчен — патшалăха ултpalama май тупас енпе. Пĕррехинче вара çавăн пек разведкăран питĕ ывăнса таврăнсан сĕтел çине çур литр кăларса лартнă та, арăмне куçран тӳррĕн пăхса:

— Тавай, Варварушка, уйрăлатпăр!— тенĕ.— Заявление эсĕ паратăн-и, эп паратăп-и — вăл пур пĕрех. Анчах пирĕн уйрăласах пулать, урăхла май килмест...

Варвара Федоровна тĕлĕнсе шанк! хытса тăнă.

— Эс мĕн... эс мĕн, Макарушка, чирлемерĕн пулĕ-çке? Ансăртран, пуçу çаврăнмасть-и санăн?— хăраса ыйтнă вăл.

— Çук, чирлемен,— пуçне пăркаланă Макар Кузьмич, стакана эрех тултарса.

— Эппин, кампа та пулин тĕл пулса, киле киличчен пĕр çуррине çĕмĕртĕр пуль? Усĕрпе лăпăртататăн вĕт эсĕ!

— Çук, Варварушка, эп санпа урăллах калаçатăп. Уйрăлмаллах пирĕн. Пĕрле пурăнсан, ыр пурнăç пулмасть... Ан та тавлаш! Юлташсем те çаплах калаççĕ: арăмунтан халех уйрăл, вара тин этем ретне кĕретĕн, теççĕ...

Варвара Федоровна упăшки çине пĕр хушă ним ăнланмасăр, сывлайми пулса пăхса тăнă, унтан сасартăк диван çине тăсăлса ӳкнĕ те кăшкăрса макăрса янă. Унăн сасси пĕрре выçса çитнĕ ĕне мĕкĕрни пек, тепре автомобиль кăшкăртнă пек, çавăнтах тата йытă вĕрнĕ пек те илтĕннĕ. Анчах та часах вăл макăрнинчен усси пулас çуккине тавçăрса илнĕ пулас та, йăпăр-япăр сиксе тăрса ухват ярса тытнă:

— Вĕлере-еп! Ан пул луччă эс çĕр çинче!..

Юрать-ха, Макар Кузьмич вăхăтра пăрăнма ĕлкĕрнĕ, атту пулсан, унăн пуçĕ тăм чӳлмек пекех арканса кайнă пулĕччĕ.

— Чипер хăтлан!— кăшкăрнă Макар, хăй сисмесĕрех чышкисене чăмăртаса.— Итле эс малтан!

— Мĕн итлемелли пур ĕнтĕ, эс мана ачи-пăчипех пăрахса тухса тарма шут тытнă пулсан?— сурчăк сирпĕтнĕ Варвара Федоровна.

— Никам та пăрахмасть! Итле теççĕ сана! Кăмăлна çемçетме ак çак стакана ĕç те...

Тепĕр минутран вĕсем диван çинче юнашар ларса, тин çеç венчетрен таврăннă пекех шăкăл-шăкăл калаçма тытăннă.

—Анлан, Варварушка,— тенĕ Макар Кузьмич питĕ çепĕççĕн, арăмне хул пуççинчен лăпкаса,— кил-йышшăн çеç тăрăшатăп вĕт-ха эпĕ — саншăн, хамшăн, иксĕмĕрĕн ытарайми ачасемшĕн... Хваттер пирки хыпкаланатăп! Таçта та çитрĕм, такампа та калаçрăм, анчах та питĕ кансĕр, Варварушка! Ой, çав тери йывăр! Ниепле те ĕç тухасшăн мар. Кил-çурт пуррисене çывăха та ямаççĕ. Мĕн тăвас тетĕн? Пĕртен пĕр меслет кăна юлчĕ ĕнтĕ...

— Мĕнле меслет?

— Уйрăлас пулать... Тĕрĕсрех каласан, уйрăлнă пек тăвас пулать!

— Вара мĕн?

— Вара-и? Суд мана килтен хăваласа ямалла тăвать те, эпĕ пролетари пулса тăратăп. Килсĕр-çуртсăр, хваттерсĕр-мĕнсĕр çын. Çемйи çавах пулать манăн — виç ачине ман çума çыртаратпăр. Частнăй хваттерте мĕнле пурăнса çитерен вĕсемпе? Мана тепĕр куннех хваттер илмелли черете çыраççĕ...

Упăшкин чее планне ăнланма пуçланă Варвара Федоровна сăн-сăпачĕ çутăлнăçемĕн çутăлма тытăннă, вăл Макар Кузьмича шăкăр-шăкăр тепĕр çур стакан эрех ярса панă.

— Кала, Макарушка, малалла кала, чунăм...

— Пĕр виçĕ уйăхран-и унта, çур çултан-и,— мана хваттер параççĕ. Санăн çав вăхăт тĕлнелле кăмăлу çаврăннă пек пулать те, эс ман патăма пурăнма куçатăн... Хамăрăн кил-çуртне р-рас! анчах сутса яратпăр. Хайхи вара европейски хваттер те пулать пирĕн, укçа та пĕр купа... Ну, мĕн калăн ĕнтĕ халь? Э?

Варвара Федоровна упăшкине çатăрах ыталаса илсе, çисе ярас пек чуп тума тытăннă.

— Ой, ăслă-çке эсĕ манăн, Макарушка, çав тери ăслă! Хăвах шухăшласа тупрăн-и эс куна?

— Хам та пуç купташки ыратакан пуличченех шухăшларăм, шанчăклă юлташсем те пулăшрĕç. Шупашкарта кун пек тăвакансем нумай пулнă, теççĕ. Хула Советĕнче ĕçлеккеннисем те хăтланкаланă тет çавнашкал. Уйрăлаççĕ, хваттер илеççĕ те унтан килĕ-çурчĕсене сутса пуяççĕ. Эпир мĕнрен катăк?

— Катăк мар, Макарушка, ăçтан катăк пулар-ха эпир? Ылтăн пуç санăн, Макарушка... Ме-хе, ĕç юлашкине! Кăмăлу пулсан, эп татах чупса кайса илсе килме пултаратăп...

Унтан вĕсем çак пĕтĕм ĕçе мĕнле тĕплĕрех тумаллине шухăшласа хунă. Малтан çынсем умĕнче хирĕçме-ятлаçма тытăнмалла, пĕр-икĕ хут тӳпелешсе илсен те кансĕрлемест,— пурте курччăр вĕсен пурнăçĕ пăсăлса кайнине! Судра пĕр-пĕрине ним шеллемесĕр кăшламалла, мĕн калама май пуррине пĕтĕмпех каламалла, судьясем вĕсене мирлештерес пирки çăвар та уçма ан пултарччăр!

Пурин пирки те вĕсем килĕштерсе пурăнакан патшалăхсен дипломачĕсем пекех питĕ мирлĕ, пĕрне-пĕри ăнланса калаçса татăлнă. Пĕр ыйту çеç кăштах такăнтарнă, анчах вăл та кайран чиперех майлашăннă.

— А эсĕ, Макарушка, ун пек уйрăм хваттерте пурăнса, мăн çинчен манма пуçламăн-и?— асăрханарах ыйтнă арăмĕ.— Çынни лайăх та эс, çапах та, кукша пулин те, арçынах вĕт...

— Ан сӳпĕлтет кирлĕ мара,— тенĕ упăшки.— Кампа улăштарам-ха эп сана? Ĕмĕрне те пулас çуккине калаçатăн!

— Çапах та, мĕнле-ха, эппин...

— Ӳрнере пĕр-икĕ хут киле килсе кайăп эпĕ. Çĕрле, çын курман чух...

— Иккĕ мар ĕнтĕ, пĕр виççĕ-тăваттă пултăр,— тӳрлетнĕ арăмĕ упăшкин шухăшне.— Расписани тăвăпăр...

— Юрĕ, чунăм!

...Çакăн хыççăн мĕн пулнине вулакан пĕлет ĕнтĕ. Вĕсем судлашнă, уйрăлнă, Макар Кузьмич частнăй хваттерте пурăнма тытăннă, хула Советне кайса хваттер илмелли черете тăнă, эрнере виç-тăватă хут, пĕтĕм хула тутлă ыйăха путсан, хăйĕн килне пырса кайнă. Вăхăт хаваслăрах ирттĕр тесе, кашнинчех эрех чиксе пынă... Çавăн пек çӳренĕ чух

пĕррехинче вара ăна дружинниксем çулса илсе хăйсен штабне сĕтĕрсе кайнă...

Ни вилĕ, ни чĕрĕ тухрĕ ун чухне Макар Кузьмич милиции уйрăмĕнчен. Унтан, çĕрлехи уçă сывлăшра ăсĕ-тăнĕ кăштах йĕркене кĕрсен, каласа та памалла мар тарăхса кайрĕ... Мĕнле пурнăç пуçланчĕ вара ку?! Хăвăн килне вăрă пек вăрттăн çӳрес пулать, çитменнине тата, санах тытса каяççĕ, санранах мăшкăллаççĕ, допроссем тăваççĕ!.. Хăçан, ăçта пулнă ун пекки?!

Пĕр вунă кун каймарĕ вăл çавăн хыççăн арăмĕ патне. Кам пĕлет, тен, халь ăна леш дружинник тенисем кашни каçах сыхласа лараççĕ? Каллех ярса тытĕç те, татах кăптăр-каптăр милицине илсе кайĕç. Ыррине кĕтме çук вĕсенчен, Хĕрлĕ площадьри «Крокодил» çине те ӳкерсе кăларĕç!..

Упăшки пыма пăрахнăшăн хыпăнса ӳксе, Варвара Федоровна ун патне çыру çырса пĕр ачине чуптарчĕ.

— Мĕн пулчĕ сана, Макарушка? Ма килместĕн? Кĕтсе ывăнтăм ĕнтĕ, пăшăрханса пĕтрĕм саншăн, çĕрĕ-çĕрĕпех çывăраймастăп. Чирлесе ӳкмерĕн пуль те? Е ăçта та пулин урăх урама çӳреме тытăнтăн? Пĕлтер часрах, хĕрхен мана, тăлăха юлнă çынна...

Ку çыру Макар Кузьмича тата ытларах тарăхтарса ячĕ. Эккей, çын çумне хушас шут пур-ха çав ухмахăн! Юрать — унăн килтех лармалла, ни çĕрле тĕттĕм урамра пĕр-пĕр шăпана тĕл пулса çапса ӳкересрен хăрамалла мар, ни милицине лекес хуйхи çук. Хăйне усрасчĕ ман выриăнта!..

— Кала аннӳне, кĕçĕр пыратăп,— хушса ячĕ вăл çыру илсе пынă хĕрачине.— Калинккине ан питĕртĕр.

Пĕр вун пĕр сехетсем иртсен вара малтанах илсе хатĕрленĕ «помераНцевăйне» пиншакăн шалти кĕсйине чикрĕ те черетлĕ «гастроле» тухса кайрĕ. Çын-мĕн курасран, ялан-хи пекех, питĕ улах урăмсемпе утрĕ... Темшĕн, чĕри çав тери хытă шаккарĕ хăйĕн, хушшăн-хушшăн пĕтĕм ӳт-тирĕ çӳçенсе илчĕ. «Ырра мар-ха ку, чирлетĕп пулмалла...»— пăшăрханса шухăшларĕ Макар Кузьмич.

Ырри пулман çав чăнах та. Кил патне çитесси нумай та юлманччĕ, пасар хыçĕнчи пĕр урамра. тахăш çурт хыçĕнчен, ун умне иккĕн тухса тăчĕç. Сӳ! туса илчĕ Макар Кузьмичăн пĕтĕм çан-çурăмĕ, чĕри те яш! тирсе илчĕ.

«Ак хайхи, лекрĕм! Ку ĕнтĕ милицине сĕтĕрсе кайнинчен те çĕр хут усалтарах... Чиксе ан пăрахчăрччĕ çеç...»

— Туртмалли пур-и сан?— хуллен ыйтрĕ пĕри, ун умнерех пырса.

— Çук çав, туртмастăп,— терĕ Макар Кузьмич, тутисене аран хускатса.

— Вăхăт мĕн чухлĕ-ши тата, пĕлместĕн-и?

— Сехет таврашĕ нихçан та пулман манăн...

— Апла пулсан, эс пире пĕр çур литрлăх кивçен укçа памăн-ши?

— Хаваслансах парăттăм та... çума пĕр пус та чиксе тухман çав.

Пĕри Макар Кузьмичпа калаçнă вăхăтра тепри хыçалтан пырса ун аллисене çатăр! тытрĕ те пĕррех каялла пăрса лартрĕ. Тепри, умра тăраканни, кĕсйисене ухтарма тытăнчĕ. Чăн малтан эрехне туртса кăларчĕ, унтан бумажникне те тупрĕ.

— Ним те çук, тет, тата... шăршлă сысна!— терĕ те вăл çилĕпе, Макар Кузьмича хăлха чиккинчен янк! тутарчĕ. Макар Кузьмич сулăнса кайрĕ, ӳкетчĕ те пуль, анчах çав самантра хыçалта тăраканни ăна тепĕр енчен тăхăнтартса ячĕ те, вăл каллех тӳрленсе тăчĕ.

— А-аа! Пулăшă-ăр!..— кăшкăрса ячĕ Макар Кузьмич мĕн вăй çитнĕ таран.

— Ан çухăр, навус купи!..— пĕррех сăмсинчен начлаттарчĕ ăна умра тăраканни.— Халех виле пулса выртатăн!

Анчах Макар Кузьмич кăшкăрни аякка илтĕнчĕ пулмалла. Ытла инçех мар, милици шăхăртни вăрăммăн янраса кайрĕ, ăна хирĕç кĕçех тепри сас пачĕ...

Макар Кузьмича тапăнакансем тĕттĕм кĕтесселле тапса сикрĕç, çапах та вĕсенчен пĕри ăна тата тепĕр хут тута урлă питĕ хытă тăхăнтартма ĕлкĕрчĕ. Милици шăхăртнисем çывхарсах килчĕç, анчах халĕ пĕччен юлнă Макар Кузьмич вĕсене кĕтсе тăрас темерĕ, часрах килĕ еннелле ыткăнчĕ.

...Чĕп-чĕр юн, лачкам тар, вун çухрăм пĕр чарăнмасăр сиккипе чупнă лаша пек хашкаса пырса кĕчĕ Макар Кузьмич хăй килне. Тӳрех диван çине ӳкрĕ те вилнĕ çын пекех алли-урисене сарса пăрахрĕ, куçĕсене те хупрĕ, вăрахчен пĕр ним чухлĕ те хускалмарĕ...

— Ай, Макарушка, ай, чунăмçăм!.. Мĕн пулчĕ сана капла, кам мăшкăлларĕ кун пекех?! Ай тур-тур, турă амăшĕ, чипер пурăннă çĕртех шар курса ларас пулать-ис!..— ниçта кайса кĕрейми вĕтеленме тытăнчĕ Варвара Федоровна, хăй те вилнĕ çын тĕслĕ пулса кайса. Часрах ал шăлли

йĕпетсе упăшкин питне-куçне сăтăркаларĕ, пуçĕ çине нӳрĕ тутăр хучĕ, чĕрене лăплантармалли эмел ĕçтерчĕ, анчах лешĕ йӳçĕ пирки Макар Кузьмич ăна çавăнтах сурса пăрахрĕ.

— Эс мана... эрех пар...— аран пăшăлтатса ыйтрĕ вăл.

Юрать-ха кун йышши эмел те тупăнчĕ тĕплĕ хĕрарăмăн. Ăна умлăн-хыçлăн виç мăн черкке пушатсан, тепĕр пилĕк минутран вара Макар Кузьмича кăштах чун кĕчĕ пулас та, вăл майĕпе куçĕсене уçрĕ.

— Хам турра ĕненекен çын пулнă пулсан, эпĕ паянах чиркĕве кайса пĕр кило туртакан çурта лартнă пулăттăм,— терĕ вăл нимрен малтан.— Чăн вилĕмрен хăтăлса юлтăм вĕт! Телей пулман пулсан, эпĕ ĕнтĕ çак самантра урамра майĕпе хытса выртаттăм...

Макар Кузьмич хурланса макăрса ячĕ.

— Ачасем тăлăха юлатчĕç... ăсĕ те хусах арăм пулаттăн...

Варвара Федоровна ăна тем тĕрлĕ йăпатма, ачашласа лăплантарма пикенчĕ. Анчах чылайччен йĕркене кĕреймерĕ вилĕмрен ăнсăртран çăлăнса юлнă Макар Кузьмич. Унтан тăрук пуçне çĕклерĕ те йывăр чышкипе сĕтел çине чант! тутарчĕ.

— Çитет мана кун чухлĕ ыр курнипе, Варварушка! Тăрантăм! Мĕн пирки асапланмалла манăн?! Паян милицине сĕтĕрсе каяççĕ, ыран çапса пăрахма тапăнаççĕ... Мĕншĕн, кала эс мана, эсрел пуçĕ!

— Ара, лайăх хваттерлĕ пулас терĕмĕр-çке...— ун куçĕнчен айăпа кĕнĕ анчăк çури пек пăхрĕ арăмĕ.

— Кирлĕ мар мана нимĕнле хваттер те!— каллех сĕтел çине çатлаттарчĕ Макар Кузьмич.— Хамăн кил те çитет мана. Вăхăт çитсен илĕпĕр-ха, тен, çакăн пек тем те пĕр хăтланмасăрах! Хуть те мĕн ту эс мана, анчах эпĕ текех кун пек урçалла та вăрăлла пурăнма килĕшместĕп! Атя, паянах ЗАГСа кайса тепĕр хут çырăнатпăр!

— Ах, Макарушка... Тен, кăштах тăхтаса пăхăпăр? Хваттер илмелли черечĕ шăвать вĕт-ха унта,— йăлăнма тăчĕ арăмĕ.— Çынсенчен те намăс тата, шухăшла-ха...

— Шухăшламастăп! Ан чĕн эс мана хирĕç!— татах сĕтел çине çапрĕ хĕрсе кайнă Макар Кузьмич.— Намăсне ахаль те самаях куртăмăр ĕнтĕ, тепĕр кăшт курассине тӳсме пулĕ! Паянах авланатпăр! Туй тăватпăр! Тĕнчене тĕлĕнтерер тепре санпа!

Варвара Федоровна шăпах пулчĕ...

ВАТАЛМА МАЙĔ ÇУК...

ТĂРМИТУН МУЧИЕ кичем. Çав тери, ниçта кайса кĕмелле мар кичем! Хуть те, хăй каларĕш, халăх халапĕнчи леш аптранă кăвакал пек, Атăл хĕррине чупса пыр та — кутăн чăм...

Пĕр уйăх каялла Тăрмитун мучи пенсие тухрĕ. «Паха пĕкĕ» промартель членĕсем ăна чаплăн та чыслăн ăсатрĕç, тес пулать. Малтан клубра пуху пулчĕ, унта артель председателĕ Тытамаков юлташ хаваслă-савăнăçлă сăмах каларĕ. Тăрмитун мучи артельте çирĕм çул ытла счетовод-кассир пулса ĕçленĕ хушăра пĕр пус та растратă тăвайманшăн ырларĕ, унтан ăна парнесем пачĕç, черккесем çĕклерĕç, тата нумай-нумай çулсем пурăнма ырлăх-сывлăх сунчĕç. Кăштах хĕрсен вара хăнасем тăкам пăлхатнă хур аçисем пекех какăлтатма тытăнчĕç:

— Нихçан та манмăпăр санпа пĕрле ĕçленĕ кунсене!

— Эпир те вагăличченех сан пек тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесе пурăнăпăр!..

— Тăрмитун мучие — ура-а!..

Старике кăптăр-каптăр хупăрласа илчĕç те темиçе хутчен мачча патнелле мечĕк пек ывăтрĕç.

— Çĕр çул пурăн, ан ватăл! Ура-а!.

...Тепĕр кунне, пуçĕ кăштах ыратнă пулин те, вăл ялан-хи пекех ултă сехетре тăрса ĕçе кайма хатĕрленме тытăнчĕ.

Артель правленийĕ тепĕр ялта, тăватă километрта пулнă, çавăнпа та Тăрмитун мучи, вăхăтра çитес тесе, килтен хуть те хăçан та иртерех тухнă. Анчах вăл электроплиткă çинче чей вĕретсе чăкăтпа пашалу çинĕ хыççăн кĕрĕкне тăхăнма тăрсанах, çемçе тӳшек çинче выртакан карчăкĕ, Альтяк инке, ун çине темле тĕлĕнерех пăхрĕ те:

— Тул çутăлнă-çутăлманах ăçта тухса каятăн, ара, эс?— тесе ыйтрĕ.

Тăрмитун мучи ăна малти икĕ чӳрече хушшинче çакăнса тăракан куккуклă сехет çине тĕллесе кăтартрĕ:

— Пăх-ха, вăхăчĕ мĕн чухлĕ... Çиччĕ çитет-иç!

— Пулин,— терĕ Альтяк инке,— тутлăн анасласа илсе.

— Мĕнле «пулин» тата вăл? Манăн саккăра çитмелле пуль? Еçе ĕмĕрне те кая юлса кайманскер, паян мĕн сăлтавпа юлмалла манăн?

— Ан шӳтле,— аллипе сулчĕ карчăкĕ, тата тутлăрах анасласа.— Вырт та тепĕр ыйхă çывăрса ил. Питĕ лайăх пулать...

— Эс ухмаха ермерĕн пуль те?— тĕлĕннĕ-тарăхнă сасăпа ыйтрĕ Тăрмитун. Анчах карчăкĕ малтанхи пекех лăпкăн çавăрса хучĕ:

— Эп ермен-ха, ерессĕм те çук, анчах санăн кăштах сисĕнет вăл. Каçхине ытлашширех хутăн çав. Киле мĕнле çитнине астăватăн-и хуть?

— Епле астумастăп пулать? Тытамаков юлташ пире машинăпах ăсатса ячĕ. Иксĕмĕр ыталансах юрласа килтĕмĕр.

— Киле килсен мĕн хăтлантăн?

— Нимĕн те хăтланман...

— Асту, хăтланмарăн пуль. Çӳлĕк çинчен сар чăматана туртса антартăн та, курорта каятăп тесе, кутник сакки айне кĕрсе выртрăн. Унтан сĕтĕрсе кăларсан, темле ухмахла такмаксем юрлама тытăнтăн.

— Мĕнле такмаксем тата?

— «Карчăк, карчăк, карта урлă, пĕççи-каççи...» тата темĕн те пĕр. Лапра çăвар!

— Хытах кӳрентертĕм-и вара?— сасартăк хăранă пек пулчĕ старик.

— Итлемерĕм эп сана. Вырăн çине пусса антарса минтерпе хупларăм та çывăратса ятăм.

Тăрмитун мучи куçĕсене мăч-мăч тутарса шухăша кайнă пек пулчĕ.

— Вăт, эсрел эрехĕ... Çынна чăнах та сĕм ухмах тăрать çав вăл. Тек нихçан та çăвара сыпмастăп!— Унтан сехет çине пăхрĕ те:— Ну, эп кайрăм, Альтяк!— тесе алăк хăлăпĕнчен тытрĕ.

— Ăçта каятăн тата?— вăртах тăрса ларчĕ карчăкĕ.— Мухмăру ытлах кастарать пулсан, килтех пур, çĕнĕ çул каçхинех пытарса лартсаттăм пĕр чĕрĕк!

Карчăкĕ çапла калани Тăрмитун мучие йĕппе тирсе илнĕ пекех пулчĕ. Тӳрех вĕресе кайса кăшкăрса тăкрĕ вăл:

— Мĕнле мухмăр?! Мĕнле чĕрĕк?! Эпĕ ĕçе ĕçсе тухса кайнине хăçан куртăн эсĕ... шуйттан кĕвенти, тепĕр тесессĕн! Мăшкăллама шут тытрăн-и манран? Е санăн хăвăн ĕнерхи иртсе кайман-и? Тыт та кӳп, эппин, хăвăн чĕрĕкне! Манăн ĕçе каймалла!..

Тăрмитун мучи, тухса каяс тесе, алăка пĕррех çăматă пуçĕпе тапрĕ. Анчах çав вăхăтра Альтяк инке шăши тытма хатĕрленнĕ кушак пекех урайне сиксе анчĕ те:

— Ан лăпăртат, ниçта та каймалла мар санăн!— тесе кăшкăрчĕ.

— Епле каймалла мар!— хаярăн пăхрĕ ун çине упăшки.

— Ара, эсĕ ĕнер пенсие тухрăн вĕт! Ĕçки те çавăн пирки пулчĕ! Неушлĕ çавна та манса кайрăн, ват сăс?!

Тăрмитун мучи çакăн хыççăн хăйĕн карчăкĕ çине тăй-й... пăхрĕ те, çăварне лак! карса пăрахса, кутник çине шап! ларчĕ. Аллинчи мăн туйи те урайне шăкăртах ӳкрĕ унăн.

— Чăнах та-çке...— хурлăхлăн сывласа ячĕ вăл юлашкинчен.

— Чăнах çав! Слущи мар ĕнтĕ эс халь, килте ларас пулать малашне!— çĕнтерӳллĕ сасăпа каласа хучĕ карчăкĕ.

— Килте ларас пулать...— мăкăртатса илчĕ вара Тăрмитун.— Служащи мар... Тиража тухрăм, эппин. Шапаш...

Чылайччен ларчĕ вăл урайнелле пăхса. Ниепле те ăнланаймарĕ: мĕнле-ха капла? Хĕрĕх çул ытла кашни кун ĕçе çӳренĕ... Ир тăнă, апат çинĕ, тумланнă та сакăр-тăхăр сехет тĕлне вырăна çитме тухса утнă. Революци хыççăнах комбед секретарĕ пулнăранпа таçта та ĕçленĕ вăл. Чăн та ĕнтĕ, ытлашши пысăк çынах пулман, анчах хăйне шанса панă ĕçе яланах таса кăмăлпа туса пынă. Çук, хăй ятне яман вăл! Тăрăшса ĕçленĕшĕн ăна премисем те панă, приказсенче тав тунă. Анчах халĕ вара... Тĕлĕнмелле! Ир

пулчĕ, часах саккăр ситет, çапах та унăн килте лармалла. Паян та ĕçе каймалла мар. Ыран та. Виçмине те... Кирек хăçан та! Мĕнле пурăнмалла-ха кун пек? Ĕçсĕр аптраса ухмахах тухса каймалла пуль? Çулла пулсан, пахчара чакаланма пулатчĕ хуть, анчах халĕ, хĕлле мĕн тăвас? Пĕрех хут, ма çуллаччен тăхтамарăм пуль ку пенсие тухма!..

Чăнах та, ним тума аптрарĕ Тăрмитун мучи. Малтанхи кунсенче, хăй ĕнтĕ пенсионер пулни çинчен манса кайса, кашни ирех улттăра тăрса ĕçе тухса кайма хатĕрленчĕ, карчăкĕ кăшкăра-кăшкăра асăрхаттарнă хыççăн çеç: «Тьфу, каттăршни!» тесе, пуçне тăхăннă тилĕ тир çĕлĕкне хыва-хыва ывăтрĕ, чылайран тин хăй «тиража тухнине», хăйĕн ирсерен ниçта та хускалса тухмалла маррине майĕпе хăнăхма пуçларĕ.

Тĕнчери тӳрĕ чунлă пур счетовод-кассирсем пекех, Тăрмитун мучи питĕ тирпейлĕ, йĕркеллĕ пурăнакан çын пулнă, унăн нихçан та нимĕн те сая кайман, кашни япала хăй вырăнĕнче выртнă. Сăмахран, вăл кашни çĕнĕ çул умĕн ялпо лавккинче илсе куккуклă сехет айне çакакан «татмалли календарь» листисене нихçан та татман, вĕсене çӳлелле çавăрса хунă çеç, декабрĕн 31-мĕшĕнче вара ăна хаçатпа чĕркесе шкапа вырнаçтарнă та ун вырăнне çĕнни-не çакса янă. Çав календарьсем унăн пĕр вунă çулшăн пухăннă...

Карчăкĕ пĕррехинче ăна: «Мĕн мурĕ тума пухса усратăн çав кивĕ ăпăр-тапăра, пустуех вырăн йышăнса выртаççĕ вĕт!» тесен, Тăрмитун мучи лăпкăн çеç ответ панă:

— Выртĕçин! Вĕсем санран çăкăр ыйтмаççĕ, анчах кирлĕ кунта кирлĕ те пулма пултараççĕ,— тенĕ.

Чăнах та, кирлĕ пулчĕç хайхискерсем! Пенсине тухнă хыççăн ĕçсĕр аптраса, тунсăхласа, кичемленсе çитсен, Тăрмитун мучи пĕррехинче шкапа уçса пăхрĕ те хаклă супăнь муклашкисем пек чĕркесе хунă çак календарьсене курах кайрĕ. Ара, кусене вулама пулать-иç!.. Ан тив, вĕсене хăйсен вăхăтĕнче пĕр саспаллине те сиктермесĕр вуласа тухнă пултăр. Çĕнĕрен вулани кансĕрлет-им? Календарьте унта çав тери ăслă япаласем пур вĕт! Уйăх-çăлтăрсем мĕнле тытăнса тăнинчен пуçласа чăмăрла паранкă епле майпа тутлăрах пĕçересси таранах çыраççĕ.

Хайхискер, пĕрре вулама пуçларĕ те ик эрне ытла вуларĕ — вунă çулшăн! Ир тăрса пит çусан тӳрех календарь тытать те — лара-ать вара сак çумне пăталаса лартнă пек! Кун мĕнле иртсе кайнине те сисмест, хырăмĕ выçни-

не те туймасть, тейĕн. Анчах календарьсене вуласа пĕтерсен, ăна каллех кичем пулса кайрĕ. Çав тери, ниçта кайса кĕмелле мар кичем. Хуть те, хăй каларĕш, леш кăвакал пек кутăн кайса чăм...

— Ĕçсĕр аптранипе, ĕçме ан тытăнтăрах ку!— пĕрре кăна мар шикленсе илчĕ Альтяк инке. Пенсионерсем хушшинче ун пеккисем те тĕл пулнине илтнĕ вăл.

Анчах пăшăрханни кăлăхах пулнă. Тăрмитун мучи пенси укçине ĕçсе ярса пурăнма та, чипер сывлăхне сиенлеме те шутламан. Хăйне пенси çине ăсатнă каçхине персе супнă хыççăн вăл тек пĕр тумлам та ĕçмерĕ. Çав ирсĕр ĕçпе сыхланас вырăнне вăл кӳршĕ ялĕнчи библиотекăран кĕнекесем çĕклеме тытăнчĕ.

Чăн малтан «Нарспи» йăтса пычĕ.

— Çак кĕнекене эпĕ хĕрĕх çул ĕлĕкрех вуланăччĕ, халĕ тепре вулас-ха,— терĕ вăл карчăкне.— Итле, сана та кăштах çутта кăларам!

— И-и, манăн çутта тухас вăхăт иртнĕ ĕнтĕ,— терĕ ăна хирĕç Альтяк инке, анчах хăй, чăлха сыхнă май, старикки вуланине каçса кайсах итлесе ларчĕ. Нарспие ирĕксĕрлесех качча пама тытăннă тĕле çитсен, ĕçлеме пăрахса, макăрса та илчĕ...

— Шуйттан саманиех пулнă çав ĕлĕк!— куçлăхне хывса куçĕсене шăлчĕ вăл.— Хĕрарăмшăн пурнăç мар, чисти тамăк пулнă! Сăпаççипех совет влаçне, хăтарчĕ вăл пире...

Çакăн хыççăн пĕр-икĕ эрне хушши вĕсем кашни каçах çавăн пек кĕнекесем вуласа пурăнчĕç. Унтан — темшĕнçке!— Тăрмитун сасартăк вулама пăрахрĕ. Пĕр шăматкун Етĕрнене пасара кайсассăн ал лаппи хулăнăш хут тĕрки илсе пычĕ те çав каçах хыпаланса çырма ларчĕ.

Çырать те çырать. Тем çырать! Ик каç, виç каç... Çырнă май хăй текех пăшăлтатать. Çын илтмелле мар пăшăлтатать тата — тутисем çеç хускалаççĕ. Альтяк инке, юлашкинчен, тӳсеймерĕ, ыйтрĕ:

— Мĕн пĕрмай пăшăлтатса ларатăн çав эс? Чĕлхе сурма вĕренместĕн пуль те?.. Мĕн çыратăн кун пекех тăрăшса?..

— Сан çинчен çӳлти патшалăха жалобă çыратăп-ха,— терĕ Тăрмитун мучи, куçне хĕссе илсе.— Хăвăн пĕр лав çылăх, анчах чиркĕве çӳреместĕн. Вĕри çатма хатĕрлеччĕр унта сан валли.

— Тьфу, чĕлхӳ çине çăпан тухтăрах!— çиленчĕ Альтяк.

Унтан Тăрмитун мучи таçта çырусем яма тытăнчĕ. Кашни эрнере виçшер хут. Ванюк-почтальон хаçат илсе пырсассăнах, ăна хулăн канвертсем тыттара-тыттара ярать. Каллех ыйтмасăр тӳсеймерĕ Альтяк инке:

— Кам мурĕ патне яратăн эс кун чухлĕ çыру?

— Хĕрсем патне,— терĕ Тăрмитун мучи.— Йăлăхрăм санпа пурăнса, çамрăкраххине тупас тетĕп...

— У, ват супнă, тăмана! Такама кирлĕ пуль эсĕ!— татах çиленсе кайрĕ карчăкĕ.

Анчах вулаканăн та пĕлес килет ĕнтĕ: мĕн çырнă-ха Тăрмитун хĕллехи вăрăм каçсенче, мĕнле çырусем янă вăл кашни эрнере виçшер хут?

Ан тĕлĕнĕр: Тăрмитун мучи сăвăсем çырнă. Çаплах ара, çаплах! Сăвăсем çырнă та Шупашкарти пур редакцисене те ярса пама тытăннă. Çын-мĕн ан систĕр, тесе, сăвăсем айне хăйĕн чăн-чăн хушаматне çырман, суя ят ларт-са янă: «Д. Майский». Тепĕр тесен, сăвăсем айне унăн чăн хушаматне çырма аванах та пулман — унăн хушамачĕ Большеносов, чăвашла каласан — Мăн Сăмса пулнă. Поэзипе ку хушамат питех çыхăнман, ăна эсир хăвăрах чухлама тивĕç...

Вăхăт нумаях та иртмен — хайхи патне редакцисенчен ответсем килме пуçланă:

«Сăввусем начартарах. Рифмă та, ритм та çукрах. Пичетлейместпĕр. Хăвăр шкулти стена хаçатне çырса вĕренсе пыр».

«Сан сăввусем пиçмен-ха. Сăвă техникине пĕлместĕн. Каплипе журнала кăлараймастпăр».

Тата ытти те.

Анчах Тăрмитун мучи куншăн пуçне усман. Кӳренмен те тата, мĕншĕн тесен такамран илтсе пĕлнĕ — редакцисенче ĕçлекенсене çине-çине купи-купипе сăвă ярса парса тăнне кăларас пулать, вара пур пĕрех пичетлеççĕ. Пĕрре пичетленсен çул уçăлать, чару пулмасть вара.

Пилĕк çĕр листаллă хут стопи пĕтсен, вăл тата икĕ стопа илсе килнĕ. Почтальон пырсан, пĕрер канверт мар, икшер парса яма тытăннă. Хăй ĕнтĕ, çĕрĕ-çĕрĕпе сăвă çырса ларнипе, начарлансах кайнă. Альтяк инке унăн сывлăхĕшĕн пăшăрханма пуçланă, ан çыр тесе ӳкĕте кĕртме пуçланă, анчах Тăрмитун мучи хăйне хăй: «Вперед!» тенĕ те, çырма пăрахма мар — хĕрнĕçемĕн хĕрсе пынă, вăрăм-ран вăрăм сăвăсем ярса панă. Чăн-чăн поэтсем ку чухне

пĕр çырма ларсан вун пилĕк-çирĕм пин йĕркерен кая çырмаççĕ, тенине те илтнĕ вăл.

Юлашкинчен вара...

Юлашкинчен, тăрăшни сая кайман. Пĕр хаçатра «Çамрăксен страници» кăларнă та, унта Тăрмитун мучин икĕ сăввине пичетленĕ — кашни сакăршар йĕрке. Вĕсем айне «Д Майский, çав-çав ялти шкул ачи», тесе çырса хунă...

Ку вара чăн-чăн çĕнтерӳ пулнă. Пысăк çĕнтерӳ. Ан тив, Тăрмитун мучие шкул ачи, тенĕ пултăр. Мĕнех вара уншăн? Сăввисем пур пĕрех унăн пулнă-çке-ха! Тепĕр тесен, ун пек каланăшăн мĕн кӳренмелли пур? Сăвă çырас енпе вăл чăнах та шкул ачи кăна пулнă-иç! Çырма пуçлакан поэт. Тин çеç палăрма пуçланă çăлтăр. Çамрăк талант!

Хăй те вăл халь шкул ачи пекех хĕпĕртесе кайнă. Хаçатра хăйĕн ятне курсан, çавăнтах ташлама, качака путекки пек кăрст! кăрст! сиккелеме хатĕр пулнă.

Вара тата ытларах çырма тытăннă. Тепĕр çур çултан унăн каллех икĕ сăвă тухнă. Ку çеç те мар: пурăна киле Тăрмитун мучин пĕр сăвви «Çурхи çеçкесем» ятлă кĕнекене кĕнĕ, умсăмахра та унăн ятне асăннă: пысăк шанчăк паракан, ӳссех пыракан хăйне майлă талант, тенĕ...

Кĕркунне çитеспе Тăрмитун мучи — Д. Майский пурнăçĕнче тата пысăкрах событи пулнă: Ванюк-почтальон ăна хитре бланк çине пичетленĕ çыру пырса тыттарнă:

«Хисеплĕ Д. Майский юлташ! Эпир сана çамрăк писательсемпе поэтсен республикăри канашлăвне чĕнетпĕр...»

Ак япала! Канашлăва чĕнеççĕ!..

Чăн та, малтанах çак çыру ăна кăштах хăратрĕ. Темиçе кун шухăшласа çӳрерĕ вăл: мĕн тăвас? Каяс-ши кунта, каяс мар-ши? Темрен тем пулса тухмĕ-ши? Кайăн та, писательсен пуçлăхĕсем эпĕ шкул ачи маррине, кĕреçе сухаллă мучи пулнине курĕç те — калаçасшăн та пулмĕç, ватă тесе, канашлăва та кĕртмĕç, малашне пичетлеме те пăрахĕç? Халь тин çырма пăрахма пултараймастăп ĕнтĕ эпĕ, çырас килтерекен чир ытла та шала кайрĕ...

— Э, мĕн пулать, мĕн килет!— аллипе сулчĕ те вăл юлашкинчен, Альтяк инкене аш кукли пĕçерттерсе, мунча хутса кĕнĕ хыççăн сухалне ик еннелле тураса уçса, автобус çулĕ çине тухса «сасăлама» тытăнчĕ...

Йышăнчĕç ăна! Канашлăва кĕртрĕç кăна мар, президиума суйласа чăн варрине кĕртсе лартрĕç. Сухалне якатаяката кăна ларчĕ вăл, мĕншĕн тесен докладчик хăйĕн

докладĕнче унăн ятне те ырăпа асăнчĕ. Тепĕр кунне, ытти çамрăксемпе пĕрле, унăн сăнĕ хаçатра та тухрĕ.

«Çитмĕл иккĕри çамрăк сăвăç»... тенĕччĕ ун çинчен.

Канашлу вăхăтĕнчех ăна радио валли сăвă вулаттарса çырса илчĕç,— унăн сассине пĕтĕм республикипе янратма ĕнтĕ.

Çапла вара, кĕтмен çĕртенех, Тăрмитун мучи иккĕмĕш хут çамрăк çын пулса тăчĕ. Халь ĕнтĕ мĕн виличченех çамрăк пулать — шанчăк паракан çамрăк поэт. Майĕ пулнă пулсан, тен, вăл комсомола та кĕнĕ пулĕччĕ. Ватăлма майĕ çук халь унăн! Ватăлас килсен те ватăлаймастăн...

Анчах нумаях та пулмасть писательсен союзĕнчи пĕр хаяр çын, Консультант ятлăскер, ун патне çакăн пек çыру янă, теççĕ:

«Хаклă мучи Д. Майский! Сирĕн колхозра сад пур-и? Пур пулсан, çавăнта ĕçлеме тытăн-ха эсĕ. Йывăççем ытларах ларт, улма-çырла ӳстер, уншăн сана хăвăр ялти пур стариксен мăнукĕсем те пĕтĕм чунтан тав тăрĕç. Кайран сан çинчен ырă кăмăлпа асăнса сăвăсем те çырĕç...»

Çав Консультант тенĕ çын питĕ тĕрĕс каланă пек туйăнмасть-и сире?



ЁНЕННМЕСЕН — ПЫРСА КУРАР...

ТАКАМРАН ПУÇЛАННА вăл, ăна пĕлместĕп, анчах та пирĕн ялта пĕр тĕлĕнмелле йăла пур: кам мĕнле ĕçпе пурăнма пуçлать, ăна çавăн майлă ят парса хураççĕ. Тăрăхлас-кӳрентерес тесе мар, çук, ытти çынсем хушшинче паллă пулма параççĕ çав ятсене...

Итлĕр акă, мĕнлерех ятсем пур хальхи вăхăтра пирĕн колхозра: Пăру Паруççи, Кирпĕч Кирули, Кĕнеке Кĕркури, Автан Алтатти, Радио Раманĕ, Трактор Трихванĕ тата ытти те. Хăвăрах питĕ лайăх чухлатăр пуль ĕнтĕ çав ятсем мĕнрен пулса тăнине: Паруççи пăру пăхать, Кирули кирпĕч çапать, Кĕркури кĕнеке вулаттарать, Алтатти чăхчĕп ферминче ĕçлет,— чăх пур çĕрте автансăр пулмастех!—Раманĕ радио юрлаттарать, Трихванĕ тракторпа кĕрлеттерет! Нумай пулмасть тата пĕр хитре кăна сар каччăна Çутă Санькки теме пуçларĕç,— вăл пирĕн электротехник, ялти çутă хуçи...

Паллах, пурте вĕсем лайăх çынсем пирĕн, пурте хамăр ялсем тата. Хуть те мĕнле кăткăс ĕç сиксе тухсан та, эпир халь çав ĕçе тума пултаракан çынсем шыраса ютта каймастпăр, никама та тархасламастпăр, ни-ни! Теприсем, авă, пуртă аври ларттарма та ют яла каяççĕ, тет, мĕншĕн

тесен хăйсен платникĕсем пурте аякра «калым» туса çӳреççĕ имĕш, анчах пирĕн пĕртте ун пек мар вара, çук. Платникĕ-тимĕрçи кăна мар, учителĕсем те веçех хамăр пирĕн, агрономĕпе зоотехникĕ те, хвершăлĕ те, шоферĕ-комбайнерĕ те. Ытти ялсенче темлерех, пурне пĕлме çук, анчах пирĕн çавăн пек: кам ăçта та пулин вĕренсе тухать, вăл епле пулсан та хăйĕн тăван ялнех тавралăнса ĕçлеме тăрăшать, тавралăнаймасан вара шутсăр кӳренет...

Мĕн каламалли, лайăх пурăнатпăр!

Мана хама акă... Лавкка Лукки, теççĕ, мĕншĕн тесен эпĕ вун пилĕк çул ытла, мĕн вăрçăран тавралăннăранпах ялти лавккара ĕçлетĕп ĕнтĕ, ял халăхне пурнăçра мĕн кирлĕ — çавсене пур чухне те ытлăн-çитлĕн илсе килсе сутма тăрăшатăп. Илĕр, туянăр, тăвансем, ырă курăр! Лукка лавккинче пурте пур: кил таврашĕнчи хатĕр-хĕтĕр те — хуранĕ-куршакĕ, турчки-ухвачĕ, витри-кастрюлĕ; çие тăхăнмалли те — пальтти-костюмĕ, атти-пушмакĕ, кĕпийĕмĕ, çĕлĕкĕ-картусĕ; çимелли-ĕçмелли те — сахăрĕ-канфечĕ, премĕкĕ-печенийĕ, тем те, тем те! Укçуна çеç кирлĕ таран илсе пыр та ăна ытлашши хĕрхенсе хытса ан тăр!

Укçи пирки калас пулсан, ӳпкелешмеллиех çук вара — укçа тени пур пирĕн халăхăн! Пур! Ăна эпĕ, Лавкка Лукки, сирĕнтен пуринчен те лайăхрах пĕлсе тăратăп, мĕншĕн тесен çынсем хăйсен ĕçлесе тупнă укçи-тенкине чăн малтан ниçта та мар — ман патăма, лавккана илсе пыраççĕ вĕт-ха. Халăх çуллен-çул укçа ытларах тытнине те эпех никамран лайăх куратăп,— ăна манăн лавккари тавар çаврăнăшĕ ӳснĕçемĕн ӳсни чи чаплă тĕкĕртен те хитререх кăтартать.

Тата тепĕр япала пур ăна палăртаканни.

Тен, эсир асăрханă та пуль: суту-илӳре ĕçлекенсем «ассортимент» сăмаха питĕ юратаççĕ. Пире ятланă чух та, мухтанă чухне те çав сăмаха пĕрмай асăнаççĕ. Пухусенче, тĕрлĕ канашлусенче ялан илтетĕн вара:

— Иванов начар ĕçлет, унăн ассортимент пĕчĕккĕ! Епле намăс мар ăна?!

— Петровран пример илĕр эсир: унăн ассортимент çав тери пысăккă!

Анланмалларах каласан, çак сăмах вăл лавккара тĕрлĕрен тĕрлĕ таварсем нумай пулмаллине пĕлтерет. Лавккара таварсен ассортименчĕ çуллен сарăлса пыни халăхăн ыйтăвĕ пысăкланнине, вăл пуянланса пынине кăтартса парать...

Астăватăр-ха эсир, ĕлĕк чух, авалхи саманара, пирĕн ял сыннисем лавккара мĕн илнĕ? Тăвар илнĕ вĕсем. Кăштах краççын. Эрнере пĕр коробкă спичкă. Виç-тăват çулта пĕр хуран. Ну, тата кăшт-кашт çавăн пек япаласем...

Анчах халь мĕнле тетĕр эсир? Ман лавккара халь пилĕк çĕр йышши тавар пур. Пи-лĕк çĕр! Ĕненместĕр-и? Ара, пырса курăр, эппин. апла пулсан! Йĕппе çипрен пуçласа «Октавă» радиоприемникпе мотороллер таранах туянма пултаратăр ман патра. Кирлех пулсан, «Москвич» та туянтарма пултаратпăр. Анчах пирĕн çынсем ăна та çителĕксĕр теме пăхаççĕ-ха...

Мĕнрен килет вăл? Анланатăр-и çакна?

Халăх укçаллă пулнинчен, вăл халь хăйне валли лайăхран лайăхрах япаласем туянасшăн пулнинчен тата вĕсене ним мар туянма пултарнинчен килет!

Пырса курăр-ха эсир уяв кунĕсенче пирĕн хĕрсемпе каччăсене! Мĕнлерех тумланаççĕ вĕсем? Хĕрсем çинче — пурçăн та штапель, урисенче çут пушмак та фельдиперс чăлха, нумайăшăн — капрон. Каччисен костюмĕсем пурин те тенĕ пекех коверкот та шевиот, механизаторĕсем вара пĕри те «метроран» кайине тăхăнмаççĕ.

Тата çамрăксенчен пĕри те халь çуран çӳресшĕн мар. Пурте велосипедсемпе чупаççĕ, хăшĕсем ĕнтĕ моторлисене туянчĕç. Лавкка хуралçи Хумма мучи кун пирки пĕррехинче питĕ тĕрĕс каларĕ:

— Ĕлĕк чух, çемьере каччă пулсан, вăл авланнă тĕле епле те пулин вăй çитерсе тăрантас туянма тăрăшатчĕç,— терĕ вăл,— анчах халь пур — тавай вĕсене çуран урапа е циккăл-миккăл... велосипед та мотоцикл эппин...

Çамрăксем çеç-и! Ваттисенчен те халĕ никам та килти пиртен çĕленĕ кĕпе-йĕм тăхăнмасть вĕт. Çитсă пар та вĕсене, сатин тăхăнтарт!

Акă, эпĕ юриех çырса пытăм: виçĕм çул эпĕ 170 мăшăр атă-пушмак, 52 костюм, 33 велосипед сутсаттăм. Пĕлтĕрхи оборот унтан чылай ытларах пулчĕ. Анчах кăçал вара вунă уйăх хушшинчех 420 мăшăр атă-пушмак, 122 костюм, 71 велосипед тухса кайрĕ ман лавккаран. Çитсă, штапель, пурçăн, аялти-çиелти кĕпе-йĕм, чăлха-носки мĕн чухлĕ сутни çинчен каламастăп та ĕнтĕ, вĕсен шучĕ те çук! Диаграм туса кăтартас пулсан, процентсем çивĕч пăрçасем пекех çӳлелле сиксе каймалла çав...

Ара, уй хуралçи Митюк мучи пулса, вăл та велосипед туянчĕ вĕт кăçал çуркунне, ват супнă, тĕлĕнтермĕш!

— Ситет кун чухлĕ çуран çӳренипе,— терĕ вăл укçине шутласа панă чух.— Патша самани мар халь çуран танккама, неччу!

Кăвак сухалне ик еннелле варкăштарса кăна çӳрет халь уйсем тăрăх, пыр та кур эс ăна...

Çынни эпĕ суйма-мухтанма юратаканскер мар, çавăнпа та сире тĕп-тĕрĕссине калатăп: вун пилĕк çул хушшинче мана никам та «япăх ĕçлетĕн», «халăхшăн тăрăшмастăн», тесе каламанччĕ, жалобăсем те çырман ман çинчен, «Капкăна» мар — стена хаçатне те лексе курман, анчах пĕлтĕрпе кăçал, ним тунмасăрах калатăп, самаях хаяр сăмахсем илтме тӳр килчĕ. Мĕншĕн, тетĕр-и? Нимĕншĕн те мар, çав ассортиментшăнах. Еплерех çунтарма тытăнчĕç-ха тата, тӳссе кăна тăр!..

Пĕлтĕр, Октябрь уявĕ умĕн, пирĕн колхоза электричествă кĕртрĕç. Ну, урăхла каласан, çутă пачĕç. Тăват çĕр хĕрĕх кил пĕр харăс ялт! çутăлса кайрĕ. Урам хушшисенче те, фермăсенче те, пур çĕрте те кăнтăрлахи пекех çап-çутă пулса тăчĕ.

Ой, савăнчĕ те вара уншăн пирĕн халăх!

Анчах маншăн, Лавкка Луккишĕн, хурлăх кăна пулса тăчĕ вăл.

Çутă панă хыççăн ик-виç кунтанах ман лавккана фермăри хĕрсем ушкăнĕпех чупса пырса «штурмлама» тытăнчĕç. Пĕр-пĕрине пӳлсех заказсем параççĕ мана:

— Лукка пиччĕ, тепре тавар патне кайсанах пире валли электроутюгсем илсе килнĕ пултăр! Кашнинчех кăварпа хĕртсе аппаланма питĕ чăрмавлă, ăна валли вăхăт та çук пирĕн...

— Шупашкарта электричествăпа çавăрттармалли çĕвĕ машинисем нумай, тет, çавсенчен пĕр вуннăшне те пулин туянса кил-ха. Тем пекех тав тăвăпăр сана, кавча кайнă чух кĕрекене, атте-аннепе юнашар лартăпăр...

Пĕлетĕп-ха, хăйсен пурин те алăпа çавăрмалли машинсем пур, анчах ку çитмест вĕсене, халь-теппер электричествăпа çавăраканнисене пар! Вăт, пулать те халăх!

Кăшт тăхтарахпа ваттисем те пыма тапратрĕç.

— Кунне виç-тăват хутчен вучах чĕртсе тăнранах каяс пулать, тата вутти те нумай кирлĕ, çавăнпа та эсĕ пире çав электроплиткă тенине туянтăр-ха часрах!

— Кĕпе çумалли машинсем те пур темеççĕ-и? Сĕтĕрсе кил-ха пĕр виççĕшне те пулин!— йăлăнчĕç нумай ачаллă арăмсем.

— Пире сĕтел çине лартмалли лампочкăсем кирлĕ, ачасен тетрачĕсене тӳрлетсе ларма питĕ ансат вĕсемпе,— терĕç учительсем.— Электробритвăсем пулсан та кансĕрлемĕччĕç...

Правлени урайне шăлакан Укахви те пырса анратма тытăнчĕ:

— Халь пур çĕрте те механизаци пулмалла, илсе килсе пар мана пылесос!

— Ай-уй,— терĕм çакна,— ку сăмаха ăçтан илтрĕн эс?

— Пĕркунне хуларан килнĕ лектор каласа хăварчĕ;— тет...

Заказ хыççăн заказ параççĕ: пĕри электрочейник ыйтать, теприне кукăль пĕçермелли «асамлă кăмака» кирлĕ, ялти ватă медсестра холодильник пирки пĕлме хушрĕ. Эпĕ, паллах, никама та кӳрентермерĕм, вăл йăла çук манăн, пурне те: тупатпăр, илсе килетпĕр, терĕм, анчах та хам йăпăр япăрах нимĕн те тупса параймарăм. Райсоюз складĕнче темиçе çул ĕлĕкрех илсе килнĕ, пӳрне хулăнăш тутăхпа витĕннĕ çатмасемпе чугун куршаксем кăна купаланса выртаççĕ. Чăвашсоюзпа тĕрлĕ торгсен базисене илсе пынă электроприборсем — холодильниксем, «асамлă кăмакасем» тата ыттисем те нумай чух хулари магазинсене те çитеймеççĕ иккен, тӳрех паллана çынсен хваттерĕсене куçаççĕ.

Темиçе хутчен те кайса вăрçрăм унта-кунта, мĕншĕн тесен ялта мана хама хытăран хытă çунтарма тытăнчĕç:

— Тăрăшмастăн! Эпир ыйтнисене юри илсе килместĕн! Сана ăрехпе сутă туса пултăр!..

Чылай тăрăшма тиврĕ, çапах та пĕр çулталăк хушшинче хăтăлтăм-хăтăлтăмах хама ятлассинчен! Кама мĕн кирлине пурне те тупса патăм. Анчах пĕрине лайăх япала тупса паратăн çеç, тепри ыйтма пуçлать. Уншăн тăрăшма тытăнатăн вара...

Мĕн каласси пур, нумай хатĕр-хĕтĕр, нумай тавар ыйтать ку чухнехи ял! Тем те илесшĕн, тем те туянасшăн пирĕн çынсем. Йывăрланчĕ лавккаçăсен ĕçĕ, пĕртте ĕлĕкхи пек мар. Кашни эрнерех тавар патне каятăн, машинĕ-машинĕпе тиесе пыратăн, çапах та тепĕр чух таварĕ çителĕклĕ пулмасть.

Мĕншĕн, тетĕр-и?

Лайăх пурăнатпăр, акă мĕншĕн!

Мана ĕненместĕр пулсан, хăвăр ялти лавккаçăран ыйтăр. вăл та сире çавнах каласа парĕ.

Çапла, тăванăмсем!..

ÇИЧĔ МĂШĂР ÇĂПАТА

(*Режиссер каласа пани*)

ТĔРЕССИПЕ, çак пĕтĕм истори пирĕн театрти реквизитор Мамайкин пирки пулса иртрĕ...

Реквизитор камне эсир пĕлейместĕр те пулĕ-ха, çавăнпа та малтанах ун çинчен ăнлантарса парам сире. Театрта питĕ паллă çын вăл. Пысăк пуçлăх тесен те йăнăш пулмасть, мĕншĕн тесен сценă çинчи пĕтĕм чаплă пурлăх унăн аллинче: фанертан тунă хаклă йышши сĕтел-пуканĕ те, марлĕрен майлаштарнă пысăк тĕкĕр трюмосем те, хăмаран касса кăларнă кинжалсемпе пăшалсем те, шыв тултарнă шампанскипе коньяк кĕленчисем те, тата ытти те, пурте, пурте ун аллинче. Орденсемпе медальсем те тĕрлĕренех пур унăн, кирлех пулсан — Ылтăн Çăлтăрсем те тупăнаççĕ.

Кĕскен каласан, сценă çинче выляма чух артиста мĕнле хатĕр-хĕтĕр кирлĕ — реквизиторăн çавна пĕрре куç хупса илнĕ хушăрах тупса памалла. Унсăрăн май килмест, унсă-

рăн пĕтĕм спектакль пăсăлса кайма пултарать. Ара, хăвăрах чухламалла: артист сценă çине хут купăс вырăнне тăм чӳлмек е чечек çыххи вырăнне мунча милĕкĕ йăтса тухма пултараймасть ĕнтĕ. Скандал вĕт ун пек пулсан, курма пынă халăх спектакль хыççăн мĕн пур кăмăлтан алă çупас вырăнне сценă çинелле çĕрĕк паранкăсемпе персе саламлама пултарать!..

Анчах пытарма çук, пулкалать тепĕр чух...

Сăмахран, иртнĕ сезонра пирĕн Мамайкин пĕр спектакльре вун саккăрмĕш ĕмĕрти чăваш хĕрĕсене нипоччом хальхи пăта пек çинçе те çӳллĕ, леш «шпильки» текен кĕлеллĕ туфлисемпе выляттарчĕ. Паллах, курма пынисем çак килĕшӳсĕр япалана тӳрех асăрхарĕç, кулма тапратрĕç... Антракт вăхăтĕнче ман пата колхозри комсорг пычĕ те тӳсме çук тăрăхласа илчĕ:

— Режиссер юлташ! Вун саккăрмĕш ĕмĕрте чăваш хĕрĕсем кун пек туфлисемпе çӳренĕ пулсан, ун чух радиолăсем те пулнă-тăр? Мĕн тума-ха, эппин, сценă çинче артистсене шăпăр каласа ташлаттаратăр? Ямаллаччĕ радиолă — Шупашкарти ташă площадкинчи пек. От, вăйлă пулатчĕ!..

— Кун пек çулпа кайсан, эсир Пугачев салтакĕсене танксем çине лартма та пултаратăр пуль?— йĕплесе илчĕ тепĕр йĕкĕчĕ.

Манăн пит-куç вут пек пĕçерсе кайрĕ, пĕр минут хушшинчех лачкам тара ӳкрĕм. Намăс! Тӳсме çук намăс вĕт!.. Пăх-ха эс, ялти сар туталлă йĕкĕтсем мана, театрта çирĕм çул ытла ĕçленĕ режиссера, сценă çинче историлле тĕрĕслĕхе пăснăшăн айăпласçĕ, манран куç умĕнчех кулаççĕ! Ак, пурнăç еплерех çаврăнса тухрĕ...

Анчах та хирĕç нимĕн калама та çук — йĕкĕтсен сăмахĕсем тĕп-тĕрĕсех.

— Эх, ку Мамайкина!..— Манăн чышкă хăех чăмăртанчĕ, шăла шатăртаттарса илтĕм. Пĕлетĕп-çке-ха, çак намăса пĕр уншăн кăна курмалла пулчĕ пирĕн, пĕтĕмпех çав туса хучĕ! Колхоза спектакль лартма тухса каяс умĕн вăл хăйĕн реквизит ещĕкне çăпатасем пăрахса яма маннă ĕнтĕ. Ахальтен мар ăна пирĕн артистсем юлашки вăхăтра Мамайкин вырăнне Манайкин теççĕ.

Тепĕр кунне ирех эпĕ кун çинчен директора каласа патăм та, вăл та ман пекех çиленсе кайрĕ.

— Ав епле ĕçлеме пуçларăмăр, эппин! Ав епле искусствă кăтартатпăр колхозниксене! Ял кулли! Тепринче,

тен, авалхи чăваш хĕрĕсене сценă çине балеринăсем пек тумлантарса кăларăпăр? Каччисене стиляжкăсем пек тăхăнтартăпăр?.. Ăçта вăл фокусник, чĕнсе килĕр-ха, эпĕ ăна халех ĕçрен тухма заявлени çыртаратăп!..

Мамайкин директор умĕнче ни чĕрĕ, ни вилĕ тăрать.

— Мĕн хăтланатăн эсĕ, мĕн туса хутăн ĕнер, çавна чухлатăн-и?— çилĕпе, шăл витĕр ыйтрĕ директор.

— Ай-яй-яй, Пимен Фомич,— пăшăлтатса илчĕ Мамайкин, директор мĕн пирки каланине тӳрех ăнланса.

— Кала-ха, эсĕ, мĕн, ӳсĕр пулнă-и? Е гастроле тухса каяс умĕн арăмупа çапăçрăн-и? Хĕрсем сырса тухмалли çăпатасене мĕн пуçпа манса хăвартăн?

Мамайкин, хĕсĕк куçĕсене мăч-мăч-мăч тутарса, ассăн сывласа ячĕ.

— Эп вĕсене манса хăварман, Пимен Фомич...

— Епле манса хăварман? Ăçта пулнă-ха вĕсем? Мĕншĕн, эппин, артисткăсем пурте пăта пек кĕлеллĕ туфлисемпе выляни? Ай, эсĕ тĕплĕ хума пĕлмесĕр, çăпатисене çул çинче акса хăварнă-и?

— Апла та мар, капла та мар, Пимен Фомич...

— Мĕн шуйттанле тата? Кала! Мĕн ман пуçа минретсе тăратăн?!— пушшех çиленсе кайрĕ директор.

Мамайкин, пĕр хушă каллех куçĕсене мăчлаттарса, тем аса илме тăрăшнă пек пулса тăчĕ те:

— Çăпатисене эпĕ астунă çĕртех, юри хăвартăм,— терĕ.

— Юри?!— креслă çинчен яштак сиксе тăчĕ директор.— Вара çăпатасем вырăнне леш туфлисене хурса ятăн-и? Апла эсĕ ятарласах сăтăр тăвас тенĕ?

— Çук, Пимен Фомич, нимĕнле сăтăр тăвас шут та пулман манăн! Пулман япалана пулнă тесе калама юрамасть ĕнтĕ...—Мамайкин халь кăшт хăюллăрах калаçма пуçларĕ.— Туфлисене эпĕ саппаслăх илтĕм, ăнсăртран леш «Пĕр уйăхра вăтăр туй» текен лăпăрти комедие те лартма пултараççĕ тесе. Ку халтурă валли декорацисем кирлĕ мар вĕт-ха. пĕркун Янсаккассинче ăна икĕ шăналăк хушшинчех пит лайăх кăтартрăмăр...

— Эс пирĕн репертуар политикине ан хутшăн,— тӳрех пӳлчĕ ăна директор,— сценă çинче вăтăр туй пулать-и, аллă-и, çĕр-и,— санăн ĕç çук унта. Эс мана çăпата пирки каласа пар!

— Чимĕр-ха, Пимен Фомич, эсир мана ахалех айăплама пăхатăр. Эпĕ театра сиен мар, усă тăвас тенĕ. Эсир,

ава, хальхи пурнăç çинчен пьесăсем çыртарайманнипе, каллех çăпаталлă спектакль хатĕрлетĕр вĕт-ха, кĕçех премьерă пулмалла. Çавна асра тытса, эпĕ хайхи çапла шут турăм: çĕнĕ спектакль валли пур пĕрех пĕр вунă мăшăр çăпата туянмалла, апла пулсан, ма-ха манăн çав пушăт изделине хуларан сĕтĕрсе каяс? Яла çитсен, пĕр наччасрах хама кирлĕ чухлĕ çăпата илетĕп те артисткăсене пурне те çĕн çăпата сыртаратăп... Тĕрĕс шутланă-и эпĕ?

— Ну, тĕрĕс, тейĕпĕр. Анчах ялне çитсен вара кун çинчен манса кайрăн-им?— каллех хаярланма пуçларĕ директор.

— Çук, манман.

— Ма илмерĕн эппин, артисткăсене ма туфлипе кăлартăн?

— Тупаймарăм!

— Мĕн тупаймарăн?

— Çăпата. Пĕр мăшăр та тупса илеймерĕм. Çавăнпа туфли тăхăнтармалла пулчĕ те. Юрать, сценă çине ытла çара уран кăларниех мар, терĕм...

Директор çакăн хыççăн хăйне çамкинчен сасартăк тукмакпа çапнă пекех пулса ларчĕ.

— Эс мĕн... эс мана ухмах вырăнне хуратăн-и, е манпа шутăт тума хăтланатăн?— кăшкăрса ячĕ вăл унтан, кăштах тăна кĕрсен.

— Апла та мар, капла та мар, Пимен Фомич,— терĕ Мамайкин, вăл кăшкăрнинчен ним хăрамасăр.— Тĕп-тĕрĕсне калатăп...

— Манăн вара эс каланине ĕненес пулать-и? Çав териех тăмпуç мар-ха эпĕ, тусăм! Чăваш ялĕнче çăпата çук пулать вара, ха! Ăçта кайса кĕнĕ-ха вăл?

— Ăçта кайса кĕнине пĕлместĕп, анчах çуккине тĕптĕрĕс пĕлетĕп ĕнтĕ, хам шыраса куртăм...

— Ан лăпăртат! Пирĕн чăвашсем ĕмĕр-ĕмĕр çăпата туса пурăннă, чăваш çăпати пĕтĕм Раççейĕпе чапа тухнă, Пĕрремĕш Петĕр патша Питĕр хулине тунă чух унта ĕçлекенсем валли ятарласа чăвашсене çăпата тутарнă пулать те...— хĕрӳллĕ лектор пекех янрама тапратрĕ директор, анчах халь ĕнтĕ хăюланса çитнĕ Мамайкин ăна пӳлсе лартрĕ.

— Тĕрĕс, Пимен Фомич, пĕтĕмпех тĕрĕс! Пĕр композитор, çăпатана мухтаса, гимн çырнине те пĕлетĕп. Апла та пулнă, капла та пулнă... Анчах эсир пĕр япалана манса каятăр — халь Петĕр патша вăхăчĕ те мар, Микулай патша

самани те мар, эпир халь Октябрьти революцин хӗрӗх пилӗкмӗш çулӗнче пурӑнатпӑр-çке!

— Мӗн вара, çавӑншӑн çӑпата пӗтсе ларнӑ-им пирӗн?

— Пӗтнӗ, Пимен Фомич!

— Суя!— парӑнасшӑн пулмарӗ директор.— Ак, халь тесен халь тухса каятӑп та, ыранччен çӗр мӑшӑр, пин мӑшӑр тупатӑп! Вагон тиесе килетӗп!.. Мӗн, тиесе килейместӗп, тетӗн-им?

— Кайса пӑх ара, кайса пӑх...— терӗ Мамайкин.— Питӗ лайӑх пулӗччӗ! Эсӗ акӑ пирӗн патра вун виçӗ çул директорта ларатӑн, анчах çав хушӑра Кӳкеçе те çитсе курмарӑн пулас-ха...

— Вӑл ниме те пӗлтермест! Республикӑ пурнӑçне эпӗ хаçатсем тӑрӑх та пит лайӑх пӗлсе тӑратӑп!— куçӗсене çутӑлтарса илчӗ директор.

— Пулӗ, пулӗ, анчах эпӗ хаçатсенче çӑпата çинчен çырнине пӗрре те курман ку тараннчен. Атӑ-пушмак мӗн чухлӗ туса кӑларни çинчен чӑнах та час-часах çыркалаççӗ...

— Ерунда!— аллипе сӗтел çине çат! тутарчӗ те директор, креслӑ çине лак! ларчӗ.— Лайӑхрах шыранӑ пулсан, çичӗ мӑшӑр çӑпата тупма пултарнах эсӗ.

— Ах, Пимен Фомич!..— Халь ӗнтӗ Мамайкин тарӑхма пуçларӗ.— Епле çав териех ӑнланман çын эсӗ?! Калатӑп вӗт-ха: шырарӑм! Клуб пуçлӑхӗпе пӗрле çак колхоза кӗрекен виçӗ ялне те çитрӗмӗр, ӗмӗр-ӗмӗр çӑпата туса сутса пурӑннӑ шур сухаллӑ стариксене те веçех тӗрӗслесе тухрӑмӑр — ним усси те пулмарӗ! Нихӑшин те çук, çӑпата тума тахçанах пӑрахса, теççӗ! Хӑйсем те пурте атӑ тӑхӑннӑ...

Директор хайхи Мамайкин çине татах та тӗлӗнерех тинкерсе пӑхрӗ.

— Мӗн вара... Çӑпата тума чарман пулӗ-çке? Эп хам ун пек указ тухнине астусах каймастӑп...

— Кам чартӑр?— ал сулчӗ Мамайкин.— Çӑпата — сӑмакун мар вӗт вӑл, никама та сиенех кӳмест.

— Ма тумаççӗ-ха, эппин, ӑна?

— Кирлӗ мар, теççӗ! Атӑ-пушмакпа çӳреме лайӑхрах, теççӗ. Чӑрмавӗ те çук, илемли те илемлӗ, шанчӑклӑрах та тата: шыв-шурта урана йӗпетсе чирлесе ӳкместӗн.

Директор шухӑша кайрӗ...

— Неушлĕ çавăн пекех вăра, Мамайкин юлташ? Чăваш ялĕнче çăпата тупса илмелле мар пулать... Хурлăх вĕт ку!

— Мĕншĕн хурлăх пултăр?— тĕлĕнчĕ Мамайкин.— Ман шутпа, куншăн пĕртте хурланмалла мар, савăнмалла çеç! Çынсем çăпата сырма пăрахса атă-пушмакпа кăна çӳрени вĕсен пурнăçĕ лайăхланнине пĕлтерет пуль?..

— Ана пĕлетĕп-ха, эс ан вĕрентсе лар, уншăн каламастăп эпĕ...— Директор ассăн сывласа ярса, çамки çинчи тарне шăлса илчĕ.— Пирĕн кăçал тата виçĕ историлле пьесă лартмалла вĕт-ха! Пĕр лав çăпата кирлĕ пулать. Мĕн тăвăпăр?

— Вăл пьесăсене лартмăпăр та — хуйхи те пулмасть!— тесе хучĕ Мамайкин.— Драматургĕсене приказ парăпăр: çитĕ сире çăпаталлă пьесăсем кун чухлĕ çырнипе, малашне пушмак тăхăнса ташламаллисене çырăр, тусăмăрсем!

...Мамайкина эпир ним те тумарăмăр. Ĕçрен кăларма мар, ятлама та май килмерĕ ăна.

ХАШНЕ ЮРАТАС?

(*Пĕр каччă çырăвĕ*)

ТУСАМÇАМ, КОЛЬКА, чунтан-вартан юратнă шатраллă шуйттан!..

Кăварлă салам сана! Çĕр хут, пин хут салам!

Эпĕ-ха ку, Вася Влашкин. Ну, Влашка Ваççи эппин...

Чăрмантарнăшăн каçар эс мана, ăçти-çука. Питĕ лайăх пĕлетĕп, сирĕн халь унта, Алтайра, çурăм хыççа илме те вăхăт çук. Эсир кăвак çутăпах хире тухатăр та сĕм тĕттĕм пулса лармасăр та ĕçрен таврăнмастăр, пĕтĕм вăйăра хурса унти пуян тыр-пула пуçтаратăр. Эсир, чăваш студенчĕсем, хамăр халăх ятне чапа кăларса ĕçлени çинчен темиçе хут та савăнсах вуларăм ĕнтĕ, уйрăмах малта пыракансен ячĕсем хушшинче санăн ятна курсан вара, тупата туршăн, тăпăртатса ташласа илтĕм! «Пирĕн институтри бокс чем-

пионĕ Колька Шатров тырă вырнă çĕрте те пĕрремĕш категорипе ĕçлет»,— тесе пĕлтертĕм хамăрăн студенткăсене. Вĕсем те чунтанах савăнчĕç саншăн, çĕклеме кĕрейми салам калама хушрĕç.

Шел, питĕ шел — сирĕнпе пĕрле пыраймарăм. Эпĕ те — хам суккăртарах пулсан та — юлташсенчен юлмастăмччĕ ĕнтĕ. Эпир хресчен ачи-пăчи вĕт, тырра-пулла мĕнле тыткаламаллине лайăх пĕлетпĕр! Мĕн тăвас тетĕн, чирлерĕм-çке-ха вăл вăхăтра, йĕп-йĕпе тарланăскер сивĕрех шыва кĕтĕм те — кăвапа йĕри-тавра пĕр харăсах тăхăр çăпан тухса ларчĕ. Астăватăн пуль, хăвна уçса кăтартсан, эсĕ çавăнтах кравать çине каска пек йăванса кайса, ик аллупа варна тытса, урусемпе тапăлтатсах кулма тапратрăн...

— Уникум! Çĕр çулта пĕрре пулакан япала! Сан хырăм тирне касса илсе халех краеведени музейне памалла!— тесе ахăртăн.

Анчах эпĕ ун чухне выртса макăрма та хатĕрччĕ...

Ну, халĕ ку хурлăх тахçанах иртсе кайрĕ ĕнтĕ, халь ман хырăм мăлированнăй турилкке пекех яп-яка та тапташа. Тен, çуралнă чух та ун пек пулман-и вăл...

Сывалса çитсенех, хăш-пĕрисем пек ĕçсĕр сулланса çӳрес мар тесе, эпĕ редакцие кайса вырнаçрăм. Литература факультетĕнче вĕреннĕ тата хам та хăш чух кăшт çыркаланă май, мана унта пĕр сăмахсăрах илчĕç — çулла отпуска каякансем, пулла çӳреме юратакансем вырăнне ĕçлеме ĕнтĕ.

— Санăн хула тăрăх çĕн хыпарсем, тĕрлĕ информаци пухса çӳреме тивет,— терĕ секретарь.— Тепĕр чух çĕнĕ спектакльсемпе концертсем çинчен те çырмалла пулать... Çулла час-часах ытти тăванлă республикăсенчен тĕрлĕ ансамбльсем килеççĕ, вулакансене вĕсем пирки те каласа кăтартмалла...

Пĕчĕк ача хитре теттесемшĕн хĕпĕртенĕ пекех савăнса кайрăм çакнашкал «инструктажа» итлесе пĕтернĕ хыççăн! Эпĕ театршăн мĕнле çуннине пĕлетĕн вĕт-ха эсĕ. Ялта вĕреннĕ чух манăн хамăн та чаплă артист е паллă юрăçă пулас ĕмĕт пурччĕ. Шупашкара килсен хама тĕрĕслеттерсе те пăхрăм эпĕ, анчах кӳренмелле пулчĕ: санăн хăлху çине упа пусса кайнă, «слух çук», терĕç. Çапах та куншăн эпĕ театра юратма пăрахмарăм. Астăватăн пуль, çĕнĕ спектакль пуласси çинчен пĕлсен, эпĕ ыран çиес çăкăр укçипех билет илеттĕм...

Халь вара ку тĕлĕшрен эпĕ кĕтмен çĕртенех рая кĕрсе ӳкрĕм, темелле, пурнăç кайрĕ манăн! Паян — спектакль, ыран — концерт, виçмине цирк е пĕр-пĕр фокусник «куç пăвнине» кур. Пур çĕре те ахалех кĕрсе каятăн — манăн кĕсъере укçаран та вăйлăрах пĕчĕк çеç хăмăр кĕнеке пур: «спецкорреспондент»!..

Анчах та, тусăм Колька, темле ырă япалан та тӳнтер енĕ пур иккен çав! Çавăн пек «туйран туя» çӳресех асапхурлăх тупрăм хам валли. Пĕр уйăх çурă ытла чĕрем вутпа хыпса çунчĕ, ларма-тăма та пĕлмерĕм, çĕрле выртсан ыйхă килмерĕ, çиме ларсан апат анмарĕ, çăра чей ĕçнипе кăна тытăнкаласа пурăнтăм...

Эсĕ, ку тĕлĕшпе манран опытлăрах çын, манпа мĕн пулнине чухласа илтĕн те пуль ĕнтĕ, вуланă май шăл йĕрме те тытăнтăн пуль-ха:

— Эпир кунта çĕрне-кунне пĕлмесĕр ĕçлетпĕр, çĕршыв валли миллионшар пăт тырă хатĕрлетпĕр, анчах пирĕн Влашка Ваççи, путсĕрскер, çав вăхăтра темле çăвăр така пек кăтрашка пуçлă, пĕветсе лартнă туталлă та кĕске аркăллă майрушкă пирки антăхса вилсе кайма тытăннă... Ха-ха!

Ан кул, Колька, шăлна ан йĕр, мĕншĕн тесен: 1) ун пекки пĕлтĕр санăн хăвăн та пулса иртрĕ, виççĕмĕш курсри Маша Арзюкова пирки ухмаха ерсе кайса çине-çине двойкăсем илме тытăннине эпир пит лайăх астăватпăр; 2) эп сасартăк юратса пăрахнă хĕр — ашшĕ-амăшĕн ĕнси çине хăпарса ларса «а ну, пошол!» тесе хăвалакан ăратăран мар, вăл — стройкăра малта пыракан работницă, штукатур.

Паллашасса эпĕ унпа ак çапла паллашрăм. Пĕррехинче театрта çамрăк строительсен каçĕ пулчĕ, мана çавăн çинчен репортаж туса пама хушрĕç. Анчах, хамăрăн мĕшĕлти мăнтăр фотографа пула, эпир кăштах кая юлса çитрĕмĕр. Çак хĕр президиумра Обком секретарĕпе юнашар ларатчĕ. Куçăмсем витĕрех мар пулин те, эпĕ, иккĕмĕш ретрех ларнă май, вăл ытармалла мар хитрине лайăхах куртăм. Чăп-чăмăр питлĕ, хуп-хура куçлă, тутисем çӳхе, шăлĕсем шап-шурă та тип-тикĕс... Чăн-чăн чăваш илемĕ ĕнтĕ!

— Çав хĕр — кам вăл?— ун çине тĕллесе ыйтрăм юнашар лараканкаччăран.

— Палламастăп, президиума суйланă чух тахăш СМУри штукатур тенине çеç илтсе юлтăм,— терĕ çак мана хирĕç.

— Хитре хĕрача...

— Аптрамасть...

— Чăваш-ши?

— Эрмен мар ĕнтĕ, куран — сăмси каçăр,— хуллен кулса илчĕ каччă.

Темшĕн-çке, пĕлместĕп, манăн çав хĕрпе тӳрех паллашас килсе кайрĕ. Пулать вĕт-ха çавăн пекки: çынна эсĕ пĕрререн пĕрре куратăн, анчах санăн чуну çав самантрах ун патнелле туртăнма тытăнать. Магнит тимĕре хăйĕн патнелле туртнă пек...

Унтан çав тери кĕтмен япала пулса тухрĕ: пуху хыççăн концерт пуçланас умĕн çав хĕрача сасартăк манпа юнашар пушă вырăна пычĕ ларчĕ! Паллах, вăл ман çинелле çаврăнса та пăхмарĕ, тӳрех пирĕн умри ретре ларакан хĕрсемпе калаçма тытăнчĕ. Анчах эпĕ вара ăна питĕ хытă сăнаса лартăм...

Чăнах та ытармалла мар кăмăллă хĕр иккен, хăямат. Пĕвĕпе пысăк мар, анчах çав тери тăп-тăп кĕлеткеллĕ, пичĕ-куçĕ — юмахри пикесен пек, сасси те çепĕç, кулли вара — чисти шăнкăрав! Вăл юлташĕсемпе калаçнă хушăра унăн ятне пĕлсе юлма та ĕлкĕртĕм — Анюк ятлă иккен. Анна... Чăваш хушшинче пит нумай тĕл пулакан ят ĕнтĕ ку, анчах та мана темшĕн пĕр çак хĕрача çеç Анна ятлă пулма пултарнă пек туйăнчĕ. Нина, Роза, Светлана тата ытти çавăн пек ятсем ун çумне ниепле те çыпăçас çук, Анна çеç пулма пултарать вăл!..

— Каçарăр,— терĕм çакна хуллен, вăл юлташĕсемпе калаçма чарăннă самантра,— президиумра эсир лартăр вĕт-ха?

Вăл ман çине тĕлĕнерех пăхса илчĕ.

— Эпĕ... Мĕн вара?

— Нимех те мар... Эпĕ хаçатра ĕçлекен çын та, манăн сирĕн çинчен пĕлес пулать... Çырмалла...— мăкăртатма тытăнтăм эпĕ.—Сирĕн хушаматăр мĕнле-ха çав?

— Павлова Анна,— терĕ хĕр, çаврака куçĕсене мăчлаттарса.

— Хăш трестра ĕçлетĕр? Мĕнле ĕçре?

— СМУра. Штукатурсем эпир. Коммунизмла ĕç бригади пирĕн.

— Эсир бригадир пуль ĕнтĕ?

— Çук-ха, унтах çитеймен. Стройкăна килни те пĕр çулталăк кăна та-ха...

— Унччен ăçта пулнă?

— Унччен-и? Ялта вĕреннĕ. Пĕлтĕр вунă клас пĕтерсе тухрăмăр та, райкомол пире стройкăна кайăр, терĕ...

— Питĕ аван ку! Стройкăсенче халь çав тери çын нумай кирлĕ...

Халь шутлатăп та, çавăн чухне эпĕ питĕ ухмаххăн курăннă ĕнтĕ, хĕр çине те ăнран тухса кайнă така куçĕсемпе пăхса ларнă пулмалла, ахальтен мар вăл, эп пăхнине тӳсеймесĕр, пуçне тепĕр еннелле пăрчĕ.

Антракт вăхăтĕнче эпĕ çапах та Аннапа пĕрле пултăм, ăна та, унăн икĕ юлташне те ирĕксĕрлесе тенĕ пекех лимонад ĕçтертĕм (вăтанаççĕ вĕт чăваш хĕрĕсем — буфет патне ним тусан та пырасшăн мар!..). Çав хушăра тата ытларах пĕлтĕм: вĕсен бригадинче йăлтах хĕрсем иккен, пурте çичĕ е вунă клас пĕтернĕскерсем, бригадирĕ кăна качча кайнăскер, Хула Совечĕн депутачĕ, Обком членĕ, тет. Пурте пĕрле, общежитире пурăнаççĕ, театра, концертсене те ялан пĕрле çӳреççĕ...

— Апла пулсан, авланма сирĕн пата пырас пулать-иç?— шӳтленĕ пек турăм та эпĕ, Анна юлташĕсенчен пĕри, сап-сар çӳçне арçын ачалла кастарнă, пĕрмай йăл-йăл-йăл кулса таракан пысăк кăвак куçлăскер, ман çине пуçне чалăштарарах пăхрĕ те:

— Хăрамастăр пулсан, пырса пăхăр, анчах кайран ӳкĕнмелле ан пултăр!— терĕ. Хăй çавăнтах чăх-чăх-чăх кулса ячĕ.

— Çав териех хаяр-и вара эсир? Çыртмастăр пуль вĕт?

— Çыртасса çыртмастпăр та — хамăра кӳрентерме те памастпăр. Сирĕнпе, арçынсемпе, веле-селе пулма юрамасть вĕт. Ултавçăсем эсир пурте. Çавăнпа та, кам та пулин пирĕн бригадă членĕ çине куç хывсан, ун патне чечек çыххисемпе духисем илсе пыма пуçласан, эпир пурĕ пĕрле пухăнса канаш тăватпăр: тивĕçлĕ çын-и вăл е хывăх вĕçтерекенскер кăна? Общежитине кĕртме юрать-и ăна, çук-и? Вот вопрос! Пĕркунне пĕрине таккуйски тăн кĕртрĕмĕр — ĕмĕр манмĕ, ӳлĕмрен ачи-пăчине те каласа парĕ!..

— Мĕншĕн вара ун пекех?

— Ӳсĕр пырса кĕчĕ пирĕн пата! Çитменнине тата, «хĕр çураçма килтĕм» тесе, ик çур литр кăларса лартрĕ. Тӳрех пăсăрлантарса кăларса ятăмăр ачана. Иккĕмĕш хутран чупса аннă чух пусма вĕçĕнче такăнса ӳксе кĕленчисене те шăнкăрттин! çĕмĕрсе пăрахрĕ. Коридор сарлакăшпе эрех юхрĕ çав...

— Ытлах-çке апла эсир...— кулам пекки турăм эпĕ.

— Çапла çав эпир!— пуçне ухса илчĕ сар çӳçлĕ хĕр.— Пирĕн пата çӳреме пĕлес пулать.

— Тавтапуç, эппин, асăрхаттарнăшăн...

— Сывлăха пултăр!

Кайран, зала таврăнсан, Анюкпа каллех юнашар лартăмăр та, эп унтан:

— Мĕнле хĕрача, кам вăл сирĕн, çав сар çӳçли?— тесе ыйтрăм.

— Пирĕн бригадăри комсорг,— терĕ Анюк.—Лĕш ӳсĕр каччи шăпах ун патне пынăччĕ...

— Ай-вай, çирĕп кăмăллă хĕрача пулмалла!

— Пирĕн никам та çемçешке мар,— терĕ ман хĕр.— Ĕçре те, пурнăçра та хурçă пекех пулма тăрăшатпăр.

Çапла калаçнăçемĕн вăл мана ытларах та ытларах килĕшсе пычĕ. Чунăм ун патнеллех туртăнчĕ. Хуть те мĕн кала та эс мана, тусăм Колька, çав «пĕрре курсах юратса пăрахасси»—«любовь с первого взгляда»— пурах вăл, пур! Çав каçхине манпа шăп çавăн пек пулса тăчĕ, вилесле юратса пăрахрăм эпĕ çак çамрăк хĕре!..

Анчах манăн ĕçсем ăнсах пымарĕç çав. Концерт хыçăн эпĕ Анюка епле пулсан та килне çитиех ăсатса ярасшăнччĕ, театртан ăна хулĕнчен тытсах тухрăм — кăлăхах пулчĕ! Хĕрсене хăйсен автобусĕ кĕтсе тăрать-мĕн. Пурте шăкăр-шакăр кĕрсе ларчĕç те — эпĕ хамăн хĕрпе сыв пуллашма та ĕлкĕреймерĕм — кĕрлеттерчĕç кăна!

Ирчченех çывăраймарăм вара ун çинчен шухăшласа... Хăçан тĕл пулас-ши унпа тепре? Мĕнле çывăхрах паллашса туслашас? Кинора, театрта иксĕмĕр пĕрле пулас, канмалли кун Атăл леш енне каяс... Анчах çапла ĕмĕтленсе выртнă вăхăтрах хам çав тери ухмах пулнине ăнланса илтĕм: ара, манăн Анюк адресĕ те çук вĕт-ха! Тахăш СМУра ĕçлет, тахăш стройкăра! Общежитийĕ ăçта вĕсен? Мĕн пĕлетĕп-ха эп ун çинчен? Тĕрĕссипе каласан, нимĕн те пĕлместĕп!

Павлова Анна... Штукатур. Комсомолкă. Коммунизмла ĕç бригадин членĕ. Пĕтĕмпе те çавă çеç паллă маншăн...

Эх, пăхăр çамка, тăм писмен! Чăн та Влашка Ваççи ĕнтĕ!..

Хама хам хĕнесе тăкас патнех çитрĕм çав каçхине...

Ир пулчĕ, ĕçе кайрăм. Анюксăр пуçне, пуçра урăх нимĕн те çук манăн. Çынсемпе те калаçмастăп, çăвара шыв сыпнă пек. Асăрхарĕç çакна — мĕн пулнă сана, Влашкин,

чирлемерĕн пулĕ-çке?— тесе ыйтаççĕ. Тем, кăштах пуç ыратать-ха, тетĕп.

Каçалапа Атăл хĕррине тухрăм. Халăх калле-малле кумать кăна, темиçе пин çын та пулĕ. Паллах, пуринчен ытла — каччăсемпе хĕрсем. Пурте хаваслă, калаçаççĕ, кулаççĕ. Пĕр эпĕ кăна кикен çинĕ пек çӳретĕп. Анчах çав вăхăтрах хамăн куçсем ăста сыщикăнни пекех унăн та кунăн пăхаççĕ — Анюка шыраççĕ. Ара, кам пĕлет, тен, вăл та хăйĕн юлташĕсемпе çакăнта уçăлса çӳрет? Пулма пултарать вĕт ун пекки! Тепĕр чух эпемĕн телейĕ хăй кĕтмен çĕртенех сиксе тухать-çке!..

Çук, курăнмарĕ. Киноран тухакансене те йĕркипех пăхса тăтăм, ку та ахалех пулчĕ. Унтан Крупская садне кайса çӳрерĕм — усси çав-çавах пулмарĕ. Питĕ шутсăр кӳренсе таврăнтăм. Анчах ним тума та çук — хам айăплă!

Çавах та шанчăка çухатмарăм-ха. Еç хыççăн кашни каç Атăл тăрăх сулланса çӳретĕп. Пĕррехинче чăнах та куртăм хайхискере, анчах... автобус чӳречи витĕр кăна. Эпĕ Атăл хĕрринелле утаттăм, автобус площаделле килетчĕ. Хĕре курсанах манăн чĕре сӳ! туса илчĕ. Вăл та мана палларĕ пулас та, шап-шур тикĕс шăлĕсене кăтартса, кăмăллăн кулса, пуçĕпе сулса иртсе кайрĕ... Ах, пĕлесчĕ санăн эпĕ çав самантра епле пăлханса кайнине!..

Анюк ман тĕлпе çăмăл çунатлă кайăк пек вĕçсе иртсе кайрĕ çеç пулин те, чĕрене тепĕр хут хускатса, ман юратăва тата ытларах хĕрӳллентерсе хăварчĕ.

— Тупатăп! Епле пулсан та тупатăп эп ăна, çĕр айĕнчен чакаласа кăларатăп!— терĕм вара хама хам, темле пит паттăр ĕç тума хатĕрленнĕ пекех шăла сыртса, чышкăсене чăмăртаса.— Çав хĕре шыраса тупас мар тăк — çĕр çинче те пурăнас мар!..

Мĕншĕнне пĕлместĕп, анчах малтанхи вăхăтра эп ăна ăçта та пулин театрта, кинора е концертра тĕл пуласса шаннăччĕ. Çавăнпа та кашни каçах ăçта мĕн кăтартаççĕ — пур çĕре те çитеттĕм. Вунă кун пĕр лăш курмасăр чупрăм çавăн пек — Анюкăн тĕсĕ те курăнмарĕ... Çук, капла май килмест, ăна ĕçре, стройкăсенче шырас пулать, тесе шут турăм вара çавăн хыççăн.

Анчах... ним тĕлли-паллисĕр, адрессĕр шыраса пăх-ха эс Шупашкарти стройкăсенче пĕр-пĕр çынна! Хăвах пĕлетĕн вĕт-ха, мĕн чухлĕ çĕнĕ предприяти, курăнмалли çурт, шкул, больницă тата тем те пĕр тăваççĕ пирĕн хулара! Хуть те ăçталла пăхсан та башеннăй крансем пĕлĕтелле

кармашса тăраççĕ, ăçта çитнĕ унта нумай хутлă корпуссем купаланаççĕ. Спутник-хула тăваççĕ... Миçе пин çын ĕçлет пуль çав стройкăсенче!..

Çапах та эп пуçа усмарăм. Тĕрĕссипе каласан, эпĕ вăл хушăра вăтам ĕмĕрсенчи рыцарь пек пулса тăтăм. Ара, лешсем хăйсем юратнă хĕрарăмшăн тем тума та хатĕр пулнă вĕт-ха, пин-пин çухрăмлă походсене те çӳренĕ, шыва та, вут ăшне те кĕрсе кайнă. Ан кул, ан ахăр, Колька! Чăн та çапла!

— Манăн стройкăсенче ытларах пулас килет,— терĕм редакци секретарьне пĕр ирхине ĕçе пырсан,— балеринăсемпе упасем мĕнле ташлани çинчен çырса йăлăхрăм...

— Ырлатăп ку шухăша,— терĕ вăл, — стройкăсенче халь шăпах чи хĕрӳллĕ вăхăт... Кĕрлеттер!

Пуçларăм вара... Чăн малтан «тарăн разведка» турăм: Шупашкарта миçе СМУ? Вĕсем хăш-хăш объектсене тăваççĕ? Унтан çывăхарах пытăм: штукатурсен бригадисем миçе вĕсен? Çак самантра хăш бригадă ăçта ĕçлет? Чăн юлашки пункт вара — хамшăн чи кирличчĕ: бригадăра Павлова Анна ятлă хĕр пур-и?

Эх, Колька, куласса кулатăн та эсĕ (эп ăна пĕлсех тăратăп!), анчах сана хăвна хушасчĕ çак пархатарсăр ĕçе!.. Пĕр уйăх чупрăм вĕт ирне-каçне пĕлмесĕр, шалт хăшкăлтăм! Каçхине общежитине таврăнсан пĕр пушмакне хыватăп, анчах теприне хывма та ĕлкĕрейместĕп, çаплипех çывăрса каятăп. Эпĕ пĕрмай хам валли савăнăç шырарăм, анчах ун вырăнне кашни кун тенĕ пекех кӳренмелли кăна тупăнса пычĕ!..

Итле акă. Çитетĕп пĕр-пĕр стройкăна, аслине шыраса тупатăп — прораба-и унта, кама та пулин урăххине-и. Паллашатпăр, калаçма тытăнатпăр.

— Сирĕн кунта хальхи вăхăтра штукатурсем ĕçлеççĕ-и?

— Ĕçлеççĕ.

— Коммунизмла ĕçлекен бригадă-и? Хĕрсем-и?

— Так точнă. Хĕрсем. Коммунизмла бригадă.

— М-м... Павлова Анна ятлă хĕр пур-и вăл бригадăра?

— Павлова?.. Павлова пур, анчах та Анна мар, Маргарита.

— Мана Анна кирлĕччĕ...

— Санăн çывăх паллană хĕрӳ пуль ĕнтĕ вăл?— куçне хĕссе илет чеерех прораб, уссийĕсене пĕтĕркелесе.— Шел, анчах нимĕнле те пулăшма пултараймастăп... Каçарăр.

Тепĕр стройкăна çитетĕн — унта та Павлова штукатур пур, коммунизмла ĕç ударникĕ, анчах та каллех Анна мар — Серафима. Унтан Леонилăсем, Феофилăсем, Маринесемпе Кулинесем, Розăсемпе Музăсем нумай тупăнчĕç. Пурте Павловăсем, пурте ытармалла мар хĕрсем, нормăсене икшер çĕр процент çапаççĕ, анчах пĕри те... ман валли мар! Мана Анна кирлĕ, пĕр Анна çеç! Анчах вăл — çук...

Хуйха ӳкнипе, аптранă енне, пĕрехмай пĕр ватă поэт сăввине каласа çӳреме пуçларăм:

Юратуçăм, юрату,
Çамрăк чуншăн — ырату!..

Çапах та юлашкинчен телей ман еннелле çаврăннă пек пулчĕ. Вун çиччĕмĕш стройкăна çитсен, çамрăк кăна техник-строитель, хĕвел çинче вут пуççи пек çунса тăракан хĕп-хĕрлĕ çӳçлĕ хĕр, мана савăнтарсах пăрахрĕ.

— Павлова Анна? Пур пирĕн ун пекки, пур!— терĕ вăл.— Тĕп-тĕрĕс ыйтатăр, штукатур. Комсомолкă. Вунă клас пĕтернĕ... Çапла, çапла, коммунизмла бригадăра. А-ав çавăнта, çӳлте ĕçлеççĕ вĕсем. Атьăр, халех тупса паратăп!

Ултăмĕш этажа мĕнле хăпарнине те пĕлместĕп. Тĕлĕкри пек пытăм пулмалла. Чĕре пант-пант-пант! тунине çеç астăватăп. Ара, епле пăлханмастăн-ха? Çавăн чухлĕ шыранă хыççăн тинех тупрăм пулать те хамăн чун хыптармăшне!..

— Павлова-а! Аня-я!— кăшкăрчĕ вут пуççи, эпир кирлĕ çĕре çитсен.—Аçта ə-эс? Кил-ха кунта-а!

— А-а-а!— янраса кайрĕ этажри пуш пӳлĕмсем тăрăх. Вăрманти пек!

Эпир урам пекех сарлака коридор тăрăх утрăмăр. Ик енче те хапха сарлакăш алăксем. Шкул тăваççĕ иккен кунта. Техник кашни алăкранах пуçне чике-чике пăхрĕ.

— Аня-я! Павлова-а!..

Кĕç пĕр пӳлĕмрен кăвак комбинезон тăхăннă, извеçпемĕнпе вараланса пĕтнĕ сап-сар хĕр сиксе тухрĕ.

— Кам чĕнет мана? Эсир-и, Ирина Афанасьевна?— йăлт-ялт пăхкаласа илчĕ вăл пирĕн çине шухă куçĕсемпе.

— Акă, сана çак юлташ курасшăн,— пуçĕпе ман еннелле сулчĕ хĕр-техник.— Редакцирен...

— Каллех редакцирен-и? Ай-уй, пире виçĕм кун çеç ӳкерсе кайрĕç-иç! Пирĕн çинчен кун сиктерсе çырсан, ыт-

тисем валли вырăн юлмĕ тата!— ахăлтатсах кулса ячĕ сар хĕр.

Эпĕ хама такам вĕри шывпа сапнă пек тăтăм. Шыраса-шыраса, тупрăм пулать Павлова Аннăна! Акă вăл, ман умра... Ним те калаймăн, хитре. Ытармалла мар. Çырла! Пĕр çăвар шывпа сыпса ямалла. Каччăсем вилсех каяççĕ ĕнтĕ унпăн. Анчах мана мĕн тума кирлĕ вăл? Эхх!..

— Каçарăр, йăнăш пулнă,— терĕм кăшт тăрсан.— Эпĕ... урăх Павловăна шыратăп. Мана... урăххи çинчен çырма хушнă... Сыв пулăр!

Çаврăнтăм та утрăм.

Ну, мĕн тăвас-ха ĕнтĕ манăн? Татах шыраса пăхас-и е... сурас пĕрех хут?

Чĕре иккĕлле хушма пуçларĕ. Пĕре — сур, тет, тепре — ан сур, кун чухлĕ тертленнине сая ярас мар, ĕçе вĕçнех çитерес пулать, тет. Атя, терĕм вара, шыраса пăхам тепĕр темиçе кун!

Каллех тытăнтăм çӳреме... Чи инçетри стройкăсенче пултăм. Вара мĕн тетĕн-ха эс? Çичĕ кун хушшинче çичĕ Анна Павлова тупрăм. Пурте штукатурсем, пурте питĕ маттур хĕрсем, вунпар клас пĕтернĕ, хăшĕсем каç-каç строительсен техникумĕнче вĕренеççĕ. Çав тери юратмалласкерсем, ĕлĕкхи пек каласан, тыт та тӳрех венчете илсе кай! Аçта, хăш вăхăтра çуралса ӳсме ĕлкĕрнĕ-тĕр ун пек чаплă хĕрсем, тĕлĕнсе каймалла! Ĕçĕсем пирки каламалли те çук — ĕç çунса кăна тăрать вĕсен аллинче! Ĕçне кура, паллах, укçине те пит лайăх илеççĕ, тепĕр инженертан та юлмаççĕ. Пултаруллă халăх, пĕр сăмахпа каласан!

Çав Анна Павловăсенчен чылайăшĕ çинчен хаçатра çыра-çыра кăлартăм эпĕ. Унсăрăн секретарь кун çути памасть-çке-ха мана, ĕç вăхăтĕнче çӳретĕн пулсан, материал туса кил!

Анчах хам юратнине, чăн-чăн Анна Павловăна çав-çавах тупаймарăм-ха. Шанми те пулса çитрĕм унăн йĕрĕ çине ӳкессе. Суйрĕ пуль вăл мана, ниçта та ĕçлеменскер пулнă пуль вăл, тесе иккĕленме те пуçларăм...

Çук, аплах мар иккен. Чăн юлашкинчен вăл та тупăннă пек пулчĕ. «Тупăннă пек», тетĕп эпĕ, мĕншĕн тесен эп ăна хăйне мар, унăн портретне çеç куртăм. Хуларан пĕр вун пилĕк километрти стройкăра, Хисеп хăми çинче çакăнса тăратчĕ унăн ытарайми сăнĕ, йăл-йăл кулать, куçĕсенчен вут-хĕм сирпĕнсе ғăнăн туйăнать.

Паллах, ман чĕре те кăвар пекех пĕçерсе кайрĕ. Иртсе пыракан икĕ хĕре тытса чартăм та хăвăрт-хăвăрт тĕпчеме тытăнтăм:

— Çакă вăл — Павлова Анна вĕт? Çапла-и?

— Çавă,— терĕç хĕрсем.

— Штукатур? Коммунизмла ĕç бригадинчен?

— Тĕрĕс, ним чухлĕ те йăнăшмастăр...

— Халь ăçта-ши вăл? Ăна тупса курма пулать-ши? Манăн унпа темиçе сăмах калаçса илмелли пурччĕ...

Хĕрсем пĕрне-пĕри куçран чăр-р... пăхса чееречĕн кула-кула илчĕç.

— Çук-ха вăл халь, ăна виçĕ кунлăх отпуск панă,— терĕ унтан пĕри.— Киле кайнă...

— Тем пулнă-им килĕнче? Хуйхă-суйхă-и?

— Çук, хуйхă мар, пысăк савăнăç унăн,— терĕ тепри.— Качча кайрĕ вăл пирĕн!

— Качча?!— Эп чĕлхене нăтăрт! çыртса лартрăм.

— Ийĭа çав. Унăн чун савни салтакран таврăннă та... Туйне ялта, ашшĕ-амăшĕ патĕнче тăваççĕ, çавăн пирки отпуск ыйтса илчĕ. Çын авланнă е качча кайнă чух ăна отпуск памалли саккун пур...

Манăн сасартăк ура вăйĕ пĕтсе килчĕ. Лак! лартăм темле чул çине. Нума-ай лартăм вара ним хускалмасăр. Хамăн пуç чан çапнă пек янраса тăчĕ.

— Качча кайнă... Анюк качча кайнă... Тупрăм пулать хам мĕн шыранине! Маттур, Влашка Ваççи, кăвар чĕре, ку чухнехи рыцарь! Ухх... маххх! Тăм... пуç! Юратнă хĕре куçран вĕçертмеççĕ ăна!

Хама хам чăнт-чант! çупса ятăм çилĕ килнипе...

Çапла вĕçленчĕ манăн юрату, тусăм Колька. Пĕр ăрне сĕрĕмри пек çӳрерĕм. Анчах кайран çапах та пуçăм майĕпе уçăлма пуçларĕ. Пĕри качча кайнă пулсан, ман валли урăх Анюксем çук-и мĕн, терĕм. Анюксем те, Павловăсем те нумай. Пурте маттур, пурте хитре. Ĕçре те питĕ хастарлă! Анчах вĕсенчен хăшне юратас? Çакă халлĕхе паллă мар-ха маншăн...

Ну, кун çинчен ăпир санпа ăс киле таврăнсан калаçăпăр.

СЕРЖАНТ ЙАНАШĔ

ÇУЛЛАХИ ИР. Çанталăк ытармалла мар лайăх, янкăр уяр. Сенкер тӳпере пĕр пĕлĕт татки те çук, пир-авăр комбиначĕ хыçĕнчен йăраланса тухнă хĕвел хăйĕн ăшшине хула çине ним шеллемесĕр сапать. Пахчасенче кайăксем чĕвĕлтеҫҫĕ, радиопа хаваслă юрăсем янăраççĕ...

Ну, çав тери аван ĕнтĕ, çав тери!

Кун пек чухне темле чул чĕреллĕ çын кăмăлĕ те услам çу пек ирĕлме пултарать. Ахальтен мар пуль урамри çынсен сăнĕсем те пурин те хаваслă паян, пĕр-пĕринпе тĕл пулсан вĕсем ăшшăн кулкаласа калаçаççĕ, пуç таяççĕ, аллисене чăмăртаççĕ, пĕрне-пĕри ырлăх-сывлăх сунаççĕ те çавăн хыççăн тин вара хăйсен ĕçĕсемпе малалла васкаççĕ.

Милици сержанчĕ Тимофей Сарсухалов та паян уйрăмах тулли кăмăллă. Яланах питĕ типтерлĕ, таса çӳрекенскер, дежурствăна вăл «пĕтĕм формăпа» тухнă: сухалне яп-яка хырнă, китель çухави айне çĕнĕ катан пир çĕлесе хунă, купăс пек хутлам-хутлам кунчаллă хром аттисем Шупашкарти «Красный мебельщик» фабрикă тăвакан трюмосенчен те хытăрах йăлтăртатаççĕ, аллисене шур перчетке тăхăннă. Дежурствăна мар, пĕр-пĕр бала кайма хатĕрленнĕ ку, тейĕн!

Питĕ шутсăр илемлĕ каччă çак Сарсухалов. Пĕвĕпе çӳллĕ, хул пуççийĕсем — аршăн сарлакăш, сăнĕпе сарă, куçĕсем уяр çанталăкри пĕлĕт тĕслĕ. Çитменнине тата, кăтра вăл, ункăн-ункăн явăнса тăракан çӳçĕсем ним тусан та картус айне вырнаçасшăн мар, ялан сулахай тăнлав еннелле пĕтĕрĕнсе тухӑççĕ. Кун пек каччăсем хĕрсен чĕрисене мĕн тери çунтарма пултарнине эсир хăвăрах пĕлетĕр ĕнтĕ. Темле кутăн хĕр те чăтса тăраймасть Сарсухалов пек каччă умĕнче, епле пулсан та юратса пăрахатех ăна. Каччи хăй ун çине ăшă куçпа пăхмасан е урăххисен еннелле сулăнсан, кĕвĕçме, асапланма, час-часах куçран вĕри шыв юхтарма тытăнать. Тепĕр чух хĕрсем хушшинче ун пек каччăшăн пĕрне-пĕри çилхерен тытса силленисем те, пĕр-пĕрин фотографийĕсене пăснисем те пулкалаççĕ.

Пĕлекенсем каланă тăрăх, çак Сарсухалов сержант пирки те çавнашкал «вырӑнти çапăçусем» пулкаланă. Пĕр çамрăк парикмахершă тепринне çамки çине кăларса янă кăтра çӳçне пĕр ывçă касса илнĕ, теççĕ — ан тив, тискеррĕн курăнтăр, Тимоша ан юраттăр ăна! Тепĕр сăра сутакан хĕр, хăйĕн юлташĕ çак сержантпа кинона кайма хатĕрленнине сиссе, ăна хăйĕн палаткине чĕнсе кĕртнĕ те унăн витĕр курăнакан кофти çине пĕр кружкă сăра чашлаттарнă, тет. Пĕр-пĕрин пичĕсене маникюрлă чĕрнисемпе тăрмаланисем те пулкаланă, теççĕ...

Çаксем çинчен пĕлсен вара начальник пĕррехинче Сарсухалова хăй патне чĕнтернĕ те çапла каланă пулать:

— Тусăмçăм Тимоша, әсĕ, паллах, питĕ лайăх каччă, службăра та примерлă, анчах та пĕлетĕн-и, сан пирки хулара хулиганствă ӳсет! ЧПсем пулаççĕ! Авлан тавай, шуйттан çури! Пĕр эрне срок паратăп сана туй тума. Асту, итлемесен санăн погонусене хывса илме тивет!

Çакăн хыççăн виç кунтанах Сарсухалов авланнă. Хăй пекех сап-сарă хĕр илсе пынă — фабрикăра хĕрарăм тумĕсем çĕлекен çĕвĕçе. Питĕ лайăх пурăнаççĕ, часах акă çĕр çинче тепĕр Сарсухалов хутшăнмалла, теççĕ халь.

Авланнăранпа сержант хăйне хăй çулĕпе аслăрах çын пек, мăнаçлăрах тытма пуçланă, утти те улшăннă унăн, çынсемпе юри хулăнрах сасăпа калаçма тăрăшнă, анчах та хăш чух, çынсем асăрхаман вăхăтра, хитре хĕрсене çав-çавах çурăмран лăпкакаланă. Хăнăхнă япала ĕнтĕ, мĕн тăвас тетĕн!..

Службăра Сарсухалов яланхи пекех йĕркеллĕ те çирĕп кăмăллă пулнă, хăйĕн участокĕнче никама та иртĕнме паман.

Сисĕмлĕх тени унăн пур чухне те сителĕклĕ пулнă, ку енчен унăн кивçене кайма тивмен. Пурне те сăнанă, пурне те витĕрех курса тăнă вăл.

Нумай пулмасть ăна пасар районне куçарчĕç. Кунта ĕç ытти çĕртинчен нумай йывăртарах, кăткăсрах ĕнтĕ. Пасарта унта тем тĕрлĕ киревсĕр халăх та пулма пултарать вĕт: спекулянтсем те, вăрăсем те, вăрланă япаласене сутакансем те, ĕçсе супакансем те, тепĕр чух çапăçса каякансем те... Пăхсах, асăрхасах тăр эсрелсене!

Анчах пĕр-ик уйăх хушшинче Сарсухалов кунта та çирĕп йĕрке туса ситерчĕ. Паллах, пĕччен мар, халăхпа пĕрле, дружинниксем пулăшнипе. Кам иртĕнме пуçлать, ăна наччас ярса тытаççĕ. Спекулянтсем те питех курăнми пулчĕç — Сарсухаловран хăраççĕ. Вăрлас-тăвас пирки вара сас-хура вуçех те пулмарĕ.

— Маттур, Тимоша,— терĕ ăна начальник темиçе хут та.— Кун пекех ĕçлесен, эсĕ офицер ятне илесси те вăрахах каймĕ, тетĕп.

Çакă вара Сарсухалова тата ытларах хавхалантарчĕ, хăйĕн ĕçĕсене вăл тата тăрăшарах туса пычĕ...

Ак халĕ те вăл пасара пысăк ответлăха туякан çын пек пырса кĕчĕ. Пĕр ретпе утса иртрĕ, тепĕр ретпе... Киосксенчи продавецсем кăна мар, ахаль тĕл пулакансем те ăна ăшшăн саламлаççĕ:

— Ырă кун пултăр, Тимофей Васильч!

— Чунтан-вартан салам сана, сержант!

Çуллахи пасар ирех шавлама тытăнать. Павильонсенче те, пасар варринчи лупассем айĕнче те пĕр пушă вырăн та çук ĕнтĕ. Пăхма хаваслă: вĕçĕмсĕр çырла унта, хăяр, ир пулакан пан улми, кишĕр, симĕс сухан, редис, помидор, купăста... Лавĕ-лавĕпе, тонни-тоннипе витамин! Хуть те хăшне илсе çи. Яшкаллăх та, закускăлăх та пур.

Паллană инкесем пĕрин хыççăн тепри сĕнеççĕ:

— Тимофей Васильч, тутанса пăх-ха ман çырлана...

— Акă, цвежи хăяр çисе кур...

Анчах Сарсухалов çăткăн çын мар, тата вăл хăйĕн чысне те çирĕп упрать. Сĕннĕшĕн тав туса пуç таять те аллипе сулса илет:

— Тавтапуç сире, эпĕ тутă-ха! Сутăр тавай, сутăр, анчах хакне ытлашши ан шăйăрăр... Совĕçе пĕлес пулать пĕртак!

...Вăрахчен çӳрерĕ Сарсухалов пасар тăрăх. Васкамасăр, ерипе. Çитмен вырăн та хăвармарĕ, кашни кĕтессех

пырса пăхрĕ. Унтан тепре тата тепре çаврăнчĕ. Çав хушăра пасар шавланăçемĕн шавларĕ, суту-илӳ вăйлансах пычĕ, анчах ниçта та нимĕнле йĕркесĕрлĕх те палăрмарĕ.

Юлашкинчен, сержант кунти столовăйне кĕрсе пăхма шут турĕ. Унта мĕнле-ши? Хĕве чиксе пынă çур литрсене виççе пайлакансем çук-и? Столовăйĕнче ун пек хăтланма юраманнине пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ, анчах çапах та час-часах сĕтелсем айĕнче пуш кĕленчесем янраса ларaççĕ-ха. Официанткăсем çакна курмăш пулаççĕ, ма тесессĕн вĕсемшĕн ку — планпа палăртман тупăш, хăйне майлă калым пулатьçке. «Кун каçа 10—12 кĕленче пухса лавккана кайса сутни япăх-им? Укçа вĕт вăл!» — теççĕ мар-и вĕсем? Çавăнпа та Сарсухаловăн официанткăсене те çирĕпрех тыткалама тивет.

Анчах хальхинче сержант столовăйне çитеймерĕ çав — пачах та кĕтмен-туман çĕртен, сасартăк, унăн чăрмавлă ĕç сиксе тухрĕ. Пĕр киоск хыçĕнче, улахран çĕрте, икĕ çын шăппăн калаçса тăнине асăрхарĕ вăл. Иккĕшĕ те вăй питти, пĕр çирĕм пиллĕксенче, пĕри тĕксĕмрех кăвак костюмпа, хура куç-пуçлă, кăштах цыган майлăскер, тепри — йĕтĕн пир шăлаварпа, симĕс джемперпа, шап-шакла пуçĕ çине узбексен тюбетейне лартса янă.

Малтанхи хут пăхсанах, сержанта çак çынсем темле ытла шанчăклах мар пек туйăнчĕç. Мĕншĕн-ха вĕсем киоск хыçне кайса тăнă? Мĕн пирки çав териех пăлханнă пек, васкаса калаçаççĕ? Камсем вĕсем? Ку тараннчен Сарсухалов кун пек çынсене Шупашкарта курнине астумасть. «Гастролерсем» мар-ши?..

Вăл тимлесех сăнама тытăнчĕ.

Леш çынсем çаплах калаçрĕç, анчах сержант вĕсен сăмахĕсене илтеймерĕ. Унтан кăвак костюмли сасартăк хĕвĕнчен йăлтăркка хура ридикюль — хулари хĕрарăмсем ялан хул хушшине хĕстерсе çӳрекен пĕчĕк сумкă — туртса кăларчĕ. Çав самантрах вĕсем ридикюле уçса ун ăшĕнче мĕн пуррине тĕрĕслеме тытăнчĕç. Ку ĕç пĕр минутран ытла пымарĕ — кăвак костюмли кĕçех ридикюле хупса каллех хĕвне чиксе хучĕ. Çакăн хыççăн вĕсем пĕр-пĕрне алă пачĕç — уйрăлса каясшăн пулчĕç курăнать ĕнтĕ.

Анчах каясси пулмарĕ — вĕсем патне Сарсухалов сержант пат, пат, пат утса пычĕ те, аллине картус сăмси çумне тытса, хуллен кăна:

— Сирĕн документсемпе паллашма ирĕк парсамăрччĕ,— терĕ.

...Кăвак костюмли хĕвĕнчен хĕрарăм сумки кăларнине курсанах сисĕмлĕ сержантăн чĕри мăлатукпа çапнă пек пăлхануллăн тапма тытăнчĕ. Ара, епле пăлханмастăн-ха?! Иккĕленмелли çук вĕт — вăрланă сумкă вăл! Мĕнле арçын кăкăр умне хĕрарăм сумки чиксе çӳретĕр? Емĕрне пулман япала-иç! Ку сумкăна вăл паян пĕр-пĕр сӳтĕк хĕрарăмăнне çаклатнă та, халь, авă, хăйĕн тусĕ умĕнче мухтанса тăрать. «Операци» ăнăçлă пулнă ятпа ĕçме чĕнет пулĕ-ха. Ак ĕнтĕ, сумкăра мĕн-мĕн пуррине тĕрĕслесе пăхрĕç. Халех каяççĕ... Çук, ниепле те вĕçертес пулмасть кусене! Ара, куç умĕнчех вĕт, çав тери нахальнăй хăтланаççĕ!..

Çакăн пек шухăшсем хăваланипе утса пырса ыйтрĕ те сержант çав çынсен документчĕсене.

Лешсем тĕлĕнчĕç:

— Мĕн сăлтавпа?! Пирĕн документсем мĕн тума кирлĕ пулчĕç сире?

— Ку ыйту пачах та вырăнсăр,— терĕ сержант,— пирĕн кашни çынна тĕрĕслеме правă пур.

— Мĕн эсир, пире темле вăрăсем е рецидивистсем тесе шутлатăр-и?— кăмăлсăрланса хĕрелсех кайрĕ тюбетейли.

— Нимĕн те шутламастăп,— çав-çавах лăпкăн хуравларĕ Сарсухалов.— Эсир кам пулни сирĕн паспортсенчен курăнĕ. Халех кăтартăр. Саккун ман енче, хирĕçсе тăрса вăхăта сая ан ярăр...

Тавлашнинчен чăнах та усси пулас çуккине курса, лешсем пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç те кĕсйисене ухтарма тытăнчĕç. Тюбетейли хăй паспортне кăвак костюмлинчен малтан кăларса тыттарчĕ. Сержант ăна васкамасăр, страницăн-страницăн уçса вуласа тухрĕ. Йĕркеллех иккен паспорчĕ, çынни Яшков хушаматлă, парикмахерта ĕçлет. Тепĕр çынни çине сержант пачах шанмасăр, паспортне илнĕ чух ун куçĕнчен тӳррĕн, витĕр шăтарас пек пăхрĕ — ун çумĕнче хĕрарăм сумки пулнă-çке-ха, ăна сержант вăрă тесех шутланă.

Мĕн тетĕр эсир, йăнăшман вĕт вăл! Ун умĕнче чăнах та вăрă тăнă, чăн-чăн вăрă! Сержант лайăхах, ним иккĕленмелле мар палласа илчĕ: виçĕ çул каялла, хăй тин çеç çартан таврăнса милицие ĕçлеме кĕрсен, вăл çак çынна тĕрмерен суда илсе пынăччĕ, сучĕ ăна икĕ çуллăха хупмалла тусан — тĕрмене каялла леçнĕччĕ. Темскер вăрланăшăн суд турĕç ăна ун чухне. Халь, срокĕ тухнă хыççăн, вăл киле таврăннă пулмалла та ĕнтĕ, тӳрĕ пурнăçпа пурăнас вырăн-

не каллех çаратма тытăннă! Ну, паян акă çĕнĕрен лекрĕ, хальхинче ăна пĕр пилĕк çултан кая мар параççĕ...

Унăн паспорчĕ те çĕнĕ иккен-ха — виçĕ уйăх малтантарах çеç илнĕ. Храбров... «Металлистра» ĕçлет, слесарь. Çынсем сисиччен çăра уççисем тăвать пуль-ха — унта-кунта йăпăр-япăр кĕме! Кăтартăпăр ăпир ăна... Храбров! Тупăннă паттăр... хĕрарăм сумкисене вăрлама! Ĕçлесчĕ лайăхрах, тар юхтарса!

Кăвак костюмлин паспортне Сарсухалов каялла тавăрса памарĕ, хăй çумне чикрĕ.

— Мĕншĕн?— тĕлĕнчĕ лешĕ.

— Мĕншĕнне милици уйрăмĕнче пĕлĕн,— терĕ сержант.— Эс халь мана хĕвне мĕн пытарнине кăтарт-ха!

— Кăтартма пултаратăп, анчах та сире алла памастăп,— терĕ Храбров, хĕвĕнчен сумкă кăларса.

— Паратăн!— сассине хытарчĕ сержант.

— Памастăп, мĕншĕн тесен эп ăна пĕр çур сехет каялла ав, çавăнта, Свердлов урамĕнче тупрăм та, хам алăпа милицине, «стол находока» кайса паратăп!

— Ха!— кулам пекки турĕ сержант.— Тупнă пулмасăр! Такам тăкса çӳрет-ха урамра сан валли сумкăсем! Кала луччă, хăш тĕлте, камăнне çаклатрăн? «Стол находок» тет-ха тата! Хам сана куç кĕрет ярса тытрăм та, ирĕксĕрех мĕн те пулин шухăшласа кăларас пулать çав!..

— Милиционер юлташ, вăл тĕрĕссине калать,— тăрук калаçăва хутшăнчĕ тепри, тюбетейли.— Ку сумкăна вăл чăнах та халь çеç урамра тупнă, мана тĕл пулчĕ те çав «стол находок» ăçти çинчен ыйтса пĕлме тытăнчĕ. Эпир сумкинче мĕн пуррине те тĕрĕслесе пăхрăмăр унпа. Çирĕм тенкĕ ытларах укçи пур, фабрикăна кĕмелли пропуск тата хĕрарăмсен ăпăр-тапăрĕ... Вăрланă пулсан, мĕн тума кăтартса çӳретĕр-ха вăл вĕсене, хăвăрах шухăшласа пăхăр ăсир!

— Кӳр-ха, эп уçса пăхам!— аллине тăсрĕ сержант.

— Памастăп!— сумкăна çурăмĕ хыçнелле тытрĕ Храбров.

— Пар тетĕп!

— Ан кăшкăрăр, каланă сире памастăп тесе! «Стол находока» каятăп та, унта хам алăпа начальнике тыттаратăп. Акт çыртăр, мана квитанци патăр! Эсир ман çума ан та çулăхăр — пурĕ пĕр сумкăна илейместĕр манран. Эсир мар, эпĕ тупнă ăна!

Сержант ун çине пĕр хушă тĕлĕнсе пăхса тăчĕ.

— Ай-яй, ытла та çивĕчленсе кайнă-çке эсĕ... лере! Институт пĕтерсе тухнă пекех!— пуçне пăркаласа илчĕ вăл.

— Институт мар, академирен те ытлараххине пĕтернĕ, ăслăланнă, текех ухмах пулассăм çук!— хăй тĕрмере ларса тухнă пирки сăмах тĕкнĕшĕн çиленсе куçĕсене çутăлтарса илчĕ Храбров.

— Ну-ну... Çавах манпа пĕрле пымалла пулать, пĕччен ямастăп эп сана!

— Ку мĕншĕн тата? Чип-чипер çынна мĕншĕн конвойпа илсе каймалла?— тарăхса кайрĕ тюбетейли те.— Вăл сирĕнсĕрех унта кайма хатĕрленнĕ вĕт!

— Э-э, шан ун пеккисене!— аллине сулчĕ сержант.— Пĕр-пĕр тăкăрлăк тĕлне çитсенех сапур урлă сикет те вăл, шыра вара ăна ик-виç уйăх!

— Ан кӳрентерĕр çынна!

— Вăл хăй ан кӳрентертĕрччĕ. Çак сумкă хуçи, пĕр-пĕр мĕскĕн карчăк, халь те выртса йăвалансах макăрать пуль-ха хăйне çаратнăшăн!

— Каланă сире — вăрламан вăл ăна, тупнă! Эп хам пыратăп сирĕнпе, свидетель пулатăп!— татăклăн каласа хучĕ тюбетейли.

...Вара вĕсем виççĕшĕ те милиции уйрăмне кайрĕç. Çул çинче Сарсухалов сержант текех Храбровпа Яшкин хыççăн утма тăрăшрĕ, чăн-чăнах арестленĕ çынсене илсе пынă пек. Анчах кусем ăна вăрçа-вăрçах хăйсемпе юнашар пыртарчĕç:

— Намăс ан кăтартнă пултăр айăпсăр çынсене!..

Выраăна çитсен вара сержант дежурнăя пĕтĕм йĕркене пăхăнса рапортларĕ:

— Паян, çав сехетре, çав минутра, çав-çав выраăнта маншăн палла мар икĕ çын киоск хыçне пăрăнса хĕрарăм сумкине уçса пăхса тăчĕç. Хăйсем: тупрăмăр, теççĕ, анчах та, ман шутпа, ку вăл юри шухăшласа кăларнă верси... Милиции уйрăмне илсе килнĕ çынсенчен пĕри нумай пулмасть колонирен таврăннă, çавăнпа та шанма çук. Эпĕ темиçе хут ыйтсан та, вещественнăй доказательствисене ман алла памарĕç...

— Тĕрĕс-и?— ыйтрĕ дежурнăй Яшковпа Храбровран.

— Тĕп-тĕрĕс,— терĕç лешсем,— сумкăна вăрланă тесе шутлани çеç тĕрĕс мар!

Унтан Храбров ĕçĕ мĕнле-мĕнле пулни çинчен тĕпĕйĕрĕпе каласа пачĕ.

— «Стол находок» ăçтине пĕлмен пирки кăна тӳрех сирĕн пата килеймерĕм, ĕненĕр! Мана çын япали те, укçитенки те кирлĕ мар, эп халĕ хам та пит лайăх ĕçлесе илетĕп!..

— Ну-ка, сумкине курар-ха, эппин...

Храбров ридикюле йăпăр-япăр сĕтел çине хучĕ. Дежурнăй ăна уçрĕ те шалта мĕн пуррине кăларма тытăнчĕ. Ыттисем пурте — Храбровпа Яшков та, Сарсухалов сержант та куç илмесĕр, тимлĕн пăхса тăчĕç. Малтан дежурнăй укçине кăларса шутларĕ — 23 тенкĕ те 31 пус иккен. Унтан сĕтел çине майрасен яланхи хĕç-пăшалĕ — тута пĕветмелли, куç харши хуратмалли кăранташсем, пуç тури, тĕкĕр, сăмса тутри тухса выртрĕç. Чăн юлашкинчен дежурнăй ридикюльти çĕвĕ фабрикине кĕмелли пропуск кăларса уçрĕ те ун çинчи сăн ӳкерчĕкне пăхма тытăнчĕ. Ыттисем ӳкерчĕке кураймарĕç-ха. Пĕр çур минут пек пăхса ларнă хыççăн вара дежурнăй темшĕн йăл та йăл кула-кула илчĕ.

— Н-да, хитре хĕрарăм, пит те селĕм, ним те калаймăн!— терĕ те вăл унтан, çаплах кăмăллăн кулса, пропуска Сарсухалова тыттарчĕ.— Пăх-ха лайăхрах, тен, паллатăн эс ăна?

Сержант пропуск çине пăхсассăнах куçĕсене мăч-мăч-мăч тутарса илчĕ, унтан унăн куçĕсем тăрук чарăлса, пит çăмартисем хĕп-хĕрлĕ пулса кайрĕç...

— Ну, палларăн-и?— ыйтрĕ дежурнăй.

— П...п-палламасăр! Ман арăм ку... Зина!— терĕ Сарсухалов сасартăк çĕтсе ларнă сасăпа.— Сӳтĕк шуйттан!— хăй тĕллĕн мăкăртатма тытăнчĕ унтан.— Иккĕмĕш хут пулчĕ ĕнтĕ кун пекки, пĕлтĕр — пĕрре, кăçал — тепре. Çур уйăх укçине пĕтĕмпех çухатнă... Хăлхинчен туртатăп-ха куншăн!

— Хăш тĕлте тупрăр-ха эсир ку сумкăна?— çырма хатĕрленсе ыйтрĕ дежурнăй Храбровран.

— Герцен урамĕнчен Свердлов урамнелле пăрăннă çĕрте,— терĕ ку.

— Тĕрĕс, тĕрĕс, çав енче пулма кирлĕ,— ун сăмахĕсене çирĕплетсе, пуçне темиçе хут сулса илчĕ Сарсухалов.— Пасарта пулнă хыççăн Зина амăшĕ патне каятăп, терĕ, лешсем шăпах Свердлов урамĕнче пурăнаççĕ...

Çак самантра сержант пĕртте паçăрхи пек паттăр сăнлă пулмарĕ çав! Тек куçĕсене мăчлаттарчĕ, çамки çинчи тарне шăла-шăла илчĕ, типсе кайнă тутисене çулларĕ. Питĕ хытă пăлханчĕ курăнать...

— Эппин, ку юлташ санăн арăмун сумкине вăрламаннине, ăна чăнах та урамра тупнине ĕненетĕн эсĕ?— ыйтрĕ унтан дежурнăй.

— Мĕн тăвас тетĕн? Ĕненесех пулать,— терĕ сержант темле шала кайнă сасăпа.

— Çынсене ĕненес пулать çав, Сарсухалов юлташ,— ун куçĕсенчен пăхса каларĕ дежурнăй.— Мĕншĕн тесен пирĕн çынсен ăс-пуçĕ кулленех лайăх еннелле улшăнса пырать... Акă, иртнĕ уйăхра пирĕн пата, çак «стол находока» пĕр ватă цыган лаша çавăтса килчĕ. Атăл хĕрринче тупрăм, пĕр эрне ĕнтĕ пĕр-пĕччен çӳрет, тахăш колхоз çухатнăскер пулмалла, тет... Шалт тĕлĕнсе кайрăмăр! Ĕлĕк цыган аллине ют лаша лексен, вăл ăна çитмĕл çичĕ тĕслĕ сăрласа та пулин хăйĕн лаши пек тунă, халь акă — кур-ха эсĕ!— милицине килсе пачĕ! Урамра кăларса ӳкернĕ е автобусра, магазинсенче манса хăварнă япаласене тупакансем вара кунта вĕçĕмсĕрех килсе тăраççĕ. Пурин те пĕр юрă: «Мейĕр, хуçине шыраса тупса тавăрса парăр, мана çын япали кирлĕ мар, кам ĕçлесе илнĕ — çавах усă куртăр», теççĕ... Коммунизм патнелле çывхаратпăр вĕт, Тимофей Васильч! Çапла-и?

— Тĕрĕс, капитан юлташ,— терĕ Сарсухалов.— Анланатăп...

ИЗДАТЕЛЬСТВАРАН

Леонид Агаков писатель сатирăпа юмор жанрĕпе нумайранпа ĕçлет ĕнтĕ. Унăн малтанхи кулăшла калавĕсемпе фельетонĕсем «Капкăн» журналта 1927—1928 çулсенчех пичетленме тытăннă. Çавăнтан вара вăл хăйĕн çак юратнă ĕçне пĕрре те пăрахман. Отечественнăй Аслă вăрçă вăхăтĕнче те, «Советский Патриот» ятлă çар хаçатĕнче ĕçлесе, тăтăшах фашистсене питлекен хаяр фельетонсем çырса пичетленĕ. Халĕ те эпир унăн кулăшла калавĕсемпе фельетонĕсене «Капкăн», «Ялав», «Тăван Атăл» журналсенче, хаçатсенче пĕрмаях куратпăр, радиопа та илтетпĕр.

Хăйĕн сатирăлла творчествипе Л. Агаков пирĕн пурнăçра унтакунта тĕл пулакан йĕркесĕрлĕхсене, тĕрлĕ суя çынсене, пире коммунизм тунă çĕрте чăрмантаракансене тăрă шыв çине кăларса, вут-çулăмпах çунтарать.

Л. Агаковăн кулăшла калавсем 1931, 1941 çулсенче тухнă «Йĕплĕ калавсем» ятлă икĕ кĕнекере, «Чăршав уçăлсан» (1945), «Аслă çĕнтерӳ» (1946) ятлă эстрадă сборникĕсенче тухнă. Вăрçă хыççăн çырнă кулăшла калавĕсене пухса, 1955 çулта вăл «Кулас килет» ятлă кĕнеке кăларнă. 1959 çулта унăн «Качака такисем», 1960 çулта «Епле тӳсетĕн-ха кулмасăр?» ятлă кĕнекисем тухнă.

Ку кĕнекене Л. Агаковăн юлашки 2—3 çул хушшинче çырнă калавĕсене кĕртнĕ. Вулакансене вĕсем кăмăла кайĕç, пурнăçра тĕл пулакан тĕрлĕ «хаклă кĕрӳсемпе», плахая персе, ним ĕçлемесĕр, çынсене улталанипех тăранса пурăнакан сăвăссемпе, вăрттăн «упăшкасемпе» тата ытти çавăн пек йĕксĕксемпе те кĕрешме пулăшĕç, тесе шанатпăр.

ТУПМАЛЛИ

Хаклă кĕрӳ 3
Тарăхмасăр ара! 22
Пулă шăмми пыра ларать 35
Аптрашкик аптрани 46
Çăвăс 62
Хапха çинчи автан 97
Хура кушак тата ыттисем 106
Çакăн пек те пулкалать иккен... 117
Ах, çав хальхи ача-пăча! 130
«Те арçури, те шуйттан» 141
Качака такисем 147
Вăрттăн упăшка 161
Ватăлма майĕ çук... 175
Ененмесен — пырса курăр 183
Çичĕ мăшăр çăпата 188
Хăшне юратас? 194
Сержант йăнăшĕ 205

Агаков Леонид Яковлевич

ДОРОГОЙ ЗЯТЬ

Сатирические и юмористические рассказы

На чувашском языке

Оформление и рисунки худ. **Н. Яковлева.**

Редактор **А. Н. Андреев.** Техн. редактор **Н. Д. Деомидов.**
Худ. редактор **В. Ф. Солодовников.** Корректор **Д. В. Сивкина.**

НТ 02440. Подписано к печати 23.V.1962 г. Формат 84×108$^{1}/_{32}$
Объем в п. л. 10,86. Уч. изд. л. 10,14. Заказ № 595.
Тираж 8 000 экз. Цена 45 коп.

Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР
г. Чебоксары, ул. Володарского, 5.

Цена 45 коп.